К89
Ч-41382

Владимир КУЗЬМИН



# Тутлă-йӳçĕ мунчара

Национальная библиотека ЧР
4-041382

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К
К84.09(=Чув)
К89
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Владимир КУЗЬМИН

# ТУТЛӐ-ЙӲҪӖ МУНЧАРА



Шупашкар
«Ҫӗнӗ Вӑхӑт»
2008

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
К 89

**В.Кузьмин**
**Тутлă-йӳçĕ мунчара.** — Шупашкар, 2008. — 128 с.

Мыскара курман, мыскара кăтартман çын тĕнчере çуках пуль. Кулă вăл – этем пурнăçĕн пĕр пайĕ. Анрасухраланса та, кăмăла çĕклентерсе те, мăшкăлласа та ихĕрет, ахăрать, сăнăланать икураллă ăслă пуç çĕр çинче. Мĕнле кăна тĕлĕнтермĕш кăтартмасть пуль вăл кулленхи пурнăçра. Йăлтах вĕсем çак кĕнекери хайлавсенче хумлă-хумлă тĕкĕр çийĕн сăнарлăн курăнаççĕ.

Ч-41382
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО 2010

© Кузьмин В., 2008.

# ТУТЛӐ-ЙӲҪӖ МУНЧАРА

## Мыскараллӑ та хурлӑхлӑ роман

Айӑпа кӗнӗ этем ҫурисене кӑштах юсаса илес тесех пуль, Ҫутҫанталӑк Хӑватлӑхӗ хушӑран Ҫӗр ҫине Хӗвел хӗрӗвне ытларах сапалать. Ҫав хӑрушӑ вӑхӑтра Ҫӗр ҫинче пурӑнакан ҫыннисем те ура айӗнчи ҫӗр ҫурӑлса кайнӑ пекех ҫӑварӗсене карса пӑрахаҫҫӗ. Вӗсене сывлама сывлӑшӗ те, ӑша кантарма шывӗ те, хырӑма тӑрантарма апатҫимӗҫӗ те, аталанса савӑнма илем пылакӗ те ҫитми пулать. Чыхӑнса пӗтме патнех ҫитет ҫавнашкал ҫынсенчен тӑракан халӑх. Чӑваш халӑхӗ те тӗнчери кисренӳ, асаплану саманине кӗрсе ӳкнӗччӗ ҫирӗммӗш ӗмӗр ватӑлса пынӑ ҫулсенче.


Иван Мучи


Куҫма Чулкаҫ

Тӗнче пӗрешкел юхӑра пыманнине пула, чӑваш та аслатиллӗ ҫумӑр кӗрлесе иртнӗ хыҫҫӑнхи майлах пуҫа ҫӗклесе чӗрӗлчӗ, силленсе хӑйӗн вӑй-халне тӗрӗслерӗ, ӑс-хакӑл вучахне – Чӑвашсен обществӑпа культура центрӗ текен пӗрлешӳн «Вучахне» чӗртсе ячӗ. Мана та «Вучаха» вут-шанкӑ пӑрахса тӑма шанчӗҫ. Шанӑҫа тӳрре кӑларас тесе вара эпӗ хам мӗн тума пултарас тенине тӑвас терӗм.

Ытти нумай-нумай хӑватлӑ ыйтусемпе пӗрлех, халӑхӑн чӗлхе пуянлӑхне хӑйӗн кулленхи пурнӑҫ кулӑш-масипе хӗмлентерес килсе кайрӗ. Ҫавӑнпа та пӗр талӑк шакӑртатса ҫӳрерӗм чӑвашсен чи пултаруллӑ та, чи ҫивӗч чӗлхеллӗ те, чи кулӑшпулӑшуллӑ та ӗмӗр вилмен ӗсчахӗсемпе – Иван Мучипе тата Куҫма Чулкаҫпа.

Вунтӑххӑрмӗш ӗмӗр вӗҫленесси пилӗк ҫула ҫитиччен кун ҫути курнӑ Утикасси е, урӑхла каласан, Чуралькасси чӑвашӗ Иван Иванович Илларионов, ҫирӗм пиллӗкрех, сухал хырма пуҫличченех, Иван Мучи пулса тӑнӑскер, чӑвашсен «Капкӑн» журналне ҫуратнӑ ҫӗрте ашшӗ




вырăнне тăрса юлнăскер, паллă юморист, сатирик ятне халăхран илтсе чаплăланнăскер тата çирĕммĕш ĕмĕр Çĕр çине çиччĕ пуснă çул Ямаш вăрманне хумхантармалла сасăпа çухăрса çуралнă Виççĕмĕш Вăрманкасси хунавĕ Кузьма Афанасьевич Афанасьев, «Сунарçă халапĕсемпе» халăх хушшинче Куçма Чулкаç пулса тăнăскер, мана пулăшма хатĕрех пулчĕç. Виççĕмĕр пĕрле вара ЧОКЦăн, чăваш халăхĕн «Вучахне», «Кулăш хуранĕ» çакса ятăмăр. Ун çинчен Чăваш тĕнчине çапла пĕлтерес терĕмĕр:

*«Акă тинех чăвашăн «Вучахĕ» ялкăшма тапратрĕ. Пыра-киле унăн хĕрӳлĕхĕпе ăшшийĕ кашни чăваш килнех çитессе шанатпăр эпир. Тăван халăхăмăр пурнăçĕнче пулса иртекен тĕп ĕç-пуçпа тĕплĕн паллаштарса тăрăпăр. Çав хушăрах, хальхи йывăр саманара халăх кăмăлне çĕклес шутпа, кулăшпа та туслă пулăпăр. «Кулăш хуранне» çавăнпа çакса ятăмăр та ĕнтĕ 1991 çул пуçламăшĕнче.*

*Мĕнле-мĕнле апат хатĕрлеме пултарать-ха «Кулăш хуранĕ»? Пурнăç çулĕпе тăнкки-танкки пускаласа пыракансене эпир «Пăрàçлă салмапа» хăналăпăр, вĕсен анки-минкине уçса яма тăрăшăпăр. Ĕçре ытла мăран çынсене «Çунăк тинкĕле» апатпа хăналасшăн. Пурнăçра ни апла, ни капла меслетпе пурăнакансем те пур. Пурнăç çилĕ каплараx вĕрме пуçлать çеç — вĕсем апларах, пурнăç çилĕ апларах мĕн тума тытăнать те — вĕсем капларах. Унашкаллисене эпир, «Ни пăтă, ни нимĕр» пĕçерсе, çăвартан тип кашăкпа вăйпах хыптарасшăн. Кĕске кулăшсене вара «Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă» ятпа кун çути кăтартсах тăрăпăр.*

*Салам, вулаканăм-çыраканăм. Кӳр аллуна, ĕмĕр уйрăлми туссем пулар».*




Хамăр та сисмерĕмĕр, Чăваш «Кулăш хуранĕн» аслă поварĕ пулса чăваш тĕнчин кăмаки умĕнчи мăн çăпалана Иван Мучи ярса та илчĕ, «Шăмăсăр япаларан» манран ытла йăх-ях апачĕ пурпĕрех никам та пĕçереес çук-ха тесе, хăватлă аллисемпе пĕтĕм чăвашлăх йăвашлăхне çавăрса тытрĕ.

Акă пуçланчĕ ĕмĕртен ĕмĕре пыракан, халĕ те пĕр-пĕрин хушшинче, нумайсăлтав хутшăнăвĕн савăк-тунсăх, çĕкленӳ-хӳхлӳ юхăмĕ. Иван Мучи, чăваш тĕнчин почти ĕçлесе кайиччен, хăех пăтратма пуçларĕ «Кулăш хуранне».



Лапшу Çтаппанĕ

Лĕкĕртетсе вĕрекен «Хуран» та пушă пăс кăлармарĕ, унта вĕткелекенсем тупăнсах пычĕç.

Хурана тултарма Куçма Чулкаçăн тĕнчере çук паттăр сунарçи Лапшу Çтаппанĕ ухутах пулчĕ.

Иван Мучи, çынна тĕл пулса калаçнă хыççăн, ялан унран «Тепре куриччен!» тесе уйрăлнă, теççĕ. Акă хальхинче те вăл çаплах каларĕ те, куç умĕнчен вăштах çухалчĕ. Халапĕ кĕç «Кулăш хуранне» тулма пуçларĕ. Авă еплерех юхса пырать кулăш хăвачĕ ун хыççăн? Куç умне чĕрĕ ӳкерчĕкле тухса тăрать. Иван Мучин чĕрĕ сăмахĕ чăваш чунне чĕртет, чăваша култарать, астарать, тарăннăн шухăшлаттарать. Ак çапла:

## ТЕПРЕ КУРИЧЧЕН!

– Чăнкăлл-чанкăлл! Йăнкăл-янкăлл! Йăн-янн!

Хăлхана тăратсах итлетĕп, хам мĕн илтнине ĕненмесĕр çӳлелле сиксе пăхатăп. Ишекĕ курăнать, анчах унта ашакĕ те, чиркĕвĕ те курăнмасть. И-а-ак! текен чĕрчун Ишекре ял ларнăранпа та пулманнине тата Ишек чиркĕвĕпе вуншар ытти чиркĕве çылăхлă ăрсурниксем тахçанах аркатса тăкнине аса илетĕп те, аптраса ӳкетĕп. Чуна пĕлĕте çити çĕклекен сасă уй-уй урлă, вăрман çийĕн вĕçет те вĕçет ман паталла. Хăлхана тепĕр еннелле çавăратăп. Унтан та илтĕнет кăмăла уçакан çав сасă. Чан сассине эпĕ çеç мар, пĕтĕм тавралăх итлет иккен. Хĕвелĕ те, авă, виç хутлăн кулса, Çĕр çине ырă шăршă кĕрекен сухăрлă çу ирĕлтерсе тăрать. Аслă Турă чатăрĕ айне кĕлĕ тума пухăннă çынсем ăна тумламăн-тумламăн çăвара хыпаççĕ, сăх сăхса, курăнман хăвата пуç çапаççĕ: «Эй, çӳлти аттемĕр, паян пурăнмалăх çăкăр пар пире. Аминь!..»

– Чăнкăлл-чанкăлл! Йăнкăл-янкăлл! Йăн-янн!.. – кĕрлет Чăваш çĕрĕ-шывĕ çийĕн чан сасси. Чăваш çынни тӳнлеттерет те тӳнлеттерет мăн чана хăйĕн сулмаклă чышкипе. Мĕльюн-мĕльюн чышкипе.

«Чăваш чĕри! Хăюлăх вучаххи

Пулса тăр! Ылтăн шăратан

Хуран пек чашкăрса вĕре...» – вĕçсе килет Анăçран канлĕх тупайман хăюллă чăваш сасси.

«Касаккасси ачин ўчĕ инçетри Украйнă çĕрĕнче выртать пулин те, чунĕ Чăваш çĕрĕнчех-мĕн, чĕри паян та çирĕммĕш çулсенчи хăватпалах тапать, чĕлхи «хĕвел кăварĕпе вутланса» тăрать мăнтарăн вилĕмсĕр Çеçпĕл Мишшин. Пуян-çке чăваш халăхĕ мухтавлă ывăлхĕрĕпе», – тесе шухăшлама ĕлкĕртĕм кăна, Тухăçран тепĕр Шăпчăкĕ янратттарса юрласа ячĕ:

«Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтăртăр!
Малалла, малалла, малалла!»

Пушкăрт чăвашĕ, Пăртта ачи Кĕçтенттин Иванов та чунĕпе несĕлсен çĕрĕнчех иккен. Вăл та тĕлĕрме памасть хăйĕн тăван халăхне: вăратать, куçне уçтарать, малалла чĕнет. Маттур, тав сире ĕмĕр-ĕмĕр халăх асĕнче та ăсĕнче пурăнакан паттăрсене!

Тухăçран пусласа анăça çитичченех йăшăлтатать-ха Чăваш тинĕсĕ, хăй пурри çинчен çут тĕнчене аса илтерсе, хумне çапсах тăрать. Чанĕ те чарăнмасăр янăрать. Шăпчăкĕсем те ывăнма пĕлмесĕр юрлаççĕ.

Пурнăç симфонийĕпе киленсе тăнă вăхăтра сисмен те, çурăм хыçĕнчи шăв-шавпа вăртах çаврăнтăм.Эккей! Кама куратăп?! «Кĕрхи кунри тамашана». Çитăр мучин качаки темле кулăшла лава мекеçленсе туртса хăпарать. Ухутник йĕлтĕрĕсене хăма татăккисемпе çапса çуна пекки тунă та, шĕшкĕ туйисем хушшине вăрăм сухала кўлсе тăратнă та, ямшăкĕ, чĕлĕмне паклаттарса, улпут пек сарăлса ларса пырать. Çурăмĕ хыçне ик кĕпçеллĕ пăшал çакнă хăй. Пастай, пастай, ара, Лапшу Çтаппанĕ-çке ку? Ма мулкач кĕтĕвĕ кўлмен-ха? Арăслан хўринчен тытса, юман хăвăлĕнчен пăхса та пымасть. Кăвакал çине ларса та вĕçмест. Качакапа...

– Трр-ррр! Шуйттан кĕвенти! – тилхепине туртса карăнтарчĕ те вăл çĕре яш пек сиксе анчĕ. – Салам пултăр, Иван Мучи. Курманни сана... Хĕрĕх пилĕк çул та çитрĕ пуль.

– Çаплах, шăллăм, çаплах, – тетĕп хашш сывласа. – Вăрçă-харçă хыççăн кăшт та пулин мамăк тўшек айĕнче выртса канас-ха тенĕччĕ те, çук, пулмарĕ. Самана кисревĕ мана та тăратса лартрĕ. Юрамасть иккен çывăрма. Вăранмаллах пулчĕ. Унсăрăн...

– Унсăрăн Çĕр чăмăрне те тепĕр майлă çавăрттарма тытăнаççĕ манран та ăслă палкавçăсем. Уйăха туртса антарса пайлама пуçлĕç

хатёррипе пуяс текенсем. Хёвеле те хупласа хайсен çутине çеç тёнче çийён ялкăштарма хатёр мухтанчăкёсем.

– Эх, самана, самана, – тетёп. – Нивушлё эпёр тăмана?.. Кури куçа курмăш тăватпăр. Сăмса умёнчи камите çăвар карса пăхатпăр. Камит мар, траги-камит кăтартаççё. Аслă çулпуçăн палăкне туртса антарса аркатаççё... Ун вырăнне тепёр аснă çулпуçăн палăкне ылтăнран шăратса лартма хатёрленеççё.

– Хăрушă, хăрушă пурнăç пулса кайрё, Иван Мучи, – тавралла шикленсе пăхать Лапшу Çтаппанё. – Çавăнпа эпё пăшала авăрласах тăратăп.

– Мён эсё тата паян пушă лавпах? – ыйтатăп унран. – Е Çёрпў пасарёнче, е Ёсмёлте сутса пётертён тискер кайăкна?

Лапшу Çтаппанё алă сулчё:

– Мён пасарё халь. Халăхё пухăнмасть. Пушши пушах мар-ха, кăшт-кашт тыткаламалăх упраса хăварнă тирне. Эс итле-ха, пёр вăрттăнлăх пёлтерем сана.

– Мён-ха?

– Тискер кайăкё те, вёçен кайăкё те таçта кайса çухалчё ку ахăр саманара. Халё эпё, ёçсёр тăрса юласран сехёрленнипе, карма-çăварсемпе бюрократсене тытма тухнă. Кăмака çинче хăяккăн выртнипех тутă пулаймăн.

– Ма тата лашапа мар? Автомашинăпа мар? Пуйăспа мар? Ероппланпа мар?

– Каларăн та çав. Камран мён ыйтса илен. Манран пурте сехёрленеççё те. Мана пурте юратмаççё-çке. Ман умра пурте алăка шарт! хупса лартаççё вёт.

– Камсем?

– Паллах, халăх мар. Пуçлăх тавраш. Эпё вёсене ялан мушка çинче тытса тăратăп-çке.

– Мёншён?

– Ара, хăшё-пёри ытла пуçтах автанла хăтланать. Чăх ушкăнне сапса панă тулла куккарекук хăй пёччен качлаттарса хырăма чикет. Тепри, мăйне пёлёте çити тăсса, халăх çине жирафла пăхать. Пуш параппан çапакан, çăмах вырăнне хывăх çитерекен сахал-и? Эсё вёсене хăвах аван пёлетён, чăваш халăхён кулăшçи.

– Темшён кулас килмест-ха ман паян, – тетёп, – Тёлённипе хытса кайрăм.

– Чăнах та, сăну улшăнчё.

– Çитăр мучин вăрăм сухалё утмăлта та кăвакарманшăн тёлёнсе шалт антрарăм.



– Ара, ма ватӑлас ун, симӗс калчапа тӑранса пурӑнаканскерӗн.

– Ҫапла, ҫирӗм тӑххӑрмӗш ҫулта Михаля мучин ял хӗрринчи ани ҫине калча ҫиме кӗртсе янӑччӗ эпӗ вӑл ӑрсурнике. Ӑна кура Михаля мучи хӑйӗн сурӑххисене Ҫитӑр мучин ани ҫине хуса янӑччӗ. Пуҫланнӑччӗ вара кӳршӗ-аршӑн, ял-йышӑн выльӑхӗ пӗр-пӗрин анине тасатма. Шакла пуҫ пекех туса янӑччӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн кашнин пуҫне «мӗнле пурӑнас-ши килес ҫул» тенӗ шухӑш пӑралама пуҫланӑччӗ.

– Качакан сухалӗ вӑрӑм та, ӑсӗ кӗске ҫав, – «урхамах» ҫине йӗрӗнчӗклӗн пӑхса илчӗ Лапшу Ҫтаппанӗ. – Вӑт вӑл, пӗр тӑнсӑр пуҫ, мӗн туса хурать, Иван Мучи. Пуҫласа пар кӑна. Кайрӗ вара... Арканчӗ тӗнче... Пета. Вӑт самана... Качаку вара сан вилӗмсӗр, пурӑнать. «Сталин ӗни» тепӗр хут ҫаврӑнса ҫитрӗ. Халӗ те чӗпӗтет ют курӑка, юр чавсах кӑшлать. Пӑлан пек. Ӑна кура ытти выльӑхӗ те уя хӑпса тухнӑ. Колхозӑнне, совхозӑнне, ҫӗршывӑнне пуҫ ҫӗклемесӗр тӑпӑлтараҫҫӗ. Пӗр-пӗринпе тӗкӗшсе, пӗр-пӗринпе ҫӗрӗн-кунӗн, хӗлӗн-ҫӑвӗн туллашса качака сухалӗ пек юлнӑ анине тӑпӑлтараҫҫӗ. Тапӑлтатаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах пурнӑҫӗ юхӑнать. Ялта лаша юлмарӗ. Шупашкара каймалла. Мӗнпе? Ҫавӑтрӑм та утрӑм вара Ҫитӑр мучин качакине. Ҫуна кӳлмелле. Ҫуккӑ. Ӑна-кӑна туса аппаланаҫҫӗ-и халь? Аэроҫуна кӗтсе лараҫҫӗ. Юрать Чулкаҫ Куҫми парнелесе хӑварнӑ хӑма йӗлтӗрсем пур. Катӑк пуртӑ пекех кирлӗ пулчӗҫ. Тытрӑм та майлаш-

тартăм. Пĕлессӳ килсен, Иван Мучи, ĕлĕкхи хатĕр-хĕтĕре тумаççĕ халь. Чăвашра тăм куршук, йывăç кашăк-чашăк ăсталамаççĕ. Çăкăр пĕçермеççĕ килте. Кăмакаран шăрттан шăрши тухмасть, Алĕç промысли хăрнă, тымарĕ чĕрĕлеймест. Пăчланчĕ аваллăх илемĕ.

– Йăлтах пăчланман пуль-ха, – тетĕп, – Чан сасси илтĕнет-çке, Çтаппан тусăм. Çĕнĕ чиркӳсем уçăлаççĕ, тет. Чиркӳ праçникĕсене таврăра пуçларĕç.

– Чан сасси-и? Çак сасă-и? Чиркӳ чанĕн сасси мар вăл. Чăваш халăхĕн сасси. Хăйĕн йăли-йĕркине, хăйĕн культурине çĕнетме чĕнекен сасă. Çав чана çапакансем чăннипех тупăнчĕç. Вăйлă вĕсен аллисем. Анчах та çав алăсене çыхлантаракан путсĕрсем те пур теççĕ-ха. Çавăнпа васкатăп Шупашкара. Атя, лар, пĕрле вĕçтерер. Шанчăклă тус вăл – пурнăç сиплĕхĕ. Тен, пулăшăпăр инкеке кĕрсе ӳкнĕ маттурсене.

Лапшу Çтаппанĕ чĕлĕм кĕлне хутаçça сиплерĕ те хашш! сывласа ячĕ:

– Чĕлĕм кĕлĕпе пăхĕ те ылтăнран хаклăрах пулса кайрĕ халь. Эп вĕсенчен шăкăлат туса ĕмсе çӳретĕп. Вăрçă вăхăтĕнче те тапак паянхи пек хаклă пулман. Чикан майрисенчен пĕр чĕптĕмне пĕр тенкĕ парса туянтăм. Тем, пушмакĕсене каялла тăхăннă пуçлăхсем ертсе пыраççĕ пулмалла çĕршывне. – Унтан вăл мăкла така тирĕнчен çĕлетнĕ алси ăшĕнчен Шашкине кăларса ячĕ те качакана çурăм тăрăх хăва хуллипе турса касрĕ. – Малалла!

Çитăр мучин вăрăм сухалĕ пире туххăмрах хулана илсе çитерчĕ. Пыратпăр ярлаттарса пăрлă асфальт тăрăх. Мĕн тĕрлĕ кăна сасăпа пиклеттерсе-нартлаттарса саламламаççĕ-ши пире кабинăран пуç кăларса пăхакан рулевойсем. Çул юппинче тăракан хурмăллă юпа вăрăммăн шăхăртнипе качакан шĕвĕр сухалĕ чăшăлах çĕкленчĕ, хăй тап! чарăнчĕ. Шашка чалт! сиксе алса ăшне чăмрĕ. Хулпуççийĕ çине мăшăр çăлтăр çакнă лутака чăваш васкамасăр утса пычĕ те пирĕн ума, сылтăм аллипе чеç пачĕ:

– Летенат милици Иванов! Чту са дранспорт?

– Гужевой-полевой, – шĕвĕр сухалне шăлкаласа хуравларĕ Лапшу.

– Какуй?.. ...евой? Оскор-блять?! – сăмахне тата-тата тарăхуллăн каларĕ автоинспектор.

– Ывăлăм, чăваш ачиех вĕт эс, чăн-чăвашах, питӳ-куçу та, сăмсу та, чĕлхӳ-çăвару та, кĕлеткӳ те хамăрăнах, – лĕхлетсе илчĕ Çтаппан. – Ху «евой» тесе илтнĕшĕн эпир вара пĕртте айăплă мар. Эсĕ пире ху чăнах та тем «оскор-блячĕпе» кӳрентерсе хутăн.

– Малчать! Са непотчинени снашĕтĕ што. Миком отправлю тута, кута слетуют на «черной вороне» Тайте рикистраци уттостворени на транспорт!

Лапшу Çтаппанĕ тин сасăпах кулса ячĕ:

– Аха-ха! Ай, камит... Çăханпа хăратать, мана, тĕнчери чи паллă сунарçа. Эп ăна ак çапла шаплаттаратăп. Ха-ха-ха! Мĕнпе хăратать... Эс, ывлăм, итле мана хăлхуна тăратарах, вара ĕнен. Пĕлетĕн-и, Çитăр мучин качаки ку. Нушапа кӳлсе тухнăскер. Ун вырăнне арăслан пулнă пулсан-и халь?.. Сан шăршу та юлас çук çакăнта. Тем хучĕ ыйтса лĕпĕртетет. Ара эп унпа, çак шуйттан кĕвентипе, ни чиркӳре венчете тăман, ни ялсуветĕнче çырăнман. Ак, свидетель пур. Иван Мучи çирĕплетсе парать.

– Чăнах Лапшу Çтаппанĕн матки мар вăл. Çатракассинчи Çитăр мучин качаки. Ами – ама выльăхах ĕнтĕ. Ĕненмесен, хӳрине çĕклесе пăх, – тетĕп ăшра кулса.

– Не палтать! Кте потхварники? Перетний. Куток есть?

Качака ăнланнă пекех çийĕнчех «Ме-ке-кек!» терĕ вăрăммăн. Лапшу кут айĕнчен йăпăр-япăр тилĕ тирĕ туртса кăларчĕ те милиционера тыттарчĕ:

– Тавар? Хварни, терĕн-и? Хăвармасăр, ара, хамăр сыхлавçăсем валли те хăвармасăр, сире валли кут хыçĕнче яланах пур. Ме, савăнтар пĕр-пĕр пикене.

– Çул хуралçи тилле кĕске кĕрĕк ăшне чăмтарчĕ те сылтăм аллине хăлхи çумне çывхартрĕ.

– Яла кайсан аннӳне çакăн пек ăслă ывăл çуратса ӳстернĕшĕн пиртен, Лапшу Çтаппанĕпе Иван Мучирен, пӳрте шăнăçайми салам кала. Но, малалла, шуйттан кĕвенти! – тесе ямшăк тилхепине туртрĕ. Кăшт аяккарах кайсан, вăл хăлхаран пăшăлтатрĕ: – Пурте илеççĕ халь – милицийĕ те, егерĕ те, лесникĕ те, тем тĕрлĕ пуçлăхĕ те. Тем те илеççĕ. Пар кăна. Пĕтĕм çĕршыв – ултав çĕршывĕ, вăрă çĕршывĕ, парас-илес çĕршывĕ пулса кайрĕ. Пурте пĕр-пĕрин пурнăç анине ак çак Çитăр мучин качакилле çап-çутă çутатса хăвараççĕ.

Хула варринче пире урăх никам та тытса чаракан пулмарĕ.

– Ял кулли мар-и, Çтаппан шăллăм? – ыйтатăп кунран.

– Ял кулли мар – тĕнче кулли, Иван Мучи, – тет вăл ман еннелле çаврăнса. – Чăн та, пирĕн чăваш пек ухмахланаканни çукрах пуль. Уничерен тухса ĕлкĕричченех манатпăр-çке тăван аннемĕр чĕлхине? Хулара вырăсла перкелешсе хамăр ята яратпăр. Ни вырăсла. ни чăвашла мар чĕлхене пакăлтатаканни мĕн чухлĕ? Ачисем хăйсем хăш йăхран, хăш халăхран тухнине те пĕлмеççĕ. Тьфу! Тутарсемех унашкал мар...

Чăваша кăшласа яракан чире чарса лартмалли эмел шыраса тупнă тенине илтрĕм эп. Чăнах-ши? – кăсăклантăм çавна май.

– Пĕлетĕн, – терĕ Лапшу. – Нумай шавларĕç çав эмел пирки. Эмелне

шыраса тупакансене хĕрхенмесĕрех кӳпкенине те астăватăп. Эй, пĕтĕм халăха сиплеме пуçличчен вăл эмелпе тин çеç çуралнă ача та ман пек сухаллă пулса тăрĕ-ха.

– Аслă Канашра та, парти штабĕнче те хытă калаçаççĕ тет чăваш халăхне чечеклентерес пирки.

– Калаçасса калаçаççĕ, хутне те çырса купаланă тет, пĕлĕте çити-ех, çавăн тăрне хăпарса чăваш хăш кĕтесре хăйĕн чĕлхине çăтса янине пăхса киленеççĕ, тет. Чечеклентерес пирки вара... чечек вăл шăвармасан хăрса ларать.

Ман халĕ çав тĕлĕнмелле эмеле шутласа кĕларакансемпе çав тери курса калаçас килсе кайрĕ, çавăнпа эпĕ Çтаппана чан сасси илтĕннĕ еннелле туртма ларăм тилхепине.

– Ёлкĕретпĕр, – терĕ вăл. – Хырăм çурăм шăмми çумне çыпçăнса ларчĕ-ха.

Юр-вар кирлех пуль, – килĕшрĕм эпĕ те кăвапа тĕлĕнче тем пăкăртатнине туйса.

– Укçу пур-и? – ыйтрĕ Лапшу.

Вилсен хама ăсатма пынă çынсем шăтăк тĕпне пăрахнă вак укçасене, сых ятне тесе, чиксех тухнăччĕ, çавсене шăнкăртаттарса кăтартрăм.

– Э-э, тăванăм, – тапак тĕтĕмĕпе саралнă шăлĕсене кăтартрĕ Çтаппан, – шăтăртатаканни кирлĕ халь. Ман хамăн та çукрах укçи. Юрĕ, вилмĕпĕр.

Тир парса хырăмсене суйса тухрăмăр.

Лапшу Çтаппанĕ Куçма Чулкаçа асăнма тесе эрех туянасшăн пулчĕ. «Косынка» кирлĕ, терĕç. Ăнланмасăр чуптартăмăр мăн лавккана. Ак тамаша! Прописккăсăр тутăрне те сутмаççĕ. Эп Çĕр çинче шутланмастăп. Леш тĕнчерен выписацă туман. Тĕнчипе паллă сунарçă Ямаш вăрманĕнче пурăнать. Мĕн тумалла? Асăнмасан ваттисен йăлипе, Чулкаç тытса хутлатса лартма пултарать. Пĕлетпĕр ун кутăнне. Хайхи кĕпĕрленӳ патнех васкарăмăр. Тăн кĕнĕ хыççăн «косынкине»-талонне пĕр мулкач тирĕпе улăштарса, пуш кĕленчи вырăнне пакша тирĕ парса, эрехне сăсар тирĕпе илсе тухрăмăр-тухрăмăрах.

– Пĕр мăн ĕç турăмăр, тăванăм, – ярăнакан пырне пӳрнисемпе хĕстерчĕ Лапшу. – Малалла! Хулана килнĕ пек чухне сахăрне те, кĕрпине те, макаронне те, услам çуне те, тип çуне те, супăнне те тултарса каяс-ха...

– Талонпа... Талонпа... Талонпа...

Хальхи музыка пек кĕрлекен «па-па-па!» пуçа минретсех ячĕ. Аптранă енне Çтаппан шӳтлеме пуçларĕ:

– Талонсăр мĕн сутаççĕ Шупашкарта?

– Тинĕс купăстипе секс кĕнеки, – ихиклетрĕ пĕр шăлйĕрен.

– Качака та çимен апатпа сиксе-сĕксех пулас çук-ха, хĕрупраçăм, – куçне мăч хупрĕ Лапшу Çтаппанĕ. – Ахаль купăста пур-и? Ман «ăйăр» выçă. Парăр-ха апла пулсан пĕр лав.

– Çук, çав, кашнин пуçне пĕрер пуç çеç сутма юрать. Норма.

– Икĕ пуçлă пулсан та-и?

– Ан кулăр, икĕ пуçлă çын çуккă.

– Пур. Эпир Иван Мучипе иксĕмĕр те икĕ пуçлă. Качакана шутласан, Мăйракисене... Куçна йĕпе кӳлĕре иштерсе тăриччен, хăвăртрах турттарса пар пире çичĕ пуç купăста. Чăнах, ман качака выçă.

– Эх, ватсупнăсем, нихçан та ватăлмасть пуль вăл, арçын тени, сăмахне пуçарса пар кăна, – текелесе тин пăркаланма пуçларĕ сутуçă. – Секс кĕнекине те илме ан манăр. Сире как рас кирлĕ. Их-ик!

– Вăт ку интерхĕр пекех – интереслĕ хĕрех, – вăрттăн шăл йĕрсе, купăста миххине çурăм çине çавăрса хучĕ Лапшу Çтаппанĕ.

Чун уççиллĕ ян-ян сасă пире «Сеспель» кинотеатр хыçне илсе çитерчĕ. Тăвată хутлă тăваткал çурт умĕнче чарăнтăмăр. Качакана чăрăшран кăкарса, анлă алăкран кĕтĕмĕр. Тĕлĕрсе ларакан ватă хуралçă çумĕпе сылтăмалла, иккĕмĕш хута, улăхрăмăр.

– Камсене куратпăр?! Хăнасем килчĕç!

Икĕ пӳлĕмрен сиксе тухнă вуникĕ пике, виçĕ пӳлĕмрен вăркăнса тухнă вун виçĕ йĕкĕт туххăмра сырса илчĕ пире. Ыйту хыççăн ыйту: «Епле килме пĕлтĕр». «Ывăнмарăр-и?». «Вучах» умĕнче ăшăнас теместĕр-и?». «Пикепе» паллашас килмест-и?». «Тĕпеле» иртĕр!». «Кĕрекене» ларăр?»

Шăв-шава илтсе пулас, хĕрринчи пӳлĕмрен йăл-йăл куçлă, кăмăл куллиллĕ сăн-питлĕ, вăтам пӳллĕ чăваш тухрĕ те пире черетпе ыталарĕ:

– Акă ĕнтĕ пирĕн чи чаплă хăнасем те çитрĕç. Хăçантанпа кĕтетпĕр сире. Турри пур иккен. Кĕлĕ тунине илтрĕ. Ярса пачĕ вăхăтрах. Сирĕнсĕр пĕтетпĕр. Халран кайрăмăр. Паллашар, эппин. Эпĕ...

– Эсĕ – Юхма, – терĕ хавассăн Лапшу Çтаппанĕ. – Чăвашăн тепĕр вутлă Мишши. Эпĕр кăна мар, тĕнче пĕлет сана. Патăрьел йĕкĕтне. Ман Чулкаç та манмасть. Эс пире, «Кăвак çĕмрен» çине лартса, «Мускав çулĕпе» Раççей чĕри патне çитертĕн, тăван халăх «Терменне» çĕршыв çийĕн çĕклерĕн. Тĕнче касса çӳрекен сан «Шурçамку» хыççăн лĕпĕстетсе ывăнчĕ ĕнтĕ ман Шашка. Çамрăк кашкăра йытă хуса çитни хăçан пулнă ĕнтĕ вăл.

Тӳррипе каласан, хам эпĕ çак кăра кăмăллă, уçă чунлă, çилĕмлĕ,

хёмлё, каялла чакман чăваша курманччё, итлессе вара ун çинчен илтсех выртнăччё. Тёлёнмелле туйăмлăх, ăшă туртăмлăх юхса тăрать унран.

– Пирён президент ку, – уççăн калаçма пуçларё юнашар тăракан йăрăс пике. – Виçёмçул мёнпур чăваш халăхён суйланă çыннисем Шупашкара пухăнчёç. Аслă Канаша. Ăспуçлăх пёрлёхё турăмăр. Унăн тёп ушкăнне ертсе пыма хисеплё Михаил Николаевича шанчёç. Эпё...

– Эсё-и? Сана та пёлмен çын çукрах пуль халё таврара, хёрём, – каллех пўлчё Лапшу Çтаппанё. – Сарпи. Сарпикеçём. Эсё, Раиса, чăваш хёрарăмне мёнле пысăк парне тума пултарнине те пёлетпёр. «Ёçхёрарăмёпе» киленсе ўснё-çке эпир, халё... сан «Пикўпе» йăпанасшăн.

– Тухаймарё-ха журналё, халăх патне çитеймерё, ырă çыннăмсем, – хёвеллён йăлкăшакан Сарпин пичё çийён çавраçил вашкăртса иртрё. – Çав парнене хатёрлессишён ёнтё чёресёр пулса лара пуçларăм. Михаил Николаевич та, авă, хăйне çак турта хушшине тăратнă хыççăн, куç умёнчех шуралма тытăнчё. Пулăшатпăр тесе сăмах параççё, анчах сăмахё айнех пулаççё.

– Камсем? – чун кăсăкланнипе ыйтрăм чăтаймасăр.

– Пур унта, – тёллесе кăтартрё çўлелле пёр пики. – Суя патшасем.

– Тёрёсех калать, – хёрёвне чараймасăр калаçрё Сарпи. – Парти комитечё, Аслă Канаш, Министрсен Канашё, халăх хётёртнипе, чăваш культурине çёклемелли ывçă хулăнăш мероприяти йышăнчёç. Чăвашсен съезчё Культура центрё йёркелерё. Ăна «Вучах» хаçатпа «Пике» журнал кăларма ирёк пачё. Пуçланчё вара çакăн хыççăн ахăрсамана. Вёсем йышăннă – пирён пурнăçламалла. Вёсем ун пирки Мускав таран мухтаннă – пирён Мускавёнче хашкаса чупмалла: хаçат-журнал валли хут тупмалла, культура центрне чёртме «вут-шанкă» хатёрлемелле. Чупатпăр лиска йытăлла Шупашкарпа Мускав хушшинче те хулаком çурчёпе Аслă Канаш çурчё хушшинче, Аллисене сарсах, кула-кулах кётсе илеççё. Алăкран пуç тайса ăсатса яраççё те... Каллех çёнёрен пуçлама тивет çав чупăва. Хирёçлесе, çирёппрех тăрас тесе, сасса та хăпартса пăхатпăр. Унашкал та май çук. Рескомри хуравлă пёр тăрнаккай, хаçат подшивкисем айне путнăскер, мана пўлёмрен кăна мар, чўречерен кăларса перессипе хăратрё. Аптранă енне алăри юн тымарне татса пăхрăм. Юн та хăратмасть иккен вёсене. Этем юнё те...

– Ют юна хăнăхнă çын юнран хăрамасть, – хăй тăрăх пăхса каларё тёнчере паллă сунарçă. – Хам лайăх пёлеп.

– Пурте пĕлеççĕ вĕт-ха пире мĕнле йыvăррине, – хушса ăнлантарчĕ Юхма Мишши. – Эпир ним çук çĕрте ĕçлеме пуçланине те аван кураççĕ. Çулталăк ытла йăтса çÿрерĕм ак çак сăран папкăра ЧОКЦ канцелярине. Тĕнче чăвашне хваттерте йышăнса пурăнтăм. Чăвашьсен коммунисчĕсен пуçĕнче тăракан аслă çын хăй чĕлхипе хăй шантарчĕ вĕт çакăнти иккĕмĕш хутри пÿлĕмсем пурте сирĕн, культура центрĕн, пулаççĕ тесе. Хулари райкомсене пĕтерчĕç те, вырăн пушанчĕ. Валеçме патне çитсен, чи лайăх ултă пÿлĕмне чăн малтан урăххисене арендăна пачĕç, пире, вăтăр пилĕк çынна, ултă тăвăр пÿлĕме чыхса хучĕç. Сĕтел-пуканне те пулин хаклă хакпа сутса хăварчĕç-çке. Чăвашсен культура пĕрлĕхне кам кăна укçа-тенкĕпе, пурлăхпа, усăллă сăмахпа пулăшмасть пулĕ... Вĕсем вара çав укçа-тенке, пулăшу укçине, урăхла майпа пирĕнтен реском кĕсйине сăптăрса илеççĕ. Халăх укçине. Чăваш халăхĕн культурине çĕклемешкĕн хĕрхенмесĕр панă укçана çаратаççĕ. Мĕн ку: куланай-и, хысна-и? Хăйсем тумалли нумай ĕçе хамăр тăрăшнипе пурнăçланăшăн епле «ырăпа» тавăраççĕ? Тутарстанра, Мариэлĕнче рескомсемпе Аслă Канашсем нимĕн хĕрхенмеççĕ хăйсен тăван культуришĕн, аслă пуçлăхĕсем чи малта пурне те хавхалантарса, пулăшса пыраççĕ. Пирĕн?..

– «Вучах» хаçата пичетлесшĕн мар уйăх унта-кунта чуптарчĕç пире, – илтĕнчĕ ушкăнран.

Мĕнпур чăвашсен хаçатне чăвашсем пичетлесшĕн марри çинчен илтнипе пуç çине йăлăм вăрманĕ пек çÿç шăтса ларнăнах туйăнчĕ.

– Никам та пичетлесшĕн мар. Мечĕк тапнă пек тапса кăларса яраççĕ пире алăкран. Йăван Петĕр çине, Петĕр Йăван çине йăвантарать. Çапла йăвалантарса сăмах купи купаларĕç ĕнтĕ чăваш халăхĕ умне. – Сарпи куçне-пуçне çиçтерсе илчĕ те шăл витĕр сăрхăнтарса çирĕплетсе хучĕ. – Çу-ук, тек ĕнтĕ никам та чараймĕ. Çăлкуç та, пĕр çĕртен хупласан, тепĕр çĕртен тапса тухать. Пурпĕрех хăй çулĕпе юхать. Пирĕн халăх ăспуçлăхĕн çăлкуçĕ те тапать, мĕнпур чăваш чĕрин хăвачĕпе тапать. Чăваш пĕрлĕхĕн «Вучахĕ» çунать. Ун умĕнче чăваш «Пики» вăшталанать. Вутне хурсах тăрать. Хăйĕн ĕçченлĕхĕпе, сăпайлăхĕпе, илемĕпе тĕнче çуттинче йăлкăшать. Чăваш чанĕ çапать. Ăспуçлăх пĕрлĕхĕ çумне чĕнет. Пур чăваша та. Эсир те çитрĕр, авă, кирлĕ чухнех. Сирĕн валли те ĕç мăй таранах.

– Мăйкăчпа куян тытнă пек ярса ил-ха пĕрре мулкач чунлă хăравçă пуçлăхсене. Кăтарт Лапшу Çтаппанĕ камне: тилĕ пек чейисене мăн шăтăка илĕртсе сиктер; мĕнпур бюрократне пăсарасем пек çăка хăвăлне чăмтар; тухнă чухне пĕрерĕн-пĕрерĕн шакка туяпа; карма çăварсене кашкăра чĕлхерен тăпăлтарса тытнă пек тыт; «чышкăсене»

арăслана хӳререн çатăрласа илнĕ пек çавăрса ил те, хăйсен сăмахне тытиччен ан яр, – сĕнчĕç темиçен харăс.

Мана та ӳкĕтлеççĕ. Мĕнпур пуçлăх Салма ялĕнчен сикекен пăрçа ертсе килнĕ пек сиккелет пилĕк çултан та иртсе кайнă вĕçĕмсĕр канашлу-тавлашура. Çавсене кĕпи-йĕмĕпех вĕри хуранта пĕçермелле, теççĕ.

Пурте шавланă хушăрах Лапшу Çтаппанĕ алса ăшĕнчен йыттине кăларса камантă пачĕ:

– Шашка, ӳк йĕр çине!

Ĕрĕхтерсе пыратпăр Мускав урамĕпе анаталла. Çитăр мучи качаки çул варрипе сиктерет кăна. Урамра тăнă чухне ачасем майраки вĕçне йăлтăркка шар тăхăнтартса янă та, милици машини пек кĕрлеттерсе, мекеклетсе çитсе тăтăмăр Аслă Канаш çурчĕ умне. Эй, турă, çăмăл автомашина кунта... Шутласа кăларма çук. «Пĕр-иккĕшне Чăвашсен культура центрне парнелес пулсан, мĕн тери савăнмалла», – шухăшласа илтĕм эпĕ. Аран-аран вырăн тупса майлашăнса тăтăмăр. Лапшу качакана çур пуç купăста касса пачĕ те, кĕрсе кайрăмăр Аслă кермене. Шалта çапса хăстернĕ пек халăх. Çыннисене такам ятарласа пуçтарнă тейĕн, пурте хĕремес пит-куçлă, така хуранĕ пек хырăмлă, пурте пĕрешкел хăш та хăш сывлаççĕ, măш та măш тăваççĕ.

– Тинĕс тĕпĕнчи Шупашкар пасарне кунта куçарнă-им кив хулана пăссан? – ыйтрăм пĕр самăрскерĕнчен.

– Не понимаю. По-русски говорите, – кăпка пуçне силлентерсе илчĕ вăл.

– Хамăрăн чăваш çĕрĕ çинче чăвашлах калаçас-ха, – тесе Лапшу Çтаппанĕ хирĕнкелесе малалла талпăнчĕ. Эпĕ – ун хыççăн. Анлă ялка картлашка умне çитсен тин асăрхарăм: манăн сунарçă çук. Юрĕха, тетĕп, таçтах çухалмĕ, Йăлăмра мар, унăн хăйĕн ĕçĕ.

– Юлташ, тăхтăр-ха, эсир кам патне? – кăчăк туртрĕ мана хурмăллă старшина.

– Эпĕ... мĕн... унта... – текелерĕм те, хам кунта никама та палламаннине-пĕлменнине тата никам хушаматне те астуманнине аса илсе, çăвара шыв хыпрăм.

Хуралçă мана пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çити йĕрлесе тухрĕ:

– Ку мĕн хуранĕ?

– Така хуранĕ.

– Ку тата мĕн çыххи?

– Юман вутти.

– Мĕн тума?

– Вучах чӗртме.

– Ӑҫта?

– Ҫӳлте. Пуҫлӑхсем патӗнче.

– Хуранӗ мӗн тума?

Ан шарла, аншарли юхтарма тесе шӳтлес тенипе чӗлхе тӑрри кӗҫӗтсе кайрӗ, ӑна ҫыртса лартрӑм та, кунашкал суйсан тытса та хупӗҫ тесе шухӑшласа пуҫа этем купи еннелле сӗлтрӗм:

– Ҫавсене...

– Мӗн, ҫавсене? – куҫ шуррине милици машини ҫинчи ҫутхӑратмӑш пек ҫавӑрттарчӗ старшина.

Хӑвӑрт тавҫӑрса илтӗм те сӑмаха ҫемҫетсе ятӑм:

– Ҫавсене... шыва кӗртме кирлӗ хуранӗ. Тем тесен те вӗсене чиркӳре чӑпӑл тунӑ пулас ҫук.

– Ҫапла пулмасӑр, – илтӗнчӗ таҫти шӑтӑкран тухнӑ пек Лапшу Ҫтаппанӗн сасси. – Вӗсем сана хӑвна шыва кӗртеҫҫӗ. Кур-ха, мӗн вӗсен аллинче?

Малтанах мӗнле асӑрхайман-ха ҫакна эп? Кашниннех пӗр хул хушшинче «Библи», тепӗр хул хушшинче – ҫара кут майра – «Секс вӑрттӑнлӑхӗ».

Ку чун туртмӑшсене хамӑн та хул хушшине хӗстерес килсе кайнипе чӑтаймарӑм, хӑюлланса пӗр лутака арҫынтан ыйтрӑм:

– Ӑҫта пичетлесе тултарнӑ ку кӗнекесене? Ытла чаплӑ-ҫке.

– Ӑҫта пултӑр, хамӑн издательствӑрах. Эпир халь мускавсенчен чаплӑрах кӑларма пултаратпӑр. Вӑтам Ази таран пичетлетпӗр. Унти халӑхсен культурине ҫӗклетпӗр. Тупӑш кирлӗ. Рынок, – мухтаннӑ вӑхӑтра куҫлӑхне иккӗ-виҫҫӗ хывса тӑхӑнчӗ ку чӑваш чӗппи.

– Культура, чӑваш культури тата?..

– «Библи» – истори палӑкӗ. Ӑна чӑвашла ҫапнӑ. Чӑваш культуришӗн мар-и? Кӗнеке хуплашкинчи ҫара кут майра ӳкернӗ картина та – искусство произведенийӗ. Кут-пуҫ енӗпе те пирӗн вӗренмелле-ха. Ытла вӑтанчӑклӑ эпир. «Секс вӑртӑнлӑхне» те чӑваш валлиех кӑларнӑ. Чӑваш культуришӗн мар-и? – пуҫне ҫӗклемесӗр тӑн пачӗ мана вӑл. – КПСС обкомӗн издательстви те пурнӑҫ урапипех кӗрлеттерет.

Тин ӑнлантӑм. Унпа-ҫке мӗнпур чӑвашсен хаҫатне «Вучаха» издательство алӑкӗнчен кӗртме васкаман? Милиционер та, авӑ, ҫӳлте вучах чӗрттересшӗн мар.

– Документ кӑтартӑр?! – хаяр сасӑ шартах сиктерчӗ.

– Мӗн докуменчӗ пултӑр хӗрӗх улттӑмӗш ҫулта вилнӗ ҫыннӑн? – илтӗнчӗ каллех Лапшу Ҫтаппанӗн ҫурӑкрах сасси.

– Вилнӗ ҫын?! Эсир, мӗн, тӑр кӑнтӑрлах мӑшкӑллас тетӗр-им? Пӗлетӗр-и ӑҫтине?

– Аслӑ Канаш ҫуртӗнче, – тетӗп лӑпкӑн.

Ҫав вӑхӑтрах таҫтан ҫӳлтен Хусанкай пулӑшма персе ҫитрӗ, чӑваш халӑхӗн гарҫи текен Атнерӗ мар, паллах, Чӑваш халӑх поэчӗ, Петӗрӗ. Хӑй ҫырнӑ йӗркесене вӑл уҫҫӑн янраттарса вуларӗ:

«Ҫуралас ӑрусемшӗн манми,
Улшӑнми кулӑш енчӗк хуҫи –
Вӑл Илларнус ывӑлӗ Мами –
Капкӑнмейстер – Иван Мучи».

– Эпӗ те ҫирӗплетсе пама пултаратӑп вӑл камне! – тепӗр енчен кӑшкӑрчӗ Ҫӗпритун Шӑпчӑк. – Эпир унпа «Капкӑнра» пӗрле ӗҫленӗ, пӗрле юр юрласа пурӑннӑ, ак ҫак юрра:

«Ҫӑпата, ҫӑпата,
Куртӑн эсӗ хурлӑха.

Ҫӑпата, ҫӑпата!» Халӗ те тамӑк хуранӗн айне черетпе вут хурса тӑратпӑр.

– Ясно! Артистсем эсир. Кӗркунне те пӗрисем банкет вырӑнне пикет текен спектакль лартса пачӗҫ ҫак ҫурт умӗнче. Театр кирлӗ вӗсене, чӑваш культури кирлӗ. Чӑваш чӗлхи пуринчен аслӑ пулмалла теприсемшӗн – ухмахланса чул картлашка ҫинче «выҫса» ларчӗҫ. Кулӑшла, тусӗсем ҫӗрле куҫса ҫӳрекен ресторанчиксемпе вӗҫтерсе ҫитеҫҫӗ те ӗҫтерсе-ҫитерсе хӑвараҫҫӗ какӑриччен. Епле тӗреклене, чӑп-чӑмӑр питлӗ пулса кайрӗҫ «выҫлӑх» эрнинче вӗсем? Митинг пекки тунӑччӗ те ҫав вӑхӑтра парти пуҫлӑхӗсене хирӗҫ тӑракансем, урнӑ йытӑ пек туллашса чупрӗҫ вӗт ҫав «выҫӑ тытакансем» ҫамки урлӑ хӑю ҫыхса. Ҫитмест вӗсене, яланах тем ҫитмест: сӑмаххипе такам та пуласшӑн вӗсем, тар кӑларса ӗҫлесшӗн мар. Ӗҫлеме вырӑн ҫук вӗсемшӗн. Кай яла, ҫӗр ил те ҫӗр теҫеттин – ӗҫле...

Сарлака алӑкран хырӑмсене шӑлса тухакан самӑр арҫын ушкӑнӗ пире хӗссе лартнипе милиционер каласа пӗтерейменӗ. Эпӗ вара унран ҫапла ыйтрӑм:

– Мӗн тӑвакан халӑх ку?

– Саккун кӑларакансем. Эрне хӗвӗшеҫҫӗ ӗнтӗ. Ял ҫинчен, ҫӗр валеҫесси ҫинчен павраҫҫӗ, – вӑрттӑн пӑхкаласа ӑнлантарчӗ тумтир хураллакан хӗрарӑм. - Хӑйсене ярасчӗ пурне те яла. Пилӗк автарса тарлаттарасчӗ чӑн-чӑн хресчен ӗҫӗнче. Эх, анчах... Паян кунта кун-эрне иртерҫҫӗ вӗсем, ыран – тепӗр ҫӗрте, виҫмине – таҫта. Сӑмах купи купалаҫҫӗ. Сӑмах купи - тислӗк купи мар. Ӑна тӑксан та тырпул пулмасть. Ҫавӑнпа, ҫавсене пула, выҫӑ эпир. Юг патшалӑхра ыйткаласа ҫӳретпӗр.

Инкене итленӗ хушӑрах старшинаран тархаслатӑп:

Ч-41382
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА

– Яр мана ирттерсе?

– Ăçта?

– Çӳлти патшалăха.

– Э-э, унта çитме ан васка-ха, мучи, ĕлкĕрĕн.

– Эпĕ ĕнтĕ çирĕм пиллĕкрепех Мучи – Иван Мучи. Эпĕ ĕнтĕ, Шупашкар çывăхĕнчи Утикассинче çуралнă пулин те, утьăкка сиксе пурăнман. Шуррисемпе те çапăçнă, ухмахсемпе те кĕрешнĕ. Лере те пулса курнă. Çĕр çинчи çӳлти патшалăхра çеç пулман. Яр мана унталла. Калаçмалли пур. Патшасемпе калаçас.

– Мĕнле патша? Пирĕн патша таврашĕ çуккă.

– Микул турă, мăн турă амăшĕ, хута кĕрсемех, – хĕрес хутăм кăкăр çине.

Çав вăхăтрах çурăм хыçĕнче Лапшу Çтаппанĕ мăшлатни илтĕнчĕ.

– Эс тата мĕнлескер? – ыйтрĕ милиционер.

– Эпĕ-и? Мана та палламастăн-и эс, ыллăм? Эпĕ вĕт Лапшу Çтаппанĕ пулатăп – тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă. Кĕнеке вуламастăн-им? Куçма Чулкаçа...

– Чăнах Лапшу Çтаппанĕ вăл, – çирĕплетсе каларăм эпĕ. – Пĕр каçрах çĕр те икĕ куян та хĕрĕх тилĕ, вăтăр сакăр пăсара, çĕр кашкăр тата темиçе упа, арăслан тытма пултарать.

– Палкăрах ĕнтĕ, чĕлхен шăмми çук, – тин кулса ячĕ старшина. – Авă, çавсем те пуш параппан çапса, çак кивĕ çурта йăтса антараççĕ пуль. Кĕнеке тенĕрен, мĕн, пĕлместĕр-им эсир чăваш кĕнекине тахçанах ĕне çинине? «Чышкă тытăмĕнче» чăваш мĕнле хĕн-асап курнине Иван Мучи ай-яй мĕнле кулăшла çырса кăтартнă.

– Акă вăл хăй тăрать сан умăнта, – ман çине тĕллесе кăтартрĕ Лапшу.

– Иван Мучи-и?! Ха-ха, суеç артистсем. Малтан сухал çыпăçтарса килĕр. Кайран... мана улталаймăр. Хăлха çивчĕ ман. Илтетĕп, тăнлатăп эп çак çуртра мĕн калаçнине. Э-э, халĕ те мĕшĕрттерет теççĕ çав хура ĕне чăваш кĕнекине. Чăваш кĕнеки кăларса çитерейместчăваш валли Чăвашгиз. Вĕсем вырăслине, укçа çапмаллине, ытларах çапаççĕ. Чышкă аллинче вĕт вĕсем те. Чулкаççене вара эпĕ пит лайăх паллатăп. Унта, вăл ялта, пĕр Куçма пулнине пĕлетĕп, анчах сана, Лапшу Çтапанне, палламастăп.

– Палламасан та пире эс, ывлăм, çӳле çеç хăпартса яр, – йăлăнать Çтаппан.

– Эхе, пăшалпа-и? Юрамасть.

– Смольнăйра тата мĕншĕн юранă. «Пăшаллă çын» спектакль курман-им эс?



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА

– Ун чухне революци тунă.
– Халĕ те революци пырать-çке.
– Лĕпĕртетни мар-и? Мĕн, çавсем пĕр-пĕрне чĕлхепе персе антарнине революци теттĕр-им?
Çапла калаçкаласа эпир пĕр мрамор картлашка çӳлерех хăпартăмăр-хăпартăмăрах. Çавна асăрхаса, милиционер телефонпа таçта шăнкăравларĕ. «Псих,,,» тенине çеç илтсе юлтăмăр. Пире хулран çатăрласа тытрĕç те сисмесĕрех çӳллĕ алăк хыçне кăларса тăратрĕç.
Акă, Аслă Канаш çурчĕ умне хура вăрăм автомашинăсем кĕрлеттерсе çитрĕç. Алăккисем пĕр харăс яри уçăлчĕç те икĕ машинăран тӳрех пĕрер çын тухрĕ. Пурте мăнкăмăллăн, шухăшлăн пуçа чиксе утрĕç.
Пĕри, тутине чăмăртаса тытни, хул хушшине «Шурча таврашĕнче» кĕнеке хĕстерни, Атăл енчен вĕçсе килнĕ чарланпа чарласа хăпарса кайрĕ.
– Ахăртнех ку летун Шурча таврашĕнчен, – тетĕп Çтаппана.
– Çук çав, пĕлеймерĕн, – пуçа кăтăрт-кăтăрт хыçать Лапшу. – Шурча таврашĕнчен пулсан, вăл сенĕк йатса утмалла, юшкăн шăтарса тухнă халăх пусмăрçисене хирĕç вăрçă кăлармалла. Ку вара Хĕветĕр Уяр кĕнекипе витĕнсе, тĕрĕслĕх хӳтĕлевçи пулассишĕн çунать, парти рескомĕн канашне ертсе пыраканскер, пăтă пĕçермеваскать. Вут хумалăх... куратăн пуль кутамккинче ун мĕн хулăнăш хут тĕрки?
Тепри, куçлăхне ĕçлĕн хывса тăхăнкаласа, «Коммунизм ялавĕн» çурăк хăйăвĕ тăрăх виççĕмĕш хуталла шутарчĕ.
– Ку кам тата?
– Çавна та пĕлместĕн-и? Ара вăл реском пуçлăхĕн тĕп идеологĕ, халăха тăн парас вырăнне тăм хыптараканĕ, çынсен ăс-тăнне йĕтĕрпе тăм чуста якатнă пек якатакан. Чăваш культури хăш еннелле сулăнасси вăл мĕнле утнинчен те нумай килет. Авă, кĕç-вĕç çĕрелле персе анас пек хăрах еннелле чалăшса пырать...
Карăнтарнă йыт пырши тăрăх хул вĕççĕн мекеçленсе хăпаракан тăлпан кĕлеткеллĕ арçын чӳрече хысакки çине хăрах урипе мекеçленсе тăчĕ те, яка тумне колорадă нăррисенчен силлесе тасатрĕ, унтан аллине çулпуçла çĕклесе, Раççей илтмелле селĕппĕн кăшкăрчĕ: «Тăван çĕршыв хăрушлăхра!» Лапшу Çтаппанĕ хăлхаран пăшăлтатсан, ку камне те пĕлтĕм. Комсомол ялавĕнчен çĕлетнĕ хĕрлĕ кĕпе тăхăннă, ялхуçалăх министрĕнче ĕçленĕ чухне кăкăрне орден-медальпе капăрлатнă Анатолий Михайлович Леонтьев Чăваш Аслă Канашĕнче чи Асли шутланать-мĕн. Ахальтен мар вăл Раççей шайĕпе хăлаçланать.
– Епле тӳрĕ çул вĕсен çӳлти патшалăхра. Эпир ĕмĕрне те çитес çук

унта. Пире пĕр картлашкаран ытла çӳлелле пусма та памаççĕ Чышкă тарçисем, – терĕм тусăма.

– Шăпах çак юлташсемпе Вучах умĕнче чуна уçса калаçмаллаччĕ те ĕнтĕ пирĕн Чăваш культури çинчен, анчах... Пире çаксем йышăну пӳлĕмĕнче кĕтсе лараççĕ пуль тесех-ши, чӳречерен кĕрсе тарчĕç, – терĕ, пĕлĕт çӳллĕш кутамккине çуна çине пăрахса, Лапшу Çтаппанĕ. – Юрĕçке, кулянмаллах мар, ухути ăнаçлах пулчĕ. Сан така хуранне те кĕрес çук ку бюрократсемпе карма çăварсем. Малалла! Чăваш халăхĕ чĕннĕ çĕрелле! Авă, чанĕ кĕрлет, «Вучахĕ» çунать.

Чăн та, халăх чанĕн сасси, Аслă Канаш çурчĕ çине пырса çапăнса, ахрăмла янăрать.Анлă лаптăкра ăна Ленин та илтет, чӳречерен вăрттăн пăхакан пуçлăхсем те илтеççĕ. Вăл сасăран нимле хулăн стеналлă пӳлĕме тарса пытансан та хăтăлаймăн. Чăваш чанĕ кĕрлет. Эпир те хамăр çулпа кĕрлеттеретпĕр. Çулĕ 1991 çула илсе кĕчĕ.

Тепре куриччен!

## ЧЫШКĂ ТЫТĂМĔНЧЕХ

Кăçалхи кăрлачра эпир Лапшу Çтаппанĕпе иксĕмĕр Шупашкара персе çитнĕччĕ. Астăватăр-и Çитăр мучин ула качакипе катаччи чупнине? Шашкăран хăракан милиционерсем яри çул уçса пăраççĕ. Ăçта кăна çитмерĕмĕр, ăçта кăна пулмарăмăр. «Шурă çуртран» пĕр михĕ бюрократ тытса тухнăччĕ. Миххине бюрократ тумне тăхăннă йĕкехӳре кăшласа шăтарнă пирки пурте тухса тарнă çав. Шашка та алсара тĕлĕрнĕ. Тĕнчипе паллă сунарçă Лапшу Çтаппанĕ вĕсене урăх тытма шутламарĕ. Инçех тарайман та, пурте вĕсем черете вырнаçса тăнă та (ку мĕн черечĕ пулнине каярах каласа парăпăр-ха), тивес темерĕмĕр.

Сар хĕрупраç куллипе çур кунĕ ирĕлсе çитнĕ май, çунана урапапа улăштарса тăн тухрĕ. Ку вара чаплă арăма нимпе улăштарма май çук пекех пулчĕ. Шупашкарта лаша урапи ăçтан тупан? Краеведени музейĕнчен те, Чапаев музейĕнчен те вăрласа тухаймастăн-çке? Ирĕксĕрех хамăрăн кооператив майлаштармалла пулчĕ. Тăкумент таврашĕ çук та, хула влаçĕсем пире шута илмерĕç. Хулара уй нумаййине усă курса, пĕр лаптăк суйласа илтĕмĕр. Хамăр валли тырă акса хăвартăмăр, çĕр улми лартрăмăр, ула качака валли купăста ӳсет. «Ивлапшашкач» кооперативĕ аталанать-ха – Иван Мучипе Лапшу Çтаппанĕн тата Шашка йытăпа сухаллă Качакан çирĕммĕш ĕмĕр вĕçĕнчи туслă, хăватлă эртелĕ. Паянхи çăмăлттай та урмăш пурнăçра тытăнса тăмадда-çке Çĕр çинче! Çапах та Шупашкар тинĕсĕн аварĕнче,

сулахай çыранра, çĕр кăшламастпăр, хамăр çитĕнтернĕ апат-çимĕçпе хырăма саплаштаратпăр, мăн элеватортан хĕсĕнсе тухакан Штраус кĕввипе ташласа урасене çемĕçтеретпĕр.

Манăн уйрăлми тусăм, ялан йышлă чĕрчунпа аппаланма хăнăхнăскер, хушăран ухутана та кайкаласа килет, анчах йăлăмран пĕр каçрах çĕр те икĕ куян те ертсе килеймест, пĕр лав пăчăр та турттарса таврăнаймасть. Хĕрарăм шухăшĕ аптăратрĕ тата...

Çав вăхăтрах сылтăм çыранри кермен алăкĕ тăрринче тĕлĕнмелле сăмахсем йăлкăшма пуçларĕç: «Пĕтĕм çĕршыври хĕрарăмсен пĕрремĕш курултайне хутшăнакансене хĕрӳллĕ салам!»

– Мĕнле курултай ку? – тĕлĕнсе пуçне хыçать Лапшу. – Эй, Çитăр мучин качаки, эс пĕлместĕн-и?

Улайкка Çтаппан куçĕнчен кăнн пăхса мекеклетет.

– Пĕлместĕн. Эсĕ тата, манăн уйрăлми тăванăм Шашка, тавçăратăн-и?

Чышкă пек йытă алса ăшĕнчен сиксе тухать-те, хуçин пит-куçне çулла-çулла нăйкăшать.

– Эсĕ те пĕлместĕн. Кам пĕлет-ши?

– Чăвашсене чăвашлăха вырăсла вĕрентекен профессорсем пулма кирлĕччĕ-ха Шупашкарта. Çавсенчен ыйтмалла, – тетĕп.

– Пĕлмеççĕ пуль вĕсем те, чăвашла маннăскерсем.

– Темле çав. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш писателĕсем чăн чăвашла çырнине хирĕç хирĕлме тытăнчĕç вĕсем. «Курултая» çеç мар, «термен», «эткер», «шурсухал» тенине те хирĕçлеççĕ. Юрать-ха «çăкăр» тенине хирĕç мар. Курултай вăл – чăн чăваш сăмахĕ, аслă пуху, аслă влаç.

– Так, так, так... – ташласа илчĕ Çтаппан. – Ăнланмалла. Хĕрарăм хăрамасăр, хăюлланса, вăй илесшĕн пĕр купана пухăнать. Каяр эпир те. Суйлар хамăр валли. Унсăрăн...

– Пире чĕнмен-çке? Çитменнине тата эпир... арçын.

– Уншăн кулянмăпăр. Эпир вăл – эпир. Çиччас. Ман тĕлĕнмелле эмел курăкĕ пур. Ямаш вăрманĕнчи Уçтук варĕнче татнăскер.

Лапшу Çтаппанĕ нихçан типмен сип-симĕс курăка малтан хăй чăмларĕ, унтан мана пачĕ. Ак тĕнче! Ман куç умĕнчех вăл хĕрарăм пулчĕ тăчĕ. Хам вăтанса кайрăм. Шухăш та аскăнланма пуçларĕ. Лапшу ахăлтатса янипе кĕлеткене хыпашласа пăхрăм: эпĕ те хĕрарăм иккен! Иксĕмĕр те çапма çарамас. Качакапа йытă та тĕлĕнсе пуççене пăркалаççĕ.

–Васкарăн эс, Лапшу, малтан пирĕн хĕрарăм кĕпи-йĕмĕ пирки шутламаллаччĕ, кайран тин... – тетĕп нимлемарланса, алла çӳлелле çĕклеймесĕр. – Йĕм... ăçта тупăпăр? Ленька патша çĕршыри хĕрарăмсен йĕмне



шутласа ларнă, тет. Ун вăхăтĕнче кашни хĕрарăм пуçне вăтамран йĕм çурă тивнĕ, тет. Улăштарса тăхăнма çапах та çур йĕм юлнă. Хальхи Михала патшан вара... кашни хĕрарăма çур йĕм çеç лекет, тет. Çавăнпа... хĕрарăмсем çур çул йĕмпе, çур çул çаракутăн çӳреççĕ, тет.

– Эп кĕпе уçса пăхман çав. Пĕлмес.

– Чăнах. Ёненмесен, курултайра туалета кĕрсен курăпăр. Пире халь иксĕмĕре çуршар йĕм пулсан та çитĕччĕ.

– Талону ăçта? Кам сутать сана йĕм?

Хамăр та сисмен. Тавлашса тăнă вăхăтра Шашка асамлă вăйпа хывăнса ӳкнĕ пирĕн шăлаварсене чăр-чар гутарнă та пĕççисене татса хунă. Акă сана йĕм пулчĕ те! Лавкка та, патшалăх суту-илĕвĕ те кирлĕ мар. Тăхăнса ятăмăр. Кĕлеткене тирпе хупларăмăр. Шыв урлă хамăр тунă сулăпа ишсе каçрăмăр.

«Общественно-политический центр» текен çӳллĕ çурт алăкĕ патне çитиччен картлашкапа хăпарса ура вăйĕ пĕтрĕ. Тем анлăш, шутсăр нумай мрамор картлашка. Коммунистсен политвĕренӳ керменĕ ку.

– «Чăвашсен обществăпа культура центрĕ» тесе çырса çапасчĕ «Общественно-политический центр» вырăнне. Пĕр центр пултăрччĕ. Чăваш халăхĕн культура центрĕ, – текелесе пырать Лапшу.

– Ла-айăх çапаççĕ сана, кĕтсех тăр, сăмаххипе çаптараççĕ-çаптараççĕ те, суя пуппипе кирлĕ çĕртен аванах туртса çапаççĕ, – тетĕп эпĕ.

Пирĕн умĕн икĕ алăка та яри уçса Нуша çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕ. Саркаланса тăракан хĕрарăм чарасшăн пулчĕ ăна, çук, чараймарĕ, пĕç хушшипе шалалла вирхĕнчĕ.

– Çак Нушаран курултайра та хăтăлса пулмарĕ ĕнтĕ, эх, ку асаплă пурнăçа... – ятлаçса юлчĕ хĕрарăм.

Аялти хутра та, иккĕмĕшĕнче те, виççĕмĕшĕнче те хĕрарăм йăшăлтатать. Эпир те вĕсемпе хутăшса кайрăмăр. Авалхи чăваш тумĕ

тăхăнни те, çăпата сырни те, хыçалти тĕксĕр тăрса юлнă чăх пек çари те, тем тĕрли те пур та, пирĕн çине ытлашши тĕлĕнсех пăхмарĕç. Килекенсене шута илекен хĕрарăм çеç, кăшт пăхса, «Эсир ăçтан?» тесе ыйтрĕ те, эпĕ «Леш...» теме çеç ĕлкĕртĕм, «Ан кансĕрлĕр, хăвăр пĕлнĕ пек тĕлленсе çӳрĕр» тесе аяккалла сирчĕ. Пире психушкăран тарса тухнă тăнкăруксем тесе шугларĕ пулмалла.

Лапшу хĕрес илсе çакрĕ. Йăван ятлă çамрăк аттепе Чăваш православи чиркĕвĕ тăвас, чăваш епископĕ суйлас пирки хĕрсе калаçрĕ. «Чăваш халăхĕн ĕненӳ çынни, чиркӳ пуçлăхĕ, чăвашах кирлĕ», – тенине илтсе юлтăм. Чăваш хĕрарăмĕ кунта пуппа та чуна уçса калаçать (пупĕ те унпа уççăн пуплет), лампадка та, турăш та туянать. Хăйне çывăхрах туйăм туртнă ăна чиркӳ япалисем сутакан умне.

Вунпĕр çитерехпе пуçлăхсен ушкăнĕ черетленсе çитсе кĕчĕ те, йĕп пек çухалчĕ. Чăваш хĕрарăмĕсен, курултай делегачĕсен ушкăнĕнче, пĕрне те курса юлаймарăмăр. Чăваш Республикине ертсе пыракан хуравлă çынсен нивушлĕ Сахалинран е Таллиннран, Пушкăртран е Тутарстанран, Оренбургран е Красноярскран килнĕ чăваш хĕрарăмĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе, нуши-терчĕпе кăшт та пулин кăсăкланма май çукчĕши? Ăнлантăм-ха, президиума ăмăртса чупнă иккен вĕсем.

Акă, курултай ĕçлеме пуçларĕ те... Ăна арçын уçрĕ – Юхма Мишши. Вăл пирĕн пек хĕрарăм пулса килмен, арçынлах тумланнă. Ку юрĕ-ха. Ăнланмалла. ЧОКЦ йĕркеленĕ Аслă пуху-çке. Унăн президенчĕ малтан сăмах калама тивĕçлĕ. Саккунлă. Курултайăн ĕçлев органĕсене суйлама кандидатсем тăратакан çамрăк пике вуласа кайрĕ: «Президиума эпĕ çак юлташсене суйлама сĕнетĕп...» Пĕр арçын хушаматне асăнчĕ, тепринне, çиччĕмĕшĕнне...

«Пастай, пастай, – пуçра темле шухăш çиçсе илчĕ, – «чăваш акатемĕкĕсем» чăваш алфавитне çĕнĕрен улăштарман-ши? «А» саспаллирен пуçланмарĕ-çке списокĕ? Хыçаларахран. Ара, тахçан паллансkерсемех. Авă, чи малтан «Шурча таврашĕнче» кĕнеке хĕстернине асăнчĕç, унтан «Тăван çĕршыв хăрушлăхра!» тесе кăшкăраканнине... Юхма та кăшт йăпăлтатса пăхасшăн-шим кусем умĕнче? Чееленет пуль-ха...» Пике малалла вуларĕ. Каллех – арçын хушамачĕсем.

Аякран кăлт! тĕртрĕ мана Лапшу.

– Иван Мучи, эс мĕнле шутлатăн?

– Мĕн пирки?

– Уçтук варĕнчи мерекке курăка çисе хĕрарăмран арçын пулса кайман-ши кусем те, тетĕп. Ара, эпир хĕрарăмсен пухăвĕнче вĕт, кунта юри хĕрарăм пулса килтĕмĕр, кусем...

– Çук, вĕсем арçынсемех. Хам лайăх пĕлетĕп вĕсен арçын хатĕр... – пăшăлтатрĕ йăлкуçлă пике-кӳршĕм.

– Ха, пур-тăк турă хăйсене мĕн пани, арçынах пуль, эпир те арçынччĕ те... – аллине пĕç хушшине чиксе пăхрĕ паллă сунарçă.

Лапшу Çтаппанĕ çине шанчăксăррăн пăхса илчĕ те ку çын кĕпине чĕркуççирен аяларах туртрĕ. Сцена çинчен мĕн каланине малалла итлерĕмĕр:

– Еруcланова Раиса, Сарпи Раиса...




**Арçыннăн президиумра та пĕр шухăш – хĕрарăм шухăшĕ.**
**Чăваш патшалăхĕн Аслă Канашĕн пуçлăхĕ Анатолий Леонтьев Раиса Сарпине йăпăлка кулăшпа чĕртесшĕн. Венера Быстрова хĕрарăмсене пурнăçра, ĕçре арçын айне пулмалла мар, тесе чĕнсе калать.**

Тин хĕрарăмсем патне çитрĕмĕр-иç. Хам та савăнса кайрăм. Акă, президиум сĕтелĕ хушшине малти рете вун тăхăр çын кĕрсе ларчĕ, вĕсенчен вун пиллĕкĕшĕ – арçын. Нивушлĕ пĕрин те хăюлăх çитмерĕши çапла каламашкăн: «Хаклă хĕрарăмсем, эпир сире, хисеплесе, чи чаплă, чи çӳллĕ вырăна лартасшăн, эпир паян залра, хăрарăмсем хушшинчех ларар-ха. Тавтапуç ыр кăмăлшăн». Аслă Канаш пуçлăхĕ Леонтьев чăваш хĕрарăмĕсене вырăсла саламлама тытăнсан Лапшупа иксĕмĕр те хăлхасене хупларăмăр.

– Мана сан куләшу аса килчĕ, – сасăпа каласа хучĕ Çтаппан.
– «Ача çуралнă каç-и?»
– Ăхă. Çавăнти Бюрократ пекех туйăна пуçларĕç хăш-пĕр тухса калаçакан арçынсем. Хăйсем епле ăнтăлаççĕ трибуна умне, хăрарăмсене пӳлсех, икĕ чавсапа хирсех. Сăмах çапаççĕ, хывăх вĕçтереççĕ, хĕрарăмшăн тăрăшнă пек кăтартаççĕ.
– Кунта та пулин хĕрарăма хĕсеççĕ.
– Ача çуралнăччĕ-çке хайхи Бюрократăн. Арăмĕ патĕнче кускалама укçа парса тара тытнă акушерка ăна вăрататъ. Эс харлаттарса çывăрнă вăхăтра арăму пысăк асаппа ача çуратса панине пĕлместĕн, тет. Ыран кил, паян вăхăт çук, тесе хирĕçлет Бюрократ. Унтан вăл пĕчĕк ачине анкета çыртарать, ытла та пĕчĕкçĕ тесе ятлать. Ман мар, тет. Ман пулсан, пысăк пулмалла. Эпĕ хам та пысăк çын. Йĕрекен арăмне выговор парасшăн вăл, ăна темтепĕр каласа пĕтерет, ик аллипе тыта-тыта сиплет...
Тусăм калаçнă май, куç умне çирĕм тăххăрмĕш çул тухса тăчĕ. Çавăн чухнех çырнăччĕ эпĕ ку фельетона. Анчах та доклада, çумдокладсене тата хĕрарăмсем куççульпе тухса калаçнине итленĕ май, çапла шухăшларăм: «Бюрократсем пĕтмен-ха, пур-ха вĕсем кашни учрежденирех. Хальхи саманара та. Çавна пулах ĕнтĕ хĕрарăм чĕр тамăк курать. Арçын-бюрократ: ĕçре те, обществăра та, килте те».
Авă епле саркаланса ларать малти ретре Нуша. Курултайăн иккĕмĕш кунĕнче те вырăнтан тапратаймарĕç ăна, хăратаймарĕç те. Президиум сĕтелĕ хушшинчи чылай арçын-пуçлăх çуккăччĕ ĕнтĕ. Вĕсем вăхăта штатпа ларса ирттернĕ хыççăн, курултайпа ĕнерех сывпуллашрĕç, влаç аркине ячĕшĕн тыттарнă хĕрарăмсене хăйсем вырăнне хăварчĕç. Хĕрарăм Нуши вара хĕрарăмран хăрать-и? Парăнать-и вара хĕрарăма?
Ай-яй, чăваш хĕрарăмĕ, эсĕ халĕ те чышкă тытăмĕнчех пурăнатăн-иç?
– Сан «Чышкă тытăмĕнчи» пекех икĕ пуçлă Чышкă аллинче чăваш хĕрарăмĕ, – терĕ ман шухăша ялан витĕр ăнланакан Лапшу. – Арçын ăна чăмăрта тытасшăн, ĕçпе тарлаттарса нушалантарасшăн, хăйне çеç пĕтĕмпех пăхăнтарасшăн. Чура тăвасшăн.
– Авă епле хастар калаçаççĕ хăшĕ-пĕрисем, – тетĕп. – Арçын текен чышкă-чупкăсем хăйсем ташласа тăраççĕ пуль вĕсен умĕнче.
– Иккĕленетĕп, – пуçне пăркалать Çтаппан. – Сарпи кăна мар, чăваш халăх юмахĕнчи Тавăрпи те çĕнтерес çук çав Нушана. Ытла та çирĕп бюрократсен кăшăлĕнче пурăнать вăл. Юмахри Тавăрпи те, хăйĕн тăшманĕсене çĕнтерес çуккине кура, çĕртен уйрăлса, кăвак пĕлĕт,

çил пĕлĕчĕ, шур пĕлĕт, çумăр пĕлĕчĕ, тăм пĕлĕчĕ, юр пĕлĕчĕ, пăр пĕлĕчĕ витĕр тухса, уйăх çине пырса тăнă. Уйăх ăна хăй патне илнĕ. Кĕвен-теллĕ хĕр сарă уйăх çинче ырă курать. Унăн витрипе, пурнăçĕ яланах тулли. Ăçта кайса кĕмелле-ши чăваш хĕрарăмĕн? Хăçан тулăх пулĕ-ши унăн пурнăçĕ?

– Паллах, пире уйăх хăй ытамне илес çук, – кăшт куларах калаçă-ва хутшăнать кўршĕ пикеçĕм. – Кăмака умĕнче ик хăрарăмран пĕри ытлашши пекех, эпир унта ытлашши пуль.

– А эпир çăлтăр пулăпăр, – кăкăрне çапнă пек турĕ Лапшу. – Хĕрарăм вăл кашни хăй çăлтăр. Арçын та ялан ăна çăлтăрпа танлаш-тарать. Эп хам та...

Ытлашши персе ан ятăр тесе тусăма тирĕнчен туртатăп.

– Малтанлăха çеç çăлтăр çав эпир, – хаш! сывларĕ пике. – Хамăр хĕмленсе çунсан та, арçынсем çав çутта, çав хĕрĕве туйми пулаççĕ. Ултав. Çакăнта калаçни те, çакăнта йышăнни те ултав сăмахĕ çеç пул-са ан юлтăрччĕ хăть. Эх, çав арçынсеннех çирĕп алла илмелле те хĕрарăм ыйтăвĕсене. Вĕсене усăллă татса пани хăйсемшĕнех ырă пул-малла та. Хăйсемех ырă курмалла та хĕрарăм илемĕпе, ĕçченлĕхĕпе, юратăвĕпе, ачашлăхĕпе. Ачи-пăчи те сывă ўсмелле те... Тĕрĕс калап-пи? Сире те упăшкусем алă çинчех çĕклесе çўремеççĕ пуль-ха. Тирне те çуррине сўсе илнĕ. Ах турă...

Лапшу Çтаппанĕ тирне турткаларĕ, темскер каласшăн пулчĕ, мăк-мак тукаласа кăххăмлатрĕ. Эпĕ пуçа чикрĕм.

Эх, мĕн тери чĕрепе ăнланса туять пирĕн кўршĕмĕр хĕрарăмсен проблемисене. Анчах хăйĕн вăйне шанмасть-ха. Мĕншĕн тесен, чăваш хĕрарăмĕ халĕ те арçын хыçĕнче-ха. Нушийĕ çеç унăн – чи малта. Ан-чах арçынĕ, малта пыракан арçынĕ, хăй хыçĕнчи хĕрарăм Нушине çавăрса çапас та тĕп тăвас тесех тăрăшмасть-ха. Вăл хĕрарăм хăйне чуралла пăхăннине юрататъ, курултайра та, авă, хĕрарăма çурăм хы-çне хăварса, хăй чи хисеплĕ вырăна кĕрсе ларчĕ, хĕрарăм хатĕрленĕ апата çирĕ, хырăма тăрантарчĕ те хĕрарăм Нушинчен васкаса тухса тарчĕ. Хĕрарăма Нушипе пĕрле пăрахса хăварчĕ.

Сăра ĕçнипе-ши, темскер канăçсăрлантарма пуçларĕ. Лапшу Çтап-панĕ те пăркаланса ларать. Юрать-ха шăнкăрав сасси янăрарĕ. Кĕтнĕ тăхтав çитрĕ. Хуть те ăçта та хĕрарăм пушатнă çĕрте черет. Халĕ вара... Лапшу «М» тесе çырни патнелле утрĕ, унтан, такам çапнă пек, варт! çаврăнчĕ те «Ж» тесе çырса çапнă алăк патнелле талпăнчĕ. Эпĕ те – ун хыççăн. «Шлепкесем патне кĕме те намăс, хĕрарăм хатĕрĕпе пире унта арçын тесе кам ĕненет? Çурăк валашка пўлĕмĕнче пулса паянхи хĕрарăм çур йĕмпе е çаракутăннине те курас килет. Пире унта никам

та арҫынран хӗрарӑм пулнине пӗлес ҫук, анчах черечӗ вӑрӑм», – шухӑшлатӑп.

Лапшу та манашкалах шухӑшларӗ пулас, пуҫа тул алӑкӗ еннелле сӗлтрӗ. Чавтартӑмӑр ҫырманалла, тӗмсем хушшине.

– Ҫитет хӗрарӑм пулса! – терӗ тарӑхнӑ Лапшу ҫӑмӑллӑн сывласа янӑ хыҫҫӑн. – Кунта та хӗрарӑм нушине куртӑмӑр, арҫын вӑл кӗтессе тӑрса та... Уҫтук варӗнчи симӗс курӑка тепре ҫиес те, арҫыннах куҫас. Тытас хӗрарӑма нуша кӑтартакан мӗнпур бюрократа. Пулӑшас хӗрарӑма.

– Пулӑшас, – килӗшрӗм эпӗ те. – Ҫӑлас чӑваш хӗрарӑмне Нушаран тата Чышкӑ тытӑмӗнчен. Тӗнчипе паллӑ сунарҫӑ юнашар чухне те хӑраса тӑрас-и? Кашни чӑваш хӗрарӑмӗ туйса-шанса тӑтӑр пирӗн вӑя.

## ПАЙЛАННӐ ЯМАШ ВӐРМАНӖПЕ ШУПАШКАР МЭРӖ

Астӑватӑр-и, эпир, Лапшу Ҫтаппанӗпе иксӗмӗр, ҫӗршыври чӑваш хӗрарӑмӗсен курултайне лекес тесе, Ямаш вӑрманӗнчи Уҫтук варӗнче ӳсекен тӗлӗнмелле симӗс курӑк ҫисе, хӗрарӑм пулса тӑнӑччӗ. Хитреленсех, пӑркалансах кайнӑ пуль ҫав. Хӗрарӑм «пасарӗнчен» тухсан, Атӑл вӑрри урлӑ каҫнӑ чухне, ҫамрӑк шӑхличсен ушкӑнӗ тапӑнчӗ. Тирпе кӑна витнӗ ҫара пӗҫсем тыткӑнларӗҫ-ши, апкӑнас терӗҫ-ши, вӗсем пире мӑшкӑллас патнех ҫитрӗҫ. «Эсир-и, мана-и, тӗнчери чи чаплӑ сунарҫа ҫарапакартлантарма-и?!» – терӗ те Лапшу Ҫтаппанӗ, пӗррех сулса ячӗ алне, сар тутасем шапӑрр! тӑкӑнчӗҫ кӗпер ҫинчен шыва.

Арҫынна куҫнӑ хыҫҫӑн ҫавӑнтанпа лӑпках пурӑнаттӑмӑр. Шупашкар йӑхтӑр-яхтӑрӗ пирӗн ҫума ҫулӑхма хӑрать. Сӑпас эрнинчи шӑвшав хыҫҫӑн мыскарасем пуҫланчӗҫ. Ильич ҫурӑмӗн хӳтгинчи анлӑ лаптӑкра хӗрлӗ пусмаллӑ сӗтеле тӳнлеттерсе хӑратса ларакан партаппаратчиксене Советсен ҫуртӗнчен хӳтерсе кӑларса янӑ хыҫҫӑн чышкӑ тытӑмӗ арканчӗ. Чӑвашӑн пулса ҫитеймен селӗп «патшине» хӑмла пахчи хураллама ячӗҫ. Атӑл вӑррин сылтӑм ҫыранӗнче пурпӗрех пасар саланмарӗ. Пирӗн михӗрен Ҫӗнӗ ҫул умӗн тухса тарнӑ бюрократсем ҫав-ҫавах чӗлхе якатрӗҫ, каҫӑн-ирӗн пӑтӑ пӗҫерчӗҫ, хӗвел ҫуттине сӑмах купипе картларӗҫ. Ҫавӑнпах пуль Лапшу Ҫтаппанӗпе иксӗмӗр паянхи кунчченех ҫара ӳт ҫине тискер кайӑк тирӗ ҫакса ҫӳретпӗр. Намӑса хуплама ҫуршар йӗм ҫеҫ. Урана тӑхӑнма саҫҫим пушмак ҫук... Ӑҫта кай-

са кĕрес? Мĕн тумалла капла? Аптранă кăвакал кутăн чăмнă пек чăнкă çыранран пуçа перес килмест. Канашларăмăр-канашларăмăр та, хамăрăн ĕлĕкхи ĕçпех аппаланас терĕмĕр. Эпĕ Çитăр мучин качакине сĕтел хушшине кӳлсе лартрăм. Лапшу Çтаппанĕ Ямаш вăрманне ухутана тухса кайрĕ.

Сахал иртрĕ-ши унтанпа вăхăт, нумай-ши, калама та хĕн халь, анчах çĕр чĕтренĕвĕ 1991 çулхи çулла пирĕн ая та çитсе силлерĕ. вуншар çулсем хушши купаланнă ĕмпери пĕр çын персе янă хăйăр чăмăркки пек парр! кăна арканчĕ. Халăх тинĕсĕнче юн лаптăкĕсем ишме пуçларĕç. Ылтăн аласем чикĕ леш еннелле туртăнчĕç. Унган пире сыр татăкки кăтартаççĕ. Хĕл Мучи кутамккине, пылак парне выранне, хытă алăллă Хура выçлăх кĕрсе ларасшăн тапаçланать. Патшалăх касни халăх çине укçа çумăрĕ çутарать. Лавкка сентрисене эрешмен карти карса илнĕ. Кăнтăр ялĕн пасарĕнче хĕрарăм йĕмĕ пин тенке çитнĕ. Таварпа тавар улăштарас йĕрке чи мала тухса тăчĕ. Çирĕммĕш ĕмĕр вĕçĕнче пирĕн «мухтавлă никам çĕнтерейми çĕршыв» тĕнче хӳрине çитсе ларчĕ. Ула качакапа çак проблемăсене шĕкĕлченĕ вăхăтра шăпах Лапшу Çтаппанĕ хуйхăрса çитсе кĕчĕ. Пăшалсăр. Чĕлĕмсĕр. Шлепкесĕр. Хытса хăрса ларнă. Чее те çивĕч куçĕ тарăн çăла путнă пек шалалла тарса кĕнĕ. Сăмсин шăмми çеç тăрса юлнă. Сухалĕ кăвакарса пушшех шĕвĕрĕлнĕ. Шашкийĕ тата... Сунарçăн ĕмĕрхи уйрăлми тусĕ çил çинче сулланса тăрать.

– Мĕн пулчĕ, тусăм?

– Ан та кала-ха, Иван Мучи, – чул çине лак ларчĕ Лапшу. – Сунарçă сунарсăр тăрса юлчĕ. Выçă. Чухăн.

– Тĕпĕ-йĕрĕпе каласа ăнлантар-ха?

– Юрĕ, тĕпĕ-йĕрĕпех пултăр, – тесе кутамккинчен алса кăларчĕ те вăл унта Шашкине чăмтарчĕ. – Тахçан ĕлĕк-авал мăкла така тирĕнчен çĕлетнĕ çак алса çеç тăрса юлчĕ ман пĕтĕм пурлăхăм та. Йăлтах çаратрĕç, йăлтах туртса илчĕç.

– Кам? Мĕн?

– Ара, тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем. Манăн ĕç хатĕрĕсене.

– Сана кӳрентерчĕç-и? Тĕнчери чи паллă та чи чаплă сунарçа-и? Тĕнчене ан тĕлĕнтерех.

– Тĕлĕнтерчĕç çав çут тĕнчене. Эп мар, вĕсем тĕлĕнтерчĕç. Итле, çитрĕмĕр Шашкăпа Ямаш вăрманне. Маншăн вăл, сарлака çĕр çинчи çак симĕс лаптăк, тăван вырăн-çке, чи çывăх кĕтес. Унпа сывланă эп, унпа пурăннă. Çитрĕмĕр те хайхи вăрмана, пуç тăррине тем çавраки пат татăлса анчĕ. Пуçа хыпашласа пăхрăм – мăкăль сиксе тухнă. «Турри пĕлет çав, улма праçникĕ çитни çинчен мана, ват суншăна, капла та

пулин аса илтерет», – тесе шухăшларăм та ӳкекен панулмие ярса илтĕм, çыртса пăхрăм. Армути тути çеç калать. Унччен тутă кĕрекенччĕ, кăçалхи вара... Ытла йӳçĕ сăпас эрни пуçланчĕ тесе шăхăркаласа утатăп. Кĕç пирĕн ума икĕ куян сиксе тухрĕ. Пăшал çакнă хăйсем. «Тăр. Аллусене – çӳлелле! Тăкумĕнт пур-и?» Шашкăна прикладпа çапса ӳкерчĕç. Хама ухтарма пуçларĕç. «Сире-и, татăк хӳресене, – тетĕп тарăхса, – çиччас мăйкăча çаклататăп. Талăкра çĕр те иккĕ таран тытнă сире, катăк тутасене». «Паян, Лапшу Çтаппанĕ хаспатин, сана хăвна тытрăмăр, санăн мăйкăчусене, пăшална туртса илетпĕр, малалла, шалалла, ямастпăр», – теççĕ вĕсем хаярланса. «Мĕншĕн?» «Мĕншĕн тесен ку – Мулкач патшалăхĕ. Эпир – çĕнĕ мулкачсем халь. Илтнĕ пуль «новые русские», «новые чуваши» тенине? Эпир те – «новые зайцы». Пирĕн – хамăрăн патша». Аран-аран чăтлăхалла чăмрăмăр Шашкăпа. Хăмăчлă кантрапа хĕрĕх тилĕ тытни аса килчĕ. Карма пуçларăм кăна, пăшаллă тилĕсем çавăрса илчĕç, хӳтерсе пычĕç-пычĕç те мана Тарăн варти шăтăка сиктерчĕç. Виçĕ талăк лартнă хыççăн тин кăларчĕç. «Ăçта лекнине пĕлтĕн-и халь, Лапшу? – ихĕреççĕ тилĕсем. – Тилĕ патшалăхне». Çапла-а. Хĕрĕх ураллă кайăксен те хăйсен патшалăхĕ халь.



– Пăсарасен те-и?

– Çăка хĕвăлĕнчен сике-сике тухакансене пĕрерĕн-пĕрерĕн алтуйипе çапа-çапа тахçан пилĕк лав тултарнăччĕ, хальхинче çывăха та ямарĕç, алтуйине туртса илчĕç.

– Пăсара патшалăхĕнчен Кашкăр патшалăхне, унтан Упа патшалăхне, Арăслан патшалăхне лекрĕмĕр. Леш, циркран тухса тарнă арăслансем те уйрăм патшалăхра. Пилĕк мăн катка пăчăр какайĕ тăварлас ĕмĕт пурччĕ. Хырăма шăлса пурăнаттăмăр. Çук çав, пăчăрсем кăна мар, ăсансем те хăйсем патшалăх туса хунă. Шурлăха та пайланă. Патин шурлăхне кăвакалсемпе хуркайăксем темиçе патшалăха уйăрнă. Вунă тилхепине те, вĕсем

çумне çыхма хатĕрленĕ икĕ пин вăлтине те кутамккаран кăларса илчĕç. Шурлăх варринчи утрав çинче сарăлса ларакан чăрăш лăссисем айĕнчен хир сысни ултавлăн чăл-чăл пăхса ларать. «Ку курпун сысна унччен чăрăш тымарне чиперех тăпăлтаратчĕ-çке, халь вара чăрăшĕ ăна хăйĕн хӳтлĕхне илнĕ. Чулхула ухутникĕсенчен çăлса хăварнă иккен», – шухăшларăм. Кăмарисем те чăмăрккан-чăмăрккан сывлăшра патшалăхланнă. Хир сыснин патшалăхĕ ăçтине çеç пĕлеймерĕм.

Çук, пулмарĕ ман вăрмантан пуянлăхпа таврăнасси. Аптранă енне Куçма Чулкаçа шалăвăтцă тăвас тесе шутларăм. Масар патне çитрĕм те... масара та пайланă, ваçка. Масар пуçне влаçран сирпĕтнĕ те, масар патшалăхĕсем туса хунă. Чулкаç патне кĕме заграничнăй виза илеймерĕм. Çапла пуш алăпа таврăнтăм. Эсир мĕнле айланкаласа пурăнтăр тата пирĕнсĕр?

Ăшра кула-кула, тарăха-тарăха итлерĕм Лапшу Çтаппанне. Вите алăкĕнчен мăнкăмăллăн мекеклетсе тухакан Çитăр мучин качаки вара кăмăла сар çу пек ирĕлтерсе ячĕ.

– Ак тамаша! – чалтах сиксе тăчĕ Лапшу мăн чул çинчен. Шашки алсаран тухса сирпĕнчĕ. – Ку тата мĕнле юмахри патша?! Мăйракине кĕмĕлленĕ, ха, сухалне ылтăн шывĕпе сăрланă, мăйне кевер чуллă хăю çакса янă, таканĕ тата...

– Шăп та лăп çав таканран пуçланчĕ те.

– Эп ухутана кайиччченех чупайми пулнăччĕ çав чĕрни хăпăннипе. Эпĕ вара ăна хамăр мыскара çинчен каласа патăм.

Лапшусем тухса кайсанах эпĕ Улайккана таканлаттарма шутларăм. Унта çитрĕмĕр, кунта – ниçта та такан тăвакан çук. Музейре памарĕç. Хăпаратпăр Шупашкарăн авалхи тĕп урамĕпе. Анлă лаптăка çитрĕмĕр. Кунта халăх! Пасарти пек. Çурт çине мĕн кăна çырса çапман пуль? Эй турă. «В отставку!», «Под суд!», «Вон из органов власти!», «Сутăнчăксене тăрă шыв çине кăларар!»

«Тăрă шывĕ тавралăхра юлманскер, мĕнле тăрă шыв çине кăларасшăн-ши кусем», – тесе шухăша путнă самантра манăн Ула качака чĕвен тăчĕ те «Ме-кек! Ме-ерр!» – тесе çухăрса ячĕ. Çамки урлă хăю çыхнă пĕр кармаçăвара итлеме пăрахсах халăх пирĕн еннелле кăшăлл çаврăнчĕ. Çитăр мучин качаки çавнашкал вăйлă оратор пулнине эпĕ ку таранччен те пĕлмен. Çыпăçуллă та витĕмлĕ сăмахсемпе шăрантарчĕ кăна. «Мэ-э!» тенĕ пекех илтĕнчĕ хама та юлашкинчен унăн уçă сасси. «Акă вăл мэр! Пирĕн мэр! Шупашкар мэрĕ. Урăх эпир никама та шанмастпăр! Урăх эпир никама та итлеместпĕр. Пурте улталаççĕ. Пурте хăйсемшĕн кăна çунаççĕ!» – илтĕнчĕ таврара тĕрлĕ сасă. Халăх Шупашкар тинĕсĕ пек хумханать.

Кооператорсем, предпринимательсем, коммерсантсем, усламçăсем сырса илчĕç. Пĕчĕк предприяти хуçисем... Кам кăна çук пулĕ. Ак çакă эрешпе капăрлатса ячĕç. Платинăран такан туса таканларĕç манăн геройăма. Хам та савăнса ĕлкĕрейместĕп вĕт. Сиссе те юлаймарăм Çитăр мучин Ула качаки Шупашкар мэрĕ пулса тăма пуçланине.

– Тăхта-ха эс, Иван мучи, тăхта, – çанăран туртса чарчĕ мана Лапшу. – Мĕн, Шупашкар халĕ Франци патшалăхне кĕмест пуль? Вăрманта хаçат вуламан, радио итлемен те... Ай эпир буржуйсен аллине пуçĕпех кĕрсе ÿкрĕмĕр-и?

– Мускав, Питĕр Францирен мĕнрен юлать тата? Вĕсен те мэрисемпе мэрĕсем пур. Çĕр кăвалисемпе йыттисем те пур...

– Çапла çав вăл мерăран иртсе кайсан, пуçа тем мэрисемпе мэрĕсем те кĕрсе каяççĕ. Хамăрăн тăван сăмаха ют çĕршыв сăмахĕпе çăмахла çăтса ярса ухмахланатпăр, цивилизаци тесе Çавал шывĕнчен те ытларах ăшăхланатпăр, – лач! сурчĕ Лапшу Çтаппанĕ Атăл леш еннелле.

Шурлăхпа масар патшалăхĕсем туса хунă кулăшла саманара – ăссăрлăх пуç пулса тăма тытăннă саманара – Çитăр мучин Ула качакийĕ те Шупашкар мэрĕ – Чăвашăн тĕп хулин патшийĕ – пулса тăма пултарнишĕн нимĕн тĕлĕнмелли те çук, тесе эпĕ хамăн сарлака шлепкене хыврăм та Лапшун çăмламас пуçĕ çине пусса лартрăм. Çтаппан запас чĕлĕмне çăвара хыпса ăша илмесĕр туртса ячĕ.

Качака çулпуç палăкĕ еннелле пуçне пăрса мекеклетрĕ.

– Мансах кайнă, – терĕм эпĕ. – Халĕ пирĕн кÿмеллĕ, ярăнтаракан çăмăл урапа та пур. Пĕчĕк лаша та пур. Вăт, пуянсем каретăпа пони парнелерĕç. Мэрăн личнăй транспорчĕ пулать. Эсĕ – личнăй шухвĕрĕ.

Кÿлсе ятăмăр та пĕчĕк лашана, хăпарса лартăмăр тăватсăмăр та çăмăл кÿме çине, ĕрĕхтертĕмĕр мэрине. Кĕçех унта Шупашкар мэрĕ Ула качака хаспатин тарçисем умĕнче тупа тăвать.

– Ме-ке-кек!

## ЭХ, ЧĔЛХЕ, ЧĔЛХЕ, – ШĂМĂСĂР ЧĔЛХЕ

Шăпах çулталăк ĕнтĕ Иван Мучипе Лапшу Çтаппанĕ Çитăр мучин вăрăм сухаллă качакипе чăвашăн Тĕп ялне çитнĕренпе. Тĕп хули мар. Тĕп ялĕ – ăна Лапшун Шапка ятлă йытти те хэвлетсех ăнлантарать.

Ара, авалхи шурă Шупашкар пĕтнĕ вĕт, шывпа хăйăр купи айне путнă, ун вырăнне таçтан сĕтĕрĕнсе килнĕ архитекторсем сĕнниппе уй-

семпе ҫырмасене кирпӗчпе тимӗр-бетон плиткисем тӗлли-паллисӗр ларта-ларта тухнӑ та, хула-республика влаҫӗсем унта халӑха выльӑхла хуса кӗртсе янӑ та... Пурӑн чул чӑтлӑхӗнче! Хула манерӗ ҫук, Уйри ҫав тери мӑн ял, чул ялӗ вӑл – Шупашкар!

Иван Мучипе Лапшу Ҫтаппанӗ, иртнӗ кӑрлачра Аслӑ Канаш кӗрлекен ҫурта кӗрлеттерсе ҫитсен, пуҫсӑр пуҫлӑхсенчен: «Эсир мӗншӗн чӑваш халӑхӗ валли чӑваш хули тума шутламан-ха?» – тесе ыйтма ҫӑвар уҫнӑччӗ кӑна, хӑйсене итлекен ҫуккине кура, чӗлхисене ҫыртрӗҫ. Пӑшалпа хураллакан Шурӑ ҫуртран тӗнчери паллӑ сунарҫӑ Лапшу пӗр мишук бюрократ тытса тухнӑччӗ. Чӗлӗм тивертнӗ чухне асӑрхайман ҫав, хайхи бюрократсем, вӑрӑм чӗлхипе ҫулласа миххе йӗкехӳрелле шӑтарнӑ та, пӗри юлмиччен тарса пӗтнӗ. Йӗр тӑрӑх Шашка вӗсене, Иван Мучипе Лапшу Ҫтаппанне, темле вӑ-ӑрӑм черет вӗҫне илсе ҫитерчӗ. Черечӗ парти обкомӗн ҫӗнӗрен тӑвакан шалча пек ҫуртӗнчен пуҫласа сывлӑш кӗпер урлӑ Богдан Хмельницкий урамӗнчи масара пырса тӑрӑнать.

– Мӗн черечӗ? – чӗлӗмне ҫӑвартан кӑларса ыйтрӗ Лапшу.

– Ҫӗр черечӗ, – вӑрттӑн пӑшӑлтатрӗ пӗр шакла пуҫ.

– Мӗн акма? Мӗн лартма?

– Акма-лартма мар, пытарма.

– Мӗн пытарма?

– Паллах, сан качакуна мар, ҫынна пытарма.

– Мӗн эсир, бюрократсем, вилмесӗрех ҫӗр айне выртасшӑн-им? – кулса ячӗ Иван Мучи, калаҫӑва итленӗ май.

– Вилсе пӑхӑр-ха унта, вилсен ӑҫта пытарӗҫ хӑвӑра, – сӑхса илчӗ юнашар тӑракан ҫивӗч чӗлхе идея сӑннипе. – Номенклатура ҫыннисемпе асӑрханулларах пулӑр. Эпир – Мускав, Шупашкар номенклатуричен...

Лапшу Шашкине алса ӑшне чӑмтарчӗ те чӗлӗм тӗтӗмне Шупашкар ҫийӗн ункӑлантарса вӗҫтерчӗ:

– Хэ-хэ, номенклатурщиксем-бюрократчиксем-партаппаратчиксем. Сывлӑш кӗперӗпе чаплӑ масара ҫитме хапсӑнакансем! Хэ-хэ. Хӑвӑрах вилӗрсемӗр апла-тӑк. Эпир вилместпӗр ҫав. Вилме ҫуралман. Эпир – тӗнче номенклатуринче.

– Апла пулсан, уттарӑр хӑвӑр ҫулупа, пире ан чӑрмантарӑр. Пирӗн ҫӗр лаптӑкӗ илсе юлмалла. Масар ҫинче ҫӗр пӗтет. Кооператорсемпе бизнесменсем ярса илсен, хӑйсем валли мавзолейсем туса лартсан...

Вӑрӑм сухаллӑ Качака мекекек! тесе чӗнчӗ. Шашка та алса ӑшӗнчен ҫӗре чалт! сиксе анчӗ, черетре тӑракан «кашкӑрсемпе тилӗсене» тата «йӗкехӳресемпе пӑсарасене» вӗрсе тухрӗ.

– Атя часрах ку шăршлă вырăнтан, – хулран тытрĕ ухутнике Иван Мучи. – Урăх ниçта та тараймĕç, хăйсен тивĕçлĕ вырăнĕнчех кăптăртатса тăраççĕ, хăйсен черетĕнчех.

– Чăн та, – килĕшсе хĕвеле култарчĕ Лапшу, – ку вилĕ чунсемшĕн кĕсел пулькка та шалкка. Партократи-аристократи. Халăх кирлĕ мар иккен вĕсене. Вилсен те вĕсем халăхран уйрăм выртасшăн. Чаплă масарта. Чапланччăрах. Пирĕн черет мар ку.

Çапла бюрократсемпе сывпуллашса уйрăлчĕç Шупашкар хăнисем.

Унтанпа вĕсем чăваш халăхĕшĕн мĕн тĕрлĕ ырă ĕç тумарĕç-ши? Чăваш хĕрарăмĕсен курултайĕнче çав бюрократсене каллех ярса илесшĕнччĕ, анчах та республика пуçĕнче тăракан мĕнпур арçын-пуçлăх президиумри малти рете пăталанса ларчĕ те, вĕсене унтан ниепле те персе-хăпăтса антарма май килмерĕ. Иван Мучипе Лапшу Çтаппанĕ çакăн хыççăн тинĕс леш енне каçса выртрĕç.

Тĕп ял варринчи çĕр лаптăкĕнче вĕсем мĕн кăна çитĕнтермеççĕ. Качака валли пĕр гектар купăста лартнă. Понька пони валли виçĕ капан утă çулса купаланă. Такан кооперативĕ уçнă. Лапшу Атăл леш енне сунара çÿрет. Çитăр мучин Качаки мэрта нумаях тытăнса тăраймарĕ çав. Мэрине вăл чăвашлатсах ярасшăнччĕ. Пуçлăхсем те тăван чĕлхепе атте-анне, çăкăр-тăвар теме пуçларĕç. Килĕшмерĕ чăваш вăш-ваш! туни. Ула Качака хаспатинăн шĕвĕр сухалне вут тивертрĕç çав. Хăй чăвашлатнă чăвашĕсем пÿлĕмĕсене тарса пытанчĕç. Тинĕс вăрри урлă элеватор еннех ишсе каçма тиврĕ вара Качакан Шашкăна çурăм çине лартса.

Авăн уйăхĕ кĕскелме тытăннă кунсенчен пĕринче Мускав енчен çил-тăвăл çавăрттарса килчĕ, тÿпе шартлатса çурмаран пайланчĕ. Çав самантрах шыв урлă карăннă сывлăш кĕперĕ ишĕрĕлсе анчĕ. Масар черечĕ чăл-пар саланчĕ.

– Никĕсĕ ытла ленчешке пулнă иккен ку кĕперĕн, – чĕлхисене кăлара-кăлара хашкаса чупакан номенклатурщиксем енне чеен пăхса кулчĕ Лапшу.

– Шăмăсăр чĕлхе çинче тытăнса тăнă вăл çав кĕпер, çавна та пĕлместĕн, Лапшу тусăм, – пуç тÿпекинчи çеçенхир тăрăх тачка пÿрнисемпе утса тухрĕ Иван Мучи. – Çутă малашлăха – çăтмаха – вĕсем хăйсем çеç васканă çав. Авă, хура халăх сулахай çырана тăрса юлчĕ, номенклатура-партократура чăнкă çырана ылтăнран явнă вĕрен тăрăх чакаланса хăпарать. Лапсăркка чăрăш айĕнче аçа çапасран хăтăлса юлнă курпун хир сысни лăсă айĕнчен сиксе тухса шăмăсăр чĕлхине каллех тĕнче тавра çавăрттарма пуçларĕ. Санран та ирттерет.

– Çук, ирттереймест. Эпĕ – тĕнчере çук пĕртен-пĕр сунарçă. Эпĕ пĕр каçра çĕр те икĕ куян, пĕр харăс вăтăр-хĕрĕх тилĕ, куç хупмасăрах кашкăрпа упа тытма, арăсланпа катаччи чупма пултаратăп. Вăл... кам?

– Эс, Çтаппан тусăм, вĕсене тытаканни, вăл – Курпун Михала патша – вĕсене çуратаканни, шăмăсăр чĕлхипе çулласа ӳстерекенни. Куратăн-и мĕн чухлĕ шăмăсăр чĕлхе? Пĕрин тепринчен вăрăмрах та якарах, çичĕ çул чул якатаççĕ, канма пĕлмесĕр çĕрĕн-кунĕн тип çил вĕçтереççĕ. Хĕрӳ сăмах хыççăн пырĕсене чӳхенипе Шупашкар тинĕсĕ те чакса пырать ĕнтĕ, ним тумасăр пурăннипе выçнă хырăмĕсене тăрантарма çăмах та юлмарĕ ĕнтĕ...

– Ха, чăнах та Ямаш вăрманĕ тăвăлра хумханнă вăхăтри пек шав тăрать таврара! Эй турă, мĕн кăна каламаççĕ:

– Пире патша кирлĕ! Чăваш патши!

– Эп хам патша!

– Патша! Патша! Патша!

– Патша суйлама каймалла!

Уттарчĕç вĕсем те кĕвĕ юхтаракан элеватор çуммипе суйлав участокне. Çитиччен миçе агитатор тытса чармарĕ-ши?

– ...шăн çеç суйла, ...шăн кăна пар сассуна, ...шăн ан хĕрхен вăхăтна, ...шăн...

Суйларĕç Иван Мучипе Лапшу Çтаппанĕ, ...шăн сасă çитмест тесе Çитăр мучин вăрăм сухаллă Качакине те, алса ăшĕнче ларакан Шашкăна та, Понька понине те ухутах суйлаттарчĕç. Анчах... Чăваш патшине çуратаймарĕç. Тăваттă ...шăнĕ те шăнса çут пăр çине сарăлса ӳкрĕç. Мĕн пирки?

– Матпа чĕркенĕ чĕлхе пирки.

– Мĕнле матпа. Матăпа пуль?

– Çук, матăпа мар, матă вăл курăсран лаша çурăмĕ çине витме е ура айне сарма çыхнă япала. Матăпа мар, матпах чĕркенĕ çав. Наркăмăшпа шăршăнтарнă нухайккаран тĕртнĕ Матькасси материалĕпе чĕркенĕ эппин чĕлхине, çавăнпа халăх хăранă матпа çеç калаçакан Купăр кандидат-пуçлăхран. Патша пуласси министрсен пуçлăхĕ пулни мар çав.

Лапшу Иван Мучирен ыйтать те ыйтать:

– Теприн чĕлхи мĕншĕн çавăрайман халăха?

– Ăна ял шăршинчен хăраса Шупашкара карьера тума тарса килнĕ пуçлăхăн çуллă чĕлхишĕн патша пуканĕ çине лартман тет-и?

– Теприн тата? Тепринчен теприн?

– Тăхта эс, авă вĕсем теприн теприпе тепринчен тепри, çут пăр

çинчен кармакланса тăчĕç, алă тытмасăрах малалла утрĕç, шавлă икĕ ушкăн пуçĕ çине хăпарса ларчĕç. Икĕ ушкăнĕ те ăмăртса янăратать:

– Чи тивĕçлĕ патша – пирĕн!

– Паян патша суйламасан, чăваш халăхĕ пĕтет!

Иван Мучи хыпăнса ÿкрĕ:

– Чăваш халăхне пĕтме парар мар. Айтăр каллех суйлава!

Пиллĕкĕшĕ те пыраççĕ суйлав çулĕпе. Вĕсене тăрата-тăрата тăн параççĕ:

– Раççей калăпăшĕпе пуçа çавăрттаракан патша кирлĕ пире, ...шăн сасăлăр!

– Пилĕк чĕлхе пĕлекен патшашăн ...шăн!

Лапшу ĕнсине хыçса илчĕ те:

– Иван тусăм, итле-ха, çĕршыв калăпăшĕпе хапсăнакан патша сан «Чышкă тытăмĕнчи» икĕ пуçлă патша пек пулмĕ-ши? Ĕнерхи номенклатура-партократура калпакнех тăхăнса çÿрет вĕт вăл. Иккĕлентерет.

– Пилĕк чĕлхе пĕлекен патшаран та хăратăп эпĕ. Пилĕк чĕлхерен пилĕк тĕслĕ шыв юхтарма тытăнсан?.. Шансах пĕтерме хĕн.

Пиллĕкĕн суйласан та патша хальхинче те çуралмарĕ Чăваш çĕрĕнче. Мĕншĕн-ши?

– Пĕри Мускаврă чĕлхине якатса çитерейменшĕн, терĕç, тепри... тăван халăх чĕлхипе калаçнă чухне кăштах такăнкаланăшăн, терĕç.

Ыранхи хуйхăллă кун хĕвелпе йăлкăшса персе çитрĕ. Чăваш чĕрех иккен. Кулать. Вилмен. Патшасăрах пурăнать. Авă, хăлхана йĕрĕнтерсе çитернĕ юрă янăрать: «Ĕмĕр загги зарлага... анчах ĕмĕрĕ гĕсге», Чăвашрадиора халăха итлеттерме урăх юрă çуккă-шим? Чăвашăн ахаль те ĕмĕрĕ кĕске, патшасăр тата кĕскелет, тесе павраççĕ каллех кармаçăварсем. Патшасăр та вилмерĕ чăваш, мĕнле патша çĕр çула çити вăрăмлатса парĕ-ха ĕмĕре малашне. Курăпăр.

– Ытла çÿллĕ иккен патша пуканĕ. Виçĕ миллион тенкĕ укçана пĕр çĕре купаласа пĕлĕте çĕкленĕ пукан. Самана çилĕ çинче сулланса лараканскер, никамах та лартасшăн мар курăнать хăй çине. Тепĕр суйлав ирттерес пулсан вăл тата çÿлерех хăпарать-çке. Кам мекеçленсе çитме пултарĕ ун тăрне? Кам ларма пултарĕ? Çунатлă ăслă пуç тупăнсан çеç е халăх ухмаха тухсан... – пуçне пăркаларĕ Иван Мучи.

– Сахал-им сан Касантей пек кастаракансем, – терĕ Лапшу хуйхăрса, – кооператорсен «Чĕлхе валеçекен пунктĕнче» çĕнĕ чĕлхе улăштарса çĕнĕлле кăшкăракансем. Çавсен чĕлхи тухăçлă ĕçленипех ĕнтĕ... ĕçре ĕç тухăçлăхĕ чакрĕ, лавккари тавар пирĕн аларан шăвăнса тухса тарчĕ, интеллигенципе пенси халăхĕ чухăна тăрса юлчĕ... Пĕр патшах çăлайĕ-ши пире?



– Темле çав, – чĕлĕмне кăсйине чиксе хучĕ Лапшу Çтаппанĕ. – Мускавра та патша мути хавшать те, «эп патша» тесе хывăх вĕçтерекен патшине вырăнтан сирпĕтмелли виçĕ вĕçлĕ динамит та тупрĕç те... Чĕлхен шăмми çукка, теççĕ те... Шăмăсăр чĕлхе... Пуçпах шухăшлар пуль, шăмăллă пуçпах шухăшлар патша пирки. Вăрманта та, ачам, упа патша пулнă чухне куян та, тилĕ те, кашкăр та хуçа пулайман.

– Хам!

– Тĕрĕс, эс ху патша, Шашка. Мĕнпур тискер кайăка сехĕрлентерме пултаратăн.

– Ме-ке-кек!

– Эсĕ те патшах. Чăваш çĕрĕнчи купăста ани йăлтах санăн, Шупашкарăн экс-мэрĕ.

– Эпĕ те патша-и? – ыйтрĕ Иван Мучи.

– Эсĕ те, – кулса ячĕ Лапшу. – Эсĕ – Чăваш кулăшĕн Патши.

– Эсĕ те патша, – алă пачĕ Лапшуна Иван Мучи. – Тĕнчери сунарçăсен Патши.

## КУЛАС – МАЛАЛЛА УТАС

Чăвашсен обществăпа культура центрĕ кăларакан «Вучах» сӳнсе кĕлленме пуçланă вăхăтра, 1993 çул варринелле, Иван Мучипе Куçма Чулкаç та Юхма Мишши куçĕнчен пăхма пăрахрĕç. «Вучах» хаçатне чĕртекен Патăрьел паттăрĕ Юхма хăйĕн хăватлă вучахне хăйех сӳнтерсе пычĕ. «Кулăш хуранĕ» вĕреме чарăнчĕ, сивĕнсе ларчĕ. Лапшу Çтаппанĕ те вара Ямаш вăрманĕнчи упа шăтăкне çывăрма кĕрсе выртрĕ.

Нĕркеç енчи тепĕр мăнттай Хветĕр Агивер хăй ертсе пыракан чăваш писателĕсен Канашĕн хут тăрпийĕ витĕр асăрхасах тăнă иккен Юхма Мишшин «Вучахĕ» мĕлтлете-мĕлтлете кĕлленнине. Вăл, чеескер, пит тавçăрулăскер, чăваш халăхĕн ăс-хакăл хаçатне тумашкăн мана ЧОКЦран илĕртсе пычĕ. Акă, 1993 çулхи юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче, «Илем» хаçат чăваш çĕрĕ çинче юпа ячĕ. Иван Мучипе Куçма Чулкаç та йĕплĕ аллисене тăсса пачĕç пире. Лапшу Çтаппанне те тарăн ыйхăран вăратса упа шăтăкĕнчен туртса кăларма тиврĕ. «Капкăнăн»

Иван Мучи ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ, Канаш ен кулăшçи Виталий Енĕш те Шупашкар маччине çитмелле чалтах сикрĕ хыт савăннипе. Елчĕк ÿнерçи Улатимĕр Агеев тÿрех сăрăпа киçтĕк алла илчĕ. Енĕш аса илнĕ тăрăх, чăваш халăхĕн паллă сатирикĕ Леонид Агаков ялан «Иван Мучин аван мунчийĕ» теме юратнă-мĕн. Мĕншĕн хутса ямалла мар-ха ара «Илемре» çав мунчана, тесе шухăш тĕввине икĕ алăпа та икĕ урапах туртса хытартăмăр та, хаçатăн пĕрремĕш номерĕнчех «Иван Мучин аван мунчи» таврана тĕтĕм-сĕрĕм кăларса ячĕ. Акă хайхи ăшши пама ĕлкĕрейместпĕр. «Кулас – малалла утас» тесе, ятарлă кăларăмсем парнелетпĕр ваçка вулакансене.

Халăх умне хамăрăн малашлăха пĕлтерсе, çапла чупса тухрăмăр:

*«Ĕнтĕ эпир пĕрмай утатпăр, кам малалла, кам каялла, пуçа каçăртса та, сăмсана усса та... Çапах утатпăр: çутă пушмакпа та, çĕтĕк çăпатапа та... Утатпăр... Ылтăн купи çинче «Приказ кĕнекипе» хăмсарса миллион çăлтăра ыталанă тир сĕвекен те, Чăваш кавăнне çемье флотилийĕпе Мускав гаванĕ урлă Тĕнче тинĕсне кăларакан та, çултапăкĕ-çултапăкĕпе «отпускра канакан» ĕç çынниĕ те, çăкăрпа та шывпа кăна тăранса пурăнакан çыравçă та, пĕр каçра миллионерша пулма пултаракан пирĕшти те, «вăрламасăр халь ман мĕнле чăттăр чун» тесе каçса кайсах юрлакан ханттар та, суйса-улталаса питне кĕççе çĕленĕ «халăх тарçи» те, тăван çĕршывне ют патшалăх мулçисене куç кĕрет сутакан та ута-ута тарлать, хыçкалана-хыçкалана мунча шырать. Ĕçчен те таса чунли, ырă кăмăлли валли халăх хăйех хутса хунă Чăвашăн хура мунчине. Тархасшăн, кĕр те сывлăхна çирĕплет, хастарланса ут вара малалла. Йĕксĕксемпе лĕхлĕхсем валли вара... хăй вăхăтĕнче «Капкăн лаççинче» тип мунча хутса, çурăк лĕпкесене вĕри милĕкпе вĕтелеме юратнă Иван Мучи «Илемĕн» Тип мунчине хутса ячĕ. Иван Мучин аван мунчине мĕнпур йăх-ях этеме Куçма Чулкаçăн тĕнчери чи паллă сунарçи Лапшу Çтаппанĕ хÿтерсе кĕртсе ярать. Мунча умĕнчи лаçра «Кулăш хуранĕ» лĕкĕртетсе вĕрет. «Пăрăçлă салма» та, «Çунăк тинкĕле» те, «Ни пăта, ни нимĕр те» хатĕрех вĕсем валли. Ăшши те, милĕкĕ те çителĕклех!*

*Мунчи тутлă пултăр – ырришĕн, Мунчи йÿçĕ пултăр – усаллишĕн».*

Вăхăт малаллах шăвать. Çити-çитми пурнăçра аран-аран тупкаланă чĕрĕ çапăпа мăкăрлантарнă «Мунча» майĕпен пулчĕ-пулчех. Унта кĕрекеншĕн камшăн – тутлă пуль вăл, камшăн – йÿçĕ... Мĕнпур йăхтăр-яхтăрăн çан-çурăмне тип мунча милĕкĕпе канлĕлентерекен тĕнчери чи паллă сунарçă Лапшу Çтаппанĕ Шупашкар тинĕсĕн лачаки тĕпĕнчи «Атăл» ресторанта сăра ĕçтернĕ хыççăн Куçма Чулкаç пушшех хас-




тарланса кайрĕ, Иван Мучине хушать те хӳтерет: «Халăх, çĕршыв пурлăхĕпе миллионер-миллиардера тухнă ултавçа, кĕççе пите, ĕçченĕн тирне сĕвекене, мухтанчăк тилле, выçă кашкăра, хамелеона, шуйттан кĕвентине «Пăрăçлă салмапа» «Çунăк тинкĕле» çитер те, çийĕнчен «Ни пăтă, ни нимĕр» çуллатарса, часрах «Кулăш лаççине» чăмтар, унтан сиплесе кăларнă йĕпе йĕпсене вĕри лапка çине шаплаттар», тет.

Йĕксĕксемпе йăхтăр-яхтăрсене сипленĕ май, манăн та хамăн геройсем çуралчĕç.

*Хумхануллă-хăпартланулла вăхăтра пурне те илтмелле хыпар сарăлчĕ:*

*Чăваш Республикин пĕрремĕш президенчĕ кам пулĕ-ши?*

*1993 çулхи раштавăн 12-мĕшĕ — Чăваш Республикин президентне суйламалли кун.*

*Президент суйлас енĕпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕ Президента суйлама Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн председательне Валерьян Николаевич Викторова, Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн патафизиологи кафедрин пуçлăхне Леонид Николаевич Иванова, Чăваш Республикин Аслă Совечĕн председательне Эдуард Алексеевич Кубарева, И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорне Лев Пантелеймонович Куракова, Раççей Федерацийĕн Монополие хирĕçле политика тата экономикăри çĕнĕ структурăсене пулăшас енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн Чăваш территори управленийĕн*

*пуçлăхне Владимир Осипович Федорова, Мускав хулинчи адвокатсен коллегийĕн председательне Николай Васильевич Федорова, Чăваш Республикин Министрсен Совечĕ çумĕнчи ăслăлăх тĕпчев институчĕн пай пуçлăхне Атнер Петрович Хусанкая регистрациленĕ.*

Чăваш халăх сăнарлăхĕн тĕнчийĕ те тĕлĕрмест иккен. Çĕрпе Пĕлĕт хушшинче ытарлăн йăшăлтатать. Чăваш патшалăхĕнче ĕмĕрте пулман пасар-ясарта хăйĕн чи ăслă та, чи паллă та, чи пултаруллă та, чи шанчăклă Сăнарпуçне Тĕп урхамах хăмăтне тăхăнтартмаваскать. Вилĕмсĕр иванмучисемпе чулкаçсем автансăр ялсен ячĕпе хăйсен кандидатурине сĕнеççĕ. Çав мандатпа ĕнтĕ...

Понька пони кăна пуçне чиксе хурлăхлăн тулхăрчĕ.

– Ан кулян, – лаша çилхине турарĕ Лапшу, – суйлавçă-тарçă та кирлĕ, пурте патша пулсан, çăмăл кӳмене кам туртать?

Пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса илчĕ те «Ивлапшашкач» эртелĕ...

– Çитет пуль чĕлхе якатса, хырăм выçать, – лавкка еннелле çаврăнчĕ Лапшу. – Яшка пĕçермелĕх те куян ашĕ юлман. Атьăр.

– Чĕлхе ăшаласа çиесчĕ, вара, тен, чĕлхеллĕ пулăпăр.

Лавккана вашкăртса çитрĕç.

– Чĕлхе мĕн хак тăрать?

– Киловĕ сакăрвун ултă тенкĕ.

– Патюшки, хĕрарăм чĕлхинчен те хаклăрах.

– Хĕрарăм чĕлхи-и? Эй, ухмах старик. Хĕрарăм чĕлхи вăл – шăмăсăр. Хĕрарăм чĕлхин хакĕ çук унăн... – тăрăлтаттарса илчĕ сутуçă ватă сунарçа.

Иван Мучин те, Лапшу Çтаппанĕн те ĕне чĕлхи туянма укçа тупăнмарĕ – кĕсйисем шăтнă: хырăм тăрантарасси те, чĕлхеллĕ пуласси те пулмарĕ вĕсен. Хĕрарăмăн хаксăр чĕлхи çаплах чанкăлтатрĕ: «Чĕлхе туянмалăх укçа çук арçын арçын пулать-и вăл, хĕрарăм чĕлхи пирки шахвăртасшăн-ха тата ливер кăлпассисем».

–Эх, чĕлхе, чĕлхе, шăмăсăр чĕлхе, – Касантей чĕлхи. Ытла та хаксăр-çке эс, пушă, шывлă чĕлхе. Сан çинче тĕрекленсе тăнă сывлăшри кĕпер те хăйăр пек юхса анчĕ, пирĕн малашлăх çутийĕ те...

– Çук! – пуç пӳрнине ялт! çĕклерĕ Лапшу. – Пирĕн малашлăх çути сӳнмен. Акă, виçĕ хĕвелтен варринчи вăл. Епле çутатать. Ăшăтать.

– Тепре куриччен! – тесе сывпуллашрăм вара эпĕ вĕсемпе.

– Тепре куриччен!

# ЛАПШУ ÇТАППАНĔ ТЕ ЧĂВАШ ПАТШИ ПУЛМА ВАСКАТЬ

Акă, 1993 çулхи чӳк уйăхĕ сăмса тăррине юр пĕрчипе кăтăклантарма пуçларĕ.

Шупашкарта та халь валютăсăр телать нечеву текен Чăвашрадио хумĕпе чӳхенсе илнă хыççăн, чӳке кайма хатĕрленнĕ Иван Мучи валет хĕрĕвĕпе те туз хăвачĕпе Çĕр çине каллех сиксе анчĕ, лешне, аншарлине тĕнче хыçне хăварса, тăп-тăрă урăлла мăн çул çине тухрĕ.

Çĕр çинче Лапшу Çтаппанĕпе мыскара курса пĕтнĕ хыççăн вăл кăштах канса илчĕ, чăваш патшин пуканĕ çиччĕмĕш пĕлĕте пырса перĕнсен, турăсем шавланипе вăранчĕ. Мĕнле патша улăхасшăн-ха тата пирĕн пата, тӳрех çăтмаха? – тесе тавлашса юлчĕç вĕсем.

Чăваш кулăшçи Шупашкара васкать. Мунча хутса ямалла. Ют валюта-валюккасем сăмса умне тухмарĕç. Кив укçана çĕннипе улăштарайман-ха. Автобус çине лараймастăн. Çурран самаях танккама тивет.

Телейĕ те çумрах çав. Пăхать, мăн çулпа Лапшу Çтаппанĕ пырать. Тĕнчери чи паллă та чи чаплă сунарçă ăслă пуçĕ çине шлепке лартнă, шăллă çăварне кукăр чĕлĕм хыпнă, ĕнси çине Куçма Чулкаçа улăхтарнă, аллине хулă тытнă. Ухутник йĕлтĕрĕнчен хăмапа çапса



тунă çунине... ара, чимĕр-ха, чим... Чăвашăн çирĕммĕш ĕмĕрти «ĕнине» каллех кўлсе янă. Майракаллă «ĕне», тĕп хуçине палласа-ши, Иван Мучине тăванлăн саламларĕ: мем-ме-никак!

Ĕмĕрне те тăранас çук, шуйттан кĕвенти! – шăршăнтарнă пушă алă айне лекейменнипе çурăм тăрăх хулăпа туртса çапрĕ Лапшу Çтаппанĕ «урхамаха». – Михаля пахчинчи купăстана кăшласа яни çитмен, тата выçăхать. Тăр-р-р! Ларт аçуна!? Мыскара мар-и? Эс лере улăхсан Шашка сарая сыхлайман çав. Çыварнă, каналья. Хурахсем Понька понине каретипе пĕрлех çаратрĕç. Каллех вара Çитăр мучин Качакине кўлсе ятăм. Мэр пулнă-çке вăл, пысăк начальник. Аранаран турта хушшине тăратрăм, явăла. Епле шур куçпа каялла çаврăнса пăхать? Но-о, экс-мэр! Мэртан тухнăранпа шăммупа тирў çеç юлчĕ пулин те, тĕнчене кăларнă аçуна – Иван Мучине катаччи чуптармаллăх вăй юлнă-ха санăн, шуйттан кĕвентин.

Иван Мучи райри Раййа «тамăкĕнчен» татса тухнă панулмие Ула качакана хыптарчĕ те лав çине сиксе ларчĕ, çаврăнса пăхсан, тĕлĕннипе шаках хытрĕ: хыçалта Ямаш вăрманĕнчен Кўкеç таран хура чĕрчун йăшăлтатса утать, вĕçен кайăк явăннипе пĕлĕт тарса хăпарнă, хĕвел анăçалла тапнă. Лапшу хăлхисенчен çатăрласа тытнă Чулкаç вĕсене вĕçĕмсĕр пуçĕпе сĕлтсе йыхăрать.

– Ăçталла çул тытатăр капла эсир, уйрăлми туссем?

– Суйлава каятпăр.

– Мĕнле суйлава?

– Чăваш патшине суйлама. Халь сана та пĕрлех илетпĕр. Пĕр кулăс ытларах тухать.

– Патша пуканĕ çиччĕмĕш пĕлĕт айне çитнине пĕлетĕп, каллех халăх укçине купаласа хăпартса янă ĕнтĕ. Çапах... Эй, çук, – алă сулчĕ Иван Мучи. – Эп патшашăн суйламастăп. Чышкă тытăмне хам тутанса пăхнă. Эй, çук. Ман...

– Сан «Чышкă тытăмĕ» вăл ĕлĕк-авал пулнă. Ун чухне патшана суйламан, халĕ...

– Халĕ Чăвашрадион кашни хумĕ çинче пĕрер пулас патша ларать-и?

– Эп те пулас патша ĕнси çинче ларатăп, хэ-хэ. Çапла вĕт, Лапшу чунăм?

Лапшу Çтаппанĕ чеен кулать:

– Суйлавччен, Чулкаçăм. Суйлав хыççăн... Сана эп премьер тăватăп.

– Иксĕмĕр премьера кăтартăпăр та кăтартăпăр вара. Чăн-чăн пурнăç премьери. Чăвашăн пыллă-çуллă пурнăçĕн премьери. Çапла-и?

– Çаплах, ырă шанчăкăм. Суйлав умĕн эпĕ Ямаш вăрманĕнчи чĕрчун патшалăхĕсемпе пĕр чĕлхе тупрăм. Мансăр ытла лăпкă вĕсене. Хама патша кандидатне тăратма килĕшнĕ куянсене те, тилĕсемпе кашкăрсене те, упасене те, арăслансене те, пăсарисене те, хуркайăксемпе ăсансене те хыçран ертсех пыратăп. Но, каналья. Лаву çинче кам ларса пынине пĕл! – хуллипе качакана шарт! тутарчĕ Лапшу.

– Çтаппан тусăм? – çаврăнса ларчĕ Иван Мучи. – Мĕн, халăх çитмесрен хăратăн-им Шупашкарта?

– Уншăн мар. Халăххи хуп-хурах-ха хулинче, утма-тăма та вырăн çук. Патша кандидачĕ те йышлă-çке. Вĕсем хушшинче куянĕ те, кашкăрĕ те, тилли те, упи те... такам та пулма пултарать. Анчах...

– Пурте маскĕпа витĕннĕ, – Иван Мучи еннелле куçне мăчлаттарса илет Чулкаç. – Ман Лапшу вара... Чăваш тĕнчийĕпе паллă. Нимĕнле хăрушлăх умĕнче те ним йĕпетмест, ăс-пуçĕ хăйрасăрах çивĕч, харсăрлăхĕпе арăслана та хўререн çулса илме пултарать. Пултарулăхĕпе... суйлавçисен чеелĕхне, йăли-йĕркине никамран аван пĕлет.

– Ак çитетпĕр те Шупашкара, Иван Мучин аван мунчине чĕнсе кĕртетпĕр те патша пулма ĕмĕтленекенсене, вĕри мунчара хурăн милĕкĕпе ислетнĕ хыççăн... камăн мĕнле чăн-чăн сăн-сăпачĕ пулнине халăх тўрех курĕ, Суя ыран пурпĕрех тухать, – хушса хучĕ Лапшу.

Иван Мучи итлерĕ-итлерĕ те, ыйтрĕ:

– Патшана ларсан, мĕн тунă пулăттăн эс чи малтан?

Чĕлĕм тĕтĕмĕнчен кăтра пĕлĕт явăнтарнă хыççăн, Лапшу Çтаппанĕ шанчăклăн хуравларĕ:

– Хамăн Куçма Чулкаçпа Çитăр мучи Качакин Иван Мучине полнăй сопрани сочинени кăларса парап. Чăваш кĕнекине ĕне çăварĕнчен туртса илеп. Чăваш хаçат-журналне, вăл шутра чăваш «Илемне» те йăлтах патшалăх шучĕпе кăларма тытăнап. Ял клубĕсенче, библиотекисенче вучах чĕртеп. Халăх ăс-хакăлне тĕнче культури шайне çĕклеп. Чăваш халăхне хăй аллипе çăкăр çитереп, хăй аллипе ура сыртарап. Чăваш халăхне ирĕклĕ çул уçса парап. Сывă, ăс-тăнлă, йĕрĕ пултăр чăваш. Ман ăна Чăвашра пурăнакан ытти мĕнпур халăх çыннисемпе Тăван çĕршыв кĕрекине лартса тулли кăмăлпа:

Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,<br>
Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух,<br>
Чун савăнать, чĕре сикет,<br>
Татах та хастар пулас килет, –

тесе юрлаттарас килет.

– Кун пек патшапа пурăнма пулать. Чăваш халăхĕшĕн Киремете чўк тунă хыççăн, раштавра, Чăваш халăхĕн пуласлăхĕшĕн Лапшу

Çтаппанне патша пуканĕ çине хăпартса лартма та юрать. Çапла-и, тăван геройăм? – терĕ Иван Мучи.

– Мек-кек-какшă! – карт! туртăнса тапса сикрĕ Çитăр мучин Качаки. Алса ăшĕнчен сирпĕнсе тухнă Шашка ума ӳкрĕ.

Ӳхĕрттерсе пыракан лав хыççăн чĕрчун тĕнчи хавас туйăмпа тĕп хуланалла Тĕп чăваша суйламаваскать.

## ХОППАСЕН ÇĔРШЫВĔНЧЕ

1995 çулхи çурла уйăхĕ пуян уйри тырра вырса кĕлете хупнă хыççăн та хуп турттарма шутламарĕ, тутă хырăмлă çынсене хăяккăн ӳкерсех ахăрттарчĕ. Акă, Лапшу Çтаппанĕ Йăлăмран мулкач тытса килсе кăвайтă çине шӳрпе пĕçерме хуран çакса ячĕ те, Иван Мучине шăпланма ыйтрĕ:

– Пăрах-ха эс пĕрмай çав Çитăр мучи Качакине ятлама, ахаль те ун пек усă тăваканни пулман пуль пире. Лаши те, ĕни те вăл пирĕншĕн, пĕр вăхăтра ылтăн майракаллă Шупашкар мэрĕ те пулса пăхрĕ, керой-тăк керой, авă, ари театрĕ çумĕнчен лаплаттарса анать, хаçат туяннă...

Иван Мучи сылтăм ывăçне сарлака хăлхи çумне варинккелесе тытнă та канма мансах итлет.

– Эй, Лапшу, сана та тăнлап, филармони енчен вĕçсе килекен сасса та сăнлап. Эс ухутана кайнăранпах эрне ĕнтĕ Шупашкар хоппа та хоппа тесе кăна кĕрлет. Итле-ха?

Вĕрекен яшкана шлепкепе хупласа хучĕ те Лапшу Çтаппанĕ, икĕ хăлхине те Урицкий урамнелле кăнтарчĕ. Ун хăлхине те хоппа та хоппа çеç вĕçсе кĕрет иккен.

– Тĕлĕкре мар-ши эпир, Лапшу тусăм? – пуçне пăркалать Иван Мучи. – Тен, хальхи аçтахаллă тĕлĕнмелле вăхăтра пирĕн Чăвашстана урăх цивилизаципе улăштарса кайнă?

– Хоппасен çĕршывĕпе-и? – сăмси çине ларнă ӳпрене куян хӳрипе çапса ӳкерет Çтаппан. – Çак ĕмĕр вĕçнелле Çĕр çинче тĕнче пĕтмелле тетчĕç те... пулма та пултарать. Хэ, епле хоплатаççĕ те оплатаççĕ. Чĕлхи ытлах йывăрах мар пулас ку темле çăлтăр çыннисен, ик-виç сăмахран кăна тăрать. Кайса паллашар мар-и? Тен, леш тĕнчерен тата лешлехрех тĕнчене лекме пулĕ, унти райĕнче те Райăсем ытларах пулсан...

– Меке-кек!

Мăйрака çине тирнĕ «Хыпара» кăларса илчĕ те Иван Мучи сасăпа вулама пуçларĕ: «Чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ пре-

мийӗн лауреачӗ – кулӑшпа сатира театрӗ конкурс ирттерет. Конкурса хутшӑнакансен сӑвӑ, юптару, калав вуламалла, юрласа-ташласа, тата чӑрчунсен сӑнарӗсене кулӑшла туса кӑтартмалла. Конкурс Чӑваш патшалӑх филармонийӗнче (Урицкий урамӗ, 31 ҫурт) иртет...»

Паллӑ сунарҫӑ чӑваш кулӑшҫине вуласа пӗтерме памарӗ, радио-телефонпа шӑнкӑравларӗ. «Хоппа-оппа» тени илтӗнчӗ трубкӑра. Лапшу хӑй те оппалатса илчӗ те алӑ сулчӗ.

– Мулкач месерле ташлама пуҫличчен каҫса килес, тусӑмсем. Эс, Иван Мучи, ӗлӗкех артистра ӗҫленӗ... Ҫитӑр мучи Качаки кирлех пульха вӗсене. Эп, Куҫма Чулкаҫ хӳттипе, тен, тӗнчери чи чаплӑ сунарҫӑ пулса кӑтартӑп вӗсене. Шашкӑшӑн кулянмӑпӑр, пӗртен-пӗр йытта алса ӑшӗнче те усрӑпӑр.

Мулкач тирӗ парса катамаран ҫине ларчӗҫ те вӗсем, «Атӑл тӑрӑх сасси ян каять кимӗ ҫинчи капӑр хӗрӗсен» тесе юрла-юрла сылтӑм ҫырана каҫрӗҫ. Ҫӳлелле улӑхрӗҫ кӑна, Тимӗр Феликс урамӗнчен автобус кӗрлеттерсе тухрӗ. Шашка урапасем хушшипе темле вирхӗнсе юлма ӗлкӗрчӗ. Качака чӗвен тӑчӗ. Автобусӗн хыҫалти алӑкӗ хытах хупӑнман та, унтан пӗр тӑлпан ҫамрӑк хура мӑйӑхне вӗлкӗштерсе кутӑн ҫакӑнса пырать. Хӑй вӗҫӗмсӗр«хоппа-оппа», «оппа-хоппа» тесе ҫухӑрнӑран ӑнланчӗҫ абитуриентсем: «тӗрӗс йӗр ҫинех ӳкнӗ».

Ку ҫуртра тахҫан авал вӗсем чӑваш хӗрарӑмӗсен курултайӗнче те хӗрарӑмла пулса курнӑскерсем, хӑрамасӑрах таплаттарса кӗрсе кайрӗҫ. Хуралҫӑ тытса чарма пӑхрӗ. Лапшу ӑна: «Мӗн эсӗ, тӑмсай, чӑваш халӑх артистне Шашкӑна та ку таранччен паллаймастӑн-им е саншӑн Коза Ҫиторовна Капустина Раҫҫей искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ мар-и?» – тесе ҫеҫ хӑварчӗ. «Ой, халь пӗлес ҫук, йытти-качакине те, кашни ҫеҫтепине те тӳрех тава тивӗҫлӗ ят хураҫҫӗ те, эпир ҫеҫ тӑрса юлтӑмӑр ӗнтӗ хисеплӗ ятсӑр, пета, темле чӑтать искусстви», – тесе ӗнсине хыҫса тӑрса юлчӗ хуралҫӑ.

Пӗр алӑкран «хоппа» та «оппа» тени илтӗнет. Унта кӗрсе кайрӗҫ Лапшусем. Кӑвалисене аран-аран хупланӑ пикесем хушшинче пӗр артист икӗ качака путекки тытса тӑрать, ватӑрах арҫын вӗсем таврал-ла кутӑн тӑрса ҫаврӑнать, хайхи автобусран ҫакланса пыраканни хоппалатса аллисемпе тем кукӑрткалать. Ку кунта асли пулас.

– Эпир конкурса килтӗмӗр! – салтакри пек тӳрленсе тӑчӗҫ алӑкран кӗнисем. – Хам-хам! Ме-кек!

– Ну и штуш, – кӑмӑллӑн кулса аллисене пӑхаттирле хӗреслесе тытрӗ Аслӑ хоппи. – Хэ-хэ-хэ-хэ. Ак япала...

– Тыт та хыпала, – чӑтаймасӑр кулса ячӗ Лапшу Ҫтаппанӗ те ҫара пӗҫлӗ пике енне тинкерсе.

Шашка сăмсине нăшлаттарса çара кĕлеткеллĕ артисткăсем тавралла чупса çаврăнчĕ, сăмсине каллех тутлăн нăш-нăш тутарчĕ. Ахăртнех чĕрчунсен çуркуннехи савăш шухăшĕ пырса кĕчĕ сунарçă йыттине. Япала хыпала тенине илтсен, ватă артист та ура çине сиксе тăчĕ: «Хоп-па!» – «Хоп-па... конкурса апла, хоппа-оппа, ай-ой, – майĕ çинех шуса аннă çăра çӳçне шăлса илчĕ Асли. – Мĕскер? Итлĕр-ха, эй-ей... Мĕн тума пултаратăр? Лукьянов, Семенов, тыттарса пăхар-ха вĕсене экзамен пекки, хэ-хэ-хэ...

Ик хулхушшине икĕ чипер качака путекки хĕстернĕ Валерий Лукьянов Илле Семеновне хăлхаран тем пăшăлтатрĕ, ватти вара, чеен:

– Куç хупса иличчен эсир арçынтан хĕрарăм пулса тăма пултарсан тата миллион хут хоппалатсан, сире тӳрех штата экзаменсăр, вне кон-курса кĕртсе яратпăр. Йыттине театр япалине хураллама илĕпĕр. Качаки... концерт хыççăн пусса шашлыка яма юрать... – терĕ питкуçне пăрăç хыпнă хыççăнхи пек улăштарса.

– Çук, Çитăр мучи Качакисĕр ман пурнăç çук, вăл маншăн ĕмĕрхи тус, вăл манран нихăçан та уйрăлмĕ, – пуçа пăркаласа илчĕ Иван Мучи. – Хакĕ çук ун.

– Эпир хамăр çамрăк поколени ӳстеретпĕр-çке, акă мĕнле хип-хитре качака артисткăсем. Иван Христофоровăн чун юратнă Люськисем, чăваш искусствин малашлăхĕ вĕсенче, – чĕрре кĕме хăтланчĕ Лукьяновĕ. – Вĕсемпе эп пĕрре кăна мар сцена çинче вылянă. Ватă качака... Пенсионерка... Эсир, мучи, хăвăр та яш мар ĕнтĕ... пирĕн пикесене куçлатăр пулин те, çапах... Конкурс условийĕнче вара... «театр яшсемпе хĕрсене чĕнет» тенĕччĕ. Мĕнле, Виктор Аркадьевич?

Аслă Хоппи Виктор Петров, чи Аслă артисчех пулчĕ иккен, питĕ çивĕччĕн сăнать хăнасене.

Илле Семеновĕ хайĕннех перет:

– Давай, пултаратăр-и эсир хĕрарăм сăнарне тума е миллион хоппалатма?

Çав самантрах Лапшу Çтаппанĕ Уçтук çырминчи асамлă курăкне шăлавар кĕсйинчен кăларчĕ те çăвара хыпрĕ, çуррине Иван Мучине пачĕ: «Ме, чăмла». Туххăмрах абитуриентсем çап-çамрăк абитуриенткăсем пулса тăчĕç. Экзаменаторсен куçĕсем яшла сиккелесе илчĕç. Илле Семеновĕ асăрхамасла тенĕ пек Лапшун чăмăр купарчине аллипе шăлса илме ĕлкĕрчĕ: «Ах, пĕрреччĕ...» Театрти чипер пикесем хăйсем умĕнче юмахри пек çуралнă артисткăсене ыталаса чуптурĕç те пилĕкĕсене тутăр çыхса ячĕç.

Хоппасен çĕршывне лекнĕ ятпа саламлатпăр сире тесе пурте хоппалатса оппалатма пуçларĕç: «хоппа-оппа!»

Вӗрекен хуранти месерле ҫаврӑнса ӳкнӗ мулкач та урисемпе тапӑлтатса Йӑлӑма ҫити янратрӗ: «хоппа-оппа!»

«Хыпарта» кӗҫех пӗлтерӳ пичетленчӗ: «ҪИТЕС ВӐХӐТРА!!! Иван Мучипе Лапшу Ҫтаппанӗ Виктор Петровӑн «Минмӗн» театрне ӗҫе кӗнӗ. Кӗлпук Мучи «Мунча» лапки ҫинче сысна ҫури ӑшалать».

## ХӐЙӐРЛӐ АРПА

Шупашкар Арпачӗпе тройка тӑвалла ярлаттарса хӑпарать. Кӗлпук мучи, тилхепине пушатса каялла ҫаврӑнса пӑхать те. Чӑвашхумӗ ҫинче сӑпкари ача пек ҫари ҫухӑрса ярать: «У-а! у-а! улах урамӗ!»

Чӑваш театрӗ хыҫӗнчен купӑс каласа тухакан Ухтер мучи шартах сиксе ӗнсине кӗҫӗтмесӗрех хыҫать:

– Турруна кӗлту, тӑванӑм-каллегӑ, хӑвна юмахлӑха кӗртсе янӑшӑн, кунта каккуй санашкал виҫ лашапа чупма, килти моськӑсем ҫине утланса виҫ шит сиктерме те памаҫҫӗ. Ҫурран урам, э, ӗлӗкхи Мускав – Хусан ҫулӗ мар: ни урапаллӑ, ни ҫуналлӑ, ни ракетӑллӑ, ни атӑллӑшывлӑ транспорт ҫӳремест. Чӑвашкино мар-ши эс? Тен, Чӑваш...

– Чӑваш-ха эп, чӑвашах, сан юрруна та кунтӑка тултарсах пыраттӑмччӗ-ха, «атте мана шур пӳрт лартса парайрас ҫук, ирӗксӗрех каяс пулать ҫӗн ҫӗре» тесе ҫӗре ҫити пуҫ тайса янраттараттӑнччӗ тин ҫеҫ, ахальтенех пулас ҫук-ха, тӑр кӑнтӑрлах нуша юрри юрлас ҫук. Чӑваш нуши пулас-ха эпир иксӗмӗр те.

– Ҫаплах ҫав, – яп-яка янахне артистла шӑлса хашлатса илет Ухтер мучи. – Сухал укҫипех Арпатра ар пӑтти ҫиеймӗн. Сан та, тем, кӑрманунта арпа ҫеҫ.

– Арпи пулсан, тарамччӗ-ха, тусӑм, вӑл та пулин хӑйӑрланса юхса пырать-ҫке. Атӑл хысакӗнчен кунта ҫитиччен ҫур кӑрман та юлмарӗ. Урхамахӗсем тытса чармалла марскерсем те...

– Етӗрне рысакӗсем пуль-ха, леш, тӗнче чуппипе чупаканнисем.

– Шупашкартанах. Ехрем хуҫа ҫилҫуначӗсем. «Атӑл караванӗ» ятлӑ суту-илӳ ярмӑркинче эпӗ вӗсене авалхи купцаран сысна ҫурилле ҫухӑрса-юрласа выляса илтӗм. Кӑрманӗ-мӗнӗпех парнелерӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн ухӑр-ямшӑк пулса кайрӑм га... вӑя ниҫта хума май ҫук, хӑть Уйӑха кӗвентеллӗ хӗрӗпех туртса антар. Туртса антарас тесе сиксе те пӑхрӑм, ҫут лӗпкене пӗлӗт арки тивнипе Атӑл хысакӗнчи хӑма кавир ҫине хашлатрӑм. Туй шилӗкне лекрӗм. Праски инке хӗр парать иккен. Кӗвентеллӗ хӗр вырӑнне хӑть эсӗ те пулин качча пыратӑн-и мана, Праски чунӑм, тесе алла ҫӳлелле тӑсрӑм, вӑл чӗнтӗрлӗ аркӑпа пите

кăтăклантарса çурхи тихалла тĕпĕртеттерчĕ кăна... Уçăлма тесе Атăл хĕрне тухрăм та театртан... Юрăпа хутăш «урхамахсем тăраç тапăртатса, çилхи вĕçĕсене вĕçтерсе...»

– Ан суй, Кĕлпук мучи. Праски инке вăл халь çĕр хĕр качча парса çĕре çитнĕ те Çĕр çинче çук хĕрарăм-чемпионка пулса тăнă, хăй кинемие тухнăран качча тухман вăл сире, чапанăн хăрах çаннине тăхăннă тĕп каччи те виличчен памасть ăна сире, – йĕплерĕ «эп чăваш артисчĕ те эп чăваш артисчĕ» тесе măкăртатса пыракан ўсĕртерех арçын.



ЧР халăх артисчĕ
Геннадий Терентьев –
Ухтер мучи

– Арпи те ку иртнĕ ĕмĕртиех пулас, çампа вакланса хăйăрланса кайнă тем? – сăвăрса пăхрĕ Ухтер мучи, – «Хумсем çырана çапнă» чухне пирĕн шăл хушшине тыр пĕрчи те, пылак салачĕ те лекетчĕ, хырăм та самаях сарăлатчĕ, халь, мĕн, хывăх, хылчăк... Сан та кунта пĕр тырă пĕрчи çук...

– Эй, мĕн калан иртнĕ пурнăç пирки. Вăл саманара эп те сысна çурилле çухăрса кăна мар, самăр сысни çинче те утлансах çўренĕ...



ЧР халăх артисчĕ
Ефим Никитин –
Кĕлпук мучи

– Çапах та, кала-ха, арпине ăçтан тиерĕн çак, тăванăм?

– Арпине ăна Ехрем хуçан кăрманне арпа тултарнă пуççем тултарса панăччĕ. Эс, Кĕлпук мучи, сапса пар ăна артистсемпе художниксене, писательсемпе композиторсене. пуçтарччăр вĕсем выля-выля, ташла-ташла та, юмах çапса та купăс каласа, тăрантарччăр хырăмĕсене, тенĕччĕ çўл тўперен... Итле малалла. Праски инке уткас панă хыççăн, лава Ильич хыçне çитсе тўнтерес теттĕмччĕ кăна... Пăхатăп, мăн çул çинче катăк йĕмсемпе сар тутасем юмахри ухмах Йăван кĕл ăшĕнче пăрçа суйланă пек хăйăр юхтарса ылтăн шыраççă, йăлтăрккисене çăвара хыпаççĕ те сĕлтĕркине-каяшне çак кăрмана сапаççĕ, сире кашнине пĕрер пĕрчĕ хăйăр те çитет, арпапа хутăш кавлетĕр тесе çут хырăмĕсене шăла-шăла хăйăр çулне такăрлаççĕ шĕвĕрккесем.

– Ăнланмалла, – купăса урам тулли туртса ярать Ухтер мучи, – вылякан-ташлакан-юрлакан-сăрлакан валли ылтăн хăйăр пăхĕ те тутлăхлă тесшĕн ĕнтĕ вĕсем, пире...

Ларкăч çинчен сиксе аннă Кĕлпук мучи, тилхепине урам варрине каплантарса лартнă Чăвашсоцбанкран яваласа илет те, Ухтер мучине авалхи çурт еннелле сĕтĕрет.

– Куратăн-и чӳрече тăррине мĕн çырнине?

– «Чечек» тесе çырнă.

– Кĕрер те унта, кафеллĕ-кофеллĕ парне туянар та, тусăм, чăмар юнашарти çамрăксен театрне.

– Мĕн тума? Купăс каласа юрлама-и?

– Çу-ук, туя. «Карчăксем качча тухаççĕ» паян унта. Лекçи Васильев режиссер вĕсене, качча кайиччен, халăх çине кăлариччен, тĕрĕслесе пăхать. А тăрук пирĕн валли те пĕр-иккĕшне хăварать? Праски инкиминки йĕплĕрех... пире вара çамрăксен карчăккисем те пурпĕрех...

– Кĕсьере пĕр пус та çук, паян та хытнă çăкăрпа тăр шӳрпе çеç тултартăм хырăма.

– Ман та хырăмра арпапа хăйăр кăна çав. Çамрăксен театрĕнчи çамрăк карчăк Праски инкерен те йĕрĕрех пулĕ те... ĕлĕк-авал «Çывăракан Венерăна» ыталаса выртни мар пуль çав халь. Аптриш.

Кĕç Арпат вĕçленнĕ тĕлтен çӳлерех тăвăр урам çĕр çĕмĕресле янăраса каять: хоппа-оппа! Аналла тĕлĕнмелле чаплă йыш уявлăн анать. Малта мăйне хĕрлĕ хăю çыхнă, чанк тăракан хӳри вĕçне хăмач çакнă Шашка вĕлтĕртеттерсе пырать. Çитăр мучин мăйракаллă Качакине ылтăнласа-кĕмĕллесе пĕтернĕ, мăйĕнчен йĕс шăнкăрав çакса янă. Ĕмĕр сӳнмен вăрăм чĕлĕмне хыпнă Лапшу Çтаппанĕ йĕлтĕр çуни-урапи умĕнче тилхепе тытнă, ĕнси çинче ларакан Куçма Чулкаç «Чечек» кафе çуммипе авалхи «Атăл» хупаха шырать пулас. Тĕнчери чи паллă та чи чаплă сунарçă хыçĕнче, унăн икĕ кĕпçеллĕ пăшалне чĕркуççипе тĕкĕнсе, Иван Мучи мăнаçлăн тăрать. Кăкăрне çĕр çулпа явакланă. Лавран шит уйрăлмасăр чĕрчун тĕнчи шавлăн куçать: арăслан хӳринчен упа тытнă, упинчен кашкăр, кашкăрĕнчен тилĕ, тилĕрен куян, куянран пăсара... Ăсанĕ-мĕнĕ сывлăш çарĕ пек вашлатса вĕçет.

Милицисем тин кăна мăнкăмăллăн саркаланса тăратчĕç-ха. Лапшу Çтаппанĕн Шашки пĕрре хамлатнипех таçта кайса çухалчĕç, асфальт кӳлли çеç капланса юлчĕ вĕсем хыççăн.

– Выçăпа ура çинче аран-аран тăракан йĕнтеллигентсене урăлтаркăча çавăтса кайса «çаратма» çеç пултараççĕ вĕсем, пирĕн тăнсăр хуралçăсем, – тесе урам тулли кулса ячĕ Кĕлпук мучи.

Ухтер мучи чăваш юррисене купăспа пуçа чалăштарсах аййаралаттарма тытăнчĕ. Уяв хумĕ çитсе çапнипе Кĕлпук мучин ĕмĕрхи шлепки вĕçсе сывлăша çĕкленчĕ, радио хумĕпе Чăваш çĕршывĕ çийĕн хăлатла ярăнчĕ. Ехрем хуçа ăйăрĕсем Çитăр мучин качаки умĕнче чĕвен тăчĕç те авалхи Шупашкара вăратса кĕçенсе ячĕç. Çуна-урапа сылтăмалла вăрт çаврăннипе Чулкаç ямшăк хулпуççийĕ çинчен сирпĕнсе йăваланчĕ, чĕкеç курăк сĕткенĕпе сывалас ĕмĕтпе «Чĕкеçе» вăшт кăна кĕрсе çухалчĕ.

Кĕлпук мучипе Ухтер мучи лав çинчен Иван Мучине меллĕн йăтса антарчĕç, менелник ячĕпе кăтăкламасăрах саламласа ăна чăваш халăхне кула-кула ĕçлеме, юрла-юрла, ташла-ташла пурăнма кулăш çимĕççи ӳстерсе панăшăн вагăлла тав турĕç. Ехрем хуçа çурчĕ умĕнче кăмăллăн кĕтсе тăракан килпетлĕ мăнттай йĕкĕт умне çитерчĕç.

– Ырă сунса кĕтсе илетпĕр сире, Иван Иванович, хаклăран та хаклă çыравçăмăр, хастартан та хастар капкăнçăмăр, яшăран та яшă артистăмăр, хамăрăн Писатель керменĕнче, çĕр çул тултарнă ятпала кашни чăваш сире çĕр хут ыталаса саламлать. Тархасшăн, пурне те хапăлласа чĕнетпĕр Ехрем хуçа çуртне хăнана, Чăвашăн Аслă Кулăшçин менелникне, – тесе чăваш писателĕсен пуçлăхĕ Хветĕр Агивер чаплă хăнана ытамласа илчĕ.

Иван Мучи хĕвеле хирĕç тăрса виçĕ хутчен пуç тайрĕ те, пурин çине те куçĕнчи çиçĕмне сапса:

– Тавтапуç сире, чăваш çыравçисене, çак керменте чăвашăн аваллăхĕпе малашлăхне паянхи тĕвĕпе çыхăнтарнăшăн. Хоппа-оппа, – терĕ. – Иван Мучи ухмаха тухнă тесе ан тĕлĕнĕр. «Хоппасен çĕршывĕнчен» кĕрлеттерсе çитрĕмĕр-çке. Экзамен тытса Хоппасен театрне артиста кĕтĕмĕр. Чăваш халăх артисчĕн хисепне тивĕçрĕмĕрех пуль тетĕп Лапшу Çтаппанĕ, Улайкка качака тата Шашка. Куçма Чулкаç çеç пыр чирне пула çывăрса юлчĕ. Ну ку хăямата-ха. Чулкаç геройĕсем пурпĕрех пĕрле, авă епле ăррлатса та хăрлатса тăраççĕ. Кĕлпук мучин урхамахĕсем Ухтер мучин юррисемпе пĕрле епле тапăртатаççĕ! Тавах сире пурне те. Хоппа-оппа!

– Хоппа-оппа, оппа-хоппа! – кĕрлесе кайрĕ Шупашкар.

– Писатель куçĕпе пурнăç çине пăхма аван-и сире? – тесе Иван Мучин классикăллă сăмси умне шăтарса пĕтернĕ пăрăç хутаççи пырса тĕкрĕ Чăвашрадио çынни.

Иван Мучи чăваш тĕнчи илтĕнмелле кулса ячĕ:

– Ха-ха! Писатель-кусатель ячĕпе-и? Хо-хо-хо! Чышкă тытăмĕнчен хăтăлнă чăваш турă ячĕпе те, патша хушнипе те, тĕшмĕш чăпти пулса та пурăнманшăн Чее Еххĕмпе çил арманĕ авăртмастăп.

Вăхăтлăха çĕтнĕ пуç вăл халĕ те туллиех. Ача çуралнă каç юлашки уявçă вунă хут виç те пĕрре кас тесе коммунхоз «ырлăхĕпе» сысна валли майланă механизаци – пĕр вырăнта тапăртатни, шăнапа калаçни, шăмăсăр япала. Авă, Кĕлпук мучин кăрманĕнче сире валли пуш пуçсем тултарса панă пуш хăйăрлă арпа. Каçса тăкăр ăна урам урлă. Унта ултавçăсен темле хвончĕ пуррине куратăп. Хăйсем чаваланчăр ылтăн юлашкийĕнче. Сире вара, наци мимине, ылтăн-ахахнех паччăр. Çапла-и, халăх?

– Хоппа-оппа, çаплах пултăр!!!

Кĕлпук мучин урхамахĕсем ямшăкĕ тавçăрса иличчен кăрмана пушатса та касрĕç. Пĕчĕк çурт умĕнчи купана кĕçех Карл Маркс урамĕпе анаталла чупса çитнĕ сар туталлă сăрă хуртсем чавалама пуçларĕç.

Хăнасем Ехрем хуçа çуртне кĕрсе тулчĕç. Иван Мучи сывалнă Куçма Чулкаçа хул хушшине хупрĕ. Лапшу Çтаппанĕ Çитăр мучи качакине тăварса купăста пачĕ те Шашкине алсана чăмтарчĕ, Арăсланпа юнашар хурала тăчĕ, шухăша путрĕ: «Эх, лекеймерĕм Чăваш патшин çӳллĕ пуканĕ çине. Чăваш патшин хăмăтне пиртен çивĕчрехххи те çамрăкраххи тăхăнса лартрĕ, Пĕрремĕш Микулай патша пулса тăчĕ, ырă çеç сунатăп матура. Начар сунарçă пултăм пулас, вăхăтра шĕкĕлчеймерĕм шăмăсăр чĕлхесене. Турăсем çумĕнчи çемçе пукан çинче ларас пулсан-и халь... ылтăнран пайланă хăйăр пăхĕпе тăрантарса усрас çук чăваш интеллигенцине».

Кулăш кунĕ пуçланать! Тĕнчери чи паллă та чаплă сунарçăпа тискер кайăксен патши Арăслан пурне те кулма-култарма чĕнеççĕ авăн уйăхĕн касĕнче.

## МĂКЛА-МУКЛА ПĂРУСЕМ

Ултă çул каялла, кăрлач çĕр çине пуснă кун, тепĕр хут «Кĕрхи кунри тамаша» курнăччĕ. Çитăр мучин Качаки халĕ те кулăшла лава мекеçленсе туртса хăпарать. Ухутник йĕлтĕрĕсене хăма татăккисемпе çапса тунă çунин туртисем – шĕшкĕ туйисем хушшине каллех «Вăрăм сухалне» кӳлсе тăратнă. Çурăмĕ хыçĕнче ик кĕнçеллĕ пăшалĕ. Юнашар ырхан Шашки лĕскет.

«Вăрăм сухал» утмăлта та кăвакарманшăн ытлашши тĕлĕнмерĕ Иван Мучи çĕр-мамăк утиял айĕнчен канса тухнă хыççăн. Ара, ма ватăлас Качакан? Элеватор ячĕллĕ оперăпа балет театрĕ çумĕнче

ӳстернĕ çĕр тонна купăстана кавлесе ячĕ-ха вăл. Куян шăмми кăшласа пурăнакан Шашка, авă, ниепле те самайланаймасть. Хуçи ăна Аслă Канаш çуртĕнчен тытса тухнă бюрократсемпе кармаçăварсене – шăмăсăр чĕлхесене михĕрен тартнăшăн çавăн пек айăпласа нушалангарса пурăнать. Ара, ăна пулах Улайкка хаспатин Шупашкар мэрĕнче нумай тытăнса тăраймарĕ, суйлавра хăй те чăваш патшине лекеймерĕ. Çав тери пысăк хур кăтартрĕ Шашка «Ивлапшашкач» эртелне. Çирĕмĕмĕш ĕмĕрти наукăпа техника революцийĕ парнеленĕ рессорлă, чĕнтĕрлĕ çăмăл кӳмепе çĕнĕ улпутла ярăнатчĕç. Каллех Шашкăна пула çак ырлăхпа усă кураймаççĕ. Понька понине вăл сыхласа усраймансçке. Тĕп хула енчен чан сасси илтĕнет. Эсир çитсе йĕрке тусан çеç ĕнтĕ, теççĕ хирĕç пулакансем.

– Çавăнпа Шупашкара васкатпăр, чăваш халăхĕ чĕннĕ çĕрелле. Итле-ха халăх чанне? Макăрса чĕнет. Но, шуйттан кĕвенти, васкарах! – урхамахне çурăм тăрăх пушшипе туртса касрĕ Лапшу. – Чăваш культурине çăлма!

Çук, çăласси пулмарĕ вĕсен те ăна. Кармаçăварсемпе бюрократсем парашпан çапакан пуш лаптăка çеç лекрĕç. Чухăн чунлă чухчухсем çурăк валашка умĕнче пĕр-пĕрне хирсе пуç пуласшăн тĕрткелешнине çеç курчĕç. Шăршлă апатпа тус-юлташне, ентеш-ăратнине вараласа асавĕсене хăйраса çеç тăраççĕ. Тем тĕрлĕ канашĕ, партийĕ, кунĕ кĕресĕ, ассам пĕлейĕ, курултайĕ, ака тĕмĕ... Наука «тухтăрĕсем» Атăл çыранĕнче мар, Амасункă чăтлăхĕнче, Типет тăвĕсем хушшинче, Ахрика лумумписемпе чумписен йăхĕнче вилесле шыраççĕ чăваш кутнепуçне – хăйсен пĕç хушшине пăхма мансах. Упăте еткерлĕхĕ пирĕн еткерлĕх тесе мăкла пăрусем пек муклатаççĕ. Урам тулли акатемик... Палласа илме çук кам хăш акатемин чăн е чăн мар членне.

– Юрать-ха хамăн чăнниех, – тесе шăлаварне шанчăклăн хыпашласа пăхрĕ те Лапшу хĕрлĕ çурт çине çырса çапнине вулама пикенчĕ.

–Ăнланмастăп. Пулăш-ха, Иван Мучи, эс леш тĕнчерен таврăннăскер, ген унта тĕнче чĕлхине вĕреннĕ.

– Вĕренмен, маншăн анне чĕлхи – тĕнче чĕлхи, – тесе куçне ыраттарсах вуларĕ Иван Мучи те. – Чăвашла та, вырăсла та мар ку. Ахрат çырми чĕлхи пуль...

Лапшу Çтаппанĕ урам тулли ахăрчĕ:

– Çĕн чăваш тимук ăраттисен чĕлхи вăл! Турнимакăл чĕлхи. Шупашкар туркка, нимĕç, акăлчан чĕлхипе çеç палкать. Чăваш чĕлхи шкулта та йăваш. Пурте ачисене турнимакăл чĕлхипе макăлтаттарса тĕнчене кăларасшăн, хамăр чĕлхене сапасра çеç тытаççĕ. А тăрук кирлĕ пулать патшана ларас пулсан...

– Хам! Хам!

– Сан çывăх тусу та çавнах калать. Хамсен, ют çĕр сĕмсĕрĕсен чĕлхи-сăмахĕ çавăрса илнĕ иккен тăван хулана. Тăван хулах-ши ку? – ун-кун пăхкаларĕ Иван Мучи. – Чăваш сăмахне çĕр çăтнă-ши?

– Ха, кашни урамра панккă, – шăтăк кĕсйине чиксе пăхрĕ Лапшу Çтаппанĕ. – Кансервă панккинчен нумайрах пуль. Ячĕ-шывĕ те каллех ют чĕлхеллĕ: «Менатеп» панкки, «Мегаполис» панкки...

– Хам! Хам!

– Тĕрĕс, шашка, – ухутник йыттине чĕрçи çине ларгрĕ Иван мучи. – Каллех хамсем намăса пĕлмесĕр хуçаланаççĕ Шупашкарта, чăваш укçине таçти тĕпсĕр тинĕсе юхтараççĕ. «Аяр» панкки вуншар пин çынна макăртнине манман, çаплах утаççĕ унталла çулламан пăрусем. Ай-ай, ака кăмпи пекех ретленсе ӳсеççĕ тĕп хулара хам-такам панккисем.

– Пăх-ха, пăх эс лайăхрах! – тĕллесе кăтартрĕ хитре çурт çине Лапшу Çтаппанĕ, – «Венера!» Юрату пылакне сутакан ясар лавкки мар-ши ку?

Иван Мучи канлĕн каçăрăлчĕ:

– Паçăртанпах пăхса пырап-ха вĕсене. Ячĕсене вуланипе яп-яшланса кайрăм. «Мария», «Эльвира», «Любушка», «Пăлаки»...Парижра мар-ши эпир, тусăм? Çапах та... Пăлаки пылаккине тутанса пăхиччен хастарланар-ха. намăс курăпăр тата, çурăм çумне çыпçăннă хырăма уйăрар. Авă, ĕлĕкхи «Атăл» хупахран тăварахра, кĕтесри капăр çуртран тутлă шăршă палкать.

Ни урапа-ни çуна Чăваш театрĕ умне кĕрлеттерсе çитрĕ. Лапшу Çтаппанĕ урхамахне мăн мрамор юпаран кăкарчĕ те, çул çинче машинăран ӳксе юлнă купăста пуçне качака умне пăрахса пачĕ, Шашкине алсана чăмтарчĕ, Иван Мучипе ытаклашса хупахалла уттарчĕ.

Хăнасене Пассам хаспатин саркалансах кĕтсе илчĕ, арап апачĕ çитерчĕ. Вунă тилĕ тирĕ парса хăварчĕ тĕнчери паллă сунарçă ют тĕнче апачĕшĕн.

– Тем тесен те эпир Шупашкарта марах, – пуçне иккĕленӳллĕн силлесе илчĕ Иван Мучи. – Урамĕ те Лумумба ятлă, çурчĕ-йĕрĕ çине çырса çапни те ют чĕлхепе, лавкки-панкки те, апачĕ те, таварĕ те таçти-мурти. Шӳрпе çиес тенĕччĕ те... ниçта та тĕл пулмарĕ. Çитăр мучи качаки пире е мăшкăлласа е йăнăшпа Африка тăррине е Анăç хĕрне илсе килсе ячĕ пулас. Шывĕне фонтанĕ çине пăхатăп та, Венецири пек те туйăнать.

Лапшу Çтаппанĕ таврана виççĕ çаврăнса пăхрĕ.

– Тĕрĕсех пуль-ха, тусăм, – лăплантарчĕ вара Иван Мучине. –

Чиркĕвĕсем Шупашкаръннах-иç. Паянхи пекех астăватăп хама Чулкаç Куçми çавăнти çуртра çуратнине, çуккă пулин те писательсен авалхи çурчĕ, пурпĕрех халь те вăл куç умĕнчех ларать. Эп пăшал персе ярсан, Чулкаç мана хаçат хучĕпе чĕркерĕ те «Атăл» хупахра шыва кĕртрĕ, Атăл шывĕпе çунă хыççăн халăх хушшине кăларса ячĕ. Çӳретĕп çапла ухутара çĕр каçиччен хĕрĕх тилĕ, пилĕк лав пăсара, кĕтĕвĕпех кашкăр-кашаман, хăрамасăрах упа-арăслан тытса.

– Чăваш халăхне Йăлăм лачакине путаракан тискер кайăксене, ик уралписене, пĕрерĕн-пĕрерĕн шĕкĕлчесчĕ сан, Лапшу, – ăс пачĕ паллă сунарçа Иван Мучи. – Ытла хыт палкаççĕ, куç хупмасăрах суяççĕ, хула варрине пуш сăмах керменĕ купалаççĕ.

– Хам! Хам!

– Мулутеццă, Шашка! – Пассам хаспатин вак укçа вырăнне тавăрса панă Нил пуллин хӳрине хыптарчĕ йыттине Лапшу. – Хамсем, хамелеонсем вĕсем: тĕсне улăштаракан калтасем, çил хӳрисем, намăссăрсем...

– Халăх умне икĕ питпе тухма юрамасть те çав... Ялан вăл пуçлăх тени çапла-çке. Пĕр питлĕ таса патша юмахра та пулман. Атя, хăвала ав çав лав хыççăн.

Арпат урамĕпе тройка тăвалла ярлаттарса хăпарать. Ларкăч çинчи Кĕлпук мучи каялла çаврăнса пăхрĕ те, тĕлĕнсех кайрĕ: йĕлтĕрлĕ лавра тусĕсем шăл йĕрсе пыраççĕ!

– Ехрем хуçа çилçуначĕсем-ха кусем, – пĕлтерчĕ артист вĕсене сывлăх суннă май. Арпа пуçлă пуçлăхсем кăрмана арпа тултарса пачĕç. Кĕлпук мучи, сапса пар ăна кĕлмĕç артистсемпе композиторсене, писательсемпе художниксене, пуçтарччăр вĕсем выля-выля, ташлаташла, юмах çапса та купăс каласа, тăрантарччăр хырăмĕсене, тесе кулса юлчĕç.

– Авă мĕнле тăрантарса усраççĕ паян та чăваш халăхĕн ылтăнран та хаклă ăсчахĕсене, маçтăрĕсене, – сăнне сивĕтрĕ Иван Мучи. – Хăйсем юмахри ухмах Йăван кĕл ăшĕнче пăрçа суйланă пек те мар ылтăн хăйăрĕ купалаççĕ пуль-ха.

– Хам! Хам!

– Шашкăран нимĕн те пытараймăн. Шăршă вăйлă пĕлет. Ку пуш арпа кăрманне культура, литература, искусство ĕçлевçисен килне мар, Якши мулла умне кайса тăк. Тилхепӳне вара ют çĕр çыннине шанса ан пар, – Кĕлпук мучин çуталнă шлепкине куçĕ çинех пусса лартрĕ Иван Мучи. – Атя, хăвала урхамахна тăвалла, Лапшу! Пирĕн кĕнеке кăлармалла!

«Чăваш» хăна çурчĕ çумĕнчи Чăваш кĕнеке издательстви умĕнче

пĕлĕт çӳлĕш ула ĕне капланса тăрать, васкамасăр хут чăмлать.

– Иван Мучи, сан кĕнекӳсене çиет вĕт мушшальник яннварĕ. Ха, суйла-суйла мĕшĕрет. «Тĕшмĕш чăптине» «Хурхухпа» çăтса ячĕ. «Телейĕм çук» тесе «Чее Еххĕм» те мăн çăварта курăнми пулчĕ. «Сикекен Пăрçапа» ăшталанакан «Мĕскĕн Упанккапа» «Йăлай Йăкăначĕ» «Юлашки уявçă» пек ташлаççĕ. Кур-ха, ĕне вĕсене те чĕлхипе çавăрттарса илчĕ. Эй, эсĕ, ĕне, «Турă ячĕпе патша хушнипе» çиетĕн-и чăваш кĕнекине?

Ула ĕне пăванран хăтăлас тенĕ пек вăрăм хӳрипе шартлаттарчĕ те Лапшу Çтаппанне, мĕкĕрсе ячĕ:

– Му-у!

Ĕнен хура çăварĕнче «Чышкă тытăмĕ» курăнса кайрĕ, унпа пĕрле «Сунарçă халапĕсем» шăл хушшинчен тухса сирпĕнчĕç. Лапшу Çтаппанĕ аран-аран çут тĕнче кĕтессинче тăрса юлчĕ.

– Чăваш паян кун та «Чышкă тытăмĕнчех» иккен, – кулянниле пĕчĕкленсе ларчĕ Иван Мучи. – Çăвар та уçаймасть, йăли-йĕркине те çĕнетеймест, культурине те ютпа улăштарать, кĕнекине те тăранман ĕне хырăмне тултарать. Эх, пурнап тен çав мĕскĕн мăкла пуç, муклатса сиккелен амаçури аннӳпе аçаçура аçу хушшинче. Ху хуçа пулаймастăн. Эпир чухне чăваш валли çуллен аллă-утмăл ятпа кĕнеке кăларнă, халĕ – пиллĕк-улттă...

– Хам! Хам!

– Намăс, – алă сулчĕ Иван Мучи. – Чĕр намăс пире, мăкла-мукла пăрусене, çăвара шыв сыпса ула ĕнене çăвар тулли кĕнеке çитерекенсене. Туртса илмеллех çав тĕпсĕр çăвартан хамăрăн ăс-хакăл апатне.

– Малалла! – хăваларĕ Лапшу урхамахне. – Атя, Иван Мучи, «Капкăна» тĕрĕслер, кам лекнĕ унта?

– Кам лектĕр ĕнтĕ унта, паллах, усал-тĕсел, – кулса ячĕ Иван Мучи.

Лапшу ĕнсине хыçса пуçне пăркаларĕ:

– Усал-тĕсел халь капкăна лекмест, тусăм. Усал-тĕсел халь халăх пуçĕ çинче ларать, халăха çаратать, хуçа пулнă. Пĕлетĕн вĕт эп сунарçăланнă Ямаш вăрманне?

– Ара, пĕлмесĕр, Куçма Чулкаçпа унта пайтах мăйăр, кăмпа татнă, сан сукмаккусемпе утса киленнĕ.

Лапшу хуйхăллăн анасласа алăри тилхепине пĕç хушшине хĕстерчĕ те:

– Пирĕншĕн унта çул хупăннă халь, – терĕ. – Вăрмана ют патшалăхсем пайласа илнĕ, тискер-кайăк, вĕçен кайăк тытма вĕсенчен лицензи илмелле, вĕсене налук-пошлина тӳлемелле. Хамăр çĕр çинче хамăр та хуçа мар.

– Мăкла-мукла, çулламан пăру вырăнĕнче, паллах, хуçа пулаймастпăр, – хушса хучĕ Иван Мучи. – Шăмăсăр чĕлхе нимĕрĕпех, арпипех тăранса лараймастпăр.

Улайкка лава темле сылтăмалла пăрма ĕлкĕрчĕ. Йăлăм енчен капланса килекен хура пĕлĕтпе тан выçлăх ĕне, кĕнеке-журнал чăмлачăмла, мăн çул варрипе мĕкĕрсе иртсе кайрĕ.

## ÇĔР ТЕ ВУНĂ ХУТ КУЛСА ЯЧĔ

Лариван Йăванĕн Йăванĕ, тĕнче тытăмĕн çулĕ çине хăй Утикассинче пуçласа хĕвел урине тытнăранпа çĕр те вуннăмĕш хут пусма тесе урине çĕкленĕччĕ кăна, çурăм хыçĕнче темле шав илтнипе картах çаврăнчĕ. Эй-кей! Çатма пек çул тăрăх Арăслан вашкăртать. Тĕлĕнтермĕш урхамах çинче вĕçсе юласран çилхерен тытнă Çĕрпÿ тăрăхĕнчи Малти Ямаш ачи Куçма Чулкаç сиккелесе ларать. Вĕсенчен юлмасăр пăлан пек качака ĕрĕхет. Лавĕ манерсĕр кулăшла курăнать. Ухутник йĕлтĕрĕсене хăма татăккисемпе çапса çуна пекки тунă та, çулла чупма тĕпне пĕчĕк урапасем лартнă те, шĕшкĕ туйисем хушшине вăрăм сухала кÿлнĕ, ямшăкĕ, чĕлĕме паклаттарса, улпут пек сарăлса ларса пырать, çурăмĕ хыçне ик кĕпçеллĕ пăшал çакнă. Пастай, пастай, паллă сунарçă Лапшу Çтаппанĕ-çке ку? Авă, Шашка ятлă вĕт йытти те çумĕнчех лĕпĕстетет. Урхамахĕ вара никамăн та мар, Иван Мучиннех. Пĕртте ватăлман, самăрăлса çеç кайнă, мăйракисем ту такин мăйракисем пек патвар, сухалĕ леш тĕнчери тамăк хуранĕ çумĕнче вăшталанакан Шуйттан сухалĕнчен пĕртте кая мар. Ай вайвай... Çитмĕл пиллĕкре те çич уйăхри качака таки пекех йăрă. Вĕт вăл унăн ăслă мăн пуçĕнчи кулăш картинчен шĕвĕр мăйракипе шăтарса тухса тарнăччĕ, Михаля мучин ял хĕрринчи ыраш анине тапăннăччĕ. Ăна курса Михаля мучи хăйĕн сурăххисене кÿршин ани çине хуса янăччĕ. Пуçланнăччĕ вара кÿршĕ-аршăн, ял-йышăн вырьăхĕ пĕр-пĕрин анине тасатма. Шакла пуç пекех туса янăччĕ. Çакăн хыççăн кашнин пуçне, хальхи пекех, «мĕнле пурăнас-ши килес çук» тенĕ шухăш пăралама пуçланăччĕ. «Кĕрхи кунри тамаша» хыççăн ăрсурник ирĕке кайрĕ, кулăш хумĕнче Утикасси утьăккинче ярăннă пекех ярăнчĕ. Мĕнле лекнĕ вăл Куçма Чулкаçăн тĕнчере çук мухтавлă Лапшу Çтаппанĕ лартнă серепене, паллă мар.

– Трр-рр! Шуйттан кĕвенти! – тилхепине туртса карăнтарчĕ те Лапшу Çтаппанĕ çĕре яшт сиксе анчĕ. – Салам пултăр, Иван Мучи!

– Курманни сана, çĕр вунă çул пуль, – чупса çитсе ыталарĕ çул

çинче тĕл пулнă юлташне Куçма Чулкаç. – Ăçталла çул тытатăн?

– Атăл хĕрнелле. Уява. Уяв кĕрлеттерсе капăрланакан Шупашкарта ман та савăнса юлас.

– Эпир шăпах сан уявна кайма тухнăскерсем-ха. Авă, кур, – хыçалалла гĕллесе кăтартрĕ Лапшу Çтаппанĕ.

– Шашка пулăшнипе çĕр те икĕ куян, хĕрĕх тилĕ, пилĕк лав пăсара, пĕр лав пăчăр, икĕ пин кăвакал, пилĕк карта хур кайăк, картиш тулли ăсан, вунă кашкăр, вăтăр упа тата тепĕр арăслан тытрăм.

– Вăт сана менелник парни, Иван Мучи. – Арăсланĕ çине чалт! сикрĕ Куçма Чулкаç. – Малалла, «Капкăн» лаççи еннелле!

Иван Мучи Лапшу Çтаппанĕн сарлака çурăмĕ хыçне сĕвенчĕ. Вăл хăйсем хыççăн шит уйрăлмасăр шавлăн куçакан чĕр чун тĕнчи çине пăхса киленет. Авă епле чĕррĕн кĕтсе илеççĕ ăна, хăйĕн менелникне паллă тума Çĕр çине тепре аннă чăваша!

Тĕп хулана кĕнĕ тĕлте вĕсене Чăвашăн Аслă Ăсчахĕ Якку Йăванĕ хăйĕн вĕренекенĕсемпе пĕрле уçă кăмăллăн саламларĕ, тезкине «Халал сăмахĕ» парнелерĕ.

Акă, Пичет çурчĕн юнашар каснă икĕ алăкĕнчен те харăс хирĕлсе кĕрекен Арăслана курнипе сехĕрленнĕ пăшаллă хуралçăсем тăрук йĕпеннĕ кучĕсене хыпашласа илчĕç.

Улттăмĕш хута вĕçсе-шăхăрса хăпарнă хăнасене «Капкăн» хуçи Эдисон Патмар «Капкăн» тесе çырнă куркаран «Капкăн» ятлă шур эрехпе хăналарĕ.

– Пирĕнне те тутанса пăхăр, – тесе Лапшу Çтаппанĕ редактор сĕтелĕ çине четвĕрт кĕленчи кăларса лартрĕ. Кĕленчин мăйĕнчен аяларах «Лапшу» тесе çырнă. – Хамăр Ямаш вăрманĕнчи хурăн шывĕ – Атăл шывĕнчен тутлăраххи, сиплĕреххи. Сире валли çеç мар, мĕн пур чăваш çыннине те çитет. Таçти-çăвари пылаклатнă наркăмăша кӳпсе çитет, хамăрăн вăрман эмелĕнчен усăллăраххи ниçта та çуккă. Эпир те Куçма аттемĕрпе «Лапшу» пылак шыв сутма лицензи хутне илтĕмĕр.

– «Чулкаç», «Иван Мучи», «Шашка» ятлă пылак шыв кăларсан та халăхшăн шутсăр аван пулнă пулĕччĕ, – сĕнчĕ çăмламас Упа, шăнăçайманнипе пĕчĕк пӳлĕм стенисене хирсе силлентерне май.

Хăнасем шавласа илчĕç:

– Ытла тăвăр кунта. Пăчă. Сывлăш çитмест...

– Кунта тăвăр пулсан, ман пата, иккĕмĕш хута анăпăр, унта анкартинчи пекех аслă, – терĕ вĕсене лăплантарса «Хыпар» издательство çурчĕн» генералĕ Элексçи Леонтьев. – Сире халĕ хамăр пата чĕнетпĕр. «Капкăна» та хамăрăн йышлă çемьере ăш вырăн тупса патăмăр. Хĕрӳ лаççинчи вĕркĕчне еплерех хашлаттарать пирĕн аслă

тимĕрçĕ, чăвашăн йăли-йĕркишĕн чунĕпе çунать Эдисон Иванович.

– Патмар Йăванĕпе пĕр хуранта вĕренĕ-çке эпир, – калаçăва хутшăнчĕ Кусма Чулкас. – Иван Мучи те лайăх ас тăвать сăнарлăх тĕнчинче епле асапланнине.

Хăнасен хушшипе хĕсĕнсе пĕр тăлпан. япшар арçын кулкаласа кĕчĕ те Иван Мучине журнал кĕнекисене тыттарчĕ.

– Ку парне – чăваш çыравçисемпе вулаканĕсен ячĕпе, – терĕ Сергей Павлов. – «Тăван Атăлпа» Ялав» халĕ «Хресчен сасси» издательство çуртĕнче» тухаççĕ-çке. Паянхи йывăрлăхра вĕсем пĕтсех ларнăччĕ. Хамăр алла илме ирĕк пачĕç те аслисем, халĕ мĕнле хитре, хулăн кăларатпăр. Мускав журналĕсем пек.

Иван Мучи тĕп редактор-директора ырă ĕçшĕн мухтарĕ, йăлл кулса, каларĕ:

– «Атăлĕ» те тăванах-ха апла сирĕн, «Ялавĕ» те пуç тăрринчех хитрен вĕлкĕшет. «Капкăнне» те «Хыпар» хыпнă, авă, ăна хăйĕн авалхи тути-çăварĕнчен ямарĕ. Чăвашăн тĕп хаçачĕн лаççинче тутлă пиççе тухнăскерне шыва путармарĕ. Парас-илес, сутас-пуяс саманинче тăр пĕччен инçех ишеймĕн çав, пысăк карап кăна путмасть шавлă тинĕсре. Çĕмĕрттерĕр малаллах, атьсемĕр. Эсир чечекленсе пырсан, эпир те ĕмĕрех пурăнăпăр вара. Çаплах пултăр-и?

Хăнасемпе пĕрле Лапшу Çгаппанĕн хорĕ нин саслăн янраттарчĕ:

– Çаплах пултăр!

Тăрук коридорта шăв-шав илтĕнчĕ, Мĕн пулнă?

«Капкăн» лаççине шăнăçайман Арăслан юнашарти фойере, Чăваш кĕнеке издательствин директорĕ ларакан пӳлĕм умĕнче, хут чăмласа тăракан ула ĕнене малти урипе çапса ӳкернĕ иккен.

– Ай, тинех шӳрпе пулать ĕнтĕ менелник ячĕпе, – сиккелесе илчĕ пĕр выçă çыравçă.

– Мĕн ихĕрстĕр, ухмахсем? – ума тухса тăчĕ Иван Мучи. – Ара, вунă çул каялла мĕнле кавленĕ çак ĕне пирĕн кĕнекесене, паянхи кун та тăранман. Хамăр кĕнекесенех çиет вăл, шельма пуçĕ.

Арăслан ăнсăртран хӳрипе çатлаттарнă хыççăн, директор пӳлĕмĕнчен «вечнăй издатель» Вутлан Йăванĕ ĕç сĕтелĕпе çемçе пуканне йăтса тухрĕ, лифтпа çиччĕмĕш хуталла тарса улăхрĕ.

– Унтан çӳлти патшалăх издательствине улăхма çăмăлрах та çывăхрах пуль çав, – ихиклетрĕ Кусма Чулкас. – «Директор» тесе çырнă хăма татăкне манса хăварчĕ-çке? Музей валли мар-и?

Кĕç алăк умне сăрантан çĕлетнĕ вăрăм сăхман тăхăннă тулли кĕлеткеллĕ, çавра питлĕ Валерий Комиссаров хашкаса çитрĕ.

– Хапăл тусах йышăнатăп сире, хисеплĕ классиксене, – алăкне яри

усрĕ издательствăн çĕнĕ директорĕ. – Шăкăлтатсах, планлах калаçăпăр.

– О-о-о! – савăннипе маччана çити ӳсрĕ Иван Мучи. – Çĕнĕ комиссарсем çуралнă чухне кĕнекеллĕ те пулăпăр-ха, чăваш кĕнекине те тек ĕне çимĕ.

Ямаш вăрманĕн хумĕ Пичет çуртне сиплĕ сывлăш илсе килсе усăлтарса ячĕ. Эртелпе пухăнмалли анлă пӳлĕмре уяв малалла тăсăлчĕ. Лапшу Çтаппанĕн чĕрĕ парнисем сарлака сцена çинче черетпе савăклăх шăрантарчĕç. Чăваш сценин «çăлтăрĕсенчен» пин хут чаплăрах.

Хул хушшине «Çĕнĕ Капкăн» хĕстернĕ Иван Мучи пĕтĕм халне пухса çĕр те вунă хут чăваш халăхĕ илтмелле кулса ячĕ.

Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрĕн малтанхи пилĕк çуллăхĕ те пурнăç тинĕсĕнче кулăш хумĕн тăвăлне вăйлатсах пычĕ.

1990-2005 çулсем хушшинче<br>пулса иртеççĕ ку ĕçсем.

## ÇĔР ХĔВЕЛ ТАВРА ПИЛĔК ПИН ХУТ ÇАВРĂННĂ ХЫÇÇĂН РОМАН ВĔÇĔНЧЕ КАЛАНИ

Иван Мучипе Куçма Чулкаç рай пахчинчен Çĕр çине канлĕн пăхса выртаççĕ.

– Ах, хамăн пасара сутма кайнă кăммунхус сыснине кăвайтă çинче ăшаласа çиесчĕ, – какăрма хăтланать Утикасси чăвашĕ.

– Ман та арăслан хӳрин шӳрпипе хырăма паклаттарас килет, – мухтанасшăн лăнк тутарать пырне тĕнчере çук сунарçăн Лапшу Çтаппанĕн ашшĕ, Малти Ямашра хĕвел урине тытнăскер.

Аялта, çавра мăн чăмăрта, этем кĕтĕвĕ куç виççе илейми йăшăлтатать. Хура-хăмăр, шурă-сарă вĕлтĕрккесем хушшинчен «Хурах! Çăлăр!» – тесе чăвашла çухăрнине илтнипе вĕсем ялтах сиксе тăраççĕ.

– Мĕн пулнă? Кам хуптĕрленĕ пирĕн ентешсене кăмака хыçне?!

Хурахлатнă сасă, хумлăн-хумлăн тĕнче картине сирсе, куç-пуçа алчăраттарса яракан çăлтăрлă Анлăша кайса çухалать.

– Сикрĕмĕр чăваша çăлма!

Юртан тасалсах пĕтеймен уя хаплатнă Иван Мучипе Куçма Чулкаç Çĕр çинче пĕрне-пĕри этемле палласа илеççĕ, кĕçех вĕсем чарăнма пĕлмесĕр юп юптаракан юмах тĕнчин канашне лекеççĕ. Чăваш юптаруçисене Хоттабыч мучи сарлака та вăрăм сĕтел хушшинчи хăйĕн вырăнне кивçенле парса хăварать.

Хĕремесленсе кайнă шакла пуççемпе маччана перĕнекен кăтра-

латнă çӳç-пуçлă çĕнĕ чăвашсем чĕлхе çапăçăвĕ пуçланă-мĕн. Унтан та, кунтан та илтĕнет:

– Кам чăваш хресченне камантлама пултарать?!

– Кам çăкăрлă-ашлă тăвать чăваш халăхне?!

– Эпĕ! – тăрук ăнкарса илнĕ Иван Мучи шалт! шалтлаттарса илет кут хыçĕнчи капкăнне. – Эпир суккăр мар, пурне те куратпăр çӳл тӳперен. Чăваш çĕрне тырăсăр, чăваш ялне выльăхсăр тăратса хăварма мехел çитернĕ каппайчăкпа тăранма пĕлмен шампа хырăма «Капкăн» шăл хушшине хупса хĕстернĕ хыççăн, чăваш çĕршывĕн ял хуçалăхне хамăрла, чăвашла, хамăр тытса тăма пуçлатпăр. Ялта – ял çыннин хуçа пулмалла; ялта – ял хуçин укçа çапмалла; ял пурлăхне – ял халăхнех хăвармалла.

– Эпĕ! – пуçлăхсенчен те çӳлерех çĕкленесшĕн каçăрăлать Куçма Чулкаç. – Атăл шывĕпе юхтарса янă, выльăх масарне ăсатнă мĕльюн ĕне, сысна, сурăх, качака, чăх-чĕп ячĕпе тупа туса калатăп: çил шăхăрттарса ларакан пушă витесене, сысна-вăкăр хулисене Ямаш вăрманĕнчи тусăмсемпе тултарса лартатăп. Çĕрпӳел енчен вĕсем кунталла кашăлах тапранса тухрĕç, авă. Чăвашăн пĕрлешӳллĕ хуçалăхĕсенче сурăх, сысна, ĕне выльăх çухалса пырать пулсан, эпĕ... Чăваш патшалăхĕн йĕрĕпе-йĕркипе пырса, тăван халăхăмăн нушине туйса... мĕльюн куян, тилĕ, пăсара, кашкăр, упа ĕрчетме пултаратăп. Ман пăчăрсене, кăвакалсене, хур кайăкĕсене, ăсансене нимле аçтаха кĕрипĕ те ермест, мĕншĕн тесен эпĕ вĕсене çӳлти патшалăх имĕпе пилленĕ. Эпĕ... Енчен те, утаймиех пулнă пулсан чăваш ялĕ, асăрхаттарса калатăп: Хоттабыч мучисем пек таçти-мурти хыпкăчсем çине шансан, çут пăр çине çара кутпа шаплатса ларатпăр. Эпир вара, Ямаш вăрманĕнчи Арăслан тусăмпа, чăваш ялне ним мар çӳле çĕклетпĕр: халăх хăвачĕпех чăвашла – мăн эртелпе, нимепе. Малалла утса кайма ылтăн туйи те çавăнтах тупăнать. Чăвашăн мулĕ ун çĕр валли яланах сарай хыçĕнче пулнă.

Сарлака та вăрăм сĕтел кĕрекĕвĕ Атăла та хум çаптарать.

– Юмах - юпа тăрринче, тет... – илтĕнет çурăк сасă. – Пирĕн вара чăн сăмахăмăр та пулăшу мулĕн тӳпинче.

Иван Мучин пуç кунтăкĕнче ылтăн пĕрчисем пĕр-пĕринпе тĕрткелешсе илеççĕ. Кулăшçă хăлхине анăçалла тăратать, унтан вăйланнă çиле аллипе сирет те:

– Аякри пулăшу майĕ вăл, – тет пурин çине те чеен пăхса, – çапах та, таçти-аякри май, пире çаратмалли май. Вăл ют çĕртен килет-и, хамăр пуянсенчен-и, пурпĕрех пĕр тĕллевпе тапăнать сана, çыпçăнать те, хырăмне тăрантарать те сан шутупа, пуять те, чĕпĕ кăларать те,

мăнтăрланса-йышланса, Хоттабыч мучи пекех хăйĕн тĕп йăвине йăлтăрт вĕçет. Сана пăрахса панă ылтăн пĕрчинчен пĕлĕте перĕнекен çӳллĕ ту каплантарать. Сан валли, ухмаххине валли, пуш йăвара пуш куршук çеç хăварать. Чăваш вара, авалтанпа мĕнле кăшланă тип йăвана, паян та, ыран та çаплах кăшлама пултарать мул хуçисенчен тăрса юлнă хывăхран пĕçернĕ йăвана. Патшалăх панă пулăшăва та мĕнпур ял халăхĕшĕн тăккаламалла. Çапла эпир, пин çын çинчи пĕр-пĕр пуçтаха пуйтариччен, ял-ялăн пин çыннине хăйне пуйтаратпăр.

Шавлакансемпе тавлашакансем кĕрленипе Атăл та ейĕве каять. Çурхи хĕвел, пуш сăмах çаптарса хĕрнĕ кĕреке ушкăнне юхăмпа аналла юхтара-юхтара, Чăваш ялĕ юмахри пек чечекленнĕшĕн хĕмленсе, Иван Мучипе Куçма Чулкаç аталантарнă сăнарлăх сар çĕршывĕн илемĕпе хăйне евĕр савăнать, йăлл кулса саламлать те вĕсене, канса илет, вăрансан, тĕнче сехетне ака уйăхĕн иккĕмĕш картлашки тĕлне шаклаттарса куçарать.

Кулă, суюк-ултав, савăк кунĕ иртсе кайнă иккен. Хоттабыч мучи те чăшлатса-мăкăртатса çĕре анса ларать, ылтăн тултарнă тăм куршукне сарлака та вăрăм сĕтел варрине шаклаттарса лартать. Вăхăтлăха парса хăварнă ăшă вырăншăн кивçен укçине тӳлеймен чăваш юптаруçисене вăл пĕрре вĕрсех сĕтел хушшинчен шăлса ывăтать. Макулатура сарайне лекнĕ Иван Мучипе Куçма Чулкаç, Çĕр нушинчен Çӳлти патшалăха улăхмалли вăрăм пусма патнелле выç хырăмпа шуса пынă май, шакла пуçсемпе маччана перĕнсекен кăтралатнă çӳç-пуçлă çĕнĕ чăвашсем Хоттабыч мучин ылтăнне кăпăр-капăр пайласа илнине тата Чăваш çĕрĕн сыхланса юлнă ял мулне хăйсен тарăн кĕсйине ăмăртмалла хыпаланса тултарнине курса тĕлĕннипе, сăхсăхса илеççĕ:

– Тавах Турра, пире ыран пурăнмаллăх та çăкăр панăшăн!

30.03.2006 ç.

## ИВАН МУЧИН ВИЛМЕН СĂМСИ

* * *

Иван Мучие çамрăксем çавăрса илнĕ те, пĕри те тепри анратаççĕ: хăçан пире чикаркка çавăрма вĕрентетĕн?

Шахвăртса-шахлатса илет те вăл, пуç тăрне пĕлĕт карса, хуравлать: хăвăр Чигоринпа çапăçма вĕренсен.

* * *

Иван Мучи илем каçне лекнĕ.

Илемпи: – Мĕншĕн сухалу çук-ши сан сăмсу айĕнче?

Иван Мучи: – Эс сухал ан шыра, сăмсине лайăххрах пăх.

* * *

Василий Иванчпа Анка тачанка çинче ярлаттарса пыраççĕ. Будайка çумĕпе Иван Мучи эхлетсе утать. Анка сиксе анать те Иван Мучине ыталаса чуптăвать. Ял халăхĕ умĕнче ват старикпе ытаклашса мана намăс кăтартатăн тесе Чапаев пулеметран шатăртаттарма тытăнать. Анка пулемет кĕпçине пĕç хушшине хупать те, ахлатсах йăлăнать: «Ваçкă, хăйне вĕлерсен те, тархасшăн сăмсине хăвар».

* * *

Иван Мучипе Ленин Республика лапамĕнче тĕл пулнă.

– Ывăнтăм эп, – тет Ленин.

– Мĕн туса? – тĕлĕнет Иван Мучи.

– Тăрса. Ларма та, выртма та пултараймастăп.

– Апла пулсан, пар-ха мана хăв вырăнна. Эп ларса та, выртса та йăлăхрăм.

* * *

Турă чăваш писателĕсене йĕркипе тăратса тухнă та, ыйтать:

– Иуда орденĕн кавалер-лауреачĕ ятне хăшне памалла?

– Пурин çинчен те çӳле çыраканнине, – курăнман хĕçĕпе касса алă пусать аслă мыскараçă.

* * *

Иван Мучие хирĕç кăлкан çӳçлĕ çыравçă тăклаттарса пырать, хул хушшине кĕсре хӳри хĕстернĕ.

– Хӳри айĕнчи лекмерĕ-им? – кулмасăрах ыйтать Иван Мучи.

– Усламçăсемпе улшуçсем çывăрнă вăхăтра юрать-ха хӳрине те пулин прихвостизацилесе юлтăм.

* * *

Иван Мучине Дума депутачĕ пулма кандидата тăратасшăн.

– Килĕшетĕр-и? – ыйтаççĕ суйлавçăсем.

– Килĕшмесĕр, ара, – хавасланса ӳкет вăл. – Дума вырăнне – дама пулсан.

* * *

Иван Мучи Чăваш университечĕ умĕнче шухăша кайса тăрать.

– Сире мĕнле звани кирлĕ? Сутса пĕтериччен люпуйне илсе юлма пултаратăр.

– Парас-илес выçлăхĕнче мана нимле звани те кирлĕ мар, званый обед çеç кирлĕ, – чăрлатакан хырăмне хытарать Иван Мучи.

* * *

Тепрехинче Иван Мучи, патăрьелсен ентешлĕхĕнче хăналанса хастарланнă май, Чăваш Ишек ачипе паллашать, унран хăюллăнах ыйтать:

– Эсир Лапшу Çтаппанне паллатăр-и?

– Леш, Куçма тăванне-и?

– Аха.

– Кăштах астăватăп. анчах хăйне курман. Пултран-сертепе тата вăрман аш-какайĕпе халăха тăрантарса Чăваш патшалăхĕнче çĕнĕ экономика çилтăвăлне çĕклекенни, тавар на тавар пасарĕнчи усламçă вĕт вăл? Чăн членччĕ-и вăл академире и членкоррччĕ?..

– Пурте кун чăнниех, хăй те чăнниех – тĕнчери чи чаплă та пултаруллă чăн-чăн сунарçă.

– Чăвашра сунарçăсен академийĕ çук-çке? Ют çĕршыв инчленĕ мар-и?

– Çук. Хамăрăннах. Вăл, темĕн те шутласа кăлараканскер, çара алăпа пĕр каçрах çĕр те икĕ куян, хĕрĕх-аллă тилĕ, пилĕк лав пăсара, пĕр кĕтӳ кашкăр, тепĕр ушкăн упа, çăка хăвăлĕнче ларсах арăслан, саккăр персех тулли кăрман пăчăр, карти-картипе кăвакал, хуркайăк, купи-купипе ăсан тытса чемпион пулнă.

– Акă вăл ăçта перекетлĕх, акă вăл ăçта стратеги! Хамăр çумри тĕнче тавра пăхма пĕлместпĕр. Гиннес кĕнекине кĕртменччĕ-и ăна?

– Çук. «Сунарçă халапĕсем» кĕнекене çеç кĕртнĕ.

– Ха, епле хастар чăваш! Ăслă пуçсем пире ăслăлăх керменĕнче кирлех. Чĕнес ăна хамăр пата. Хисеплĕ доктора ыранах илетпĕр. Шахмат чемпионĕпе Анатолий Карповпа пĕрле Степан Лапшин сунарçă-чемпион университет ятне тĕнче шайĕнче тата çӳлерех çĕклĕç.

* * *

Театр çурчĕ умĕнчи пĕр мăн юпине хулпуççи çине хурать те Иван Мучи, хуçа патне кĕрет.

– Бартерпа партера билет паратăр-и?

– Хавасах! – сиксе илет хуҫа. – Театра юсама миҫе ҫул ӗнтӗ укҫа кӗтеттӗмӗрччӗ-ха патшалӑхран.

* * *

Куҫма Чулкаҫ «Капкӑна» хашкаса пырса кӗнӗ те, редактортан чеен ыйтать:

– Вилӗмрен ҫӑлатӑн пуль, тусӑм? Атӑл шывне ӗҫсе ятӑм, мухмӑра сӳнтерейменрӗм. Мӗнпе чӗртмелле-ши?

– Типнӗ Атӑл тӗпӗнчи чула касса, – питне-куҫне кулӑ хумӗпе вылянтарса илет Иван Мучи. – Ҫапсан-ҫапсан хӗлхем кӑларӑн.

– Ах тур-тур, чул касма вӑй-хал ҫитмест. Чулкаҫран Чулкас туса та пулин гонорар лартса пар-ха.

Мухмӑр чӗртнӗ хушӑра вара вӗсем Атӑла пӗвелеме шутлаҫҫӗ. Тинӗс шывӗ пур «вилекене» те чӗртме ҫитет.



КӖЛПУК МУЧИ: – Тусӑмҫӑм, мӗн кӗрхи ҫанталӑкла ӑмӑрлантӑн? Чун юратнӑ Сарпикӳ ҫӗнӗ хӑлха ҫакки туянса янӑшӑн кулянатӑн-им?

ИВАН МУЧИ: – Сан, мӗн, шакла пуҫу ҫинче те, чӗрҫи ҫинче те савӑк майра ларать те, шарить тума сысна ҫури те пур та, куласси. Ман вара... хӑҫан хӑлха чикки туянасса кӗтсе ларасси ҫеҫ юлать.

# СЫЛТĂМ АЛЛИ – ИККĔМĔШ МĂЛАТУК

1985 çулхи аса килчĕ-ха. Ун чухне «Капкăн» менелник турĕ. Шупашкарти Пичет çурчĕн анлă пӳлĕмне чăваш кулăшçисемпе кулма юратакансем валли пукан юлман пирки хăшĕ-пĕри юнтарса та, юнаса та пăхрĕ. Анчах мĕн тăвăн, ун чухнехи саккунсăр саккун йĕркипе унта камăн-камăн саркаланса лармаллине бронза çулпуç çурăмĕ хыçĕнчи хăрушă çуртрах çирĕплетнĕччĕ те... КПСС обкомĕнче виçĕ кун сӳтсе явса та кандидатсене çав историлле списока кĕртме пĕр калама çук паллă та çав тери кирлĕ çынна пурпĕрех манса хăварнă. Кулăшçăсен улахĕн пуçĕ пулнă май, эпĕ çав йăнăша чи малтан туйса илтĕм.

Хĕрсе калаçнă вăхăтра пăхрăм та, шаках хытрăм. Ман вăхăтлăха пушаннă пукан çинче хам ĕмĕрте курман, анчах хамăн çур ĕмĕрĕм тăршшĕпе унпа калаçса-канашласа пурăннă мăн пуçлă чăваш лара парать: тĕрленĕ катанпир кĕпепе, хĕл варрине йăлкăштарса çитернĕ çурхи куллипе, никамран вăйлăрах шăрш туякан сăмсипе, рентген çутинчен те витĕртерех куракан çавра чее куçĕпе, локатортан вăйлăрах курăмлă хăлхипе, лазертан та çивĕчрех касакан чĕлхипе... Кам пулчĕ, тетĕр-и? «Çуралас ăрусемшĕн манми, Улшăнми кулăш енчĕк хуçи – Вăл Иллариус ывăлĕ Мами-Капкăнмейстер – Иван Мучи», – Хусанкайла каласан.

Акă кама манса хăварнă капкăнçăсен аслă улахне чĕнме Чăваш патшалăхĕн идеологи пуçлăхĕсем! «Капкăна» çуратакансенчен пĕрне – хăюллă та ăста, маттур кĕрешӳçе.

Кӳреннĕрен-ши, ывăннăран-ши, çăвар та уçмарĕ, шыв сыпнă пек ларчĕ вăл, куçа тепре мăчлаттарса илнĕ çĕре ман пукан пуш-пушăччĕ, хăлхана çеç таçтан çӳлтен хулăнрах уçă сасă çĕмĕрсе кĕчĕ: «Халăхран тухнă чăн-чăн кулăш ăстисене хăвăртан ан уйăрăр, унсăрăн çылăх пулать!» Иван Мучин асăрхаттарăвĕ пулчĕ пулас ку.

Улах шавĕпе-савăклăхĕпе эпĕ ун пирки çийĕнчех никама та калама ĕлкĕреймерĕм. Çапах халĕ те пулин чăваш халăхне пĕлтерес терĕм. Тĕрĕсмарлăхпа кĕрешсе нихçан ывăнман ăслă-пуçлă чăваш хайлавçисене аса илсе пурăннă вăхăтра Иван Мучин сылтăм аллине те алă патăм. Вăл ĕнтĕ, Аслă капкăнçă каларăшле, «Шăпчăк-Папай – йыт çимен какай» пулчĕ. Çĕпритун Шăпчăка, ывăнма пĕлмен çыравçа, Чăваш кулăш лаççинче Иван Мучи хыççăн иккĕмĕш мăлатука çапса пыракан тенĕ.

Çаплах пуль çав, халăхра çунатлă сăмах ахалех çуралмасть. Халăхра ырă ят та ахальтен юлмасть. Çитес раштавра тăхăрвун саккăр тултаракан вилĕмсĕр кулăшçă хăйĕн ĕçтешĕпе Иван Мучипе пĕрле

халĕ те халăх асĕнчех, халăх ăсĕнчех. Шăпчăкĕ çуралнă тăван кĕтесĕнче уйрă-мах ятлă-хисеплĕ.

Чăвашьенĕн варринерех, сип-симĕс вăрманлă, пуян уйлă илем кĕтесĕ пур. Çак паллă Вăрнар тăрăхĕнче, Санарпа Сунар юханшывĕсем хушшинче сарăлса ларакан Çĕрпелте çуралнă вăл Çĕпритун Шăпчăк – Спиридон Павлович Толмасов. Пирĕн Хурăнсур Çармăс ялĕ Çĕрпелпе чавсапа чавса тĕкĕннĕ пек çывăх ларать. Çавăнпа эпĕ те унăн, паллă çыравçăн пурнăçĕ пирки кăштах пĕлетĕп. Ашшĕнчен



Çĕпритун Шăпчăк

сăмса шывлех тăлăххăн тăрса юлнăскерне, кукашшĕ патĕнче пурăнакан шĕвĕрккене, Павел Федорович Толмасов хресчен усрава илсе ӳстернĕ. Çĕпритун вара çак ырă çыннăн хушамачĕпе ятне те йышăннă – Павлович пулса кайнă, хăйĕн ашшĕн ятне-шывне астумасăрах. Ялти пуçламăш шкулта, кӳршĕри Иртеменкассинчи икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Çарта фельдшер пулнă. Салтакран таврăнсан чухăнсен комитетне ертсе пынă. Етĕрне районĕнчи Янасалти пуçламăш шкулта, Уравăшра вулăс çутĕç пайĕн пуçлăхĕнче, Нурăсри ача çуртĕнче ĕçленĕ. Ленинградра В. Воровский ячĕпе хисепленекен журналистика институтĕнче вĕреннĕ. Чăвашсен «Канаш» (паянхи «Хыпар») хаçатĕнче пултарулăхне туптанă. Çавăнта ĕнтĕ Илларионов-Мучин чăваш кулăшçисен хĕрӳ çемйине кĕрсе кайнă. «Капкăн» «Канаш» çумĕнче тухма пуçланă-çке. Сăвă-калав, фельетон-кулăш нумай çырнă Спиридон Павлович. 1934 çулта ăна, чăваш çыравçисен ушкăнĕпе пĕрле, СССР писателĕсен тинтерехех çуралнă Союзне илнĕ.

Хĕрлĕ Чутай райхаçатĕнче ĕçленĕ чухне ăна, суя айăппа партирен, редактортан кăларнă, инçе çĕре хĕсĕрлесе янă. Çапла 1937 çултан пуçласа 1947 çулччен вăл чиглĕх шăтăкĕнчен пăхса пурăннă. Ăна çырма та, пичетлеме те чарнă. «Сталин çăтмахĕнчен» аран-аран сĕтĕрĕнсе çитсен те писателе çыру урлă халăхпа калаçма Чăвашьенче никам та ирĕк паман. Хăйĕн хайлавĕсене ют ятпа та ярса пăхнă вăл редакцисене, анчах та унăн стильне тата чĕлхине пĕлекен «çывăх юлташĕсем» хура самана хуралĕнче çав тери çирĕп тăнă, кулăш ăстине литература картишĕ çывăхне те яман. Унăн çĕнĕ хайлавĕсене Çĕрпел колхозĕнче кăларакан стена хаçатĕнче кăна вулама май пулнă тата вĕсем хăй халăх хушшинче каласа-куласа паннпе таврана саланнă. Çĕрпелте кăна мар, Хирпуçĕнче кăларакан стена хаçатĕнче те вуланă эпĕ унăн

йěплě сăввисемпе кулăшěсене. Нимле тухтăр чěртме пултарайман хăрушă чиртен – пичетлеме ирěк памасăр асаплантарнă чиртен – Çěпритун Шăпчăк виличчен те чěрěлеймерě.

Ывăлě, Анатолий Спиридонович, пропагандист, çыравçă, редактор, учитель, ăслă-тăнлă чăваш, тěл пулсан, ялан çапла калатчě: «Аттен кěнекине кăлармасăр пурпěр вилместěп». Çук, пурнăçлаймарě вăл ашшěн, хăйěн ěмěтне – вуншар çул тапăçса та хулăн стенана шăтараймарě, тӳнтереймерě, хăй те чăвашсенчен аякра сарăмсăр вилсе кайрě. Çур ěмěр нуша тӳснě хыççăн тин Çěпритун Шăпчăк «Капкăн библиотекинче» куçне уçрě. Унăн çырнисен пěчěк пуххине виçěмçул «Капкăн» редакцийě, Вăрнар район администрацийě, «Янгорчино» колхоз пулăшнипе тата Петěр Ялгир сăвăçпа Чăваш Республики культурин тава тивěçлě ěçченě Иван Иванов тăрăшнипе Вăрнар типографийěнче пичетлесе кăларчěç. Чăваш кěнеке издательствинче ěçлекенсем Шăпчăкăн саралса кайнă хайлавěсене (пичете П. Ялгир хатěрленě) хăйсем патěнчен çăмăллăнах сирсе янă. Эх, айăпсăр çынна ěмěрěпе нушалантаракансене «Капкăна» хěстерсе сиктересчě те çав... Капкăнçăн халě хăйěн чěрě шăлě çук.

Шăпчăк утмăла та çитеймерě, 1954 çултах çěре кěчě. Унчченвăл тăван ялěнчен виçě çухрăмри Хирпуçне, ěçе çӳретчě. Мăшăрě Елизавета Ивановна Толмасова та унта санитаркăра ěçлесе. Çивěч чěлхеллě, шӳте, хăй те шӳтлеме юратакан çынна таврари халăх хисепленě. Хирпуçсемшěн те вăл тăван ял çынни пекех пулнă. Фельдшер ял çыннисене сипленě, культурăна аталантарма пулăшнă. Инкек куçа курăнса килмест çав. Вăрттăн чир сиплевçе хăйне те персе хěстерет. Ку вăл 1954 çулхи чӳк уйăхěн вěçěнче пулнă. Хирпуçсем хыпăнса, пăлханса ӳкеççě. Хальхи пек автомашина тавраш нумай çук. Пушар хуралěнче ěçлекен Хěветěр Дмитриева хăвăртрах лаша кӳлтереççě те... Ямшăк лашана Уравăш еннелле хăвалать. Унта – пульница, çăлăнăç. Çук çав, икě ял хушшинчи Вилнě çын çырмине çитсен, Спиридон Павлович Хěветěр аллинчех куçне ěмěрлěхех хупать. Кěреш пек мăнттай, хěрӳ чăвашăн чěри чăтайман. Тěлěнмелле вырăнта çут тěнчерен уйрăлмалла пулнă унăн.

Хурăнсур Çармăсра халě унăн хěрě Мария-Марсельеза Спиридоновна, ачасене вěрентсе пенсие тухнă кăмăллă хěрарăм пурăнать, ашшě çинчен вăл яланах ыррине кăна асăнать.

Çěрпел масарěнче чăваш кулăшçин вилтăприйě. Спиридон Павлович пурăннă урама ун ятне панă, вěреннě шкул çурчě çине Асăну хăми çакнă. 1999 çулта пире те чěннěччě ăна уçма. Виталий Енěшпе, Петěр Ялгирпе авăн уйăхěн 1-мěшěнче пултăмăр унта. Эпě те тăван

яла килес умĕн хула çумĕнчи дачăра каçпа çырса пăрахнă çак кĕске хайлавсене вуласа патăм ун чухне.

Çĕпритун Шăпчăк пурнăçĕнче пулнă-ши е пулман вĕсем, анчах манăн вăл кулăшсене пулнă пекех каласа кăтартса халăха ĕнентерес килчĕ. Иван Мучи чăваш кулăшçисен улахĕнче 1985 çулхи нарăсра аса илтернĕ майлах, халăхран тухнă чăн-чăн кулăш ăстине Шăпчăк-Папая хамăртан уйăрар мар.

## ШĂПЧĂК-ПАПАЙ ПУРНĂÇĔНЧЕН

* * *

– Çĕпритун Павăлч, эсĕ мĕншĕн хушма ят тупнă?

– Шăпчăк юррине халăхра вĕçĕмсĕр янраттарма.

* * *

– Халĕ те çăпата сырса тĕнчене ан култар-ха, Çĕпритун Павăлч!

– Чăваш çăпата сырма пăрахсан, кўршĕм, тĕнче те пĕтет, – кантрине хытăрах туртса çыхнă май хуравлать Шăпчăк.

* * *

– Шăпчăк-Папай, чăваш писателĕсем пурте «Капкăн» çырăнаççĕ-и?

– Çук, хăшĕсем «Капкăн» çумне сырăнаççĕ çеç.

* * *

– Шăпчăк, эс «Капкăнра» ĕçленине кам пĕлет?

– Иван Мучипе туслă икĕ мĕльюн чăваш.

* * *

– Çĕпритун Павăлч, эсĕ пуппа хăçан туслашнă?

– Турă юнĕпе çăваннă хыççăн.

* * *

Тĕрмерен таврăнакан Çĕпритун Шăпчăка тусĕсем сырса илнĕ. Вăл, савăнăçне ниçта хума пĕлеймесĕр, кĕпи тўмисене вĕçертсе ярать те, ырханланнă кĕлеткине çĕклентерсе çўлелле уфф! вĕрет.

– Куртăр-и?

– Мĕн? Мĕн пулчĕ сана, хаклă тусăмăр? – тĕлĕнеççĕ ентешĕсем.

– Çĕрпел çăлтăрне вĕçтерсе ятăм, – хĕвел пек çиçет Çĕпритун. – çак чиркӳ лаптăкĕнчен уйрăлнă чухне ăша хывнă ял çăлтăрне эпĕ сӳнтермерĕм, темле хĕн-асапра та ун çутине сыхласа хăвартăм. Халĕ, читлĕхрен ирĕке тухнă хыççăн, ăна каллех хăй вырăнне çакасшăн. Вĕç, Çĕрпел çăлтăрĕ! Çутат пире!

– Чăнах та! – тӳпенелле йăлкăшса улăхакан çап-çутă çăмхана асăрханă пекех куçпа выляççĕ тусĕсем. – Вĕç, Шăпчăк çăлтăрĕ! Çутат пире! Çутат пирĕн ял-йыша! Çутат пирĕн чăваш халăхне!

* * *

– Çĕпритун Павăлч, эс хаçата кутăн тытнă-çке, мĕнле вулан?

– Пуçăн тытсан, пуç çаврăнать. Кашни йĕркерех хура пуçлă, хура мăйăхлă пуçлăх ячĕ куçа хуратса ярать те...

* * *

– Çĕпритун Павăлч сăнчăртан хăтăлнă хыççăн Шупашкарта пĕр писательпе тĕл пулать.

ПИСАТЕЛЬ: – Итле-ха эсĕ, Шăпчăк-Папай – йыт çимен какай, пичетленмесĕр мĕнпе тăранса пурăнатăн?

ШĂПЧĂК: – «Фосфорит» çăнăхĕпе.

* * *

– Хисеплĕ Çĕпритун Павăлч, сирĕн пурнăç тĕллевĕ мĕнлерех-ши? – ыйтаççĕ çамрăксем.

– Вăтăр çиччĕмĕш çулта хама айăпсăр хуптарнă çынçиенĕн вилтăпри çине «пĕтĕм халăхсен çулпуçĕн» çĕр чăтайми палăкне аçтаха сăнарлă туса лартасси.

* * *

Сталин вилнĕ хыççăн Шăпчăк мекĕрленсе тем йăтса пырать. Ăна хирĕç хăйсен кӳрши утать.

– Мĕн тултартăн ку мăйăха?

– Хура мăйăхлă çулпуç пуçне.

– Ăçта тупрăн?

– Тислĕк купи çинче.

– Ăçта илсе каян?

– Масар çине.

– Мĕн тума?

– Хам леш тĕнчене кайиччен те пулин ун нушинчен хăтăлас.

– Масара вараламастăн-и?

– Чăн та, тавтапуç ыр сĕнӳшĕн, – тесе Шăпчăк çулпуçăн чул пуçне юпа çумне шанлаттарса ватать.

* * *

Шăпчăк тухтăр шăнчăкла шăхăркаласа Хирпуçĕнчи фельдшер пунктĕнчен киле таврăнать. Пăхать, тусанлă çул çинче хитрелетнĕ хутпа хырăмне туртса çыхнă кĕленче çуталса выртать.

– Вилетĕп! – ахлатать кĕленче.

– Мĕн чĕмери тытрĕ? – пĕшкĕнсе чеен ыйтать Çĕпритун.

– Атăл шывне хырăма персе чикрĕç те ещĕке лартса ячĕç. Ямшăкăн лаши хуйса кайнине пула çакăнта çавăрса çапса хăварчĕç. Вырт халь йăваланса. Çăл-ха, тархасшăн, ырă çыннăм? Пĕлĕте çити вĕçтерсе савăнтарăп.

Шăпчăк тухтăр сумккинчен скальпель кăларса кĕленче пăккине меллĕн уçать те, пĕчĕк хырăмри хаяр шĕвеке мăн хырăма васкасах куçарать, кĕленчене ял лавккине çитерсе парать.

– Тавтапуç мана вилĕмрен çăлнăшăн, – шăнкăртатса илет кĕленче. – Виличченех туслă пурнар.

– Тепре тĕл пуличчен! – иванмучилле тулли кăмăллăн алă сулать Шăпчăк.

* * *

Çĕпритун Павăлча ял çынни «Беломор-канал» пирус сĕнет.

– Туртса ярăр?

– Çук, – пуçне пăркалать вăл.

– Мĕншĕн тата?

– «Беломор-канал» тути-масине эпĕ çав аслă стройкăри лагерьтех ĕмĕрлĕхе активсе курнă.

* * *

Утă капана хывайман, ыраш пулса çитнĕ. Колхоз хуçи Сергеев хыпăнса ӳкнĕ. Библиотекăна каякан Шăпчăк ăна хирĕç пулать.

– Çĕпритун Павăлч, ыран Питрав. Таврари халăх яла тулать. Ĕçкĕ-çикĕ эрнинче утă та çĕрсе-юхăнса кайĕ, тырă та тăкăнма пуçлĕ. Мĕн тумалла-ши?

– Алăпа мар, пуçпа ĕçлемелле, Ксенофонт Иванович, – ăс парать Шăпчăк. – Вун ик кăшăллă пичкесене уя кăларар. Хăна-вĕрлене тулли куркапа пĕрле çурла, мăн кашăкпа пĕрле çава тыттарар.

Ыраша юрла-юрла вырса пĕтереççĕ, утта ташла-ташла капана хываççĕ çĕрпелсем – хăнасем пулăшнипе.

* * *

Раççей талккăшĕпе çĕр чĕтреннине илтсе вăраннă Шăпчăк юптаруçă леш тĕнчерен персе аннă та, Чăрăш Хуппи патшапа тĕл пулнă.

– Борис Николаевич, мĕншĕн эсир япунсене Курил утравĕсемшĕн вăрçтаратăр?

– Дорогой Спиридон Павлович, вы должны знать, тĕнчере кĕрсе тухман шăтăк хăварман ваш Ялгир пулман-ха унта, панимайте. Петр Алексеевич Шикотан утравне кайса япунсене чăмăрла улма çитерсе килсен, мирлĕ килĕшӳ тума та тытăнма юрать. А халĕ манăн вăхăт çук, во по горло занят. Кашни кун репетици. «Хуняма» юрра вĕренетпĕр. Иришка Хакамада куспушапа тата Петр Ялгир артистпа Японире концерт кăтартасшăн. Вот такая загогулина, панимайте.

1995 ç.



## «КАПКĂНПА»
## ИВАН МУЧИ МЕНЕЛНИКĔ

кăçал, 1995 çулхи авăн уйăхĕнче, Турă çырнă пекех, пĕр килчĕ. Чăваш халăхне вар тытса култаракан, кар тăрса пулăшакан кăтăклă-сăнăллă журнал тĕнчене янратмалла çитмĕл шаккарĕ те, кула-кула çимĕк мунчи хутса ячĕ. Мунчине пултараканĕ-тутлантараканĕ Иван Мучи, кĕр сăрине çĕр алтăр ĕçсе янă хыççăн. Утикассинчен Шупашкара тухса тăклаттарчĕ. Вăл чăваш писателĕсемпе Ехрем хуçа керменĕнче ытаклашса яшланчĕ те, хăйне пуç тӳпинчен ура тупанĕ таран сӳтсе явакан «туктăр-тухтăрсемпе» ăс пухсах çитерейммен пĕлӳçĕсене вĕри лапка çинче çулçăсăр милĕк тутангарса пăхрĕ. Мăшкăл мар-и ара? Çитмĕлти «Капкăнпа» çĕр çулхи Мучине ку таранччен те тĕплĕн тĕрĕслесе пăхман-ха та вĕсем. Нивушлĕ «Сикекен пăрçапа» вăрттăн юн ĕмекен «Хăнкăлана» хирĕç «тухтăрсен»-тĕпчевçĕсен мар, «Капкăнпа» Иван Мучин ĕмĕр-ĕмĕр кĕрешмелле? Куманитари ака тĕмĕсем шăтса салат пулнă пулас – кĕреке юрри илтĕнет.

«Капкăнпа» Иван Мучи, Иван Мучипе «Капкăн» çапла пĕр варлăн, пĕр халлăн утаççĕ Чăваш тĕнчинче хастаррăн.

18.10.1995 ç.

## КУЛА-КУЛА, САВĂНСА

Пĕррехинче Çĕрпелте хуçалăх пуçлăхне шыраса правление çитрĕм. «Янгорчино» колхоз председателĕ Василий Игнатьевич Романов хама яланах хирĕç тухса кĕтсе илни, кăмăллă куллипе, ăшă куçĕпе чуна уçса яни, хĕрӳ те ăслă-тăнлă калаçăвĕпе чĕрене хĕмлентерни аса килчĕ. Чи начар пурăнакан тăлăх вагă хĕрарăмсене çĕнĕ пӳрт лартса парас ыйтуран пуçласа литературăпа искусство çынна мĕнле илем-ăнтăлу хăвачĕ хушма пултарни таранах калаçса-ĕмĕтленсе хавхаланатчĕ вăл. Çамрăклăхăн чи хĕрӳ вăхăтĕнче пысăк хуçалăх лавне туртса пыма хăнăхнăскер, Василий Игнатьевич ялхуçалăх, культура аталанăвĕнче хăйне евĕр ĕмĕрлĕх паттăрла ĕç турĕ. Пурнăç-кĕрешӳ картлашкипе тата çӳлерех улăхнă май, вăл йывăр лав ямшăкĕн тилхепине хăйĕн вĕрентекенне, Георгий Ильич Андреева, шанчăклăн тыттарчĕ. Вĕрентекенĕн ĕçĕсене-ĕмĕчĕсене малалла çирĕппĕн пурнăçласа, çĕнетсе пычĕ хĕрӳллĕ çамрăк. Çĕрпел, «Янгорчино» ячĕ, ял çыннисен хастарлăхĕпе-çитĕнĕвĕпе, чăваш ӳнерçисен сăнарлă вăй хумĕпе, анлă çĕршыв çийĕн мухтавлăн сарăлчĕ.

* * *

Вăхăт пурне те улăштарать, ваттисем кил-çемье канлĕхне куçаççĕ, çамрăксем хастарланса хĕрӳ ĕçе кӳлĕнеççĕ. Ашшĕ сиссе те юлаймарĕ пулас хăй темиçе çул каялла ларнă вырăна ывăлĕ йышăннине. Хăйне шаннă пекех шаннă иккен ял çыннисем унăн ачине те. Геннадий Васильевич халăх шанăçне мĕнле тӳрре кăларнине ашшĕпе амăшĕ тимлĕн сăнаççĕ. Эпĕ те «Янгорчино» ялхуçалăх предприятийĕ çак йывăр саманара та епле çирĕп утăмсемпе малалла кайса пынине хĕпĕртесе сăнаса тăратăп. Чăвашăн анлă кĕр сăри кĕрекинче ялхуçалăх тата апат-çимĕç министерстви çĕрпелсене çулсерен трактор е укçан преми парса чысланинченех курăнать вĕсен çитĕнĕвĕ. Аплатăк, çамрăк Романовĕ те ваттинчен кая мар кĕрлеттерет, хăш-пĕр енĕпе, тен, иртсе те каять пуль. Ашшĕсен çулĕпе патваррăн утакансем пур Çĕрпелте.

Правленин капмар çуртне Георгий Ильич Андреев тутарнăччĕ. Ял администрацийĕ те, унччен ял Совечĕ текенскер, унтах вырнаçнă. Почта уйрăмĕ пур. Унтах лавкка та ĕçлет.

Иккĕмĕш хута хăпарсан, председатель пӳлĕмĕнче Геннадий Васильч га мана ашшĕ пекех кăмăллăн кулса кĕтсе илекенччĕ. Хальхинче йышăну пӳлĕмĕнче кĕтсе ларма тиврĕ. Шалта лару пырать иккен. Самаях чăтмалла пулчĕ. Кĕтнĕ вăхăтра мана хĕрӳ калаçу хушшинче хаваслă кулă сасси янăра-янăра кайни тĕлĕнтерчĕ. Темле кулăш лартса параççĕ е кураççĕ тейĕн.

– Çапла татса паратпăр эпир ыйтусене, кула-кула, савăнса, – ăшшăн йăлкăшса йышăнчĕ мана Романов лару хыççăн. – Нихçан та пĕр-пĕринпе хирĕлсе, пĕр-пĕрне тарăхтарса-çиллентерсе лармастпăр. Чуна уçса калаçатпăр-тавлашатпăр, кулкаласах ирттерсе яратпăр капланса килнĕ çилле те.

Кулăш– ĕçре пулăш, тени пурнăçра тахçанах вăй илнĕ çав. Ăçта кулă – унта хаваслăх, уçă кăмăл-туйăм, хĕрӳ ĕç, çĕнтерӳ. Ĕлĕкренпех пуян-çке Çĕрпел тăрăхĕ кулăшçăсемпе. Паллă капкăнçă Çĕпритун Шăпчăк хăех мĕне тăрать! Çивĕч сăмах маçтăрĕ, кулăш ăсти Константин Николаевич Баюков тата!.. Куçкăн йĕплĕ-сиплĕ шăлĕ хушшине лекмен çын çуралман пуль-ха Çĕрпелте.

Вĕсен кулăш хумĕ çинче манăн га сиккелесе илме тивет хушăран. Кулăш киммипе ишнĕ май, нумай-нумай çулçӳреврен пĕри аса килчĕ. Чăваш халăхне вар тытса култаракан, кар тăрса пулăшакан катăклăсăнăллă «Капкăнпа» унăн çыннисем, тусĕсем-вулаканĕсем пирки пырать-ха кунта калаçу. Капкăнпа ман хамăн та алла-аллăн тытăнса ултă çул пĕрле Чăвашстанра кастарса çӳреме тӳр килнĕччĕ. Ун чухне

тута хěрринче хěвел кулличчě, алăра çивěç сăнăччě, пуçра сăнарлăх кăшăлěччě. Çавăн чухне çуралнă хайлавпа, пуçласа кун куракан-скерпе, паллаштарасшăн эпě. Хăй вăхăтěнче вăл «Капкăнра» тухай-манччě, халě ун валли те симěс çул уçăлчě.

## ХĂНАРА

Çурхи тěнче вăраннă чух кун курнă Капкăна чăваш халăхě çав тери юратнă. Пур çěрте те хаклă хăналла кěтсе илнě ăна. Měншěн тесен вăл çěнě пурнăç тума чăрмантаракансене вирлěн хěстернě, ыр-рине курсан – каçса кайса мухтанă.

Капкăнпа эпě тахçанах паллашнă. Юлашки çулсенче вара унпа тăван пекех çывăхланма тиврě. Юрататпăр пěрле тухса çÿреме район-сене. Хальхинче те, акă, «Атăл» ятлă хура урхамах çине утланса лартăмăр та, Вăрнар еннелле вěçтертěмěр. Çулра калаçу пуçланчě. Ватăсем яланах ěлěкхине аса илме юратаççě те, Капкăн та...– Атте-анне манăн «Канаш» ятлăччě, – терě Капкăн. – Чăваш хаçачěн пепки ěнтě эпě, урăхла каласан. «Чăпăл тунă» чухне мана Шупашкар çывă-хěнчи Утикасси шăлйěренне Лариван Йăванне тыттарчěç те, ырă кун-çул сунчěç, ăслă канаш пачěç. Куматте питě ăш кăмăллăскер, ěçченс-кер пулчě. Атте ыраннe – ачашласах, юратсах пăхса ÿстерчě. Çамрăк пулин те ăна юратнипе Йăван Мучи тетчěç. Хăй пекех шăллă, хăюллă тусěсем пухăнчěç ун тавра. Вěсем хушшинче Çěрпелти Çěпритун Шăпчăк та пурччě. Кулаксене, вăрăсене, кахалсене хыт питленě чух-не вăл Папай тесе алă пусатчě.

Çав Шăпчăк-Папай Капкăна колхозсем пуçланнă çулсенче Çěрпеле хăнана чěннě-měн. Кěçех вěсем чиркÿ чанěсен сассиллě пысăк яла çитсе кěнě. Улăм çěлěк тăхăннă пÿртсемпе хуралтăсем, вěрлěк-шěтěрнек картасем çуммипе вěсем анаталла утнă. Шăпчăк Капкăна хура пÿрте илсе кěнě те Толмасов хушаматлă хресченпе паллаштарнă. Тăлăха юлнă Çěпритуна çав ырă çын пăхса çитěн-тернě-měн, хушаматне те хăйěннех панă. Çиме çăкăр çитменнипе Павăл Çěпритунě кулаксем патěнче тарçăра тертленнě. Кěç Толма-совсем патне пěр çын çитнě. Çийне сăхман тăхăннă, пуçне сурăх тирěнчен çěлетнě мулахай лартнă, урине çăпата сырнă çамрăк хăна-сене уя чěннě. Ку колхоз председателě Илья Андреевич Андреев пулнă. Эртеллешсе пěрлешнě çěнě хуçалăха районтан хурçă ут килнě-měн. Урапаллă трактор виçě каслă плугпа çěр сухаланине ял çыннисемпе пěрле Капкăн та сăнама васканă. Халиччен илтмен

аслатиллĕ кĕрлев сассипе пачăшкă уялла кĕшĕлтетекен çынсене каялла кĕме чĕннĕ. Хурçă ут хăвачĕ унран та асамлăрах пулнă çав, пачăшкă еннелле çаврăнакан тупăнман. Тĕлĕнтермĕш вăй çĕре тарăн сухаланине çĕрпелсем çăвара карсах сăнанă. Çӳлти Турă атте мар, колхоз кăна хăйсене телей пама пултарнине куçпа курса ăнланнă. Ку хуçалăх унччен темиçе те саланнă-мĕн. Халăха пупĕ те пăтратма пулăшнă иккен. Капкăнăн çавăнпа чиркӳ сыннисене хĕстерес, ял активисчĕсене пулăшас килнĕ.

Хуçалăх пуçлăхĕ Капкăна йывăрлăхсем пирки каласа панă, унран пулăшма ыйтнă. Кайран вăл хăнана кăмака улмипе уйран çитернĕ. «Мăнкунра начар хăналанăшăн каçар пире, Капкăн тус. Паян эпир çĕнĕ пурнăç йĕрне хывма пуçларăмăр, кĕçех пирĕн ачасем ун тăрăх анлă çул çине тухĕç, ун чух пирĕн те тулăх пурнăç пулĕ. Вăт вара тепре килсе курăр» – çак сăмахсемпе ăшшăн ăсатнă Капкăна председатель.

– Унтанпа ĕнтĕ шыв-шур нумай юхрĕ, çулсем вĕлтлетсе иртрĕç. Манăн кум атте Йăван Йăванăч Илларионов-Мучи тата Çĕпритун Павăлч Толмасов-Шăпчăк тусăм тахçанах «канлĕ ыйхăра». Эпĕ те акă утмăла çитрĕм. Сарă хĕвел çур кунне палăртса йăлкăшнă кунсенче шăпах аса килчĕ хайхи Çĕрпел ачи хăнана чĕнни. Ма каяс мар, каяс чĕннĕ çĕре, курас вĕсен тулăх пурнăçне, – хавасланса пычĕ Капкăн.

Тахçан вĕсем çĕр çухрăмри Çĕрпеле икĕ талăк çурă утнă пулсан, эпир халĕ унта «Атăлпа» сехетре чарласа çитрĕмĕр.

– Çулне пăтраштартăн пуль эсĕ, – ямшăк енне шанчăксăррăн пăхса илчĕ Капкăн. – Çĕрпел вăл – ялччĕ-çке, ку вара – хула майлăскер.

– Тĕрĕс çулпах, асфальтлă çулпах илсе килтĕм, – ăнлантарчĕ ямшăк. – Авă, вулăр: «Вăрнар районĕнчи «Янгорчино» колхоз. Ырă сунса кĕтсе илетпĕр», – тесе çырнă пуç тăрринче.

Ленин палăкĕ лартнă тӳремре Капкăн çаврăна-çаврăна тĕлĕнчĕ. Хăй Шăпчăкпа хăнара пулнă чухнехи çурт-йĕр тавраш̆ĕ те юлман. Чиркӳ вырăнĕнче – вăтам шкул. Унпа юнашар культура керменĕ сарăлса ларать. Хăтлă магазин, ача сачĕ, фельдшер пункчĕ, аптека, пекарня тунă. Сылтăм енче – тепĕр икĕ хутлă çурт. Унта колхоз правленийĕ, ял Совечĕ, обществăлла организацисем вырнаçнă-мĕн. Çав çурт алăкĕнчен тухнă арçын пирĕн паталла вашкăртса утрĕ. «Нивушлĕ Илья Андреевич ку? – хăй куçне хăй ĕненмест Капкăн. – Чăнах çавă. Сăнĕпуçĕ те, кĕлетки те, утти те çавăннах. Тумĕ çеç ĕлĕкхи мар, хальхи – шукăльтерехххи»,

– Андреев, Георгий Ильич, – çирĕппĕн алă пачĕ хайхискер. – Эпĕ председатель пулатăп. Аптрамалла, пурте йĕркеллех пекчĕ-çке, мĕн амакĕ тупăннă тата Капкăн юлташ валли пирĕн хуçалăхра?..

– Ятлама мар-ха, ĕçчен çынсемпе тĕл пулма килтĕм, – терĕ Капкăн. – Сирĕн колхоз хуçи пулнă Илья Андреевич тахçан, вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче, пире хăнана тепĕр хут чĕннĕччĕ. Хăй халь темле, те пурăнать ĕнтĕ... Тем, эсир унăн ывăлĕ мар пуль те? Каснă-лартнă çавăн пек те.

– Çавăн ачи пулатăп-ха. Атте пурăнать. Халь те хуçах, тульккӑш – кил хуçи. Сире асăнать, хăçантанпа кĕтет, – йăлл кулчĕ председатель Вăрнартан Çĕрпеле çӳрекен автобуса çул парса. – Тӳрĕрен мар, çавра çулпа илсе каяс-ха сире. Çавра çӳрен çу хыпнă, тет.

Ывăлĕ те ашшĕнех хывнă иккен: чĕлхи-çăварĕпе те, ĕçĕ-хĕлĕпе те. Пуян хуçалăхра пур çĕрте те тăнлă-пуçлă, çирĕп хуçа алли сисĕнет. Ашшĕ колхоз хуçи пулнă çулсенче выльăх-чĕрлĕхĕ пĕр витене шăнăçнă пулсан, халĕ... Тăрăхла мăн витесенче – пин ытла ĕне выльăх, икĕ пин сысна, çичçĕр сурăх. Çулталăкра кашни ĕнерен виçĕ пин килограмм сĕт сăваççĕ, кашни сысна аминчен çирĕмшер çура, кашни çĕр сурăхран çĕр çирĕмшер путек илеççĕ. Патшалăха ялхуçалăх продукчĕсем сутмалли çулталăкри плансене пур енĕпе те ирттерсе тултарнă. Аслă Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне аш-какайпа сĕт сутмалли пилĕкçуллăх заданийĕсене пурнăçлассишĕн хĕрӳ кĕрешӳ пырать. Ĕлĕкрех пĕр трактор яла тĕлĕнтерсе савăнтарнă пулсан, механизациленĕ паркра халĕ мĕн тĕрлĕ техника çук пулĕ. Хастар механизаторсем – çураки умĕнхи тĕрĕслӳре. Кăçал та вĕсем, ушкăн подрячĕпе ĕçлесе, хĕрĕх центнер тĕштырă, виççĕр аллă центнер çĕрулми туса илме ĕмĕтленеççĕ. Ĕмĕчĕсем вĕсен çуллен пурнăçланса пыраççĕ.

– Кĕмĕркке пек кăмака уммипе те шĕв уйрапа хăналанине манман-и? – шӳтлесе ыйтрĕ килĕнче ватă Андреевĕ. – Хаклă хăнасене активтерсе пăхмалăх та çăкăр чĕлли çукчĕ ун чух. – Кĕçех Илья Андреевич пирĕн ума апат-çимĕç лартрĕ. Тулăх апатран юман сĕтел авăнать.

– Вăт епле улшăнчĕ пурнăç, – малалла юхтарчĕ сăмахне мучи. – Тавтапуçах ывлăмсене-ачасене вĕренсе эпир уçнă йĕртен анлă çул тума пултарнăшăн. Мир хĕвелĕ йăлкăштăрччĕ çеç пуç тӳпинче.

Каçхине Капкăн культура керменĕнче концерт пăхрĕ. Çĕрпел шăпчăкĕсем тулăх пурнăç юррине шăрантараççĕ.

Тепĕр кунне кăмăллăн ăсатса ячĕç Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ колхоз ĕçченĕсем Капкăна. Вăл та вĕсене хаваспах хăйĕн менелникне чĕнчĕ.

– Пурте пырăр, ĕçченсем, хăнана! Хисеплетĕп эпĕ сирĕн пек çынсене, – ăшшăн алă сулчĕ Капкăн çĕрпелсемпе уйрăлнă чух.

Капкăнпа пĕрле эпĕ, Владимир Кузьмин, çӳренĕ.
1985 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕ.

* * *

Кулмасăр пурăнмасть ял. Хĕвеле хирĕç пăхса йăлл кулать те ял халăхĕ пуçа чиксе кĕркуннеччен мекĕрленет, суракан пилĕкне тытса тӳрленет те, пĕлĕте çити капланнă умри тырă, çĕрулми, пахча çимĕç куписем çине пăхса савăнать. Эртеллешнĕ мăн хуçалăхăн хырăмĕ те тутă, çурăмĕ те ăшă,

Çитмĕл çул каялла çăпатапа, сăхманпа тăвалла вашкăртса пыракан Илья Андреевич ватăлса ял-йышран уйрăлнă ĕнтĕ, леш тĕнчене улăхса капкăнçăсене алă пачĕ пуль, унăн ывăлĕ Георгий Ильич та председательте ĕçлемест, колхоз тилхепине урăх матура тыттарчĕ, анчах ашшĕпе ывăлĕн ырăлăхĕ вара ял халăхĕнчех, тăван Вăрнар районĕн, Чăваш Республикин хăватĕнчех. Яланлăхах. Çĕрпелсемпе тукайсен «Янгорчино» хуçалăхĕн çитмĕл çулхи аслă менелникĕнче вĕсене те ятран, мухтав сăмахĕпе асăнчĕç. Хĕвелĕн ăшă кулли те вĕсемне пĕрле ял-йыша уяв кăмăлĕ парнелерĕ.

2000 çулхи çу уйăхĕ.

## АХ, КĔРЕС КИЛЕТ ПУЛАС «ИВАН МУЧИН АВАН МУНЧИНЕ!»

«Вучах» чĕртнĕ, «Илем» хăй çумне туртнă туйăм мĕншĕн-ши уйрăлмасть пирĕнтен, «Хуранра» пиçсен те, лапка çинче вĕлтĕренпе, çулçăсăр милĕкпе çапăнсан та, пурпĕрех кулăш лаççинчен тухаймастпăр, хамăрăн ленчешке уралла кĕреке сĕтелĕ хушшинех кĕрсе ларатпăр. Унталла ăнтăланмашкăн Турри кашнинех пил панă. Пăхăнаканни те, пăхăнтараканни те, вĕренекенни те, вĕрентекенни те хăй сисмесĕрех çав астармăш сĕтелĕ хушшинче çунтаракан пăрăçа çăварне хыпса пăхатех.

Акă, çакă хайлав та «Иван Мучин аван Мунчине» хутса янă-ямалах «Вĕри чул» парнине тивĕçнĕччĕ.

# ДАНИ ШПИОНĔ

Арканчăк, сутăнчăк самана пуçламăшĕнче çерем кăмпи пек карталанса шăтса тухнă пĕчĕк предприятисем хушшинче «Данилэк» предприяти те хĕвел еннелле пуçне каçăртнăччĕ. Парас-илес, сутас-пуяс çанталăк пăсăлса кая пуçласан вара унăн тымарне те сăрă хуртсем тапăнчĕç. Сĕтеклĕ çĕр пулăхне аран-аран тулăххăн ĕмме вĕреннĕ са-

мантра «кăмпа» куç умĕнчех шанса, саралса пычĕ. Пысăках мар ушкăн ĕçлесе илнĕ пĕтĕм пайне тенĕ пекех патшалăх енчĕкне силлеççĕ. Тĕнче çути курма илнĕ кивçене мĕнпе тата мĕнле майпа саплаштармалли çинчен пурнăç вĕренне сӳтсе явнă вăхăтра кантура виççĕн çитсе кĕреççĕ. Ни милици-ни лесничи мар хурмăпа хăйсем. Японире туяннă кăткăс машинăпа аппаланса йăлăхнă çамрăк инженерсем кулăш куллинче ишетчĕç. Пуçа кантарма кăна та мар – чуна уçмашкăн. Хăйне евĕр чĕлхе те шутласа тупнă вĕсем. Ют çын таврашĕ пырса кĕрес пулсан, сăмахсене кутăн çавăрса калаçаççĕ е хуçине ыйтакана «Данилэ Данире» тесе хуравлаççĕ.

– Кам кунта хуçа?! – умра тăракан тăрăхла питлĕ патвар чăсмак камантласа ыйтнипе маччаран штукатурка шапăрр! ӳксе саланать урайне.

– Рипэ, рипэ, рипэ, рипэ, – ялт siксе тăраççĕ тăваттăн тан. – Бите.

–Ĕçсе лартнă вĕсем, – тукмаккисене кĕсйинчен хирсе кăларать патваррăн сылтăм енчи лапчăк пуç. – Этемле калаçма вĕрентмелле мар-и вĕсене?

– Паташти. Ĕлкĕрен, – сирсе ярать ăна асли.

– Хамăр камне кăтартмаллах, – çăвăр автанла пуçне каçăртать сулахайри чанккама.

– Тарапиться ан ту. Эс ху ĕçна ту: пĕрне те куçран ан вĕçерт, – чарса лартать кăна та пăхаттир. – Риппĕ-питлĕхлеттерсе тăрататпăрха кĕçех сире, ултавçăсене, пĕрре вĕтелентерсе илсен телăсене... Диррректор ăçта?!

– А-а-а, тир ректорĕ-и? Ара, ректор вăл университетра ĕнтĕ. Тирта. Пăшал перет. Тытнă тилĕ-упин тирне сĕвет, кĕрĕк çĕлесе Шупашкарти стадион пасарĕнче сутать, – куçне хĕвеллĕн йăлкăштарать пӳлĕм хуçисенчен пĕри.

Ректор мар, дирррректор ăçта тетĕп эпĕ! – шăл витĕр пĕрхĕнсе тухаççĕ тарăху сăмахĕсем. – Данилэ Леопольд Эвальтович хăшĕ пулать сирĕнтен – «Данилэк нуль» предприятин генераллă директорĕ.

«К» çумĕнче ларакан çӳлти саспалли вăл нуль цифра мар – «0», Данилэ компанийĕ тенине пĕлтерет, – ăнлантарма пăхать кил хуçисенчен тепри.

– Пире «0» та, «нуль» те кирлĕ мар, директор кирлĕ. Калăр – хăшĕ генералли?

– Рампэ, эп – полковăй директор, – хуравлать ватăраххи.

– Рампэ, эп майраллă директор.

– Рампэ, эп — старший директор.

Тăвата картлашкана хăйăклаттарса путвала анса гăнă тăрăхла пит тарăхса каять:

– Тупăннă рампэслă полковниксемпе майраллă майорсем. Салтакра мар кунта, службăра. Ăҫта генеральнăй?!

Рэкетирсемпе темле хаяр тĕрĕслевҫĕсенчен те ĕмĕрне сехĕрленсе ӳкмен шутниксем, хăйсем патне камсем килнине туйсах, мыскарана малалла тăсаҫҫĕ.

– Пирĕн Данилэ генерал хаспатин Данире, – тет питĕ килпетлĕн сарĕ ҫӳҫлĕ, вăтам пӳллĕ йăлттам полковăй директор. – Гренланди пăрне сутас енĕпе Копенгагенра Европа шайĕнчи аслă канаш ĕҫлет. Радиопа каланине илтмен-и?

– Илтмесĕр, телекспа та пачĕҫ, Чăваш патшалăхне те асăнчĕҫ, пирĕн патша та пăр туянасшăн, – хăйсем нумай пĕлнине кăтартасла умлă-хыҫлă вĕрсе яраҫҫĕ кĕтмен хăнасем.

– Авă епле, – вăрттăн кулса малалла ăнлантарать «полковник». – Тĕнче аталанăвĕн банкĕ Раҫҫее пулăшать-ҫке. Укҫа вырăнне пире хальхинче йытă-кушак апачĕ те, пĕҫ хушшине мăкламалли те мар, виҫ ҫухрăм ҫурă хулăнăш ĕмĕр ирĕлмен пăр пама пулнă, тет. Эпир те темиҫе мăн катăк ҫавăрса илесшĕн-ҫке. Ерис ет астак рăптарап арав. Рĕптелĕп ерис нĕм енилрик.

– Аравлатса тăр-ха унта ытларах, ҫиччас асав шăлна...

– Тахҫанах калап вĕт сана ҫак ушкăн таса мар тесе, предприяти ячĕ те чăвашла мар. Хуҫин ячĕпе ашшĕ ячĕ те... Данипе ҫыхăннă гата ҫитменнине... Хăйсем те данилле калаҫаҫҫĕ?..

– Пит тавҫăрулăскерсем-ҫке эсир. Чăн та даниэллех калаҫатпăр. Данилэ хаспатинпа вĕрентĕмĕр ҫав чĕлхене. Пирĕн хуҫан ячĕ те, ашшĕ ячĕ те, хушамачĕ те чăнах чăвашла мар ҫав... хăй чăн-чăн чăваш пулсан та...

– Шпион кличкисем вĕсем, – тукмаккисене кĕсйине чăмтарать сылтăмри хурал.

– Тĕп-тĕрĕс, тĕнчипе паллă кличкăсем, – куллине пытараймасăр тутине сар ҫуллă хĕр пек йĕрлесе илет майраллă директор. – Леопольд-Кашук вăл – тĕнче геройĕ. Эвальт ятлă штурмбанфюрера астумастăр-им тата? Данилэ – ҫак ҫĕр ҫинче нихăҫан вилмен йăх арĕ.

– Ăнлантăр-и халь? Хуҫа Данирен пăр илсе килсен килĕр, – сĕнӳ парать рядовой директор.

– Ăна кĕтме пирĕн вăхăт ҫук. Документсем кăтартăр! Тĕрĕслетпĕр. Эсир тупăша пытаратăр тесе миҫе шалăп ямарĕҫ пуль пирĕн пата. Налук сахал тӳлетĕр.

«Данилэк» ушкăнĕ пĕр-пĕринпе канашласа илет.

– Местух нĕрип хасатпат.

– Ахăлаштап намалатлу.

– Вахăҫ – арух нахăҫ.

– Хамху – немҫип хамăҫ.

Полковăй директор вĕсене толковă ăнлантарать:

– Сэрсем, документсем пирте мар, йăлтах сейфра.

– Сейф уҫатпăр.

– Эпир кăшкăратпăр.

– Эпир ҫăвара хуплатпăр.

– Эпир милицие пĕлтеретпĕр.

– Эпир – хамăр полици!!!

Ҫапла тавлашкаланă хушăра путвалти тăвăр пӳлĕме йăм хура ҫӳҫлĕ, вăр-ҫавракана питҫăмартиллĕ, сăран пальто тăхăннă гăлпан арҫын ҫитсе кĕрет.

– Каллех, лэк, рэкет... тирсем-и, лэк? – лăкăртăк ернипе аптăраса ӳкет вăл. – Иртнинче те, лэк, милицилле, лэк, тумланса килсе, лэк, ҫаракутăн тăратса хăварчĕҫ, лэк, хальхинче мĕнле, лэк...

Хурмăллисенчен иккĕшĕ ҫав хушăрах алăка хупласҫĕ, асли, сассине хăпартса, ыйтать:

– Кам эс?

– Дани... лэл... лэк...

– Данирен, да?

Ку шӳте ĕҫтешĕсемпе тахҫанах кăвапа пусĕ ыратакан пуличчен чутланă Леопольд Эвальтович ĕҫ-пуҫ мĕнлине тавҫăрса илет те лăпкăн тавăрса калать:

– Да... Лэк... Данирен эп – Данилэ... лэк... Ай, вăйлă контракт гурăм-ҫке. Тĕнчере пулман килĕшӳ! Лэк... Кĕҫех Шупашкар тинĕсне, лэк, Гренланди ҫыранĕнчи ҫирĕм айсберг ишсе ҫитмелле, лэк. Вĕсем ҫинче, лэк... морж, тюлень, шур упа, ҫурҫĕр тилли, кит, пулă кĕтĕвĕсем, лэк, капланса килмелле, лэк. Хамăр патра пире, лэк, налукпа хĕссе лартрĕҫ пулсан, лэк, ют ҫĕршыв пăрлантарса та пулин пулăшать, лэк. Перетпĕр, лэк...

– Суять. Патшалăха налук тӳлемесĕр ҫаратни — паллă. Лăкăртăк ахальтен ермест. Танпăр тапнине пĕлет Данилэ, — илтĕнет алăк патĕнчен ҫурăк автан сасси. – Хупмалла ăна!

– Ак, лэк, хĕрес, лэк, – сăхсăхса илет пăлханнă пуҫлăх. — Пĕр тенкĕ те, лэк, улталаман патшалăха «Данилэк». Пĕр руб та, пĕр доллар та, лэк, пĕр марка та, лэк, пĕр крона та, лэк, ҫук сейфра. Ĕненместĕр пулсан, пăхăр уҫса, лэк...

– Ма тата леклетсе тăран... е ытларах янă... е...

– Лăкăртăкĕ вăл Гренланди пăрне валеҫнĕ чухнех ерчĕ-ха... Шăннипе. Ы-ы-ыш... Эх, хăвăра ярасчĕ пĕр уйăхлăха унта командировкăна, шур упасем тытса налук сахал тӳленине тĕрĕслеме... Лэк...

– Сейф уççийĕ ăçта?

– Çурçĕрти Пăрлă океанра. Яка пăр çинче тюленрен шуса ÿкрĕм те, лэк... шампăрт çеç турĕ вăл шыва. Уншăн хăрамастăп-ха. Айсберг-семпе ишекен пулă кĕтĕвĕн патши кĕçех çитерсе парать мана сейф уççине, лэк... Кĕтме пултаратăр-и, лэк, унччен?

– Çук! Хамăрах уçатпăр, тен унта пилĕк куçлă эрмен тĕлĕрсе ларать?

Кÿршĕри банкран maçтăр чĕнтерсе сейфа уçаççĕ те... унта чăнах та çатăрка хутпа чĕркенĕ «Деньги» вырта парать.

Çăвара курак чĕппинчен те анлăрах карса пăрахаççĕ полицайсем:

– Укçа çук тесе суеçтерет Данилэ. Ку тата мĕн? Камăн?

— Лэк, туршăн та, хĕвелшĕн те, уйăхшăн та... ман мар вăл, лэк, – пуçне пăркалать Данилэ.

– Камăн-ха тата?

– Эмилĕн.

– Каллех темле кличкăллă суя ят. Ют çĕршыв шпи...

– Ĕненместĕр-тĕк, лэк, Золян, эппин, лэк, тахçан çапнăскерех, лэк, Париж парни, лэк...

– Солинăнни? Леш, Хусан каинĕсене тăварсăр яшка çитерекен-ни-и? Тахçантанпах çыхăну тытатăр унпа апла? Эх, эсир те çав, чăваш выççа тăрса юлнă... Эс, Данилэ, Солинпа тăвар-сăвар суту-илĕвĕ туса хăш çĕршыва тутлантарасшăн-ха? Данине-и?

– Данин Гренландинех. Унта пăра ирĕлтерсе касма тăвар çитмест.

– Каллех Данипе çĕтет. Тем гесен те Дани шпионĕ эсĕ, Данилэ. Сана тахçанах.... Юрать-ха хамăр алла лекрĕн. Пăрпа ишсе килекен тюленсен пĕр пайне... Атту, лараççĕ унта сĕнксе, хут тĕрки ăшĕнче ăман шыраса чекистсем. Ку таранччен пĕр шпион тытса курман пуль Чăвашра. Эпир вара пĕрре килсех Дани шпионне ярса илтĕмĕр, – кĕске пăшалне хĕвĕнчен мăнкăмăллăн кăларать аслă полицай. — Генерал-шпионшăн налук департаменчĕн генералĕ пулаппах...

1995 ç.

## МУНЧА СĔРĔМĔ

*Пĕр чарăнмасăр лăпкă юхакан Атăла пĕвелесси тата Шупашкар çумĕнче Улăп вăйлĕ трактор кăларасси çинчен çивчĕ хăлхисене ашак хăлхисем пек тăссах итлерĕç чăваш сатирикĕсемпе кулăшçисем те. Тинех мунча талăкĕ-талăкĕпе татăлмасăр ĕçлеме пуçласса шанчĕç. Анчах... Трактор завочĕ тума ятарласа йĕркеленĕ 5-мĕш строительство тресчĕн*

*аслă ултавçисем хăйсем ясарлăх мунчи хутса янă-мĕн. Çапах та манăн вĕсене «Иван Мучин аван мунчине» кĕртсе кăлармасăр чун чăтмарĕ.*

* * *

Пуху вĕçленнĕ хыççăн Родион Иванович Юнтапов васкамасăр хăйĕн кабинетне кĕчĕ. Пуç кашланипе, чун тăвăрланса çитнипе вăл ним тума аптрарĕ, унтан телефон шăнкăртатнине илтсе сĕтел патне пычĕ. Хăш аппарачĕ-ши тесе лайăххрах тăнларĕ те, сулахай енчин трубкине çĕклерĕ. Обкомран, оргпартĕç пайĕн инстркторĕ, партшкулта пĕрле вĕреннĕскер «чăрмантарать» иккен. Стройкăна ыран Мускав «хăнисем» килеççĕ, халăх контроль комитетĕнчен, каллех мунча пирки, тет.

Ахаль те пухуран тарăхса тухнă Юнтапов юлташĕ «Мунча ăшши тутлă пултăр» тесе шӳтлени çине сиввĕн тавăрчĕ те, трубкăна хытах хучĕ.

Мунча историйĕ пĕлтĕрех, 1975 çултах, пуçланнăччĕ. Стройтрестри партком секретарьне çав сăлтавшăн ĕçрен хăтарнă хыççăн, ун вырăнне Родион Ивановича суйларĕç. Хула комитетĕнче инструкторта «шăпăн лараканскерне» шавлă стройкăна, хĕрӳрен те хĕрӳ ĕçе ячĕç. Çамрăклах комсомолта, вĕренме кайиччен пĕр паллă заводра парторганизаци секретарĕнче пиçсе вăй илнĕскер, вăл йывăрлăхсенчен хăрамасть-ха, çирĕп шухăшĕсенчен те каялла чакмасть. Хăйне кунта йĕркеллĕ ĕçлеме паманнишĕн, кунĕн-çĕрĕн чăрмантарса тăллантарнишĕн çеç кӳтĕхет. Çур çул çапла ĕнтĕ мунча ыйтăвĕпе комисси хыççăн комисси, тĕрĕслӳ хыççăн тĕрĕслӳ, пуху хыççăн пуху... Пĕтĕм çĕршыв, Раççей, республика, хула, район калăпăшĕпе, тĕрлĕ-çĕрлĕ организаци енĕпе ирттерекен тĕрĕслӳсем йăлăхтарсах çитерчĕç.

Çапла çав, мунчине хутаканĕсем пĕрисем те, ун сĕрĕмне ĕçекенĕсем – теприсем. Çуллахи каникул вăхăтĕнче стройкăна ĕçлеме килекен студентсене пурăнма, канма тесе Атăлăн чăнкă çыранĕнче илемлĕ те меллĕ вырăн суйласа илнĕ, унта йĕрки-йĕркипе çĕмăл çурт, вĕсемпе юнашар профилактори тунă. Аялта, шыв кукринчи хăвалăхра, мунча пытанса ларнă...

Илемлĕхĕпе ĕнтĕ мунчи тĕлĕнмеллех пулнă. Çиелтен витнĕ хăмине лакпа сăрланă. Чĕнтĕрлĕ кантăк хашакĕсем, авалхи хунарсем, тимĕрçĕ лаççинче авса тунă алăк хăлăпĕсем юмахри пек крыльца çурта хăйне евĕр хитрелетсе тăнă. Мĕн кăна пулман пуль шалта. Чи аслă пӳлĕм – мунча умĕ. Унта уçă кăмака, лапка, пĕчĕк ресторан. Урайне хаклă йышши кавир сарнă. Стенисем тавраллах – тăнран яракан ӳкер-

чĕксем. Маччаран çурта тыткăчисемпе урапа кустăрмисем çакăнса тăраççĕ. Пăспа хĕртĕнмелли, милĕкпе çапăнмалли пĕчĕкрех пӳлĕмĕ те мрамор ăшĕнче. Акă мĕнлеччĕ студентсен «санитарипе профилактика çурчĕ» ун чух. Родион Иванович унта партком секретарĕнче ĕçлеме тытăннă малтанхи эрнерех кайса курнăччĕ. Çак кермен патĕнчен картлашкапа хашка-хашка хăпарсан, Юнтапов каялла çаврăнса пăхрĕ. Çутçанталăкăн чаплăран та чаплă кĕтесĕ ĕнтĕ. Тип-тикĕс хăвалăх, сапсарă хăйăр, лăпкă юханшыв. Мунчине çеç çĕр çăтнă тейĕн – курăнмасть.

Атăл çинчи çăтмах вырăннех хучĕ ăна Юнтапов. Çăтмах сачĕ çулсерен ешернĕ, йăпанчăк шухăш-кăмăллă çынсене хăй патне туртнă. Унта çылăхсăр чун лексе курман, теççĕ. Çылăхлисем вара... тата темиçе хут çылăха кĕрсе тухнă, Турă вырăнĕнче трестăн главнăй инженерĕ Ярмуллаев ларнă. Çăтмаха кама йышăнмаллине пит ăста чухланă вăл, вĕсем умне мĕнле серепе кармаллине пĕлнĕ. Серепине çеç хăй карман. Çăтмах садне тытса тăмашкăн трест пуçлăхĕ ăна вунçичĕ чун уйăрса панă. Ярмуллаев вĕсене хăй аллипе суйласа илнĕ. Кам вăйлăрах, кам итлет – çав хуралça юрăхлă. Комендант тумалли чуна вăл уйрăмах тĕплĕн тĕрĕсленĕ. Муров текен спорт мастерĕ килĕшнĕ-килĕшнех юлашкинчен. Ăна тӳрех аслă инженер штатне кĕртнĕ, ытти пăхаттирсене электрик, платник, маляр туса хунă. Куçа курăнман «строительсем» çапла тар тăкса ĕçлекенсемпе пĕр танах укçа сăптăрса пурăннă.

Кунта стройкăри пек мар, ĕç-пуç йăлтах урăхла пулса пынă-мĕн. Тĕнче Ярмуллаев саккунĕпе тытăнса тăнă. Çăтмах пилĕк кун каннă та икĕ кун ĕçленĕ. Турă хушнине Муров малтанлăха пурне те пикенсех пурнăçланă. Ярмуллаев шăматкун эртелпе çитнĕ çĕре профилактори пӳлĕмĕсем йăлтăртатса кăна тăнă, мунча хатĕр пулнă. Кĕр те унта, стройка тусанне лĕп шывпа çуса тасат, çапăн, çăмăллат шăмшакна...

Пăс ăшĕнчен тухакан турра аслă пӳлĕмри чаплă кавир çинче хиппхитре те çап-çамрăк пике-пирĕшти кăвас алтăрĕпе сăйласа кĕтсе илнĕ, йĕпĕлл кулса алтăра çенĕççĕн тыттарнă та ăна, хуллен лапка тăрне улăхнă. Турă – ун хыççăн...

Муров турра юрама вĕренсе çитнĕ çав. Йăлăхтара пуçланă пике-пирĕштисене улăштарса тăнă. Тилĕ пек чее Ярмуллаев мунчара хăй çеç киленсе йăпанман. Карнă серепене ытти пуçлăхсене те майĕпенех астарса кĕртнĕ. Лешсем, ĕçкĕ-çикĕпе минренĕскерсем, унтан ниепле те çылăха кĕмесĕр тухайман. Кайран «эп унта пулман, курман-илтмен» тесе хăтăлса юлма никамăн та май килмен. Куçа курăнман фотокамера кăвас алтăрĕ тытнă пике-пирĕшти умĕнче сĕлеке юхтарса тăра-

кан тус-хӑнана Адам тумӗпех ҫатлаттарса илнӗ. Сӗрекене лекнӗ ҫӑрттансене ҫапла Ярмуллаев ахаль кӑларса яман. Стройка проекчӗн тӗп инженерӗ те, мунчара сӑйланнӑ-йӑпаннӑ хыҫҫӑн, ҫӑтмах сачӗн расхучӗсене списать тумалли хут ҫине хӑрах куҫпа пӑхмасӑрах алӑ пуснӑ.

Турӑ стройкӑра пилӗк кун каннӑ вӑхӑтра ҫӑтмах коменданчӗ Муров та камантипе пӗрлех «канлӗхе» куҫнӑ. Ярмуллаевсен ҫӑрӑлчӑкне тасатса ывӑннӑскерсем пике-пирӗштисене хӑйсен пултарулӑхне кӑтартма пуҫланӑ. Никамран та хӑрами пулса ҫитнӗ, виҫерен иртсе кайнӑ. Хӑва ҫулҫисене сирсе ӑнсӑртран ҫиеле тухнӑ хӑрушӑ сас-хурана ҫавраҫил ҫаклатса таҫта ҫитиех илсе кайнӑ. Хула Совет ӗҫтӑвкомӗ ун йӗрӗпе тӗрӗслӗх шырама Рылина янӑ. Строительство управленийӗн начальникӗ, вӑлах хула архитекторӗ те, васкасах ҫитнӗ Атӑл хӗрне. Ярмуллаев та серепепех кӗтнӗ ӑна, ятарласа тутлӑ мунча хатӗрлеттернӗ. Чӑтайман Рылин пуян сӗтеле. ытарайман тӑнран кӑларакан асамлӑ та ирӗлтӳллӗ мунча умне... кӑвас ӗҫнӗ те ҫывӑрмах юлнӑ.

Ярмуллаевсен ҫӑтмахне тӗп тунӑ ӗнтӗ. Мунчине те такам тӗртсе ҫунтарса янӑ. Трест пуҫлӑхӗсене улӑштарнӑ. Айӑплисене суда панӑ. Муров камантине хупнӑ... Мунча сӗрӗмӗ ҫаплах йӑсӑрланать-ха....



Мунча сӗрӗмӗ коммунистсене те пухура минретсе янӑ.

# ÇЫРАВÇĂСЕМ ТЕ МУНЧАРА ХĔРСЕ СИПЛЕНМЕ ЮРАТАÇÇĔ

* * *

Георгий Ефимов мăшăрĕпе театра пынă, чи малти рете кĕрсе ларнă. Балет пуçланать.

– Каçхи апат пулчĕ те, тутлăхлăн та пит кăмăллăн шăлкаласа илет мăйăхне çара пĕçлĕ Сарпике çинчен куçне вĕçертмесĕр упăшки. – Виçĕ кун апат çимесĕр те пурăнма пулать халь.

– Эпĕ вара чун савнине хăрах алă çинче çĕклесе ташлакан Сариван çине пăхса тăранаймастăп, – тата чечекленсе-çĕкленсе илет поэт мăшăрĕ Светлана Никифоровна.

* * *

Петĕр Ялгир хайĕн пултарулăхне кăтартса çÿресе Чăваш тĕнчинче çÿп шăтăкĕ те хăварман. Шупашкарта хĕрсен общежитийĕнчен тарласа тухнă хыççăн вăл канма пĕлмесĕрех мăнастиреваскать: манашкăсем те поэт сăвви-кулăшне итлесе «артистпа» пĕрле юрласа-ташласшăн-çке.

* * *

Михаил Ставский критик пĕррехинче килне тайкаланарах çитсе кĕрет. Путинккине хывма ĕлкĕричченех шеремете кĕтсе ывăннă арăмĕ çухаваран çулса илет:

– Ăçта пултăн? Мĕн туса ĕшентĕн капла ура çинче тăрайми пуличченех?

– «Нарспи» хыççăн «Чĕкеç»... мĕнне... лешне... тĕпне çитиччен янă та... чĕркуççи лăштăрах кайрĕ, – епĕл кулса тытăнчăклăрах калаçать упăшки.

– Ха, пĕр Нарспийĕ çитмен ăна, тăранманскерне, тата астаракан темле Чĕкеç тупнă, – пушшех урса каять арăмĕ.

– Ăнлан эс, чунăмçăм. Улаха кайман эп, «Нарспи» опера хыççăн «Чĕкеç» кафере кăшт сыпрăмăр та...

– Тÿрех çапла каламаллаччĕ, – çил-тăвăл хыççăнхи хĕвел пек çуталса каять арăмĕн пит-куçĕ. Кафе хыççăн кофе ĕç те, кĕрсе вырт утиал айне. Арăм вăл темле Нарспипе Чĕкеçрен те ытларах ÿсĕртет.

* * *

Васлей Давыдов çамрăк чух купăс калама юратнă. Пырать çапла Анатри чăваш тальянкăна туртса Атăл хысакĕне, иртен-çÿрен хĕрсене куçласа чĕнтĕр кĕвви шăрçалать. Хресчен çурчĕ çывăхĕнче купăççăна

чикан майрисем çавăрса илеççĕ те, «дай погадаю» юррипе минретсе юханшыв хĕрринчи тапăрах çитереççĕ. Юрăпа Йăлăм янăрать, ташăпа Атăл хумханать. Упăшкине çухатнă арăмĕ йĕре-йĕре хула тăрăх çӳрет, аптăранă енне юмăç пăхтарма шутлать, чикансем патне каять.

– Упăшку мĕн ятлă-ха? – вăлтса пырать чикан майри чăваш хĕрарăмĕн ывăç тупанĕнчи йĕрсем тăрăх чупнă май. – А-а, Ваçкă терĕн-ха, çӳлĕскер, карап кашти пекскер, купăс туртма, сăвă калама маçтăрччĕ терĕн-и-ха, тата тепĕр пысăкрах укçине хур-ха, çиччас ӳкетпĕр йĕрри çине, тата тепĕр...

– Пин те шалккă мар упăшкана тупса парсан, ме! – куçне шăлса илет хуйхăпа хуçăлнă хĕрарăм юлашки укçине чикан майрине тыттарса.

– Вася-Василек, тух! – ташласа çаврăнать чикан майри.

Кĕç пир карнă чатăр алăкĕнчен çухалнă поэт-упăшкан чиканланнă пит-куçĕ курăнса каять.

## АЛЕКСАНДР АРТЕМЬЕВ ЭЛĔКЬЕНЧЕ

– Александр Спиридонович, сирĕншĕн мĕн тути чи тутли?
– Анне сĕчĕн тата Турă юнĕн тути.

* * *

– Сирĕншĕн мĕн çывăх?
– Тури Выл çулĕ.

* * *

– Сирĕншĕн мĕн хаклă?
– Тăван ял халăхĕ.

* * *

– Ялта эсир миçе кун пурăнатăр?
– Икçĕр кун.
– Мĕншĕн?
– Каппи килте пĕрер кун пуласшăн, çавăнпа.

* * *

– Сирĕншĕн чи юратни кам?
– Саламби.

* * *

**АЙ, ПЕТА, ПЕТА...** Аслă Канаш шавĕ эфир хумĕпе ман хăлхана та янраса кĕрсе пуçа минретсе ячĕ. Чап, хисеп, ят-сум пирки чĕлхе тăррине самаях якатрĕç. Эпĕ те анрасах кайрăм. Чăваш халăх поэчĕ, чăваш халăх писателĕ ятсем пур иккен пирĕн. Поэт писательтен мĕнпе уйрăлса тăрать-ши? Поэт писатель мар-ши? Писатель поэт мар-ши? Йĕкĕреш мар-ши вара вĕсем? Ку темле чăваш халăх поварĕ, чăваш халăх шÿрпе пĕçерекенĕ, чăваш халăх пăтă пĕçерекенĕ, чăваш халăх кĕсел юраканĕ ят панă пекрех пулса тухмасть-ши? Чăваш халăх поэчĕн, чăваш халăх писателĕн ятне миçе çула çитсен тата миçе чăваш пуçне нĕрре параççĕ? Черет пысăк-ши унта? Илтнĕ тăрăх, пухăва пынă кашни çыравçа-çăравçах чăваш патши «чăваш халăх поэчĕ-писателĕ» ятне автографласа парнелет, тет. Эпĕ те çыравçăсен çитес пухăвне кут хучĕ çинчен çырнă «Сирень» поэмăна илсе пырасшăн-ха. Тен...

Таçта та ведущий специалист, ведущий инженер тенине илтме пулать. Писательсене этем чунĕн инженерĕ теççĕ те, вĕсем хушшинче те ведущий прозаик, ведущий драматург, ведущий поэт, ведущий сатирик, ведущий песенник пулма кирлех. Калăр-ха, камсем-ши вĕсем, тата вĕсене çав ята кам парать?

Писательсене Чăвашстан искусствисен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята та параççĕ-мĕн. Купăс каласа ура хуçса ташлаканнисене, шăпчăк пек юрă шăрантаканнисене е сысна çури пек çухăраканнисене параççĕ-ши çав ята?

Пĕр маттурĕ тата талăкра çирĕм тăватă сехет кутĕрленекене Чăвашăн мĕнпур хисеплĕ ятне харăс пама сĕнет. Унашкал çын пурах пулсан, ăна чăнах та чăваш халăхĕн çара çерçи хисеплĕ ят памалла.

Чăвашстан халăх артисчĕпе Чăвашкас халăх артисчĕ хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур-ши? Чăваш халăх балалайкинĕ, чăваш халăх суфлерĕ ятсем пур-ши тата? Пурах пулсан, тархасшăн пĕлтерĕр: камсем тивĕçнĕ-ши çав ятсене?

Ай, пета, пета, кĕрсе кайрĕ пуça...

Я. СУМОВ,
Хырхăййикăшлакассинчи
Аслăканашлăхĕн чăн членĕ

* * *

– Вилсен, сан халăха вулама мĕн юлать?

– Писательсен Союзĕн член кĕнеки.

* * *

Хăмпă çыравçă тăрук туяпа çӳреме пуçланă.

– Мĕн пулчĕ? – тĕлĕнеççĕ унран.

– Урана амантрăм.

– Классика тухрăн апла?

– А какшĕ. Чăваш классикĕсем Семен Элкер, Ухсай Яккăвĕ, Ваçлей Алентей, Георгий Краснов, Петĕр Львов, Николай Мартынов... пурте уксак. Эпĕ вĕсенчен мĕнрен кая халь? Тинех пичетленме тытăнатăп, – каçăрălса уксакласа каять çĕнĕ классик.

* * *

Хветĕр Агиверпе Алексей Васильев çыравçăсем – уйрăлми туссем. Пĕр-пĕринчен шӳтлеме те ăста кулăшçăсем. Тусне пĕррехинче Агивер парне туса пама шутлать. Хаçат-журнал йӳнĕ тапхăрччĕ ун чухне. Çапла вăл ют адреспа тытать те çырăнать «Гинекологи» журнал. Çĕнĕ çул çитсен почтальонка Васильевсен почта ещĕкне журнала ярса хăварать. Алексей Григорьевич тутине мулкачла камитлентерсе кулса ярать, журнала тĕплĕн пăхса тухать: адресне те, хушаматне тĕрĕсех çырнă. Çапах та, йăнăшнă пуль тесе, вăл почтăна çитет: унта та тĕп-тĕрĕсех çырнă. Çулталăк вуласа-вĕренсе пурăнать çапла Алексей Васильев медицина наукине. Манран пурпĕрех халь тин хĕрарăм тухтăрĕ пулса тухас çук тесе вара вăл хăйĕн çывăх хĕр-гинекологне журнал комплектне парнелет.

Хăйĕнчен кам кулнине виççĕр утмăл пилĕк кун хушши шухăшласа ăнкарнă хыççăн, вăл чĕлĕм туртман тусне Хветĕр Агивере çитес çулшăн «Табак» журнал çырăнса парать.

## АПТРАСАН ТА ХАШКАМАН

Вăрнарти «Туслăх» хăна çуртĕнче Георгий Ирхипе Юрий Айдаш канаççĕ. Çăвар типпипе аптăранă Айдаш ирех Ирхи пӳлĕмне чупать.

– Георги, пуçла?

– Юрать. Эп сана паçăртанпах кĕтетĕп, – пуçлать Ирхи сăвă калама, хĕремесленсе, пĕрин хыççăн теприне...

Айдаш типпĕ тути хĕррисене çулласа чăплаттарса илет те:

– Тип çырма шывне ан юхтар-ха эс, пуçла лешне, – тет тарăхса.

Ирхи дипломатĕнчен кĕленче кăларать те, уçса стакана тултарать:

– Тархасшăн, Юрий Григорьевич, ман çак сăвăсен сывлăхĕшĕн.

– Юхтар Атӑл шывнех, – чӗрӗлнӗ Айдаш пуш стакана кӑмӑллӑн тыттарать пӳлӗм хуҫине.

* * *

Хавасла кӑмӑл-туйӑмпа пырать Вӑрнар урамӗпе Георгий Ирхи. Ӑна шӗвӗрккесем тӗл пулаҫҫӗ.

– Аван-и, ачамккӑсем? – савӑнса сывлӑх сунать вӑл вӗсене.

– Аванах, Ирхи атте! Илсе пар пире тетге? – куҫран чӑрр пӑхаҫҫӗ ачасем.

Кӗсйинчен шоколад кӑларса тыттарать те шаймӑксене Ирхи аса илех каять: ара миҫе ҫул ҫӳрет ӗнтӗ вӑл Вӑрнар артисчӗсемпе, писателӗсемпе ентешлӗх туслӑхне ҫывӑххӑн ҫирӗплетсе-чечеклентерсе.

* * *

Чулхулара тахҫан партшкул ҫумӗнче пуҫлӑхсен пуҫне туптаса якатмалли тимӗрҫ лаҫҫи пулнӑ. Ҫавӑнта парти обкомӗн пичет уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ Григорий Васильев-Луч писательпе мыскарасем хайлакан Николай Дубинин лектор пынӑ.

Дубинин, Павлово хулине тӑванӗсене курма кайсан, ҫӗрле тин таврӑнать. Шаккать-шаккать вӑл пӳлӗм алӑкне, анчах тусӗ ӑна уҫса кӗртмест. Диван ҫине выртса та, ҫемҫе креслӑна ларса та пӑхать, ыйхӑ килмест. Аптранӑ енне вара Дубинин «Бахусизм – марксизм-ленинизм идейисен тӑшманӗ» темӑпа ирччен лекци вулать. Луч ҫав вӑхӑтра Бахуспа ытаклашса хуп турттарнӑ.

* * *

Чулхула тӑрӑх ҫӳресе кунланӑ хыҫҫӑн ҫӗрлене юлса кайнине те сисмен Григорий Луч, Николай Дубинин тата Элӗк хаҫатӗнче ӗҫленӗ Иван Михайлов журналист. Пыр выҫҫи вӗсене хупахсем енне пӑхтарать. Пӗрин алӑкне пырса тӗртеҫҫӗ, тепринне – шалтан ҫаклатнӑ. «Мускав» ятли патне ҫитсен, Лучӑн ҫамки, ӑслӑ шухӑш пырса кӗнипе, тата сарӑлса каять, вара вӑл швейцара кӑчӑк туртать:

– Африкӑран, Конго патшалӑхӗн Мускаври посольствинчен, Лумумба юлташӗ, – тӗллесе кӑтартать вӑл хуп-хура сӑнлӑ Михайлов ҫине. – Ак ку – унӑн тӑлмачӗ, эпӗ – обкомран, акӑ, курӑр, – тет «КПСС» тесе ҫырнӑ хӗрлӗ хуплашкана ҫӳлелле ҫӗклесе.

Хуп-хура Михайловпа хурарах сӑнлӑ Дубинин тӑрӑшсах чӑвашла калаҫаҫҫӗ.

Швейцар вӑшт ҫухалать, кӗҫ пӗр чипер хӗрарӑма чӗнсе тухать.

Ҫăнасен пӳлĕмне илсе кĕрсе хĕремесленичченех хăналаççĕ Патрис Лумумба юлташĕсене.

«Тăранман пыр тем те тутарĕ, чăвашран негр та пултарчĕ ваçка, турă усала сиртĕрех малашне», – тесе вăрттăн сăхсăхса илет Дубинин.

* * *

Комсомол йĕкĕчĕ пулнă Валентин Васильев баян калама юрататъ. Денис Гордеевпа пĕр пӳлĕмре пурăнать. Чулхулана килнĕ Юрий Петров Каçал тусне шыраса Пушкин урамне пынă. Кунта вĕренекен ытти чăваш çыравçисем те пухăннă поэзи уявне. Общежити çумĕнчи ешерекен çурхи паркрах савăннă.

Акă, урам тулли таврăнаççĕ чăвашсем, юрра шăлаççĕ кăна: «Тухрăм эпĕ Атăл хĕррине...» Сăвă вулаççĕ. Кĕç ташша яраççĕ. Васильев баянĕ çынсене хăй патне туртать. Икĕ енчен те трамвайсем чăнкăртаттараççĕ. Вакунсенчен халăх сиксе тухать. Алă çупсах итлеççĕ, кураççĕ, ташша хутшăнакан та пур.

Такăш вăхăтра юнашарти телестудирен операторпа журналист сиксе тухаççĕ.

Тепĕр кунне Чулхула çĕнĕ хыпарĕнче «Чăваш артисчĕсемпе поэчĕсен урамри уявĕ» репортаж кĕрленĕ.

* * *

– Николай Максимов хăçан псевдоним тупать?

– Чăваш прозин уйĕнче «Синкер» килсе тухсан, кам та пулин унăн «Пурнăç выранне» йышăнма хăтланать, – çавăн чухне.

* * *

– Василий Эктел мĕн тума женьшень ӳстерет?

– Музăпа вилĕмсĕр юлмашкăн.

* * *

– Хветĕр Коновалов хăçан чăвашăн асамат кĕперне хывса пĕтернĕ?

– Чăваш илемĕн тĕнчи уçлăхĕнчен Акивер çăлкуçне тĕрленĕ кĕпе тăхăнса ансан.

* * *

Хисеплĕ ят паракан Аслă кантур алăкĕ умĕнче кĕтӳ пушши пек вăрăм черет. Пĕр енчисем сăвă сăвăрса, поэма пырши кумаççĕ, тепĕр енчисем калав-роман кăрманĕнчен шыв юхтараççĕ. Унта Николай Теветкел çыравçă çывхарать.

– «Чăваш халăх поэчĕ» пулас килсен, сăмсуна ытлашши ан каҫăрт, пурпĕрех пирĕнтен мала иртеймĕн, тăр черете, – сĕнеҫҫĕ ăна хывăх вĕҫтерекенсем.

– «Чăваш халăх писателĕ» ят та япăхах мар, хисепрех, кутна хĕстер кăрман хыҫне, – кăчăк туртаҫҫĕ сăмах купи купалакансем.

– Чăваш халăхĕ мана хăйĕн хисеплĕ ятне черетсĕрех панă, – тет те Теветкел, аллисене шарт! ҫупса ҫунатланать, тӳпери Элкер ҫăлтăр ҫумне вĕҫсе хăпарать.

Халран кайнă черечĕ те ун хыҫҫăн сиксе пăхать, анчах Аслă кантур маччинчен ҫӳлерех вĕҫме Микул поэчĕнни пек Турă панă хăватлă ҫунат нихăшин те ҫук иккен. Ирĕксĕрех черет ҫитессе кĕтме тивет.

* * *

Геннадий Маркианов композитор пит хавасланса пырса кĕрет «Тăван Атăл» редакцине. Поэзи пайĕн пуҫлăхĕ Аркадий Лукин вăл ҫĕнĕ юрă сăмахĕсене вулама пуҫланă-пуҫламан партитурăна каялла тавăрса парать.

– Каллех тăлăх хурăн, тĕксĕм уйăх, сӳннĕ ҫăлтăр... Каллех ҫуннă юрату, уйрăлу, тунсăх. Ниме тăман ку сăмах купине кам купаланăши?

– Куҫа уҫарах вуласа пăхăр-ха, тен, авторне паллатăр?

– Эккей, епле маттур эсир, – хăй хушаматне асăрханипе ĕнсине хыҫса илет паллă поэт. – Суйласа илме пĕлнĕ те вара чаплă сăвă. Эпĕ вĕт ку сăмахсене ҫĕр ҫывăрмасăр, кун ҫути курмасăр, тăна ҫухатса ҫырнă-ҫке. Ман ку – юрату гимнĕ. Кӳр партитуруна. Кĕрлеттер!

* * *

Кĕркури Луч писатель кăвак ҫутлах Анатолий Хум хваттерне вашкăртса ҫитет.

– Вилеп.

Хум шифоньер хыҫĕнчен ухутник пăшалĕ йăтса тухать те тĕллет:

– Апла пулăшап.

– Анатули шăллăм, – типнĕ тути хĕррисене чĕлхипе ҫулласа илет Луч, – хама вĕлерсен те, мухмăра чĕрт.

* * *

Юрий Айдаш «Тăван Атăл» журнал редакцийĕн пӳлĕмĕнче анаслаласа ларать:

– Пĕр-пĕр живой роман утса килинччĕ хăть.

– Шивуех ҫитрĕм-ха, ялтан, – ахăлтатса ярать алăкра курăннă

Роман Чепунов çыравçă, кутамккине васкавлăн салтма пуçласа. – Лаçра çырнă «Чĕрĕ шыв» роман вулаттарасшăн-ха сана.

* * *

Чăваш поэчĕ Юрий Семенов-Сементер хăй утмăл тултарнине аллă тăхăр ялпа хулара уявланă хыççăн, ăна Шетмĕ тăрăхĕнчи ентешĕ Измаил Григорьев-Исемпек çыравçă тĕрленĕ кĕпи çаннинчен карт! туртса чарать:

– Аслă пиччем,менелникĕн утмăлмĕш пайне ăçта кăтартăпăр?

– Сементер хулинче! – татăклăн каласа йăл-л кулать ăш хĕвеллĕн Юрий Семенович. – Тăван хулара – хамăн тĕп хулара. Мĕн пур пăлхар йăхĕ, тĕрĕк тĕнчи умĕнче пурнăç шăпчăкĕ пек юрласа.

– Апла телефон кĕнекинче шырам-ха Сементер хули мэрĕн номерне, – тесе сĕтел çинчи хут тĕркисене чăштăртаттарма пуçлать Измаил хулин хисеплĕ элчи Исмай Исемпек.




ИВАН МУЧИ: - Лапшу тусăм, тухăç календарьне ĕненсе, Йĕкехӳре çулталăкĕнче эпĕ бюрократ-йĕкехӳре йышши пуçлăхсем валли пукан пасарĕ уçрăм. Сан валли те патша пуканĕ пур, авă. Хакĕ - халăх килĕшĕвĕ тăрăх.

ЛАПШУ ÇТАППАНĔ: - Каккуй патша пуканĕн шухăшĕ халь. Куратăн пуль мана вăрман тиллисемпе пĕрлех диван тилли те ешле илĕртнине? Пурне те улаххăн персе антарас килет. Çавăнпа пăшалăма «Вука Вука» пульккӑпах авăрларăм.

# ШУПАШКАР КАЛАҪАТЬ – «МУНЧАРА»

## МУРГА-МУРГАШСЕМ

Икĕ пинĕмĕш ҫулхи юпа уйăхĕнче Журналистсен Союзĕн пленумне «Волжанкăна» каятпăр. Эпĕ Павел Крысинпа юнашар ларса ларатăп. Вăл шутсăр калаҫма юрататъ. Ҫав калаҫăва хут ҫине типтерлĕ шăрҫаласа сăнарласанччĕ... Вăл тахҫанах Иван Мучи кулăшҫăран ĕрĕхсе иртсе каймалла. Павел Афиногенович, журналист-организатор, журналист-информатор, журналист-комментатор, ҫăварти чĕлхепе ытларах палăрать. Хальхинче те эпир мĕн ҫинчен кăна пуплемерĕмĕрши? Асаилĕвĕ унăн чикан майрин мăй шăкăрчи чухлех.

Унпа чĕрре кĕрсе пыраканни – Сĕнтĕрвăрри ачи Михаил Иванов. Иккĕшĕ те хăй вăхăтĕнче Чăваш енче паллă ҫынсем пулнă, тĕрĕссипе – халĕ те ҫавсен шутĕнчех. Крысин Чăвашрадиопа телевиденине чапа кăларчĕ, Иванов – «Советская Чувашия» хаҫата вăйлатрĕ. Чăваш чĕлхишĕн, литературишĕн, чăн-чăн чăвашлăхшĕн чунне пама хатĕр патриотсем. Мĕн пур чăвашлăх картийĕ вĕсен пултарулăх юпи тавра сырăннă.

Ҫапах та... Кам ăҫта ҫуралса ӳснин уйрăмлăхĕ ҫынран виличчен те каймастъ-мĕн. Чăваш литератури, чăваш ҫыравҫисем, чăваш пуласлăхĕ пирки перкелешсе пынă хушăра Михаил Иванович хăйне тавлашаканран ыйтрĕ:

– Павел Афиногенович, сирĕн патра кишĕре мĕнле калаҫҫĕ?

– Мурга, – хуравларĕ Крысин лăпкăн. – Мургана мĕнле калан ĕнтĕ ăна урăхла, мурга вăл – мургах.

– Да... – пуҫне кăлттăн сиктерсе илчĕ Иванов. – Мургашсем ҫав эсир, мурга-мургашсем...

## ЮРАТУ ХУМĔ

Ыталаса чупту... Юрату парнеле эс мана... Вăратсах ячĕ юрă. Ку таранччен хама ҫавнашкал ҫепĕҫҫĕн те илĕртӳллĕн ытаклашса чуп тума чĕннине чĕрĕ тĕнчери чĕнтĕр айĕнче те курманччĕ. Ку пике сасси вара... кунĕн-ҫĕрĕн, ҫĕрĕн-кунĕн, Улатимĕр Стасĕ каларĕшле тенĕ пек, юрласа та ташласа, ташласа та юрласа куҫ хуптармасăр, ҫĕр ҫывратмасăр ҫилĕмлет ман хăватăма: чупту-чупту...

Чуптутарсах савăклатасшăн-ши ку пике сасси тесе шухăшлама та ĕлкĕрейместĕп, тепĕр хĕрупраҫĕ тата сувҫем ясартараххăн сĕрсе

ярать те сассине... Микулай кумсем ура тупанне ылтăн такан çыпăç-тарма хăватлă май пурри çинчен танкăлтатса каяççĕ те... çыврас умĕн те. Хĕвеллĕ ирпе куçа уçсан та, кăнтăр яшки кашăкне тытсан та, хĕр-хĕрарăмпа паллашмалли хута вулама тытăнсан та, чӳречерен вăрттăн сăнакан тутăра куçласа илсен те, тĕлĕкре те... «ыталаса чупту, аста-ракан туту... ту-ту-ту... т-ту-ту ту-ту-ту...»

Юрать-ха хальхи саманара «Юрату Ту-ту» адресне те парать, юратнăшăн мĕн чухлĕ тӳлемеллине те вăтанмасăрах хавасла пĕлтерет...

Аптриш, тĕлĕнтерсех пăрахрĕç, ирĕксĕрех юраттараççĕ вĕт!.. Ирĕк-сĕрех тутулаттараççĕ...

Çапах та, пуç тавра вирлĕн çавăрттарса илнĕ хыççăн, виличчен, тен, юлашки хут юратса, тăвансемпе урхамахла тапăртатса юлас те-сех уттарас пуль терĕм вара Шупашкарти Николаев урамне, тăваттăмĕш çурта кĕрес те, кĕсьесене пушатса, ыталаса чуптăвас юра-ту хумне.

## ТАВÇĂРУЛЛĂ ШТУРМАН

Çынна ним мар йĕплеме, такамăн йĕмне хăй сисмесĕрех хывса илме пултаракан Тимĕрç Михалин Валентинĕ вĕçсе килнĕччĕ те Патăрьел тăрăхĕнчен, ай аташатчĕ Чăваш çыравçăлăх тинĕсĕнче. Вăрçă çулĕ-сенче çăмăл çунат сарса çӳл тӳпере ярăннă штурман кирлĕ самантра хурчка пек тапăнма та пултаратчĕ.

Чăвашрадио эфирĕнче кефир ăçнĕ хыççăн, хайхи пилот сывлăш уçлăхĕнче хăйне тăвăрлакан пуçлăха тавăрма шутлать. Хăйĕн пуçĕн-чен пĕчĕкрех пуçлă пуçлăхĕ унăн – Павăл Крысин. Афиноген ывăлĕ Чăвашрадиопа телевиденине Муркашри ашшĕ сухапуçне çирĕп тыт-ма вĕрентнĕ пекех икĕ алăпа тытса пыракан патшалăх çынни – парти тарçи. Радио-телевидени сас-курăмне йĕркелекенсен, вĕсене халăх ку-çне-хăлхине çитерекенсен, юрлакансен профсоюзне ертсе ныраканс-кер, Тимĕрç-маçтăр хăй пĕртте аслă пуçлăх çĕр çине пуснинчен нача-рах пусмастăп тесе шутлаканскер, халăх хушшине ăслăлăх хумĕ хĕмлентерсе янă хушăрах, тăвăл хумне те пуçлăх пӳлĕмĕ умне çапса кăпăклантарма манса кайман.

Çапла нĕррехинче... Чăваш курăм-сас-хура хуçине парти обкомĕ-нче кункăрара йăвалантарса янине пĕлет те Тимĕрç Валентинĕ, çиçĕм-ле хăвăртлăхпа хăлтăртатса илет: тинех лекрĕ!

Кĕç Шупашкарти санитарсем патне КПСС Чăваш обкомĕнчен ха-яррăн шăнкăравлаççĕ: «Чăвашрадиопа телевиденире йĕкехӳре йăва çавăрнă. Пирĕн пата та, Цĕкана та çăхав хыççăн çăхав килет. Хăрушă

чӗрчун пленкӑна кӑшласа ярса халӑха сасӑсӑр тӑратса хӑварма пултарать. Васкавлӑ ӗҫлемелле. Йӗкехӳре кӗтӗвне пӗтермелле. Мускава вӑхӑтра пӗлтермелле...» Обком ячӗпе ҫак хушува панӑ Кузнецов малалла мӗн пулса тухасса чӑтӑмсӑррӑн кӗтет.

Ӑна-кӑна чухламан Афиноген ывӑлӗ Павӑл хӑйне парнеленӗ Аслӑ пӳлӗмре яланхи пекех шанчӑклӑн ларать: ӗҫ хучӗсем айне хушаматне хӳреллӗ кукӑртать, шӑнкӑрава хулӑнрах сассипе хуплать, ҫӗрвар ыйтӑвӗпе килнӗ хористкӑсемпе куҫлӑхне хывсах вӑрах калаҫать, кӗленчерен шуса ӳкнисене ура ҫине тӑма пулӑшать... Ӗҫ шавӗ эфирта янӑрать, экран ҫинче кӗрлет. Акӑ, васкавлӑ татса памалли гепӗр ыйтупа вӑл пропаганда редакторне чӗнтерет. Те столовӑй апачӗ юраман, тем пулнӑ, унччен хырӑм пӑкӑртатнипе, ыратса пӑрса килнипе аптӑранӑччӗ-ха Крысин. Ҫак кӑткӑс ыйту тата... Кузнецов пырса кӗрсенех, чӑтма май ҫуккипе, Павел Афиногенович васкалӑ ҫӗре вашкӑртнӑ. Пӳлӗмре пӗччен тӑрса юлсан, Валентин Михайлович вӑхӑтлӑха та пулин хуҫа вырӑнне ларса пӑхас тенӗ, ларнӑ та, хӑйне мӑн пуҫлӑх пек тыткаласа, умри ӗҫ хучӗсене пӑхкаланӑ. Ҫав вӑхӑтра алӑка тул енчен шаккаса пӳлӗме палламан хӗрарӑмсем кӗрсе тӑнӑ, алӑри шӑршлӑ хатӗр-хӗтӗре кавир ҫине лартнӑ.

– Мӗнле ыйтупаччӗ?

– Йӗкехӳре пирки.

– Крысин ҫуккӑ. Эп нимӗн те пӗлместӗп, кунта йӑпӑртлӑха ҫеҫ кӗнӗ ҫын. Хӑй килсен ыйтӑр, – куллине аран-аран тытса чарса ура ҫине тӑрать Кузнецов.

– Мӗнле ҫуккӑ крыса? – тӗлӗнет хӗрарӑмсенчен ватӑраххи. – Радиона йӗкехӳре кӑшласа яма пуҫланӑ, вӑл... Ара, вӑхӑтра пӗтермесен ӑна, асса кайсан... Хӑвӑрӑн кутри йӗмне кӑшласа кӗрсе каять. Юрамасть аташтарма ирсӗре. Пире обком хушнӑ ҫак пӳлӗмрен пуҫлама. Йӗкехӳре вӑл сӗтел ҫинче сире хирӗҫ пӑхса лармасть, таҫта шкапра-тумбочкӑра-ха. Хӑ, крыса ҫук тесе суясшӑн. Пирӗн ӗнтӗ крысӑран хӑйӗнчен ыйтмалла: хисеплӗ хаспутин, сире наркӑмӑш пама юрать-и? Хӗрсем, пуҫлар сирпӗтме, имҫам сапма. Ахаль те вӑхӑт сахал, хӑвӑртрах, пирӗн хамӑрӑн инструкци. Эпир нимле пуҫлӑх-куҫлӑха пӑхӑнмастпӑр. Хӑ, чиперех крыса ҫук, тет. Крыса хиври пекех ҫаптарать.

Ӑшӗнче тутлӑхлӑн кулса тухать пуҫлӑх пӳлӗмӗнчен Валентин Михайлович. Вара темле ӑнаҫлӑ пысӑк ӗҫ тунӑ пек коридор тӑрӑх саркаланса утса каять.

Хырӑма ҫӑмӑллатса таврӑннӑ Крысин ӗҫ пӳлӗмне кӗрет те...

## ПИÇМЕН ПАШАЛУ

Пурнан пурнăçра çын ăçта кăна çитмест, мĕнле-мĕнле ĕç тумасть пулĕ. Эпĕ те çапла, çамрăк чухне Чăвашрадиона лекнĕччĕ. Унта алăра ручка-кăранташ вылятни çеç çителĕксĕр. Тап-таса чĕлхепе хăюллăн та уççăн калама, пĕр-пĕр çын сассине магнитофон ленти çине çырма ăста пĕлмелле. Ĕçе илес умĕн мана шăпах ку енĕпе тĕплĕн тĕрĕслерĕç. Редакци пуçлăхĕ колхоз председателĕ вырăнне пулчĕ, аллинчи шлепкине çавăрттаркаласа, пӳлĕм тăрăх каллĕ-маллĕ утма тытăнчĕ. Эпĕ унран, ыйтусем пара-пара, интервью илетĕп. Калаçу пĕтсен, вăл мана, çурăмран лăпкаса:

– Шăллăм, чăвашра çĕнĕ репортер çуралнă ятпа саламлатăп. Хăюллă, вăр-вар пул, пĕлнĕ çулпа хастар чуп, – терĕ.

Хĕрĕхсене çитме пуçланă, лапчăкрах питлĕ, пуклак сăмсаллă, хĕрлĕ çӳçлĕ, клеще уралла Кадров, редакци корреспонденчĕ, пуçлăхĕ мана мухтанăшăн кĕвĕçрĕ-ши, кавăн пек пуçне пăрса, симĕс куçĕпе кăнн! пăхрĕ те ман еннелле, çапла каласа хучĕ:

– Тăхтăр-ха, çуралман тиха çине утланар мар, хăй тĕллĕн ĕçлеме пуçличчен халь пайтах тар тăкмалла, паркра хурăн шывĕ юхтарма вĕренмесĕрех темле-ха...

Хурăн шывĕ тенĕрен, эпĕ ăна-кăна тавçăрса илеймесĕрех урама тухса чупрăм. Çывăхри парк тăрăх çӳремерĕм, лавккарах туянтăм вăрман шерпетне. Сумкăран сĕтел çине кăларса лартнă виçĕ литр кĕрекен кĕленче савăта курнипе редакци пуçлăхĕн куçлăхĕ çамки çинех хăпарса ларчĕ, корреспондентне лăкăртăк ерчĕ.

Хамăн йăнăша эпĕ каярахпа тӳрлетрĕм, вĕсене урăх йышши «хурăн шывĕ» юхтарса патăм. Çапах мана магнитофонпа ĕçлеме шанмарĕç-ха, хăнăхтараççĕ. Вĕçĕмсĕр çӳретпĕр Кадровпа ял-ял тăрăх. Вăл малта, аллисене çурăм хыçне тытса, хуçалла саркаланса пырать. Эпĕ магнитофонне, самай йывăрскерне йăтнă. Сысна пăхакансен, ĕне сăвакансен, тырпул ӳстерекенсен паттăрлăхне эфира сапалатпăр.

– Кадров! – терĕ пĕррехинче редакци пуçлăхĕ. – Праçник çывхарнине туятăн-и? Репортаж кирлĕ. Тулăх пурăнакан çемьене калаçтарас пулать.

Мана та унпа пĕрле ячĕ хайхи. Çитрĕмĕр Çăлкуçне. Шыраса тупрăмăр хăтлă çемьене. Ял Советĕнче каланă тăрăх, вĕсен кил-çурчĕ те, пурнăç пуянлăхĕ те, ватти те, вĕтти те пирĕн ыйтусене тивĕçтермелле пек ĕнтĕ.

Ултă кĕтеслĕ çурт умĕнче чарăнтăмăр та вырăсла хапхаран кĕтĕмĕр.

– Акă мĕн, – симĕс куçне мăч хупрĕ Кадров. – репортаж картишĕнчен пуçланать. Уç-ха магнитофонна, кăлар микрофонна. Пуçла çырма!

Эпĕ вăл хушнине тăрăшсах тăватăп. Сурăх макăрчĕ – ăна çыртăм. Витерен тухнă ула ĕне пуçне силлесе му-мулатрĕ. Сасă – лента çинче. Аслăк çинчен кăтиклетсе вĕçсе аннă чăх та çырăнчĕ унта. Чĕвĕлти çерçисем те юлмарĕç.

– Йытă хамлатни çитмест-ха, – картишне пăхса çаврăнчĕ Кадров. – Усрамаççĕ-шим вĕсем нимле Улайкка та? Темех мар-ха ку, кӳршĕре те çырса илме пулĕ анчăка е хамăр фонотекăрах сасă шыраса тупăпăр. Кĕрер пӳрте.

Пит тараватă кĕтсе илчĕç пире кил хуçисем, тĕпелелле иртме чĕнчĕç, сĕтел хушшинех кĕртсе лартрĕç.

– Ĕç вăл шапа мар-ха, шыва сикес çук, тутă хырăмпа тулăх пурнăç çинчен пуплеме те кăмăллă, – терĕ те Кадров, апата пикенчĕ.

Ял çынни Шупашкар хăнисемшĕн нӳхрепре мĕн пуррине йăлтах кăларса лартрĕ тейĕн. Сĕтел ури авăнать пуль. Кадров, пыл кăрчама тутана-тутана, самай хĕрчĕ курăнать, хăлаçлансах калаçа пуçларĕ:

– Эсир, ырă тăвансем, пирĕн кăмăла пула, эфирта янăрăр, ак. Кĕçех пĕтĕм тĕнче илтĕ сире. Кил-ха кунта, шĕвĕркке? Мĕн ятлă эс?

– Раман, – терĕ сĕтел çӳлĕш ача, сăмсине нăшлаттарса.

– Никамран та хăраман апла? Çырас, сначăт.

– Паллах, хăрама çуралман.

– Пурнăçа юрататăн-и эс?

– Юратап. Çупа çăкăр та юратап. Аннепе аттене те, асаттене те. Миркăна та...

– Во епле ăслă ача ӳстеретĕр эсир! Мухтанас пулать унпа.

Кадров кĕçех Раман аппĕне тĕпчеме тытăнчĕ.

– Йĕркипе хушаматна, ятна, аçу ятне асăнса тух-ха? Арăмна та ан хăвар. Çырма çăмăлрах пултăр.

– Аврорин Тельман Иванович, – шкул ачи пекех ответлерĕ лешĕ. – Арăма Октябрина Васильевна тесе чĕнеççĕ.

Кадров савăннипе çунатсăрах пĕлĕте вĕçме хатĕр ĕнтĕ, вĕсене италаса чуптуманни çеç юлчĕ.

– Вăт телей-тĕк телей! – çатăлтатать хăй. – Пĕр çак ятсене асăнни репортажа çĕклентерсе ярать. Çырар малалла. Сначăт. Эсир çуралнăранпах Çăлкуçĕнче пурăнатăр. Лайăх. Авланнăранпах ача-пăча туса ӳстеретĕр. Маттур. Пĕри трактористра, тепри фермăра вăй хуратăр. Аван. Уява ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илетĕр... Юрĕ, юрĕ, миçе гектар суха туни, миçе литр сĕт суни кирлех мар. Цифра радио чĕлхине пăсать.

Ахаль те паллă эсир ĕçченни. Çитĕ сире чăрмантарса. Аслă ăру çыннине итлес. Ватти пуçĕнче ылтăн, чĕлхинче кĕмĕл пулакан.

Аслă кил хуçи, шур сухаллă, шакла пуçлă, курпунланнă мучи, Кадров çине куç айĕн пăхса йăлл! кулчĕ те, ăна курка тыттарчĕ. Корреспондент, кăрчама ĕçнĕ май, старике ыйту хыççăн ыйту пама тытăнчĕ.

– Хăçан çуралнă эс, мучи?

– Иртнĕ ĕмĕртех çав. Пурнап-ха пурпĕрех айланкаласа.

– Чăнах-и? – сиксе тăчĕ Кадров. – Тĕлĕнмелле çын-çке пирĕн умра.

– Ара, ма суяс ман. Ак хĕрес хурса калап. Çĕн ĕмĕр пуçланнине те, тĕнчери çĕн самана хĕвелĕ тухнине те хам куçпа курнă.

Сапаланнă хĕрлĕ çӳçне каялла шăлчĕ те Кадров, кушак куçĕпе мучи еннелле пăхса:

– Сначăт, так, – терĕ, – пуçларăмăр çырма. Ман хыççăн каласа пыр, атту такăнма пултаратăн. Эпĕ, те.

– Эп.

– Иван Александрович Аврорин, – те.

– Эп, Йăван Сантăрч Аврурин...

– Юрĕ, кун пек те кайĕ ват çынна, иртнĕ ĕмĕрте çуралнăскерне, ун чухне ликбез пулман. Малалла çапла кала: пин те сакăрçĕр тăхăрвун пиллĕкмĕш çулта Çăлкуçĕнче çуралнă.

– Çăлкуç хыçĕнчи сĕлĕ ани пуçĕнче çулла çуралнă, – тӳрлетсе каларĕ мучи.

– Та-ак, çуралнă, тейĕпĕр, – кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ ĕнсине репортер. – Унтан мĕн тунă?

Мучи аптранипе шакла пуçне сăтăрса илчĕ, сиввĕнрех хуравларĕ:

– Мĕн тăвать ĕнтĕ çуралнă ача. Пыр каниччен çухăрнă, чĕчĕ ĕмнĕ те паппа тунă. Ӳснĕ май суха тунă, авăн çапнă, пашалу çинĕ. Салтак ячĕ тухнă та алла пăшал тытнă, кайран революцие хутшăннă, кăлхуса кĕнĕ, авланнă та, арăма ача тутарнă. Ватăлнă та, кăмака çине улăхнă. Туршăн та, хĕвелшĕн те калатăп – урăх нимĕн те туман. Тархасшăн ан нушалантар мана урăх.

Мучи çумне çилĕмле çыпçăннă репортер пурпĕрех уйрăлмасть, вĕçĕмсĕр ыйтать:

– Питĕ чаплă пурнăç çулĕ сан, мучи. Халĕ, Иван Александрович, çав çулпа иксĕмĕр пĕрле магнитофон ленти тăрăх ытакланса утса тухар-ха? Так, сначăт, çуралнă, тейĕпĕр. Мĕнле сасăпа кăшкăрнă-ха эсĕ вăл вăхăтра, мучи? Асту-ха? Так, шăпăрт ытти сем! Çыратпăр.

Мучи çăварне уçма ĕлкĕрнĕччĕ çеç, чатăр хыçĕнче ыйхăран вăраннă ача сасси илтĕнчĕ: у-аа! у-аа!

Прекраснă! – аллисене саркаларĕ Кадров. – Мĕнле çухăрни пааллă. Так, сначăт, чĕчĕ ёмни те паллă. Мучи, итле-ха, мĕнле пашалу çинĕ эс ун чухне? Çакă та пит кăсăклантарать пире.

– Мĕн?.. Мĕнле пашалу, терĕн-и çак? – лăх-лăх кулчĕ мучи. – Сĕлĕ пашалăвĕ, ара...

– Юрĕ, – аллинчи тулли куркана пушатрĕ Кадров. – Хамăртан çапла çырса хурăпăр: «сначăт, сĕлĕ пашалăвне пиçнĕ-пиçмен çăвара персе хыпнă та, хулпуççи çине çурла хурса, уя тырă вырма тухса чупнă».

Ывăлĕпе кинĕ хăналаççĕ ман вĕрентекенĕме. Хушăран вăл кăрчамине хăйех ярса ĕçет. Чĕлхи те сӳтĕле пуçларĕ, пуçĕ те усăнма тытăнчĕ ĕнтĕ, хăй пур, çаплах ыйтать-ха:

– Тем те тунă... терĕн эс мучи: революци те... колхоз та... ача та... Пĕлесчĕ, миçе ачана... çитертĕн?

– Эп мар, карчăк тунă ачисене, улттă тан. Киле кĕçĕнни çеç юлнă. Акă вăл – кур, – ăнлантарчĕ старик Кадрова. – Пурăнатпăр çапла, халăхпа тан тенĕ пек.

– Пур-нат-пăр, пур... Сначăт. Аврорр... Ок-тяб-ри-на. Тель... репор... таж, кăрч... – пушшех уçăмсăррăн мăкăртатрĕ ман вĕрентекенĕм, унтан сĕтел çине пуçне лăнк! ӳкерчĕ.

Мучи тинех хашлатса сывласа ячĕ, пуçне пăркаларĕ те:

– Вăт, пиçмен пашалу, – тесе хучĕ.

## КОМАНДИРОВКĂНА ТА КАЙМА ПĔЛМЕЛЛЕ

Мăн Этмен ачи, мăн пуçлă Петр Иванович Волков, Чăваш радиоран хăйĕн тăван Элĕк районне командировкăна кайнă. Тени кӳлли çывăхĕнчи хуçалăхра каçуннăй ĕçне тунă хыççăн вăл ял хуçипе ытаклансах юрă шăрантарнă. Шӳтлеме юратакан ентешĕ эфир корреспондентне кефирпа çеç хăналаман-çке-ха, ырă кăмăл юххинче ма савăнса ишес мар. Чанлă хăна валли чаплă кучченеç те хатĕр ĕнтĕ: хăваран авса ăсталанă вĕр-çĕнĕ карçынккара хурсем мăшăрлăн какаклатнă.

Шупашкара çитсен Петр Иванович машинăран анса юлать те хурсене ачашлама тытăнать. Çав вăхăтра тӳпере хуркайăк карти пĕлĕте çурса кăнтăралла вĕçни курăнса каять. Волков карçынкка пушанса юлнине те сиссе юлаймасть, хурсем хыççăн сиксе те пăхать, анчах... çунат çуккишĕн куляннипе асфальт çине лак ларать. Чĕрĕ

парнесем хуркайӑк картин хӳрине ҫыпҫӑниччненех тинкерет вӗсем хыҫҫӑн.

Тепӗр кӗркунне Петр Ивановичӑн каллех Тени ҫывӑхӗнче пулма тӳр килет, сӑмах май хӑйӗн хуйхи пирки сас кӑларать. Шӳтлӗ калаҫу хыҫҫӑн хуҫалӑх хуҫи ӑна пӗр кӑрман хур парнелет, ҫийӗнчен ҫапла калать:

– Ырӑ ентешӗм, енчен те эсӗ пӗлтӗр пирӗн Тени хуркайӑкӗсемпе хырӑмна саплана пулсан, ҫак кӑрман та тулли пулмастчӗ. Кӑнтӑра вӗҫсе кайса килнӗ хыҫҫӑн вӗсем ҫу каҫиччен авӑ епле йышлӑ кӗтӳ ӳстернӗ. Татах килсе ҫӳре, сан валли парне яланах пур.

Волков ҫавӑнтанпах Тени кӳлли ҫывӑхӗнчен хӑпмасть. Сӗтел ҫинче унӑн нихҫан та хур ашӗ татӑлмасть.

– Командировкӑна та пӗлсе каймалла, – хӑйӗн коллегисем умӗнче мухтанмасӑр чӑтаймасть пултаруллӑ радиожурналист.

## НАУКА КЕРМЕНӖНЧЕН ТЕ СӖРӖМ ЙӐСӐРЛАНАТЬ

### ХУН ЧӖЛХИПЕ ПИНГВИН ЧӖЛХИ ПӖР ТӐВАН ИККЕН

Вӗрентӳ университечӗсем халӗ Совет саманинчи халӑх университечӗсенчен те йышлӑрах пулас ӗлӗк-авал Пӑлхар патшалӑхӗ пулнӑ Атӑл тӑрӑхӗнче. Хамӑр хуларисене шутласа кӑларма та икӗ алӑри пӳрне ҫитмест. Вӗсенчен пӗринче манӑн ҫывӑх тусӑмсем ҫамка тирне картлантарса тӑн кӑлараҫҫӗ. Тинӗсре ҫулталӑк ытла ишнӗ хыҫҫӑн киле канма таврӑннӑччӗ те, мана вӗсем хӑналанса чӗлхе тӑрри якатма чӗнчӗҫ. Эпӗ хапӑлах пултӑм. Ирӗклӗ вӑхӑт сӑмса умне килсе тухсан, акӑ, ӑслӑлӑх ҫыннисем патне васкарӑм.

Мӑн хула урамӗсем тинӗс ҫулӗсем мар ҫав: хытӑ чупакан ҫынран та хулленрех кускалаҫҫӗ автомобилӗсем. Ҫав сӑлтавпах университета каярах юлса ҫитрӗм. Вӗсем савӑк канашне мансӑрах пуҫланӑ иккен.

Кӗнеке шкапӗсемпе пушар каланчи ҫӳлӗш купаланӑ хут тӗркисем хушшинче калаҫса тӑракан ӑсчахсем мана тӳрех ытама хупрӗҫ, алла штрафланӑ пушӑ мӑн курка тыттарчӗҫ.

Тухӑҫ ен ҫеҫенхирӗсенчи халап пӑхаттирне аса илтерекен вӑтам пӳллӗ тӑлпан Тюркин профессор, тӗрӗк филологи факультетне ертсе пыракан, пит ҫӑмартисене кулӑшлатса, шӳтлерӗ:

– Капитан, капитан, йӑл кулсамӑр, кӗсре сӗчӗ ҫӑлкуҫ шывӗ пек тапать. Кӑмӑса симпылла тутансамӑр, ун сипечӗ арҫынна хӑват па-

рать. Пĕлес тĕк, пирĕн хамăрăн докторантура. Мускавсем хушнипе ăна манăннах йĕркелесе пыма тивет. Вăтам Азири хамăрăн тĕрĕктăвансем те наука докторĕ пуласшăн. Пулас ученăйсем тăрăшсах вĕренеççĕ. Пĕрин ашшĕ пире валли парне парса янă. Çăкăр-тăвар хирехирĕç пулнине вĕсем те тăванла ăнланаççĕ. Астивсемĕр?

Ун çумĕнчи, якатнă шалча пек хитре Партас профессор, хун чĕлхи кафедрин пуçлăхĕ, юрлакан хĕрарăм сассипе саламласа, ман алăри чечеклĕ савăта кĕсре сĕтĕнчен тунă хăватлă уйрана хавас кăмăлпа шăнкăртаттарчĕ. Сĕтел тепĕр енче çурхи ăйăр пек кукалесе тăракан Мартынка профессор, университетăн типетту чĕлхисен институчĕн директорĕ, «Хав-вас!» – тесе, пилĕкне пирĕн еннелле аврĕ.

Çав хушăра çурăм хыçĕнче такам мăшлатни илтĕнчĕ. Эпĕ йăпăрт аяккалла шуса тăтăм та, Галапагос утравĕнчи пингвинăнни евĕр шур хырăмлă костюм тăхăннă вăтам çулсенчи каска пуканĕ, сарлака хул-çурăмне выляткаласа, ушкăналла çывхарать иккен. Вăл, пурне те куçран шăтарасла пăхса çаврăнчĕ те, пуклак пӳрнипе тĕллесе тухрĕ:

– Та-ак... Партас хăйĕн кабинетĕнче-офисăнчех. Мартынка та пуш сĕтел умĕнчех, Тюркин та вырăнтах-ха... пака.

Палламан çын юлашки сăмахĕсене ăнсăртран персе янăшăн сехĕрленсе чĕлхине çăтса янă пек тăрук шăп пулса тăнăран тĕлĕннипе эпĕ çумри Партас профессортан шăппăн ыйтрăм:

– Ку тата кам?

– Ку-и? Пĕлместĕн-и, ара? Ку – пирĕн Ку Пан профессор. Тĕрлĕ чĕлхесен танлаштару чухлавĕн кафедринчен, – ăнлантарчĕ кӳршĕм.

– Кузь... – паллашу чĕлхи пуçлас тесе çăвара çурри таран уçма ĕлкĕртĕм кăна, «О-о-о!» – тесе мана чарсах хăлаçланса ӳкрĕ хайхи китайла хушаматлă Ку Пан профессор. – Кузь... Гусь, значăт. Гусь лапчатăй. Пар апла хур ури пек саркаласа лаппуна.

Пирĕн сылтăм аласем наччас лашăланчĕç.

– Эпĕ те пуш алăпа килмен, – Ку Пан профессор шалпар шăлавар кĕсйинчен самай мăн хырăмлă, чиперкке майра ӳкерчĕклĕ кĕленче гуртса кăларчĕ, гавралла мăнкăмăллăн пăхса çаврăнса, ăна сĕтел варрине шак! лартрĕ. Сĕтел силленнипе куркасем Партас профессор пек çинçен юрласа ячĕç. – Трехлетней выдержки. Аспирантка парни – «Парижский поцелуй».

– Виç çул хушшинче сан иçĕм çырли шĕвекĕ самаях хухнă-çке, – пырса тăрăнчĕç кулăш йĕпписем профессор çамкине.

Лешĕ те антăраса ӳкмерĕ, хах-хахлатса хырăмне шăлса илчĕ те, лаплаттарса хучĕ:

– Хамӑн выдержка ҫавнашкал, коллега-юлташсем. Чӑваш парижанкишӗн тунсӑхласа, хальтерех кӑна уҫса ҫуррине кирлӗ ҫӗре силлерӗм. Ҫуррипе – сире хӑналасшӑн. Эсир те хӑнана кӗсре уйранӗпе ырӑ туса ан намӑсланӑр. Атьӑр, тутанса пӑхар. Пӗрле французсла чӑпӑр-чӑпӑр-чӑпӑрик тӑвар. Парижри пӑрушкасем пек... Ха-ха-ха-ха-ху-ху-ху!

Куркасем, ҫунатланса, туслӑх уҫлӑхне вӗҫме пуҫларӗҫ. Чӗлхе саккунӗсемпе кӑна саккусить тунине пула чӗлхесем часах ирӗклӗх юрри тӑсса ячӗҫ. Калаҫура-тавлашура кашниех хӑйӗн ӑсне мала хурасшӑн, кашни пӗр-пӗрне пӳле-пӳле пуплет.

Пуҫ савӑшӗн апатне маларах тутанма ӗлкӗрнӗ Тюркин, Партас тата Мартынка хӗрелнӗ хӑлхи тӑррисене сӑтӑра-сӑтӑра умпӳллӗ пакӑлтатаҫҫӗ.

– Р-р-ректор паян хӑй патне кӗртмерӗ, – кӳршӗрен каҫнӑ чупкӑн автан пек мӑнаҫлӑн пуҫне каҫӑртрӗ Мартынка профессор, – Ничеву! Эпир те лапша мар. Пускай мана директортан кӑларассипе хӑраттӑр. Тумлам куҫҫуль те тӑкмастӑп. Хӑйне те кӗҫех кунец. Ҫитет ӑна хуҫаланма! Ҫитес суйлаври пурпӗр эпӗ пулатӑп университет ректорӗ. Ректор ҫеҫ те мар – президент-ректор. Сан та, Тюркин юлташ, пуҫ кунтӑкне ытларах ҫавӑрттармалла пулать ун чухне. Факультету алӑрах юлать-и е, пӑван ҫыртнӑ янавар пек вӗҫерӗнсе ӗрӗхет...

Ораторӑн хӑлаҫланнипе пушаннӑ куркине тултарчӗ те Тюркин, сассине хӑпартрӗ:

– Пулас ректоршӑн, тӑванӑмӑрсем: хунсем-тӗрӗксем! Тӗппипе!

Ку Пан профессор, ҫаврӑнакан тимӗр пукан ҫине ларнӑскер, ахӑлтатса кулнипе, пӗрре маччана пуҫӗпе перӗнет, тепре сӗтел хушшине анса ларать.

Ҫӑвар тулли пухӑннӑ сӑмахне ҫӑтса ярасран сехӗрленнӗ Партас профессор, сылтӑм аллипе сулкаласа, деканран калаҫма ирӗк ыйтать. Куллегине ӑнланнӑ Тюркинӗ пуҫне пӗкет те, Партас профессор халиччен илтмен темле чӗлхепе сӗрмен кусатӑран сасси пекрех те, вӗҫенкайӑк пасарӗнчи шӑв-шав майлӑрах та, пӗр сывлӑшпа тенӗ пек, лекци вуласа пачӗ, куҫлӑхне хывса сӗтел ҫине хунӑ хыҫҫӑн, никам та алӑ ҫупманнине кура-ши, хыткан алӑ тупанӗсене хӑйех шапӑртаттарса илчӗ.

Ӑнлантӑр-и мӗн те пулин? – аудиторире студентсенчен ыйтнӑ чухнехи пек яланхилле пуҫне ялт! ҫӗклерӗ факультет пуҫлӑхӗ.

Ку Пан профессор нумай хутлӑ чул ҫурта ишӗлтерсе антарасла ахӑлл-ахӑлл-ахӑлтатнисӗр пуҫне эпир нимӗн те калаймарӑмӑр.

– Шӑпах ӗнтӗ ҫакӑ – пингвин чӗлхи, – университет умӗнче питӗ

тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн пиншак çухи çине орден тирсе ярас умĕнхилле кăкăрне каçăртрĕ Тюркин. – Халлĕхе ăна пирĕн Атăл енче Партас профессорпа эпĕ çеç пĕлетĕп. Партас тусăм кутран патак панă пекех çине тăрса вĕрентрĕ ăна мана. Хунсем, ытти тĕрĕк халăхĕсенчен уйрăмрах, селĕпрех те тытăнчăкрах, сăмахсене çăтса калаçнине шута илсен, шăпах эпир çĕр чăмăрĕн кăнтăр çурринчи гата Антарктидăри пингвинсен чĕлхин çемйине кĕретпĕр пулас. Ун пирки малашне пирĕн тĕнчене тĕлĕнтермелли ăслăлăх ĕçĕсем те пулĕç-ха. Халĕ вара эпир, Партас профессорăн çĕнĕ тĕпчевĕшĕн тепре кĕреке чанĕ çапар та...

– Чăнкăлл-чăнкăлл-чăнк-чанк!

– Ах, тутлă! Уф, уçă!

Мартынка пĕрремĕш класс ачи пек алă тăратрĕ:

– Мĕн çинчен каларĕ вăл пире, Партас профессор? Шутсăр пĕлес килет.

– Кăшт-кашт çак торта ĕмкелесе çуллакалăр та, вара итлĕр, – шăпланма ыйтрĕ асли. – Акă, йĕркипех куçарса паратăп Партас профессор хăйĕн открытийĕ çинчен пингвинла хыпарланине:

«Эпĕ, – терĕ коллега. – Ним пытармасăр, куçран калатăп. Эпир, тусăмăрсем, наука докторĕсем. Çапах та... Ку Пан профессор та, авă, алăкран кĕрсенех, пире шута илсе тухнă вăхăтра мĕн терĕ шахвăртса? Аса илтерем: «Тюркин та вырăнтах-ха... пака». Факультет чăхăмлама пуçланине мансăрах кураççĕ-туяççĕ иккен. Эпĕ, хамăрăн ăçе паянхи чупура тĕнче шайне çитерес тесе шухăшласа пурăннă хушăра, чутах чире каяттăмччĕ вĕт. Юрать пĕррехинче телевизор экранне кĕске çунаттисемпе çатăлтатса, лаптак урисемпе вылянтарса ташлакан пингвинсем тултарса лартрĕç. Хăлхана «шыв хĕрринче авкаланма хытă хăйăр кирлĕ...» тенĕн хаваслă кĕвĕллĕ юрă пырса кĕчĕ. Чăтаймарăм, ура çине сиксе тăрса, хам та ташша ятăм. Чисти хунла сăмахсем илтĕнеççĕ вĕсен ушкăнĕнчен. Тĕлĕнмелле пĕрпеклĕх: пуплевĕ те, юрри те, ташши те, хăйсене хăйсем тыткалани те пĕр манерлĕ. Тарăнраххăн шухăшланă май, çакна та пĕр пĕтĕмлетрĕм. Чăннипе илсен, хунсенчен çурри ытла пуль пингвин пек пăркаланса мăнаçлăн утать çĕр çинче. Хамăрăн ректортан пуçласа Мартынка директор таранах – каснăлартнă пингвин. Ку Пан профессор та авă йăрăмлă костюмпа пушшех пингвинсемпе çывăхрах пек.

Çĕнĕлĕхе никам та вăрттăн туртса илме ан пултартăр тесе вара эпĕ пингвинсен пурнăçне çулталăк çурă тĕпчерĕм, ун хыççăн çакăн патне пырса тухрăм: хун лингвистики те вăл галапагос лингвистикипе пайăрлă. Çавăнпа пингвин чĕлхине вĕренмешкĕн шутсăрах йывăр пулмарĕ. Студентсем те ăна хĕвелчамăш çинĕ пекех шĕкĕлчеме пултараççĕ.

Пĕр вăхăтрах хамăн çывăх тусăма Тюркин профессора та пингвинла вĕрентсе пытăм. Пингвинсемпе те, пуçлăхпа та пĕр чĕлхе тупрăм. Вĕсен те, пирĕн те – чĕлхесем пĕр майлах. Икĕ чĕлхен хутăш грамматикине тума та, пингвин-хун, хун-пингвин чĕлхисен словарьне кăларма та кĕçех хатĕрлесе çитеретĕп ĕнтĕ. Куратăр, пирĕн кафедра сăмах калама хăмаран тăваткалласа çапса тунă кафедра умĕнче те тĕлĕрсе лармасть, чĕлхене якатсах, пуянлатсах тăрать. Çапла майпа эпир хамăрăн факультетра кăна мар, мĕнпур университетра, тĕрĕк халăхĕсен тĕнчинче революци тăватпăр. Тĕрĕксем те пингвин чĕлхипе çывăх тăраççĕ-çке!»

Тюркин профессор куçарăвне итленĕ май, шухăшăма анлăлатса та тарăнлатса тăтăм. Вуншар çул хушши укиянсем тăрăх караппа ярăнса ăçта кăна çитмерĕм пуль. Африкăн кăнтăр енче куçлăхлă пингвинсене сăнаса чуна кантараттăм. Галапагос утравĕсенчен пĕринче императорски пингвинсемпе чăнтарсах ташă çапни те пулнă. Вĕсен йăнкăр-йăнкăр сасси, юрăпа ташă ансамблĕн хорĕ майлăн янăраса кайрĕ ун чухне. Эпир ĕлĕк-авал çырма хĕррисем тăрăх çĕр пӳртсенче пĕрлешсе пурăннă пекех кăнтăрти пингвинсем те тинĕс çыранĕсенчи тĕплĕ йăвасенче хăйсене евĕр ушкăнланса пурăнаççĕ. Эпĕ ятарласа вĕреннĕ чĕлхеçĕ-ученăй мар та, инçет çулçӳрев морякĕ-капитанĕ çеç те, пингвинсемпе туслашса çывăхланма та, вĕсен çепĕç чĕлхине вĕренсе туслăн-гăванлăн калаçма та тавçăрайман. Акă халĕ Партас профессор мана та хаваслантарса мачча таранах вĕçтерсе ячĕ. Мурманскра кĕтекен хамăн «Пингвин» пăрахута ыранах кăнтăралла, пингвинсен çĕршывнелле хăвалас килсе кайрĕ. Мартынка профессор «Эврика», «Виктория!» тесе кăшкăрса янипе шартах сикрĕм, куç умĕнчи пингвинсен шавлă ушкăнне те куçран çухатрăм. Вăл, чаплă сăмах каласшăн пулас, аллине тăратрĕ:

– Çитет мăнкăмăлланнă ректор-патша куçĕнчен пăхса! Галапагосра Типетту университетне уçмалла! – терĕ профессор хулпуççийĕсене сиктерсе.

– Сана унта шăпах ректора суйлаттаратпăр, – хавхалантарчĕ профессора Тюркин. – Сана, Ку Пан юлташăмăр, тĕрĕк чĕлхисен танлаштару чухлавĕн кафедри кĕтет унта. Çитет пирĕн патра рядовой профессорта чакаланса. Партас профессор икĕ тăван чĕлхе факультетне йĕркелет. Сире унта хамăрăн çывăх тусăмăр Тимĕр Куçма çичĕ тинĕс урлă илтерсе чиперех илсе çитерĕ. – Факультет пуçлăхĕ, университетăн ăслăлăх Канашĕн членĕ Тюркин профессор ман еннелле пĕтĕм кӳлепипе çаврăнчĕ. – Халĕ Куçма юлташа хун чĕлхи кафедрин профессорне суйлас та, тĕрĕк филологийĕн факультечĕн ăслăлăх канашне йышăнар. Кам та кам...

Куна илтнипе Ку Пан профессор, ыттисенчен юлмасăр, сылтăм аллине маччана çити ялт! çĕклерĕ, сулахаййине ман еннелле тăсрĕ:

– Пар лаппуна, профессор хаспатин.

Партас профессор иртнĕ ĕмĕр варринче хăй учительте ĕçлеме пуçланă чухнехи пĕрремĕш ĕç укçипе туяннă аçам пек вăрăм плащне шкап хыçĕнчен илсе тухрĕ те...

– Тăхăн, тусăм, пирĕн, профессорсен тумĕ, манти ку, – терĕ пуçласа вĕренекен ача чĕлхипе.

Тюркин профессор эртелпе çулласа тасатнă тăваткал торт куруппкине ман пуç çине пусса лартрĕ те, яланхилле ăшшăн йăлл! кулчĕ:

– Саламлатпăр! Малашне те туслăн пурăнăпăр, алла-аллăн тытăнса ĕçлĕпĕр. Çĕнĕ çитĕнӳ туса хун-тĕрĕк ятне тĕнче тавра анлăрах сарар!

Кĕçех эпир профессорсемпе инçе çулçӳреве тухатпăр. Умра – пингвинсен тинĕс çĕршывĕ.

19.09.2007 ç.

* * *

Ягуров профессор Юманлăхран тухнă та, шăлавар кĕсйинчи юман туратти аптратнипе ниçта кайса кĕреймесĕр, вăрман тăрăхĕнчи Хăркаса хашкаса çитет.

– Ăçта хумалла-чикмелле-ши ку хăрăк турата? – тĕл пулнă карчăкран ыйтать вăл.

– Ăçта мĕн чикмеллине те манса кайрăн-им, ачамккă? Юрату вутне чĕр туратпа чĕртсех чĕре кутне хывнăччĕ-çке аллă çул каялла иксĕмĕр?.. Хăçан тепре мĕн хывмаллине те манса кайман-ха эпĕ сана кунĕн-çĕрĕн кĕтнипе. Атя уттарар часрах килелле. Хăрăк турата та чĕртĕпĕр. Çунтăр-и юрату вучахĕ! Кĕрлетĕр таврана ялкăштарса!

* * *

Леш тĕнчерен «по совместительству» ĕçлеме университета вăхăтлăха чĕнсе килнĕ Велимир Хлебников ĕç укçи илнĕ те, канма таврăнать. Урамра ăна çамрăксем сырса илеççĕ.

– Мĕн ыйтупаччĕ? Тасалăр ман умран!

– Кам вара эс, пире хирĕçлекенскер?

– Эпĕ... Эпĕ – чĕлхе академикĕ! Хлебников писатель.

– Хлеб?.. Ага-а, вовремя попался. Как раз пирĕн закуска валли хлеб çук. Можь пире пĕр кусок та пулин тупса паран?.. – хуптĕрлет шавлă камантă.

– Лавккана çитеймен-ха эп, тăванăмсем, Агаков пек «Ылтăн вăчăра» та çакман майран, – шӳтлерех калаçса хăрушă ункăран хăтăласшăн классик-литератор. – Акă, «Хура çăкăр» пур... Сирĕн чăваш çĕрĕнче пĕçернĕскер.

– Какой еще хура? Тимĕр татăкки е чукун катăкки?

– Тимĕр-тăмăр мар, Илпек Микулайĕн романĕ. Тутанса пăхманим ăна? Мĕнле тутлă... Вуланăçем хырăм тăранса пырать.

– Çиччас кĕсйӳна тавăрса вулатпăр та, академически банкет тăватпăр. Но только... без Ильбека, – тесе хурахланнă йĕкĕтсем академикĕн укçа хутаçне йăкăртса волейболла выляма тытăнаççĕ, зачеткисене кăлараççĕ те:

– «Пиллĕк» лартмасан чăваш литературишĕн, мутри, Хлебников, Микулай тусупа виличченех хура çăкăр сăмси кăшласа-ĕмсе пурăнма тивет.

Пĕрин аллинче сысна пусмалли çĕçĕ йăлкăшнине асăрханă Велимир Хлебников умри кĕсьерен ручка кăларма васкать.

## РАÇÇЕЙРЕ ПУРĂНАКАНСЕНЕ ШУТА ИЛНĔ ХЫÇÇĂН

Шупашкар хыçĕнчи Станьялта миçе çын пурăнать-ши? – пĕлесшĕн çунаççĕ чăкăури журналистика факультетĕнче вĕренекенсем.

– Пĕр çын, – кулкаласа пĕлтерет Виталий Петрович Никитин.

— Кам-ши вăл?

– Суймастăп. Чăн-чăнах. Станьял вăл – Станьялта та, Чăваш тĕнчинче те, Раççейре те пĕр Станьял.

## ТАРÇĂРА

Университетра вĕренӳ пырать.

ПРОФЕССОР: – Тряпкин, доска çине çырнине хурат-ха?

ТРЯПКИН: – Тупнă ухмахсем. Эпир сире мĕншĕн укçа тӳлетпĕр? Тарçа кĕрĕшрĕр пулсан, эпир çырнине хăвăрах хуратăр. Урайне те кĕçĕр хăвăрăнах çумалла пулать ак...

## ЧĔЛХЕ ТУХТĂРĔ

Виталий Никитинпа Якур Сатуров Шупашкар çумĕнчи Станьялла кайнă. Хура мунчара сипленсе хĕрнĕ хыççăн вĕсем клубалла çул тытнă.

– Тăвансем-ентешсем, эпĕ сире чăвашла сыватма хамăрăн чи вăйлă тухтăра – чĕлхе ăстаçине – илсе килтĕм. Кама мĕн канăçсăрлантарать çав енĕпе, унран пулăшу илме пултаратăр, – халăха пĕлтерет Никитин-Станьял. – Чĕлхе доктăрĕсем те вĕсем – этем тухтăрĕсемех.

Çĕрле вĕсем патне йăркка Мархва явкаланса çитет те Сатуров умне кукленсе ларать:

– Ах! Ах тур-тур, мĕн тăвас ку чĕлхене, вĕлерет кĕçĕтсе...

– Çапла хăватлă вăл чăваш чĕлхи, чĕрĕ, йĕкĕлтетсе-кăтăклантарсах тăрать чун-чĕрене, – тесе профессор, филологи докторĕ сăран сумккинчен кĕнекесем кăларать. – Хăшĕ вăйлăрах чĕртĕ-ши сире: фонетика, морфологи, синтаксис...

– Ах, чăтаймас, часрах... Хфонне-хăвăнне шанан пуль, етика-морфи кирлĕ мар кунта, эп, Мархва, мархваллах-хамăрлах урки тума хатĕр, Якуркка тухтăрăм... çитаксене хывар та... çын та так сиссе юлаймĕ, пер кĕнекӳсене çӳп шăтăкне, чĕлхе вăл теурипе – ăс юррипе канăçланмасть... ах, вилен... еп...

Шакла пуçĕ çĕкленнипе анранă «тухтăрăн» аптăраса ӳкнĕ чирлĕ хĕрарăма чĕртесси çеç юлать.

## КАМ ĂÇТАН ТУХНĂ

Кураккасси университетĕнче экзамен пырать. Чăваш литературин илем керменне купалакан, ĕмĕр-ĕмĕр хушши ывăнма пĕлмесĕр сăнар лачакинче чакаланакан кумусапиенссем ăçтан-муртан çăрăлса тухни çинчен те ыйту пур иккен студента чĕтреме ертекен хут таткинче. Йышăну туррисем çамрăк чураран пуç мимин хăрах катăккине кăтартма ыйтаççĕ.

АСЛИ: Сирĕн тĕп ыйтăва, Сидоров, тепĕр хут саспа вуласа паратăп: Чăваш писателĕсем ăçтан-ăçтан тухнине алфавит йĕркипе каласа памалла. Тархасшăн?

СИДОРОВ: Агивер – Нĕркеç çырминчи лачакаран, Алагер – çамрăк паттăрсен лагерĕнчен, Артемьев – Саламли майринчен, Алексеев – ăсан чăмăрккинчен, Асамат – чĕнтĕрлĕ кĕпер айĕнчен, Ахах – шывлă çырма чулĕнчен, Ахун – утă валемĕнчен, Бурнаевский – чăваш Будайккинчен, Вашки – вашкăртса утаканран, Воробьев – сарай виттинчи салакайăк йăвинчен, Галкин – юптаракан чавкаран, Грибанов – вырăсла-чăвашла йӳçĕтнĕ кăмпа каткинчен, Давыдов – анатри чăвашран, А. Дмитриев – Çавал авăрĕнчен, Желтов – сунтал çинче те

туптанакан ăс чанĕнчен, Егоровсем – хăйсем тунă çĕршывран, Илпек – хура çăкăртан, Ирхи – шурăмпуç сывлăмĕнчен, Илепер – выльăх курăкĕнчен, Исемпек – Измаил хулинчен, Кабаков – шавлă хупахран, Кипеч – ĕмĕр сакки сăпкинчен, П. Кузьмин – пионер тантăшĕн çăл куçĕнчен, Краснов – пуççăр хĕрлĕ юланутçăран, Кошкин – вăрман кушакĕнчен, Кузнецов – чăваш халăхĕн тимĕрç лаççинчен, Кӳлвар – хĕрлĕ çар казакĕсен хумлă кӳллинчен, Лисаев – никам аллине чутах ай! кĕреймен тилĕрен, Львов – саркун çĕршывĕнчи арăсланран, Маяксем – шăхран маякĕнчен, Овчаров – сурăх витинчен, Орлов – ялавпа çавăрнă ăмăрткайăк йăвинчен, Ржанов – ыраш уйĕнчен, Родионов –вун ик ял уйĕнчен, Рыбкин – çăрттан пулăран, Сарпи – вырăс сар пикинчен, Сарине – сар ĕнерен, Скворцов – хĕрлĕ мăкăнь ăшĕнче юрлакан Укахшăпчăкран, Сементер – пăлхар хулинчен, Смолин – тамăкри вĕрекен сăмала хуранĕнчен, Таллеров – ылтăн укçа енчĕкĕнчен, Терентьев – çырана çапакан хумсенчен, Туркай – Турă кайăкĕнчен, Г. Федоров – арçурисĕр, туратлă вăрмантан, Чебанов – чаппан айĕнчен, Чебоксаров – Шупашпа Картан, Чаржов – чаршав хыçĕнчен, Чулкаç – Лапшу Çтаппанĕнчен, Шавли – чулçырма шавĕнчен, Шемекеев – хура меккерен, Шăпчăк – сад пахчинчен, Шупуççынни – çырма пуçĕнчи çăлкуçран, Ястран – ясартан, Ялкир – ял хирĕнчен, Ялавин – ашшĕн ялавĕ хумĕнчен...

КĔÇĔННИ: – Эсир тата камсем çинчен лайăх пĕлетĕр?

СИДОРОВ: – Ефимов – Серафима ангел çунатти айĕнчен, Павлов – Ушанарти хресчен кассинчен, Петров – çамрăк коммунистсен кавалерийĕнчен, Пулар – яланах Микул Пулар турăран...

АСЛИ: – Малатеццă. Наука кандидачĕн тепĕр кандидачĕ çуралнă ятпа саламлатăп. Киле кайсан аçу-аннӳне пĕр вăкăр самăртма шахвăртса хăвар. Ученăйсем те писательсем пекех пĕç хушшинчен кăна тухманнине пĕлчĕр вĕсем те.

## АСЛĂ ВĔРЕНТЕКЕН

**Профессор:**

– Петров, каласа пар-ха Иван Яковлевич çинчен.

**Петров:**

– Иван Яковлевич 1848 çулхи ака уйăхĕнче Тутарстанри Теччĕ Енчи чăваш ялĕнче çуралнă, Чĕмпĕрте чăваш шкулĕ уçнă. «Сармантей» сар чăххи тунă çăмартана ăшаласа çисе пурăннă. «Автан» авăтсан юрланă. Унăн çывăх кайăкĕсенчен пĕри «Чакак» пулнă. Вăл «Выр-

тмара» пĕрмай «Лаша ыыранă». Мăн аслашшĕсенчен «Арман тума» та вĕреннĕ.

Кăнна Кушки ачи иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕнче Мускавра кăннă. Çĕр çăтнă çĕртен ăна чăваш тĕнчине Кашкăр Генкки, Хĕрлĕ Микулай, Курак Арăсланĕ, Сантăр Кинатийĕ туртса кăларнă. - Çавăнпа вăл вилĕмсĕр, халĕ те пирĕнпе, пирĕн аслă вĕрентекен.

**Профессор:**

– Маттур. Чи лайăх паллă, «пилĕк çăлтăр», санран ку хуравшăн. Сидоров, санăн шухăшу еплерех Иван Яковлевич çинчен?

**Сидоров:**

– Иван Яковлевич пĕлтĕрхи ĕмĕрĕн 23-мĕш çулĕнчи кăрлачра Чăвашстанри Патăрьел таврашĕнче паттăрсен ялĕнче хĕвел уринчен çакланса çӳл тӳпене улăхнă, ака тунă, тырă вырнă, авăн çапнă, тăварлă умма пыра ларасран уйран ĕçсе хырăма паклаттарса пурăннă. Вăрçă вутĕнчи вĕри çатма çинче Вилĕмпе хирĕç куçа-куçăн пăхса сехре тапшни ташланă, ăшаланса хĕрнĕ те, çапăçу сцени çинче салтаксен хорĕпе «Урра!» юрри шăрантарнă. Орден-медальне йăтайми пулнă вăхăтра ăна, шеллесе, Конев тимĕр татăкки паман, хастарлăхшăн тав тунă çеç. Вăрçă паттăрĕ ĕç паттăрĕсен ялне таврăнсан, пĕр хушă шкул ачисемпе выляма пикеннĕ, каçпа вăййа тухнă хĕр-пикене астарнă, чунне кантарайман та, алла каллех хĕç-пăшал – хурçă перо тытнă, асаплансан-асаплансан, çыравçăсен сăртне улăхса хăйĕн ялавне çакнă. Пуçĕ ăспа тулса мăнланса пынă май чăваш журналистикин пĕрремĕш профессорĕ Чăваш çĕрне шăнăçайми хаçатçă вĕрентсе кăларнă.

Алманчă ачи çĕнĕ ĕмĕрте те кăнма шутламасть-ха, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларать, журналист хыççăн журналист калăплать. «Тăван çĕртен хакли çук» тесе «Çĕнĕ çулпа» малалла утать...

**Профессор:**

– Тăхта-ха эс, Сидоров, чарăн. Эпĕ пĕр Иван Яковлевичĕ çинчен ыйтатăп, эсĕ тепĕр Иван Яковлевичĕ пирки пакăлтататăн.

**Сидоров:**

– Çу-ук, профессор хаспатин, пĕртте пакăлтатмастăп, эпĕ Тенюшев çинчен кăна каларăм. Иван Яковлевич вăл - пирĕн чĕп-чĕрĕ, вилĕмсĕр, чăн-чăн паттăр, чăн-чăн Паттăр ял чăвашĕ, пирĕн аслă вĕрентекен.

**Профессор:**

– Маттур! «Чи лайăх» паллă тăвăпăр... «Атăл» шывĕнче ишсех.

## ÇЁТМЕЛЛЕ МАР

**Профессор:**

– Нӳшкассов, Тăхти миçемĕш çулта çуралнă?

**Студент:**

– Тăхта-ха эс. профессор, эп Тăхтипе хăйĕнпе калаçса иличчен. Кала-ха, эс ху пĕлетĕн-и тата Элкер хăçан çуралнине?

**Профессор:**

– Паллах, пĕлетĕп, Элкер ентешĕм пурнăçне хам çуралнăранпах тĕпчекеискер, калатăп – 1894 çулта.

**Студент:**

– Пĕлместĕн, Кушлавăш текен вун икĕ ял уйĕнче çеç çĕтмелле мар, уçлăхалла та тинкермелле. Элкер вăл тĕнчепе пĕрлех çуралнă. Тăхти вара «Колчакпа» пĕрле илем тинĕсĕнче ишекен çунатлă «Пĕр кĕтӳ кашкăр» тытнă, «Шерхулла» кĕтӳçпе иккĕшĕ шашлăк пĕçернĕ. 1889 çултанпах пирс Илле мучи Элкер çăлтăрĕ çине хăнана чĕнет.

**Профессор:**

– Пултаратăн, сан пек «Шăллăма шырама эп Мускава кайни» пулманччĕ-ха. Чăваш çăлтăрĕсене мачча çине пăхмасăрах курма-тупма пултарнăшăн сана Çемен Элкер преминех паратăп – зачетку çине «пиллĕк» лартатăп. Шашлăк пыра ан лартăр тесе «Витаминсем» пирки çеç шухăшлар.



**– Эх, профессор, наука докторĕ, сирĕншĕн хама намăс пек туйăнать.**

**– Ан та калăр-ха, юлашки вăхăтра тем пуçа çухатакан пултăм, юрать-ха аспирант чухнехи çак çĕлĕк сыхланса юлнă.**

## ÇĂКĂР-ТĂВАР ХИРЕ-ХИРĔÇ

Хамкин профессор ĕçрен тухсан вăрман хĕррипе уçăлса çÿреме юрататъ. Вырăнĕ питĕ илемлĕ-çке, хулан симĕс паркĕ чуна çĕклентерсе яратъ. Кăмăл пусăмне хăпартмалли капăр çурт кашни утăмра тенĕ пекех. Пĕрне кĕрсе пĕр стакан пушатать те теприн патне шăхăркаласа юрласа çитет. Эртел çинче тăп-тăрă пуçпа курăнакан хисеплĕ çын тепринчен тата теприн патне хавхаланса утнă май хальхинче те самаях хĕрчĕ, пăхать – ун умĕнче прапорщик пакунĕллĕ виçĕ мент тăра паратъ. Мĕнле-ха капла? Куçа хупсан та, уççан та виççĕшĕ те Хитров. Пуçа пуçлăх каланă сăмахсем ыраттарса ячĕç. «Хамкин коллега, тем, эсир юлашки вăхăтра ытла та тĕлĕнтермелле тытакан пултăр хăвăрахăвăр, тен, психиатрпа канашласа пăхатăр?» Сывах-ши тесе вара вăл хăлхине чĕпĕтсе пăхрĕ. Самаях ыратать. Туйăм пĕтмен-ха. Çапах та, ялан ĕлкĕрсе пырайман чее студент университетран кăларса янă хыççăн, асамçă пулса тăнă-шим? Хамкин ăна хăй ертсе пыракан факультетран кăларса çапассишĕн тарăхсах тăрăшнăччĕ, сĕннĕ укçана та илмерĕ. Акă халĕ виçĕ Хитровĕ те аллисене карттус сăмси çумне çĕклесе куларах ыйтрĕç.

– Ăçталла çул тытатăр, хисеплĕ профессор?

– Кил-ле-лле, Хитров. Ăсатса ямăн-ши?

– Хаваспах.

– Тав-та-пуç сана, ман-на ман-ман-шăн.

Хитров прапорщик тахçанхи вĕрентекенне машинăна кĕртсе лартрĕ те, Фучик урамĕнчи паллă çурта тĕрĕс-тĕкелех илсе çитерчĕ.

– Халлĕхе сирĕн кил çакăнта пулать, – каллех кулса сывпуллашрĕ сыхлавçă.

Урăлтаркăчра каннă хыççăн Хамкинăн тухтăр патне те кайма кирлĕ пулмарĕ, ректор ăна хăйĕн пÿлĕмĕнчех «сиплерĕ». Тек ĕнтĕ вăл факультет пуçлăхĕ мар, пуртвĕл йăтса çÿрекен профессор кăна. Хуйха çуса тасатас тесе каллех хăйĕн савăк çулĕпе пырать. Хыр урамĕнче куçĕ умне каллех виçĕ Хитров тухса тăчĕ. Виççĕшĕ те пĕр саслăн саламларĕç:

– Хэлло, хисеплĕ профессор, çăкăр-тăвар хире-хирĕç.

## КУЛИНАРИ УЧИЛИЩИНЧЕ ХĂНАРА

Кулинари училищинче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Тройкина кула-кула сочинени вулать. Пултаруллă студент юратнă

çыравçăн, чăваш сатирикĕн Казановăн пурнăçĕ çинчен тĕлĕнмелле ырласа та юмахласа çырнă. Учительница вара, хăйĕн ĕçне ытларах палăртас шутпа, коридора пĕлтерӳ çапать. Университетран укçапа кăна улăштарса аран-аран диплом илсе тухнăскер вăл «к» вырăнне «х» саспалли йăнăш лартса хунă çав...

Палăртнă кун лекцисем янраттармалли пӳлĕм-сарая пĕтĕм училище çапса хĕстернĕ пек тулнă. Пурте вар хытиччен ахăрттаракан тĕнче шайĕнчи кулăшçа чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Директор ĕçĕсене вăхăтлăха иурнăçлакан Котлеткин акă чаплă хăнана хулран çавăтсах хĕрлĕ пустав витнĕ вăрăм сĕтел хушшине чинлăн кĕртсе лартать. «К» саспаллине калаймасăр «ххă» латса нушаланакан селĕп Тройкина çинçе сассипе пĕлтерет:

– Паян пире тĕнчене тĕлĕнтернĕ Хазанов хаспатин кулăш урапи çинче ярăнса кăтартать.

Тулли кĕлеткеллĕ чăсмакрах Аркадий Петрович, кăкăр кĕсйинчен лӳчĕркеннĕ хут таткисем кăларса, хурарах çăра çӳçлĕ пуçне çĕклемесĕр вулать те вулать хăй така хуранĕнче качака мăйракине пĕçерсе шуйттана кăшлаттарни çинчен. Зал ихиклетет, хаххахлатать, ухухлатать. Çулăм çинчи казан пек хĕрсе пыракан Казанов-Хазанов, хăйпе мĕнле мыскара пулса иртнине туймасăрах, пуш така хуранне пуç çине лартса тĕнче уçлăхне вĕçнĕ истори пирки хăпартлансах малалла юмахлать.

Алă çупнипе кисренекен стенасем хушшинче мухтав сасси янăрать:

– Артист та артистах эсир! Паян çĕнĕ маскăпа тухса чăвашланса кăтартрăр. Салам Атăл çыннисенчен!

– Эсир чăннипех паянхи кул-паттăр!

Котлеткин пурте илтмелле хыпарлать:

– Эпир Хазанов кулинара çур ставкăпа вăхăтлăха ĕçе илме йышăнатпăр. Пире шăпах опытлă повар кирлĕ. Сцена çинче пуш параппан çапиччен... Килĕшетĕр пуль?

Аптăранă хăна аллисене саркаласа тăрать, пуçра тĕвĕленнĕ шухăшне зал тăрăх чуптарать:

– Чăн та, писатель-пенсионер ячĕпе кĕлмĕçленсе çӳриччен, кулинари училищинче пăтă пĕçерсе сире усă кӳрес, казан-хуран çумĕнче хамăн та хырăм яланах тутă пулĕ.

Кулинарсен ал тупанĕнчен çĕкленнĕ хум пит-куçне тăвăллăн пырса çапнипе йăнк тӳрленсе тăнă Казанов писатель тинех хăй те çăвар тулли кулса ярать.

# МУНЧА УМĔНЧИ ПĂШĂЛ ПĂТТИ

## ЫРĂ КĂМĂЛ ИНКЕКĔ

Йышлă пирĕн кантурта çын. Коллективра эпир, арçынсем, сахалăн тулĕк. Ĕçлетпĕр, вăхăта ирттеретпĕр. Мĕн кăна шухăшласа кăлармаççĕ пулĕ мăнтарăн хĕрарăмĕсем. Вăхăтне таçтан тупаççĕ. Ĕçе наукăллă йĕркелекен пайри Сима Семеновнана ку енĕпе çитекенни никам та çук.

Туптикун. Кăнтăр апачĕ çывхарать. Шăп вуниккĕре пӳлĕме уява хатĕрленнĕ пике пек тумланнă Сима Семеновна пашлатса пырса кĕчĕ.

– Ну, ăмăрткайăкăмсем, – кулкалать хăй чеен, – çĕршер тенкĕ кăларса хурăр. Кӳрĕр-ха арăмăрсем апата панă укçăрсене кунта? Ия, директорăн арăмĕ ача çуратнă. Этемлĕх йышĕ хутшăннăшăн çĕр тенкĕ шалккă-ши?

Эпир укçасене Сима Семеновна умне кăлара-кăлара хугăмăр. Апатланаймарăмăр, пӳлĕме юлнă хаклă йышши духи шăршипех тăрансa лартăмăр.

Ытларикун вăл урăх тумпа, пушшех те капăртараххипе, вашлаттарса çитрĕ. Тути хĕррисене, куç хупанкисене, пит çăмартисене сăрлама писевне пĕртте шеллемен хăй. Чăшăл-л! тăтăмăр ăна курсан.

– Ăмăрткайăкăмсем, хуйхă пирĕн коллективра, – халь-халь йĕрсе ярас пек пĕлтерчĕ вăл кĕнĕ-кĕмен, – чăтма çук пысăк хуйхă. Директорăн хунямăшĕ вилсе кайнă. Тăпри çăмăл пултăр та, мĕн тăвăн, пулăшмаллах...

Юнкун кăнтăр апачĕсĕр ĕçлени ырра илсе çитерес çуккине туйса, икçĕр тенкĕ чиксе тухрăм. Хăра-хăрах кĕтсе илтĕмĕр Сима Семеновнана. Ăна алăкра асăрханă-асăрхаманах, хăнăхнă йăлапа, сылтăм алă шăлавар кĕсйине пашт! чăмса анса кайрĕ.

– Паян пирĕн пурин те савăнмалла! – аллинчи хаçачĕпе сулкалашрĕ вăл. – Вуларăр-и? Директора Хисеп грамотипе наградăланă. Пирĕн те парне хатĕрлемелле. Çĕршер тенкĕ мар, икçĕршер тенкĕ пухар-ха. Ан хытăр, ют çынах мар, хамăр пуçлăх.

Каллех шăнчĕ кăнтăр апатне каясси.

Кĕçнерникун виççĕр тенкĕ чикрĕм. Хутаç-пакета кăлпасси, çăкăр чĕркесе хутăм. Хăнăхнăскерсем, Сима Семеновнана кĕтме пуçларăмăр. Алăкра кăтралатнă пуç курăнсанах, салтакла япт! сиксе тăтăмăр. Сима Семеновна хальхинче пукан çине васкамасăр пырса ларчĕ, сăмаха хуллен сĕтĕртеттерсе калаçрĕ:

– Эккей, пурнăçра тем те пулать çав. Директор вилет кулянса. Кинĕн инкĕшĕн куккăшĕн шăллĕн арăмĕ магазинта «çунса кайнă»,

тет. Директорӑн кӑмӑлне апла хӑварас мар, уҫас. Виҫҫӗршер тенкӗ пуҫтарӑпӑр та – ҫитӗ.

Сима Семеновнана укҫа тыттарса янӑ хыҫҫӑн, хутаҫсенчен апатҫимӗҫ кӑлартӑмӑр та, такам туртса илесрен хӑранӑн, ӑмӑртмалла тӗшӗрме тытӑнтӑмӑр.

Эрнекун пилӗкҫӗр тенкӗ илнине курсан, арӑм мана алӑран шап! тӳнлеттерчӗ:

Ҫитет! Ӗнер виҫҫӗр тенкӗ, паян пилӗкҫӗр, ыран пин... Апатне ҫӗклемӗ-ҫӗклемӗпе туртатӑн. Кала, мӗн пулчӗ сана, Ҫитӑр?

Хирӗле-хирӗлех пӗтӗрсе чикрӗм пилӗкҫӗр тенке, апата та манса хӑвармарӑм.

Кӗтетпӗр Сима Семеновнана хайхи. Кӑнтӑрла та ҫитрӗ. Ҫук та ҫук пирӗн чиперкке. Унсӑрӑнах апат ларса ҫирӗмӗр. Каҫ та ҫывхарса килет – курӑнмасть вӑр-вар этем. Ӗненменрен, кӗсьерен укҫа кӑларса пӑхрӑм – вырӑнтах. Ӗҫ вӗҫленнӗ тӗле вӑл ҫаратса кайрӗ – директор казинораи йӗмсӗр таврӑннӑ-мӗн.

Тепӗр тунтикун, ӗҫе каяс умӗн, яланхи вырӑнта укҫа таврашӗ курӑнмарӗ. Арӑм пӗсернӗ ҫӑмартапа кукӑль чӗркесе пачӗ те, сиввӗн ҫапла каласа ӑсатрӗ:

– Кӑнтӑр апачӗпех уйӑхне вунӑ пин тенкӗ пӗтерсен, капла мӗнле нурӑнас тетӗн-ха?

Нимӗн те чӗнмерӗм, тухрӑм та утрӑм ӗҫелле.

– Эх, ӑмӑрткайӑкӑмсем! – ҫитнӗ-ҫитмен ӗшелентерме тапратрӗ Сима Семеновна. – Директорӑн пӗрремӗш заместителӗ, Аллочка, паян аллӑ тултарать. Тага тепӗр чаплӑ хыпар пур: директорӑн секретарӗ йӗкӗреш ача ҫуратнӑ. Мӗн тери савӑнӑҫ!

– Укҫа парса ямарӗ-ҫке арӑм, – каласса татӑлнӑ пек пурте пӗр харӑс персе ятӑмӑр.

Тытӑнчӗ Сима Семеновна пирӗнтен кулма:

– Эх, эсир те ҫав, шереметсем, арҫын ятне силлесе ҫӳретӗр тата. Арӑмӑрсене алла илейменскерсем! Мӗскӗнсем! Ӗҫсе-кӳпсе ямастӑр вӗт. Хамӑр йыша усӑ тӑватӑр, коллектива пулӑшатӑр. Кун ҫинчен директор илтес пулсан-и? Сире-и? Хӑвӑр ӑҫта ӗҫленине манса ан кайӑр!

Килӗшрӗмӗр вара Сима Семеновнапа: малашне вӑл пире чӑрмантармасть, кассӑран илет те укҫине, кайран мӗн илнине пирӗнтен тытайса ҫеҫ юлаҫҫӗ.

Уйӑх вӗҫӗнче яланхи пекех хавас кӑмӑлпа касса умне карталанса тӑтӑмӑр. Алӑ пусрӑм та, укҫа парасса кӗтетӗп. Кассир укҫа вырӑнне Сима Семеновна списокне тыттарчӗ. Вулатӑп укҫа мӗншӗн тытса юлнине: директор амӑшӗн ӗни кӳпӗнсе вилнӗ иккен, пуҫанин пӳрчӗ ҫунса

кайнӑ, пултӑрӗ авланнӑ, иккӗмӗш заместителӗ курортра укҫа ҫухатнӑ, секретарӗн йӗкӗрешӗсене ят хунӑ, ҫавсем-ҫавсем менелник тунӑ...

— Пирӗн мӗн тумалла капла?

Пӗр-пӗрин ҫине мӗскӗнле пӑхса илтӗмӗр те, пуҫа усса килелле уттартӑмӑр.

## КАНӐҪ ПУРНӐҪ АНӐҪӖ

Иккӗшӗ те вӗсем – тантӑшсем. Пӗр ялта, Хыркассинче, ҫуралса, вӑтам шкултан пӗрле вӗренсе тухнӑскерсем. Валя-Валентина ялтах сысна пӑхма юлчӗ, Аля-Альбина хуланалла тапрӗ. Унтанпа самай вӑхӑт иртрӗ ӗнтӗ. Иккӗшӗ те пурпӗрех куҫа-кусӑн тӑрса калаҫаймаҫҫӗ-ха. Пӗтӗм шухӑш-туйӑмне вӗсем ҫырупа пӗлтереҫҫӗ. Валя-Валентина тантӑшне ял пурнӑҫӗпе, хуҫалӑх ҫитӗнӗвӗсемпе тӑтӑшах паллаштарать. Вӑл хӑйсен кӳршинчи хӑва хулли пек яштака Вася-Василека качча тухнӑ, икӗ ывӑл ҫуратнӑ, тава тивӗҫлӗ ялхуҫалӑх ӗҫченӗ ятне илме пултарнӑ, хӑй тӗллӗн зоотехника вӗренет, ҫӗн пӳртре ҫемйипе савӑнса ҫеҫ пурӑнать.

Валя-Валентина ӗҫлеме ҫеҫ мар, ҫыру ҫырма та юратать пулсан, Аля-Альбина ачаранпах наян чирӗпе чирлет. Пурӗ те виҫӗ ҫыру ҫеҫ ячӗ вӑл ун патне.

ПӖРРЕМӖШ ҪЫРӐВӖ:

«Хаклӑран та хаклӑ тусӑм! Пӗлес пулсанччӗ хулана лекнӗшӗн эпӗ епле савӑннине! Вӑрттӑнлӑха сана ҫеҫ уҫса паратӑп. Астӑватӑн-и яла театр килнине? Мана юратса пӑрахнӑ Палля Палтунова та манман пуль-ха? Хулана ҫитсен, тӳрех ҫав артист тӗл пулчӗ. Ыталаса илчӗ те мана вӑл пилӗкрен, никамран вӑтанмасӑрах чуптурӗ. Тута хӗррисем халӗ те пӗҫерсе тӑраҫҫӗ.

Артистпа ҫӳресе хам та чутах артистка пулса каяттӑм. Массӑллӑ сценӑсенче выляса та куртӑм. Палля тусӗ, ҫӑмламас пуҫлӑ режиссер, тӗп ролех парасшӑнччӗ те, хам килӗшмерӗм.

Ҫапах та Палля Палтунова пӗлсе ҫитрӗм-ҫитрӗмех. Куккук иккен вӑл! Виҫӗ ҫӗрте виҫӗ арӑм ун. Ку мана самай пӑшӑрхантарчӗ. Ҫанах пуҫа усмастӑп-ха. Нумай пулмасть пӗр шурсухал хама куҫ хыва пуҫланине сисрӗм... Ун пирки каярахпа хыпарлӑп».

ИККӖМӖШ ҪЫРӐВӖ? «Ҫӗр хут салам сана, хаклӑран та хаклӑ тантӑшӑм! Ялта лайӑх, тетӗн-ха эсӗ. Эпӗ вара: хуларах, тетӗп. Ӗҫлеме ӑна, паллах, такам та пӗлет. Тар кӑлармасӑр ыр курма ҫеҫ... Эх, пурнӑҫ та ҫав ман! Тӗлӗкре те курас ҫук эсӗ унашкаллине. Леш, хам хысҫӑн юртакан шурӑ сухаллӑ художник, Аристарх Аполлонович, мана

Палляран туртса илчӗ, хӑйӗн мастерскойне вырнаҫтарчӗ. Ман кӗлетке, сӑн-пит мӗнлине хӑвах пӗлетӗн. Тухса тӑратӑп та ҫапла ун умне... Вӑл пур, умран та аякран та ӳкерет мана, тӗрлӗрен портретсем тӑвать. Выставкӑна тӑрататӑп, тет. Ак хайхи, чапа тухасси те инҫе мар... Укҫа вара хӑйӗн тем чухлех! Пӗр ҫитменлӗх ҫеҫ пур – ватӑ вӑл. Анчах та художник ӳкерсе илмелли кӗлетке ҫеҫ мар-ҫке-ха эпӗ? Кӑтра пуҫлӑ Кӑмпа Ҫитӑрӗ кӑмӑла каять-ха. Ӗҫре тӑрпапа выляканскер, килӗнче музыка ҫыраканскер...»

ВИҪҪӖМӖШ ҪЫРӐВӖ: «Пин хут салам сана, ентешӗм! Эх, мӗнле ырӑччӗ Аристарх Апполоновичӑн кӑмӑлӗ. Тӑрпач тимӗр пӑрҫа пулсан, вӑл – услам ҫуччӗ. Пӗтӗм пурлӑхне, хваттерне, дачине, мӗнпур каргинне мана халаллатӑп, тетчӗ. Мал ӗмӗтпех йӑпанса пурӑнтӑм унпала. Анчах, тӑрпач пек кӑтра ҫӳҫлӗ ача ҫуралсан, ман художник, пурнӑҫ шанчӑкӗ, тытамак тытнӑ пек хутланса ӳкрӗ, эрнеренех леш тӗнчене ӑсанчӗ.

Аристарх Апполоновича питӗ чаплӑн, музыкӑпах пытарчӗҫ. Ҫавӑн чухне эпӗ оркестр ушкӑнӗнче мӗскӗннӗн утса пыракан Кӑмпа Ҫитӑрне курах кайрӑм. Нимле композитор та пулман иккен вӑл, тӑйлӑк-тайлӑк оркестрта ҫеҫ ӗҫленӗ... тӑрпачра.

Художник мӑнукӗ мана килне те, мастерскоя та урӑх кӗртмерӗ. Кӑмпа Ҫитӑрӗ, алиментран хӑраса, урӑх хулана тухса тарчӗ. Тем, юлашки вӑхӑтра ӑнмарӗ-ха ман пурнӑҫ. Ӗнеҫессӗм те килмест. Тин кӑна ҫӑтмахри пекчӗ. Халӗ ак... пурнӑҫ анӑҫӗ... Ну, юрӗ, ун пирки кайран».

Валя-Валентина урӑх шутласа тӑмарӗ, тантӑшӗн ҫырӑвӗсене чӑр-чар ҫурчӗ те ҫунакан кӑмакана пӑрахрӗ. Хут татӑкӗсем самантрах кӗл пулчӗҫ.

## ХАКЛӐ ПАТЕФОН

Ҫын валли парне шыраса тупасси тата хатӗрлесси ытла та кӑткӑс иккен. Пӗрисем хаклӑраххипе тӗлӗнтересшӗн, хӑшӗсем йӳнӗреххине те хитререххине илсе парасшӑн, ячӗшӗн парнелесен те юрӗ, текенсем те пур. Выкӑтӑ Мӗкӗти те ҫавсен шутнех кӗрет. Анаткассем ун чеелӗхне, хытгине тахҫанах пӗлсе ҫитнӗ ӗнтӗ.

Выкӑтӑ Мӗкӗти ял лавккинче сутӑ тӑватчӗ. Пӗр вӑхӑтра мутӑпа кивелнӗ, кайман япаласене йӳнетсе сутрӗҫ, хӑшне-пӗрне пуҫӗпех списать турӗҫ. Патефон та пурччӗ вӗсен хушшинче. Пурнӑҫран магнитофонсем хӗссе кӑларнӑ вӗр ҫӗнӗ тавара Выкӑтӑ Мӗкӗти, куммине парне пама тесе, килнех йӑтса кайрӗ.

Çĕнĕ пӳрт уявĕнчен мăшăрĕпе юрласах таврăнчĕ вăл. Калама çук хĕпĕртенĕ-çке, ара, парнешĕн те пĕр пус тăккаламарĕ, кăларса пăрахмалли янравлă арча пулăшрĕ вĕт ăна. Çĕрле темле усал тĕлĕкпе аташса анрашрĕ те питĕ хăраса вăранса кайрĕ. Пĕтрĕ пуç. Ултавпа пухнă укçана вăл патефонăн сасă тăрпинче пытарса усратчĕ. Вунă пине çитернĕччĕ. Ĕнер кăларса хума маннă ăна. Тĕлĕкре çав укçасем «вĕçвĕç, куккук» юрăпа çунатланса сывлăшалла вĕçеççĕ пек.

Кăвак çутăллах тухса чупрĕ Мĕкĕте кӳршĕри кумми патне. Лешĕ ăна ыталаса чуп турĕ, ирех вăраннă хăнасем умĕнче мухтаса пĕтерчĕ:

– Ылтăнран та хаклă, хĕвелтен те çутă тĕнчере çук ыр кăмăллă пĕртен-пĕр кум вăл манăн. Ас тăватăр пуль патефон парнеленине? Патефон тăрпине вунă пин тенкĕ укçа хурса пană. Мĕнлерех çитнĕ тулькkăш унăн ăслă пуçĕ мана тĕлĕнтермешкĕн. Платниксене тӳлеме те шăпах вырăнлă пулчĕ. Юлнă укçипе упăшкана кӳмеллĕ мотоцикл туянса парас тетĕп-ха. Кума та хыçала лартса чуптаратпăр вара. Мĕнле тав туса çитерес сана, юратнă кум... Тытса пар-ха çак куркана. Тĕппипех...

Мĕкĕтен халăх умĕнче намăс курас килмерĕ, укçишĕн тарăхса шăлне çыртрĕ. Хаклă парне сăмахĕ арăмĕн хăлхине кĕрсен ун юррине итлесе ывăнчĕ.

Чылай вăхăт иртрĕ унтанпа. Выкăтă Мĕкĕтин мăнукĕ те ар пӳне çитрĕ. Патефонсене аяла тунă магнитофонсем те çĕнелсе-çĕнелсе пыраççĕ. Мĕнпе кăна кăсăкланмасть пуль ăслă мăнукĕ, çамрăк историкшĕн аваллăх хаклă,тахçанхи кивĕ япаласене пуха-пуха пурне те тĕлĕнтерчĕ. Ăна пурте кирлĕ, пăсман кивĕ пӳрте çип арламалли пĕчĕк урапапа, пир тĕртмелли станокпа, хултăрчпа, хăйчиккипе, йĕс сăмаварпа тата тем те пĕрпе тултарса лартрĕ. Вĕсене вăл ял çыннисенчен йăлтах хăй укçипе туянать. Староста та, ял хуçалăх кооперативĕн пуçлăхĕ те ăна пулăшмасăр алă сулнине пăхса тăмасть, килтех музей уçма хатĕрленет. Акă аппĕ-амăшĕнчен укçа ытлах тухми пулчĕ. Çакăн хыççăн вара мăнукĕ аслашшĕне тапăнчĕ, «пĕр питĕ хаклă япала туянма» тесе вунă пин тенкĕ тархасласа ыйтрĕ. Уйăха яхăн хытса пурăнчĕ старик. Хайхине карчăкки ярса илчĕ, ĕмĕрхи юррине пуçларĕ:

– Юратнă куммушăн эс вунă пин тенкĕ хĕрхенмерĕн-ха, мăнукушăн çеç шалккă сана, тимĕр пăрçана...

Чăтаймарĕ старикки, перекет кассине кайса килнĕ хыççăн чĕтрекен аллипе укçана аран-аран кăкăр кĕсйинчен кăларса пачĕ мăнукне. Хĕпĕртенипе мачча çити чалт! сикнĕ мăнукĕ чупса тухса кайрĕ те туххăмрах йăтса килчĕ хăйне кирлĕ «хаклă экспоната». Вăл сĕтел çине лартнă патефона Выкăтă Мĕкĕти тӳрех палласа илчĕ. Тӳлевсĕр парне хăйшĕн мĕн хака ларнине туйнă май, шеремет, чĕлхесĕр пулчĕ-тăчĕ.

## ХУРА МУНЧА ПУРИНЧЕН ТЕ ТУТЛӐ. ÇАВӐНПА ЧӐВАШ ТИМЕШ КУЛЛИ ЮХАТЬ УРАМ ТУЛЛИ

Аслӑ çĕршыва Мускав пуртти пуснӑ выльӑха сутас умĕн касса ваклanӑ пек пай-пайласа пĕтернĕ хыççӑн, иртнĕ ĕмĕрĕн утмӑлмĕш çулĕсенче Йĕпреç районĕ те мӑнлатнӑ Вӑрнар ял районĕн хырӑмне кĕрсе вырнаçрĕ. Çав мӑн хырӑмра Йĕпреç, Элĕк, Вӑрнар тӑрӑхĕнчи чӑваш халӑхĕн пĕр кĕпĕрленĕвĕ коммунизм ĕмĕлкинче «Ильич ламппин» çутипе тусан мӑкӑрлантарсах малалла – таçталла çунтаратчĕ. Патша саманин нишлĕхне «Интернационал» кĕрлевĕн айне тунӑ çурма выçлӑх халӑх, çӑпатапа ташласа социализмланнӑ халӑх, ĕмĕрте никам нихçан курман юмах пурнӑçне хӑй аллипе тӑватчĕ. Аслатиллĕ çумӑрпа хĕллехи çил-тӑвӑллӑ çанталӑк чӑвашшӑн ĕмĕртен-ĕмĕре тӑсӑлакан кулленхи улшӑну саманчĕ çеç шутланнӑ. Чӑваш Тимеш те ĕнтĕ çав юхӑмра хӑйĕн урамĕсем тӑрӑх кулли-пуллине авалтанпах юхтарнӑ, кулӑ кĕрлевĕн çыранĕсем сарӑлса пынӑ, кĕмĕл турамĕн хумне таврана салатнӑ. Уяр çанталӑкрах кулӑ çумӑрĕ çунӑ çак илемлĕ ялта. Эпĕ те çав çумӑр айне пулнӑччĕ хĕрĕх çул каялла Вӑрнартан икĕ урапаллӑ çилçунатпа Тимеше мӑкӑрлантарса çитнĕ вӑхӑтра.

Мана виçĕ район калӑпӑшĕвĕнчи ял хуçалӑх производство управленийĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакторĕ «ильичсен» çĕнĕ пурнӑçне мухтама кӑларса янӑ. Аслӑ çулпуç ячĕллĕ пуян колхоз ĕçченĕсене манӑн хальхи аслӑ çулпуç Хрущ Мĕкĕти – ĕне нӑрри Мускавран вĕслетсе янӑ хав-хав шавĕпе епле хавхаланса пурӑннине Чӑваш тĕнчине кӑтартмаллаччĕ ĕнтĕ.

Аякранах асӑрхатӑп-ха, симĕс çеремлĕ анлӑ лапам варринчи тӑваткал йывӑç çурт чӳречи тулли çын пуçĕ курӑнать. Ун умне çитсе чарӑнтӑм та, мотоцикӑла майласа тӑратрӑм.

Йӑм хура çӳçлĕ, тӑнлав çумне пĕршĕнтернĕ хӑлхаллӑ, пиçнĕ хурлӑхан пек куç шӑршиллĕ, никам хурламалла мар сӑмсаллӑ, тутине лаша кучĕ пек чӑмӑртаса лартнӑ тӑлпан арçын пӑхать те пӑхать ман çине. Эпĕ те ӑна хамӑн кушак куçĕпе тӑлларӑм. Тинех унӑн куçĕ манӑн тӑлла татса йӑлл çиçрĕ те, тачка пĕлĕт хыçнелле шуса кĕрекен хĕвеле улӑштарнӑн, ĕшӑ шевле сапрĕ. Эпĕ те, вӑл та сӑмах чĕнмесĕрех кулса ятӑмӑр. Чӳречерен уйрӑлса хӑвӑрт алӑк уçнӑ хушӑра та çав кулӑ чĕгревĕ пирĕн хушӑран каймарĕ. Потапов кулли пулчĕ иккен – колхоз пуçлӑхĕн кӑмӑллӑ, ĕçлĕ кулли. Тимеш халӑхне хĕвеллĕ кулӑ парнелеме ӑс-хакӑл, пултарулӑх çитернĕ чӑваш хресченĕ Лариван Петĕрĕ

маншăн паянхи кун та çав кивĕ йывăç çурт чӳречинчен ял халăхне пархатар кулли валеçнĕнех туйăнать.

Алла-аллăн тытăнса, пĕрне-пĕри пулăшса, пĕр-пĕринпе çывăхланса ĕмĕт çунатĕнчен тытса пурăннă вăхăтра мĕн кăна пулса иртмест, мĕнле камит кăна лартăнмасть пуль тăван хутлăхра. Хутлăх вăрттăнлăхне кутлăх йĕппипе тирсе çĕлеме те май çук иккен. Вăл ял халăхĕн анлă курăну ӳкерчĕкĕ – вĕçĕмсĕр улшăну вылявĕ.

## СЫСНА АШĔ ТĔТĔМЛЕНИ

Сарамов ялта ачаранах Пĕтĕлти Петĕрĕ пулса ӳснĕ. Хул-çурăма çынсем пек тар мунчинче нушалантарман. Пилĕкне авса айлатман, ялан çăмăл ĕçре тĕкĕнкелесе çӳреме хăнăхнă. Потаповăн çивчĕ куçĕ çакна асăрхать те, ăслă пуçĕ çапла йышăнать:

– Паянтан эсĕ, Сарамов юлташ, генеральнăй хуралçă пулатăн!

Янккамара ура тупанĕсене якатнă Петĕр алла шĕшкă патакки тытать те уй сыхлама тытăнать. Хайсенчен инçех мар униче çумĕнче ыраш кашласа ӳсет. Хуралçă тухиччен председатель асăрханă çав унта сысна ашкăннине. Вăл Сарамова тăнкăрук парать. Пĕтĕлтин хĕсĕк куçĕ тин уçăлать: ыраш ăшĕнче чăнах та пĕр сысна хырăмне шӳтерет. «Камăн пулма пултарать, паллах, урам вĕçĕнчи Еххĕмĕн», – тесе тĕв тăвать те вăл ун патне каять. Яковлев шат та пат хуравлать:

– Ман сысна картарах.

Ăратлă шурă сысна тепĕр кунне те тырă анине аштарать. Сарамов хуçа патне çитсе шаловатцă тăвать:

– Пĕлтĕм ăрсурник камăнне. Еххĕм Яковлев иртĕхтерет выльăхне. Эп каланине хăлхана та чикмест.

Петр Илларионович хуралçа пăшал тыттарать те, сăмсинчен шаккаса, хушать:

– Шаплаттар эсĕ ăна.

Çапла тăвать те Пĕтĕлти Петĕрĕ. Пĕр кунхине пăшал сассипе ял куракĕ пĕлĕте çĕкленсе хуплать, уйри халăх укăлча патне хашкаса пухăнать: «Мĕн пулнă?»

Пăшалне хулпуççи çине уртнă Сарамов çĕр çурасла çухăракан аманнă сысна хыççăн лĕпĕстетет. Мăнттай чушкă Яковлевсем патне мар, хайсен килне юн юхтарса çитет. Тин паллă пулать: арăмĕ ăна кашни кун уя кăларса янă иккен. Харкашу, çапăçу... Халь тин мĕн тăвăн ĕнтĕ. Кӳршисене чĕнсе сыснана пусаççĕ те шӳрпе пĕçерсе çиеççĕ. Ашне мĕн тумалла, ăçта хурса пĕтермелле? Холодильник çук. Хĕвелĕ çунтарасла хĕртет.

– Каптить ту эсĕ ăна, – сĕнӳ парать кӳрши. – Вунă çултан та пăсăлмасть ашу-пăшу.

Касса ваклаççĕ Пĕтĕлтисем сыснана. Арăмĕ хыпăнсах вут хутса кăларать. Кăмака тулли тултараççĕ тин пуснă сысна какайне. Пыра чӳхенĕ хыççăн хырăма салăпа сĕреççĕ те хуп турттарма тытăнаççĕ хăйсем.

Самай вăхăтран пӳрте тутлă шăршă тулать. Пĕтĕлти Петĕрĕ тĕлĕкре Пĕрремĕш Петĕр çарĕнче пек. Вăл Раççей патшине Европăна тухма чӳрече касать. Вĕсем патнелле шведсен тупă йĕтрисем шăхăрса çывхараççĕ. Пĕри сăмса умĕнчех çурăлать. Хап! тунипе Сарамовсем урайне йăванса каяççĕ. Кăмака умĕнче çулăм явăнать Ашран юхнă çу тĕлкĕшекен кăварпа хыпса тухнă çав.

Юрать-ха кӳршисен мухмăр пуçланнă, ăна чĕртме çав вăхăтра персе çитнĕ. Вĕсем тĕтĕм-сĕрĕм ăшĕнче çапкаланаканскерсене тулалла сĕтĕрсе тухса пăрахаççĕ те сысна пушарне шывпа сапса сӳнтереççĕ. Ашĕ юрăхсăрах тухайман, шутсăр тутлă тĕтĕмленнĕ.

Çавăнтанпа ĕнтĕ тимешсем Пĕтĕлти Петĕрĕн меслечĕпе кăна тĕтĕмлентереççĕ пуснă сысна ашне. Тутанса пăхсан ăна, вунă çултан та хырăм выçмасть, тет.

## АБАКУМĂН СĂНАВ УЙĔ

Вăрçă вăхăтĕнче тунă аэродром патнелле çул гăсăлать. Унăн енче – хресченсен анкартисем, тепĕр енче – тулă пусси. Унта фанер татăкĕ çине çырса çапнине иртен-çӳрен сасăпах вулать: «5-мĕш уй, 50 га, çурхи тулă». Юнашарах «Вăрлăх уйĕ» тесе çырни те пур.

Чăваш Тимеш те тĕнчере юлхавсăр тăрса юлман. Матви Абакумĕ шăпах кахалсен ушкăнĕнче нарлăнă. Вăл эртел хуçалăхĕнче те паттăра тухайман, кил хуçалăхĕнче те чап илеймен. Çавна пулах анкартийĕ те çум ăшне путнă. Пиçенĕ те чечекленсе юнашарти тулăран та çӳлерех ӳссе кайнă.

Такам шаймăкĕ «Вăрлăх уйĕ» текен табличкăна тытать те Абакум анкартине тăрăнтарса лартать, тикĕтпе хушса çырать. Çапла «Абакумăн вăрлăх уйĕ» пулса тăрать.

Çакна Йĕпреçрен пынă райком секретарĕ асăрханă. Правление çитсен вăл ял Совет хуçине те чĕнтерет. Павел Михайлович Волков пульă пек персе çитет. Анчахрах-ха Мускавран çумкурăкпа кĕрешмелли хаяр хут вĕççе килнĕччĕ. Ай çунтарма пуçлать икĕ председателе КПСС ревизорĕ. Потапов тăрать те, кулкаласа калать:

– Мĕн хирĕлмелли кунта, юлташсем. Матвеева преми шучĕпе çава

илсе паратăп. Савăнтăр. Намăс пире çулсерен ятсăр тулă акса ÿстернĕшĕн. Малашне «Абакум» çурхи тулă пулать. Паянах «Абакум» çурхи туллăн сăнав уйĕ» тесе çыртарса ларттаратăп Çтаппан Семенов агронома.

## ПАРТИЙЦĂСЕМ

Арăмĕ Кĕтерук-Чиперук ĕне сĕтне юратсах кайманнине кура Купрановсем вите тулли качака усранă. Кĕтĕве яриччен те, уйран тăранса таврăнсан та «Сталин ĕнисене» хушма паек – апат лекнĕ. Икĕ ăрат тытнăран, каçтаки те иккĕ пулнă вĕсен.

Ял Совет председателĕнче ĕçлекен Элекçи Элекçейч урай, сак-пукан сăрланă хыççăн пÿртум картлашки çинче кĕвĕллĕн шăхăркаласа ларать. Хапхан пĕчĕк алăкĕ шанн! тунипе вăл шартах сикрĕ, унталла çаврăнса пăхрĕ те, качака кĕтĕвне асăрхарĕ. Такасем камантирсем пек малта пыраççĕ сухала каçăртса. Вĕсем кил хуçи умне, апат парасса кĕтсе пулас, тап! çитсе чарăнчĕç. Çав самантра Купранов пуçĕнче чăрсăр шухăш çуралчĕ. Тытрĕ те вăл вара вĕсен мăйракисене хĕрлĕрех тĕслĕ сăрăпа сăрласа ячĕ.

Тепĕр темиçе кун иртсен партком секретарĕн Çтаппан Семеновăн арăмĕ Валюк сăлтавсăрах хăлтăкланса илчĕ:

– Пуçу ăçта-ши сан, Çтаппан?

Çтаппан, аптăранă енне, икĕ пуçне те хыпашласа тĕрĕслесе тухрĕ: пурте хăй вырăнĕнчех. Тип тытнă хыççăн тутлă апат тутанасшăн антăхман-ши ку тесе вăл кил юратăвне ыталама хăтланчĕ, çÿхе çупкă çинĕ хыççăн, йăлăнтармăш сасса чăтăмлăн итлеме пуçларĕ. Упăшкине ухватпа пÿрт пĕрени çумне хĕстерсе ларгас шухăшлăн янăрать çиеле тухнă хуçайккă:

– Ма çынсем санран тăнлăрах-ши, Çтаппан? Купран Элекçийĕ, авă, сана партийццă енĕпе пăхăнать пулин те, каллех чапа тухнă.

– Мĕнпе? Ĕнер анчах эпĕ ăна, хĕрарăмсем çине ытла куçа чалăштарса пăхнăшăн, КПСС нухайккин вутлă вĕçĕпе çунтарса илтĕм-çке? Выговор париччен, «халăх куçĕ умне кăлартăмăр». Райком хирĕçлемесен пире, вăл чăнах та çав хурав ячĕпе чапа тухать.

– Эй, сапа, лĕпĕртипе, ват янавар ашĕпе талăк пĕçерекен хуранти яшка пек лăкăртатан. Кил çинчен шухăшламастăн. Купран Элекçийĕ каçтакисене те партие кĕртнĕ, тет. Кĕтÿ ураменче вĕсем çинчен çеç калаçать халăх. Хĕрлĕ мăйракаллăскерсем, хĕрлĕ армеецсем пек çырма ик енне тăраççĕ тет те, нимле каскăн сурăхпа качака таврашне тыр

çине кĕртсе ямаççĕ тет. Кĕтÿç те кирлĕ мар, кĕтÿ укçи париччен луччăкăн Купрана кÿптерсен икĕ хут усă пулать, çапах та вăл – ял старости, теççĕ пурте.

Хырăмне тытмасăрах ахăлтатакан Çтаппана Валюк чышкă муклашки кăтартрĕ те юррине хăй çеммипех тăсрĕ:

– Сан мĕн, тÿр пилĕкĕн, штатнăйрах ĕмĕрна irттертĕн те. Ман ик эрнере пĕрре касу пăхмалла. Хĕл каçнă вăкăрсене ма илес мар хăвăн перетовой камантуна. Партийçă пушшипе касу пăхма тытăнсан вĕсем, эп те ирĕкленĕттĕм, сана та вĕлтрен яшки салмапа вăхăтрах пĕçерсе çитерĕттĕм...

Упăшки правление тухса кайсанах Валюк пÿрт тăрри сăрланинчен юлнă банкăна уçать те, икĕ вăкăрĕн мăйракисене хĕрлĕ сăрăпа сăрлать.

Çтаппан Семеновăн пĕр шухăшлăх ушкăнне тата икĕ партийçă хутшăнать.

22.03.2007 çул.

* * *

Тури урамĕ, Вăтакас урамĕ, Анат урамĕ, Кулхус урамĕ кашни хăй майлă, хăйне евĕр сăпайлă. Хĕвел чÿречерен çуркунне çитнине пĕлтерсе ăшшăн кĕрсе кайнă кашни пÿртре йăл кулă çиçме пуçлать. Хĕвел парнеленĕ хастарлăхпа ăшри туйăма ниçта кайса кĕрейми хăпартса янă ял çыннисем пĕрне-пĕри йăтса çÿременни çеç. Ĕççĕр пурăнайманни юрла-юрла фермăна, тракторĕ патне ăнтăлать, вĕренсе ăслă çын пулас текенни шкулалла ăмăртса чупать, канлĕ кану тупни телейне кампа та пулин пайласшăн. Авă, Геннадий Романович Яковлев, Потапов çулĕпе йĕпреçелле уйран уçламаваскать; Степан Иванович Семенов, хăрушсăрлăх техникин йĕркине пăсса, мухмăр аптратнипе нихăш механизатор та та гайка-болт çăтса яман-ши тесе çĕвĕç хаччине йăтса мăтăсăна чупать; Алексей Алексеевич Купранов, кутран такам шăршăнтарнă пушăпа ăшалантарса пынă пек, каялла пăхма мансах, ял тăрăхĕн кантурне ăслă канаш вăхăтра çитересшĕн пуç тÿпинчен пăс кăларса ырать. Пурин те вĕсен – чи вашнăй ĕç. Пурте вĕсем ял штатнăйĕсем – ял пуçĕнче тăнă паллă çынсем. Раман Кинатийĕ колхоз председателĕн, районти ял хуçалăх производство управленийĕн начальникĕн, райсовет ĕçтăвкомĕн – райадминистраци пуçлăхĕн сăранпа витнĕ тарăн кĕреслисене якатса ывăннă; Йăван Çтаппанĕ бригадирта, агрономра, колхоз пуçĕнче тăрса пуян тыр-пул ÿстернĕ, партком секретарĕ пулса халăха коммунизм тума вĕрентнĕ; Элексçи Элекс-

ийĕ, пучтă начальникĕнче чухне кашни киле хаçат-журналпа тăрантарнă, кашни çын патне çыру-телеграмма вăхăтра çитернĕ, ялсувет хуçи пулнă май, килпе-кил, ялпа-ял хушшине йĕплĕ пралук картарман. Кăмака уммипе уйран çисе ӳснĕскерсем, халăхран шит те уйрălман, çынсене йĕркеллĕ ĕçлеттерсе пуйтарнă колхоза, патшалăха. Ĕçре те, кулленхи пурнăçра та мĕн кăна пулман пуль пысăк хуçалăхра, мĕн кăна курман пуль мăн эртел. Эртел пуçлăхĕсем те ял пулли пекех ял куллин юххинче ишнĕ, халĕ те çав юхăмрах ишеççĕ.

## ÇĔНĔЛЛЕ – ÇĔНТЕРӲЛЛЕ

Ывăлĕ мĕншĕн кăтраланса çут тĕнчене йăлл çиçсе тухнăшăн Йăван Çимунч пĕртте кулянман, хĕпĕртенĕ çеç. Кулă сăннипе тирсе илесшĕн çунакансене вăл туххăмрах пусарнă:

– Мĕн пĕлетĕр эсĕр, тăманасем. Ях, сире! Ман арăм ялтан тухса курман, ялта кăтра така пулман. Так шту... Чăваш вăл Ахрикăран та тухнă, тет. Некăрсен, пирĕн тăхăмсен ачисен ачисем Атăл тăрăхĕнчи Сарă çĕршывра саралнă. Учитлăсене тăнласа итлĕр.

Йăхран-йăха йăрлаттарса чупакан гена текен пĕчĕк тĕлĕнтермĕш Чăваш Тимеш çыранне те килсе çапăнма пултарнă пуль çав. Кăтра пуçлă, кăвак куçлă, çĕмрен утлă Çтаппан ял хĕрĕсене вăйă картинче ташлаттарса ар пулса çитĕннĕ. Кӳршĕри Раман Кинатийĕпе ăмăртса чупма та хатĕрччĕ. Анчах та Яковлев, ял ĕнисене Шупашкар институтĕнчен хыт хуплашка илсе пырса çуллаттарнă хыççăн, пĕр вăхăт çине тăрсах ĕçлерĕ-ха. Ученăй-зоотехник каярахпа ферма мăкăрĕ шĕвĕр мăйракипе хăмсарнине чăтаймасăр, правление кĕрсе ларать, Потапов çирĕплетнĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăх йĕркине малалла çĕнетме пуçлать.

Пĕрре пуçлăх пуканĕнчи канлĕхе тӳссе курнă çын унран уйрăлма васкаманнине такам та пĕлет. Геннадий Романович Яковлев та пукан хыççăн пукан ларкăчне якатса малаллах чупать ăслă пуçĕпе. Йăван Çимунч ачи те кӳршинчен юласшăн мар çав. Анчах пĕр пуçлăх пуканĕ çине йĕкĕрешле кĕрсе вырнаçаймастăн. Вăл вара, хăйне Шупашкарти совпартшкула кĕртсе вĕрентсе кăларнă Потапова асра тытса, Чăваш Тимеш ял хуçалăхнех наука шайне лартма шутлать.

Акă, Ильич ячĕллĕ колхозăн Хумпуç Патăрьелĕ тавра улăхлă хура çĕр сарăлса выртать. «Абакум» çурхи тулă питĕ тулăх пулнине ăнкарса илнĕ экономист-йĕркелӳçĕ агроном ячĕпе пĕлтерет: «Малашне эпир тата çĕнĕллерех çĕмĕртсеретпĕр»! Çапла çĕнĕ меслетпе тăваткал тĕмĕн

шитрен шит пěрер пěрчě пăрахса тухаççě кěрхи тулă вăрлăхне çěр аллă гектар таранах. Тăпраран хура тěтěм мăкăрлантаракан Атам Çеркийě тěлěннипе Семеновран ыйтать:

– Камран вěреннě эс капла хăтланма? Çěрулми мар вěт вăл тырă?

– КПСС обкомěн шкулěнче çапла тума хушаççě. Вěреннине ман пурнăçра кăгартса памалла, – усăннă пěлěт аркине тытасла çěкленет Йăван Çтаппанě.

Тем мыскари те курнă çěр шăп-шăпăрт выртать, этем акнă-лартнă ўсентăрана ўстерсе парать. «Абакум» çурхи тулăпа «Çěнě Хум» кěрхи тулă çавăнтанпах Хум юханшывěн хумěнчен те вăйлăрах хумханаççě. Çавăнпа халě те чăваш-тимешсем – яланах çěнěлле ěçлекен малтисем.

## КОСМОНАВТСЕН ЯЛĚ

Чăваш çыннисем ялан: «Эпир – виçě космонавт çěршывě» тесе мухтаннă вăхăтрах, чăваш-тимешсем хăйсем те космонавтсем çуратса ўстернине асра та тытмаççě пулас.

– Николаев, Бударин, Маннаров... ěнтě вěсем тěнче уçлăхěнче те ишнě-ярăннă, çут тěнчене те паттăрлăхěпе те тěлěнтернě. Семеновпа Купранов вара...

Ял-йыш ěçкинче пěр кěрекере Купран Элекçийě Йăван Çимунч ачине лапчăк хăлхинчен вăрттăн пăшăлтатать:

– Çтаппан, эп шутсăр интереснă тěлěк куртăм. Лайккă-улайккăсем хыççăн леш тěнченелле чěрě этемех вěçтерме хатěрленеççě пулас. Манран та ыйтрěç: «Мěнле пек, улăхас шухăш çуккă-и унталла? Вěренрен явнă картлашкапа çурран мар, хăватлă ракетпа шăхăрса каятăн. Аннă чух парашютпа хăвăр Хум çыраннех сикетěн, ним те хăрушă мар». «Купран кутран хěртсе вěçтернине юратмасть, мана халлěхе çěр çинчех пурăнма чаплă», – хуравларăм эпě.

Çтаппан ачалăх тусне ыталаса илет, унтан ăна тулли стаканпа тав туса, унăн çут çамкине шăйăрттарсах пăрахать:

– Ухмах эс, Элекçи. Ма килěшмен. Тěнчере çук мухтавлă çын, улăпла паттăр пулатчě ман кум. Валюка ěнер çуратма ăсатрăм-çке. Чун сисет: ывăлах пулать ман.

Элекçи пуçа чалăштарса кулса ярать:

– Ихи-хик, хих! Кула-кула çěр тавра вěçсе çаврăнакан маттурăн, ячěне аппě ячě те пулин Элекçи пулсан тин, ачуна тытма килěшетěп.

Ыранччен пурӑнса пӑхар, радиоприемникри вӑрттӑн «амерӗк сасси» ахальтенех «космос» та «человек» тесе янрас ҫук. Турра хытӑрах кӗл ту.

Ыран тени Семеновсен килне те хӑй вӑхӑчӗпех ҫитсе телей пӑрахса парать. Валюк ир енне ывӑл ача ҫуратнӑ-мӗн, кӑнтӑрла Юрий Алексеевич Гагарина тӗнче уҫлӑхне вӗҫтернӗ.

Акӑ хайхи ача уявӗ пуҫланчӗ. Йӑван Ҫтаппанӗ, савӑннипе, ачана Юра ятлӑ хурать, кумашшӗ килӗшӗвӗпе пӗчӗк пӑхаттире Юрий Алексеевич Гагарин теме пуҫлаҫҫӗ.

Кӗҫех Купран Элекҫин Кӗтерукӗ те упӑшкине ывӑл парнелет. Малтан калаҫса татӑлнӑ пекех кумне Ҫтаппана тӑваҫҫӗ.

Ачана Герман ят ҫыртараҫҫӗ. Тепӗр космонавт Герман Степанович Титов ят ҫуралса ҫухӑрать.

Ял Совет председателӗнче ӗҫлекен Купранов патшалӑх хучӗсем ҫине ача ашшӗсене мӗнле ҫырса хунине эпир пӗлместпӗр. Туссем вара ачисен ашшӗ ячӗсене кумла тав туса улӑштарнӑ, теҫҫӗ. Никама та никампа улӑштарман арӑмӗсемшӗн упӑшкисен шӳчӗ мыскара вырӑнне ҫеҫ шутланнӑ.

Юрий Гагарин-Семенов тата Герман Титов-Купранов ял таврашӗнчен тахҫанах вӗҫсе кайнӑ. Космонавтсем, Кустӑрма облаҫӗнчи Галич хулинче техникумра вӗреннӗ хыҫҫӑн, вырӑссем хушшинче мирлӗ ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ, Космонавтика кунне Ҫӑлтӑр хулинчинчен кая мар чаплӑн паллӑ тӑваҫҫӗ. Чӑваш Тимеш те малашне космонавтсен тӗнче картти ҫине сӑрланасса кунӗн-ҫӗрӗн кӗтеҫҫӗ-ха Элекҫипе Ҫтаппан кумсем.

2007 ҫулхи<br>пуш уйӑхӗн 31-мӗшӗ.

## ВИҪӖ ЧЕЧЕК

Вӑтакаспа Анаткас чиккинче пурӑнакан Паттӑр Михала ялти автомашинӑсемпе чупса ывӑннӑ хыҫҫӑн, «вӑрӑм укҫа» шыраса, Канаш автобазине ӗҫе кайса кӗнӗччӗ. Хӑватлӑ автофургонпа ҫӗршывра ҫитмен вырӑн хӑвармарӗ пуль. Хушӑран уйӑхӗ-уйӑхӗпе тӑсӑлать унӑн вӗҫленме пӗлмен вӑрӑм ҫулӗ. Те вӑл кунӗн-ҫӗрӗн ярӑнса ҫӳренипе, те арӑмӗн сӑлтавне пула, вӗсен килӗнче выльӑх макӑрнисӗр пуҫне ача сасси илтӗнменччӗ. Пӗр-пӗрипе мӑртлашкаласа пурӑннӑ вӑхӑтра упӑшки арӑмне, арӑмӗ упӑшкине чӗлхепе тивертсе илнипех ҫырлахнӑччӗ-ха. Ачапча пулманнишӗн куҫа-куҫӑн та, кут хыҫӗнче те са-

хал мар хирĕлкеленĕ вĕсем. Арăмĕ пульницара та, юмăçра та пулса пăхнă, пур çĕрте те Розăна «сан ача хвабрики тĕрĕс-тĕкелех» тесе хавхалантарнă, упăшкуна тĕплĕнрех тĕрĕслемелле, тенĕ. Паттăр ĕç тума хăнăхнă Паттăр Михалан тухтăрсемпе аппаланма нихçан та вăхăт тупăнман: вăл пĕрмай вăрăм рейсра. Кĕтмен-туман çĕртен арăмĕ умне телей çулçи вĕçсе анать. Ăна фермăра ĕçлесе мала тухнăшăн хавхалантарса Хура тинĕс хĕрринчи паллă та чаплă санаторие кайма путевка параççĕ. Упăшка Польшăна тавар тиесе кайнă, уйăхсăр таврăнмасть. Тăнлăрах шухăшлать те Роза тытать те вĕçтерет Сочине. Качакисемпе сурăххисене пăхма Купран Элекçийĕсем килĕшеççĕ. Вĕсене шанма пулать.

Упăшкине арăмĕ пĕр вăхăталлах Чăваш Тимеше персе çитрĕç. Çул çинчен арăмĕ мунча хутса ячĕ. Чĕлхе-çăвартан кая юлман Роза хăй мĕнле сывални тата ялти хура мунчара тар кăларса çапăнни, пĕрпĕринпе унтах савăшни хĕрарăмшăн çав тери усăллă пулни çинчен юмахласа, хĕрарăмшăн тунсăхланă упăшкине астарсах ячĕ. Михала ача çуратнăшăн патшалăх укçа нумай парса пулăшма хатĕрри çинчен тухнă патша указне вуларĕ те, «хаçатне... айта кут айне халарса пăхар, тен...» тесе арăмне хы-ыттăн ыталарĕ.

— Эх, Михала, Михала... хăв настуящи упăшка пулни çинчен те манманшăн сана... вĕлереп пăчăртаса, кĕçех чечек кĕтетĕп.

Çул хыççăн çул такăрларĕ Михала. Пĕррехинче килне таврăнчĕ те, сĕтел çинчи хута вуласан, тӳрех Йĕпреçе вашкăртрĕ. Вăл ĕнтĕ пăлханнипе те хыпăннипе ялан ĕçлекен пасара кĕрсе чечек илме те манчĕ.

— Ах, çак арçынсене, ку та чечек çыххисĕр, — пуçне пăркаларĕ ача çуратмалли çуртри шурă калпаклă хĕрарăм.

— Ман арăм хăй чечек çав, — мухтаннă пек пулчĕ Паттăр Михала, çав хушăрах хыпăнса ыйтрĕ:

— Мĕн ача çуратнă-ши Роза? Ăçтаваскать, тăхăр уйăх çитмесĕрех...

Сестра ăна кулкаласа ăшă сăмахсемпе лăплантарчĕ:

— Чăнах та чечек пекех сан арăму. Пит хитре çурăлчĕ, виçĕ чечек кăларчĕ. Кур-ха?

Михала çаврăнса пăхрĕ те арăмне тата унна юнашар ача йăтса пыракан çамрăк хĕрарăмсене асăрхарĕ.

— Вăхăтра килеймерĕм, каçар, саламлатăп, пурте...

Каласа пĕтерейменрĕ Михала, икĕ алла виçĕ ача ты ттарнипе, шалтах аптăрарĕ.

— Пĕлнĕ пекех, паян та чечек çук сан, чупкăнăн. Анчах та — ман пур, — тесе упăшкине чăп тутарчĕ те Роза ăна пепкисемпе паллаштарчĕ. — Акă ку, сулахайри, шурă лили чечекĕ пек, сылтăмри — симĕс чечеклĕ Любка пек, варринчи вара сиплĕ вероника пек. Лили, Любка, Вероника пур халĕ пирĕн, Михала, савăн.

— Роза та пур, — ун çумнерех кăшăрт куçрĕ упăшки.

— Ĕмĕтĕме пурнăçларăм, чунăмçăм. Сана чечек çыххи парнелемешкĕн тинех вăхăт çитрĕ. Ахальли те мар — чĕрри хатĕрлерĕм.

Чăр-чар туса сас параççĕ Паттăр Михалана аллинчи «чечексем».

— Чăнах та чĕрĕ чечек çыххи, — хĕпĕртеннпе çаврăнса илчĕ вăл. — Вăт телей! Çийĕнчех арăмне хăлхаран пăшăлтатрĕ. — Сиплех иккен хура мунча... Патша указĕ те.

— Санатори те, — ачашшăн чуптурĕ Роза хăйĕн Паттăрне.

2008 çулхи
кăрлачăн 9-мĕшĕ.

# ТУПМАЛЛИ


Тутлă-йÿçĕ мунчара .................................................... 3

Сылтăм алли – иккĕмĕш мăлатук .................................................... 64

«Капкăнпа» Иван Мучи менелникĕ .................................................... 71

Дани шпионĕ .................................................... 76

Мунча сĕрĕмĕ .................................................... 80

Çыравçăсем те мунчара хĕрсе сипленме юратаççĕ .................................................... 84

Шупашкар калаçать... «Мунчара» .................................................... 92

Наука керменĕнчен те сĕрĕм йăсăрланать .................................................... 97

Мунча умĕнчи пăшăл пăтти .................................................... 112

Хура мунча пуринчен те тутлă. Çавăнпа Чăваш Тимеш кулли юхать урам тулли .................................................... 117

**Владимир Прокопьевич Кузьмин**

# С ЛЕГКИМ ПАРОМ — УГАРНЫМ ДЫМКОМ

Подписано к печати 25.12.2007. Формат 60х84/16
Бумага офсетная. Гарнитура Tams. Печать оперативная.
Тираж 1500 экз. Заказ № 3.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034. г.Чебоксары. ул. Мичмана Павлова, 50/1. Тел.: (8352) 41-27-98.

«**Чувашия - Поддержка**»
ОАО Страховая Компания

Чувашский республиканский сельскохозяйственный потребительский кредитный кооператив
**«Согласие»**

Чувашский Республиканский сельскохозяйственный потребительский обслуживающий кооператив
**«Содействие»**



# Взаимодействие в интересах развития села.

## ОАО Страховая Компания «Чувашия - Поддержка»

В декабре 2007 года исполнилось 15 лет региональной Страховой Компании «Чувашия-Поддержка». Она динамично развивается, имеет устойчивое финансовое положение и высокую деловую репутацию. В уставном капитале компании доля Правительства Чувашской Республики составляет 33,15 процента. По объему собранных страховых взносов СК «Чувашия-Поддержка» входит в число пяти крупных страховых организаций - лидеров регионального страхового рынка, обеспечивая своим клиентам надлежащий уровень страховой защиты. Она участвует в реализации федеральных и республиканских целевых программ и в своей работе взаимодействует с органами законодательной, исполнительной власти и местного самоуправления.

Страховая Компания «Чувашия-Поддержка» предоставляет юридическим лицам и гражданам широкий спектр страховых услуг по личному и имущественному страхованию, включая страхование ответственности. В целях доступности страховых услуг во всех городах и районах Чувашии открыты представительства компании. Ее представители к каждому клиенту подходят индивидуально, обеспечивая удовлетворение спроса страхователей при заключении договора страхования и в период его действия, а широкая сеть страховых агентов позволяет оказывать страховые услуги всем желающим с выездом на место и в любое время.

## Чувашский республиканский сельскохозяйственный потребительский кредитный кооператив «Согласие»

В целях удовлетворения потребностей клиентов СК «Чувашия-Поддержка» в финансовых услугах по ее инициативе и при поддержке компании в 1998 году создан Чувашский республиканский сельскохозяйственный потребительский кредитный кооператив «Согласие». Кооператив «Согласие» успешно участвует в реализации приоритетного национального проекта «Развитие АПК» по направлению «Стимулирование развития малых форм хозяйствования в АПК». В рамках взаимодействия СК «Чувашия-Поддержка» и ЧРСПКК «Согласие» при их содействии, организационной и консультационной поддержке, а также методической и финансовой помощи в республике сформирована и развивается сеть сельскохозяйственных потребительских кредитных кооперативов. Большинство клиентов СК «Чувашия-Поддержка» становятся их пайщиками, а члены кредитных кооперативов - клиентами компании. Офисы этих двух структур обычно располагаются в одном здании, благодаря чему хозяйствующие субъекты и жители республики имеют возможность без лишних затрат времени и денежных средств одновременно получить страховые и микрофинансовые услуги.

## Республиканский сельскохозяйственный потребительский обслуживающий кооператив «Содействие»

Неотъемлемой частью многоукладной сельской экономики становятся сельскохозяйственные потребительские кооперативы других направлений деятельности - перерабатывающие, сбытовые, обслуживающие, снабженческие и др.

Для объединения и координации работы создаваемых сельскохозяйственных потребительских кооперативов с целью более эффективного ведения хозяйства, увеличения доходов их пайщиков и обеспечения сотрудничества между кооперативами в 2006 году по инициативе ЧРСПКК «Согласие» создан Республиканский сельскохозяйственный потребительский обслуживающий кооператив второго уровня «Содействие». Он оказывает консультационные, информационные и маркетинговые услуги, а также методическую помощь руководителям и специалистам кооперативов первого уровня по вопросам создания и развития в кооперативах современной материально - технической базы, проводит для них обучающие семинары.

Сотрудничество Страховой Компании «Чувашия-Поддержка», Чувашского республиканского сельскохозяйственного потребительского кредитного кооператива «Согласие» и Республиканского сельскохозяйственного потребительского обслуживающего кооператива «Содействие» способствует развитию сферы услуг для жителей села, созданию дополнительных рабочих мест, мобилизации местных ресурсов и привлеченных средств на развитие сельских территорий, способствует росту поступлений в местные бюджеты и поддержанию доходов населения.

**Благодарим за то, что вы с нами, и надеемся на дальнейшее развитие сотрудничества.**

428024, г. Чебоксары, пр. Мира, д. 90, корп.1

ОАО СК «Чувашия - Поддержка»
тел./факс: (8352) 28-64-84

ЧРСПКК «Согласие»
тел./факс: (8352) 28-65-54

СПОКК «Содействие»
тел./факс: (8352) 28-55-73